ЛЕОНИД АГАКОВ

# ПАРТИЗАН МУРАТ



Национальная библиотека ЧР
4-010058
10058. чув.
кет с. 73-74, А.

С (чув)
А23

Леонид Агаков

# ПАРТИЗАН МУРАТ



ПРИКЛЮЧЕНИЛЛĔ
ПОВЕÇ

Чăваш АССР
кĕнеке издательстви
Шупашкар - 1966



## ХИСЕПЛЕ ВУЛАКАНСЕМ, МАНĂН ÇАМРĂК ТУСĂМСЕМ!

10058-чув

Çак повеçе эпĕ çирĕм пилĕк çул ĕлĕкрех — 1941 çулта, Отечественнăй аслă вăрçă пуçлансан пĕр виçĕ уйăхранах çырма тытăннă. Ун чухне эпĕ Мускав çывăхĕнчи пĕр хулара пехотă командирĕсем хатĕрлекен курсра вĕренеттĕм.

...Республиканская БИБЛИОТЕКА им. М. Горького Шупашкар ...ебоксары Чувашской АССР

Октябрь уйăхĕнче пирĕн пата тăшман ункинче — окруженире пулнă, тăшман тылĕнчен хаярран çапăçса хăлĕ тухнă командирсен пысăк ушкăнне илсе пычĕç. Вĕсем те пирĕнпе пĕрле вĕренме тытăнчĕç. Çав окруженирĕн тухнă командирсем пире тăшман тылĕнче совет патриочĕсем нимĕç захватчикĕсене хирĕç мĕн тери паттăрран çапăçни, пур çĕрте те партизан отрячĕсем йĕркелени, партизансем хушшинче вăйпитти арçынсем çеç мар, ваттисем те, хĕрарăмсем те, ачасем те нумайăн çинчен каласа паратчĕç.

Çав вăхăтрах кун çинчен ун чухнехи хаçатсенче те сахал мар çыратчĕç, Совинформбюро та кашни кунах пĕлтеретчĕ. Шăп çавăн чух вара манăн хамăрăн çамрăк патриотсем, пĕчĕк партизансем çинчен кĕнеке çырас шухăш çуралчĕ.

Эпĕ вăл кĕнекене 1941 çул вĕçнелле çырса пĕтертĕм, ăна тÿрех «Илемлĕ литература» (хальхи «Тăван Атăл») альманахра пичетлерĕç. Анчах каярахпа, 1942

ПРОВЕРЕНО 2010 03 НОЯ 2017

çул пуçламăшĕнче хам фронта кайсан, эпĕ çамрăк партизансен паттăр ĕçĕсене çителĕксĕр кăтартса панине туйса илтĕм. Мускав, Смоленск, Калинин облаçĕсенче, уйрăмах 1943 çулта Орелпа Курск тăрăхĕнче партизан пулнă çынсемпе нумай тĕл пултăм, гитлеровецсенчен ирĕке кăларнă ялсенче партизанра çÿренĕ ачасемпе те сахал мар калаçрăм. Çавăн хыççăн вара повеçе тĕпрен тенĕ пекех улăштарса, нумай çĕнĕ фактсем хушса çыртăм та Шупашкара ярса патăм. 1943 çул вĕçнелле ăна уйрăм кĕнеке туса кăларчĕç.

Кун хыççăн та эпĕ фашистсене хирĕç ачасем мĕнле кĕрешнипе, вĕсен паттăр ĕçĕсемпе интересленме пăрахмарăм, хам курни-илтнисене манасран çырсах пытăм. Çав материалсем тăрăх эпĕ кайран «Пĕр хулара», «Ылтăн вăчăра» ятлă повеçсем тата чылай калавсем çыртăм. Вĕсене эсир вулана пуль, тетĕп.

Вăрçă вăхăтĕнче, питех те кансĕр условисенче тата кăшт васкарах çырма тивнипе, «Партизан Мурат» повеçре çитменлĕхсем те пулнă. Эп вĕсене хам та куратăп. Халĕ, тен, паттăр Мурат çинчен эпĕ урăхларах, çынсен сăнарĕсене туллирех кăтартса, вĕсен шухăшкăмăлне анлăрах уçса парса çырнă пулăттăм. Анчах çав хаяр та йывăр кунсенче хамăн вулакансене вăрçă çинчен, совет çыннисен паттăрлăхĕ çинчен часрах каласа парас ĕмĕтпе çырнă произведение халь тин ытлашши улăштарас килмерĕ, çавăнпа та эпĕ ăна çак кĕнеке валли кăшт çеç тÿрлеткелерĕм. Вулакансем уншăн мана ÿпкелешмĕç тесе шанатăп.

Кĕнекери иккĕмĕш произведени — «Кăсăя» повеç — пачах çĕнĕ япала, ăна эпĕ 1965 çулта, фронтри асаилÿсем тăрăх çырнă.

Яланхи пекех, эпĕ сирĕнтен, çамрăк тусăмсем, çакна ыйтасшăн: кĕнекене вуласа тухнă хыççăн вăл сире хăш енпе кăмăла кайнипе кайманни çинчен тата сирĕн малашне мĕнле кĕнекесем ытларах вулас килни çинчен çырса пĕлтерĕр. Манщăн вăл питĕ усăллă пулĕ, мана малашнехи ĕçре пулăшĕ. Сире валли эпĕ çĕнĕ кĕнекесем татах çырма ĕмĕтленетĕп-ха.

АВТОР.





...Манас çук, каçарас çук!

*(Партизансен тупи.)*

Идет война священная,
Народная война!

*(Юрă.)*

Тул çутăлас умĕн «Фашизма — вилĕм!» текен партизансен отрячĕ çав тери çăра чăтлăха пырса кĕчĕ. Пĕрпĕринпе çыхланса, юриех никам иртмелле мар тума тарăшнă пек ÿсекен çатрака йывăç тĕмисем хушшипе пĕр километр пек кайса пысăках мар уçланкăна тухсан, малта пыракансем чаранса тăчĕç. Çавна пула ыттисен те чаранма тиврĕ. Мĕншĕн пĕр вырăнта тăнине пĕлменнипе, кайрисем малтисенчен пăшăлтатса ыйтса пĕлме тытăнчĕç:

— Мĕн пулнă?

— Мĕншĕн пĕр вырăнта тăратпăр?

— Дубов хушнă... Малалла каймастпăр, канатпăр...

Чăнах та, отряда партизансен командирĕ Игнат

Дубов чарса тăратнă. Кунти вырăнсене пит лайăх пĕлекенскер, вăл халĕ çак чăтлăха отряд валли чи шанчăклă вырăн, тесе шутланă.

— Ирччен тăрар-ха, унтан мĕн тăвассине курăпăр,— тенĕ вăл, хайĕн помощникĕсене — боевой расчетсен командирĕсене пухса.— Пĕр енчен, кунта питĕ улах вырăн, ним шиксĕрех, лăпкăн канма пулать, тепĕр енчен... эпир хамăртан малта мĕн пуррине питех пĕлместпĕр. Пирĕн васкасах çывăхри ялсене тĕрĕслесе пăхмалла. Кам пĕлет, тен, йĕри-тавра фашистсем шурлăхри çĕлен калтасем пек йăшăлтатаççĕ. Ним чухламасăр пырса кĕнинчен сиен çеç пулма пултарать. Тĕплĕ разведка кирлĕ. Пĕр капкăнран хăтăлнă-хăтăлман теприне пырса кĕрес мар...

Виçĕ кун каялла, кĕтмен-туман çĕртен, отряд пĕр вăрманта нимĕç карателĕсем çине пырса тăраннă. Карательсем партизансене виçĕ енчен çавăрса илнĕ, пулеметсемпе минометсенчен пере-пере тĕпсĕр шурлăх патнелле хĕссе пыма тытăннă. Тăвата сехет хушши кĕрленĕ сĕм вăрман. Нумай фашист салтакĕсене пĕтернĕ партизансем, анчах хăйсен юлташĕсене те чылай çухатнă. Лару-тăру çав тери йывăрланса çитсен вара шурлăх урлă каçса кайса хăтăлнă. Çавăн хыççăн отряд, тăшманран аяккарах каяс тесе, виçĕ талăк хушши пĕр чарăнмасăр тенĕ пек, çулне-мĕнне пăхмасăр çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле куçнă. Çынсем калама çук ывăнса çитнĕ, пурте халтан кайнă. Çавăнпа та вĕсене питĕ лайăх кантармалла пулнă. Халĕ вĕсем валли шăпах çавăн пек канмалли меллĕ вырăн тупăннă ĕнтĕ...

Командирсем саланчĕç. Дубов хушнă пек — унта-кунта дозорсем кăларса тăратрĕç. Пĕрисем — хĕвеланăç енĕпе тăсăлакан тарăн çырма хĕррине, теприсем — вăрманваррипе пыракан «юпаллă çул» еннелле кайса вырнаçрĕç. Хурала кайманнисем кутамккисенчен, сумкисенчен çимеллисем кăларса çырткаларĕç те ушкăнăн-ушкăнăн вырнаçса выртрĕç. Тусме çук ывăнса

çитнĕ çынсене вăрманти шăплăх темиçе самантранах йывăр ыйха путарчĕ...

Ытти пур партизансемпе пĕрле, отрядри чи çамрăк партизан Мурат Коршунов та — хурарах сăнлă, чăпчăмăр питлĕ, пысăк куçлă та хулăнрах туталлă вун тăватă çулхи ача — пĕр лапсăркка тĕмĕ айне нимĕçсен плащ-палаткипе чĕркенсе выртрĕ. Часрах çывăрса каяс тесе, вăл выртнă-выртманах карттусне сăмси çине пусса антарса куçĕсене хупрĕ. Анчах та темшĕн тăрукках ыйхи килмерĕ унăн. Пилĕк минут, вуннă иртрĕ, унтан ытларах та... Çывăхра выртакан партизансенчен хăшĕпĕрисем хăрлаттарсах çывăрчĕç ĕнтĕ, хăшĕсем тĕлĕксем те курма пуçларĕç пулмалла, мĕншĕн тесен ăнланмалла мар уйрăм сăмахсем илтĕнкелерĕç. Мурат çывăраймарĕ. Унăн çамрăк пуçĕнче тĕрлĕ шухăшсем, аса илӳсем, юлашки кунсенче курнă уйрăм картинăсем çуралса тухса, вĕçĕ-хĕррисĕр вăрăм çăмха çиппи пек тăсăлса пычĕç.

Аса илмеллисем унăн чăнах та нумай пулнă çав.,

• • •

Виçĕ эрне ытла ĕнтĕ Мурат партизансемпе пĕрле çӳрет, вĕсемпе пĕр пурнăçпа пурăнать.

Питĕ лайăх астăвать Мурат: нимĕç фашисчĕсем пирĕн Тăван çĕршыва тапăнни çинчен яла хăрушă хыпар çитсенех, унăн пиччĕшĕ Неçтĕр ялти нумай çамрăксемпе пĕрле Гжатска — хăйсен район хулине — тухса кайрĕ. Фронтран вăл икĕ çыру ячĕ те, урăх унран нимĕнле сас-хура та пулмарĕ. Тен, вăл çырнă та пуль, анчах унăн çырăвĕсем çитме пултарайман — яла нимĕçсем пырса кĕчĕç... Малтан, темиçе кун хушши, йĕри-таврара çĕре кисрентерсе тупăсем ухлатрĕç, кунĕнçĕрĕн таçти ялсем çунни куранчĕ, каç-каç пушар çути, пĕлĕт çине ӳксе, ăна юнпа сăрлана пекех хĕретрĕ... Халăх çĕрĕ-çĕрĕпе çывăрмарĕ, пăлханчĕ, ним тума пĕлме-

рĕ. Нумайăшĕ, тăван килĕсене пăрахса, çывхарса килекен фронтран аяккалла, хĕвелтухăçнелле, Мускав еннелле каясшăнччĕ, анчах ку ĕмĕт часах татăлчĕ.

— Халь тин ниçта тарса та хăтăлма çук, нимĕçсем пур çулсене те пӳлсе лартнă,— терĕç.

Кăна илтсенех, ялти вăйпиттирех арçынсенчен килте никам та юлмарĕ, вĕсем пурте темле пĕр харăс çухалчĕç. Унтан, пĕр питĕ илемлĕ уяр ирхине, ял çийĕнче хура хĕреслĕ икĕ самолет хурчкасем пек явăнма тытăнчĕç.

— Нимĕçсем!— кăшкăрчĕ тахăшĕ.— Пытанăр, тарăр!..

Тĕрĕсех иккен. Ял çийĕнче пĕр-иккĕ çаврăнсанах самолетсен çунаттисем айĕнчен бомбăсем тăкăнма тапратрĕç. Вăраммăн, хăрушла ӳлесе анчĕç вĕсем çĕрелле, хăлхасене хупласа лартмалла шартлата-шартлата çурăлчĕç. Калама çук хăраса ӳкнĕ ялти халăх ăçта кирлĕ унталла чупрĕ. Пĕр тăруках темиçе киле вут хыпса илчĕ, виç-тăвата çурт кĕмсĕртетсе ишĕлсе анчĕç. Çынсем ун çине пăхса тăмарĕç,— кашни хăйĕн пуçне, ачипăчине çăласшăн пулчĕ... Çав вăхăтрах, сасартăк, фашист тискер кайăкĕсем тата хăрушăрах ĕç туса хучĕç: чылай çӳлте вĕçнĕ çĕртен вĕсем иккĕшĕ те — умлăнхыçлăн — йывăç тăррисем таранах чăмса анчĕç те хирелле, çырманалла, вăрманалла чупакан ним хӳтлĕхсĕр çынсене пулеметсенчен шатăртаттарма тытăнчĕç. Вĕри тăхлан вăйлă çумăр çунă пекех тăкăнчĕ, унран ниçта çăлăнма та май пулмарĕ...

Унтан кайран мĕн пулнине Мурат хăрушă тĕлĕкри пек çеç астăвать: вăл çул хĕрринчи пĕр лупашкана кĕрсе ӳкнĕ, унăн куçĕсем хуралса килнĕ, пĕр хушă сывлайми пулса выртнă. Тем вăхăт выртсан тин тăна кĕрсе вăл тăрса чупнă... Ĕмĕрте, нихăçан-нихăçан манмалла мар хăрушă картинă курнă вара вăл çавăн хыççăн.

Бомбăсем лекнипе хыпса илнĕ çуртсем темĕн пысă-

кăшт кăвайтсем пек çунса тăнă, вĕсенчен çăра хура-кăвак тĕтĕм йăсăрланнă, пĕтĕм ялĕпех йӳçек шăршă саралнă. Тепĕр йышши — фугаслă бомбăсем тивнипе арканнă çуртсем патĕнче вĕсен хуçисем чаваланнă: мĕн те пулин çĕмĕрĕлмесĕр юлнă-ши, тесе шыранă вĕсем. Шăппăн, шăлĕсене çыртса йĕнĕ... Хăш-пĕр хĕрарăмсем, кӳтсе килнĕ чĕрисене лăплантараймасăр, сасăпах, ӳлесех макăрнă. Пуринчен ытла Муратăн пиччĕшĕпе пĕрле фронта кайнă пĕр çамрăк колхозникăн арăмĕ ăнран тухса каяс пекех кăшкăрса йĕнĕ.

— Пĕтерчĕç ман пурнăça, вĕлерчĕç, чуна кăларса илчĕç!.. Мĕн тăвас ĕнтĕ ман, пуçăма ăçта кайса чикес?

Кайран пĕлчĕ Мурат: нимĕçсен бомби çав хĕрарăмăн пӳртне лексе тĕппипех аркатнă пулнă, пӳртĕнче унăн пĕчĕк ачи сăпкара выртнă. Ачин пĕр ӳт таткине те тупайман...

Ку çеç те мар. Нимĕçсем пулеметсенчен пенипе темиçе çынна вĕлернĕ, темиçе çынна амантнă иккен. Вилнисенчен пĕри — пĕтĕм колхоз хисеплесе пурăннă Якур мучи пулнă. Уншăн Мурат пуринчен те хытă хуйхăрчĕ, мĕншĕн тесен вăл старик ытла та кăмăллă çынччĕ, ачасене çав тери юрататчĕ, вĕсене авалхи пурнăç çинчен кĕнекери пекех интереслĕ каласа кăтартатчĕ, халапне пуçласан, çĕрĕ-çĕрĕпе итлес килетчĕ ăна. Тĕрĕссипе каласан, помещиксем, улпутсем, урядниксем çинчен, вĕсем чухăн халăха епле асаплантарса, унран мăшкăлласа пурăнни, хресченсем вĕсене хирĕç вăхăчĕ-вăхăчĕпе епле хăватлă пăлхавсем туни çинчен Мурат чăн малтан Якур мучирен илтсе пĕлнĕ.

— Телейлĕ халь эсир, ним нуши-хуйхине те пĕлместĕр, пахчари шăпчăксем пек юрласа кăна ӳсетĕр,—теме юрататчĕ Якур мучи. Çавăнтах шĕвĕр пӳрнипе кăмăллăн юнаса илетчĕ:

— Вăл телее сыхлама пĕлес пулать. Хаклă хакпа туяннă эпир ăна. Сире телейлĕ тăвасшăн нумай паттăр çынсем хăйсен пуçĕсене хунă!

Халь ака Якур мучи çук ĕнтĕ... Урах нихçан та илтес çук унăн ытармалла мар халапĕсене. Вĕлерчĕç ăна. Мĕншĕн? Мĕн айăпшăн? Эх, тискер кайăксем, урнă йытăсем! Тавăрĕç-ха сире куншăн!— хытăран хытă тапрĕ Мурат чĕри.

• • •

Кĕрхи хура пĕлĕт пек хуйхă пусса илчĕ çынсене. Самантран самантах нимĕçсем çĕнĕрен килсе тухасран хăраса пуранчĕç вĕсем.

Лешсем чăн та нумай кĕттермерĕç. Яла бомбăсемпе çунтарса, ишĕлтерсе пĕтернĕ хыççăн тепĕр икĕ кунтанах, каçалла сулăнсан, яла пĕр 30—40 нимĕç салтакĕ мотоциклсемпе куç-пуç курăнми тусан макăрлантарса пырса кĕчĕç.

Пуçланчĕ вара мăшкăл, çарату, тискерлĕх...

Фашист салтакĕсем колхозниксен килĕсем тăрăх выçса çитнĕ шакалсем пек ыткăнса çÿрерĕç, камăн мĕн пур — ĕçмелли, çимелли, сĕт, çу, çăмарта, пыл — пĕтĕмпех сĕтĕрме тытăнчĕç. Ял урамĕсем, картишсем, пÿртсем — фашистсем хаяррăн, йытă вĕрнĕ пек кăшкăрнипе, хĕрарăмсемпе ачасем макăрнипе, çăткăн хурахсенчен хăтăлма тăрăшса таракан кайăк-кĕшĕк сассипе тулса ларчĕç. Ним йĕркесĕр, çĕр сасла шăв-шав тапранчĕ ялта...

Муратсем патне те тимĕр таканлă атăсем тăхăннă икĕ фашист кĕмсĕртеттерсе пырса кĕчĕç. Хура хурçă калпак, тусанпа витĕннĕ тĕксĕмрех симĕс тумтир тăхăннă вĕсем, сухалĕсене те нумайранпа хырман. Чакăр куçĕсем хăрушла сиввĕн пăхаççĕ, кăкрисем умне кĕске хура пăшалсем çакса янă.

— Где хозяин?—ыйтрĕ пĕри, хыткан та çÿллĕскер, тÿрех малти кукăралла иртсе. Тепри алăк патĕнче тăрса юлчĕ.

— Хуçи эпĕ,— терĕ Мурат амăшĕ хуллен, аллисене кăкри патне тытса.— Ака, ачапа пурăнатпăр...— Вăл

картишнелле тухакан чӳрече патӗнче ним чӗнмесӗр тӑракан, хӑранипе кӑвакарса кайнӑ Мурат ҫине кӑтартрӗ.— Ман ывӑл...

— Упӑшку ӑҫта?

— Ҫук вӑл ман, вилни вунӑ ҫул ҫитет ӗнтӗ.

— Суятӑн?

— Суймастӑп, тупата суймастӑп,— нимӗҫе ӗнентерме пӑт-пат сӑхсӑхса илчӗ Мурат амӑшӗ.

— Партизана кайман-и? Эсир вӗт йытӑлла халӑх! Сирӗн пӗр сӑмахне те ӗненместпӗр...

— Ҫук, ҫук... Чӑн калатӑп!

— Асту ҫав, суйсан эпир... ака! — терӗ те нимӗҫ, хӑй умӗнчи автоматне ҫапса илчӗ, унтан сӗтел пуҫне пырса ларчӗ.— Халь ака мӗн, эсӗ... сысна! Мӗн пур—пӗтӗмпех сӗтел ҫине кӑларса хур. Сӗт, ҫӑмарта, пыл. Чӑх пусса ӑшала. Халех, хӑвӑрт хатӗрлесе пар. Пӗлсех тӑр — нимӗҫ салтакӗ кӗтме юратмасть.

Мурат амӑшӗ салтак ҫине ним чӗнме пӗлмесӗр, куҫӗсене мӑчлаттарса пӑхса тӑчӗ. Лешӗ те, хӗрарӑм килӗшессе кӗтсе, ун ҫинелле пӑхрӗ. Ҫапла темиҫе самант иртрӗ. Унтан нимӗҫ салтакӗ сасартӑк ывҫипе сӗтел ҫине чант! ҫапрӗ.

— Мӗн кӗтсе тӑратӑн? Хӑвна тытса ӑшаласса кӗтетӗн-и? Марш! Вунӑ минутран ҫимелли хатӗр пулмасан, хӑвӑн анчӑк ҫурипе иксӗре те ав ҫав йывӑҫран ҫакатӑп! Пӗлсех тӑр!..

Унӑн кусӗсем тата хаяртараххӑн ҫутӑлса илчӗҫ. Мурат амӑшӗн калас тенӗ сӑмахӗ пырне ларчӗ. Вӑл: пирӗн нимӗн те ҫук, тесе каласшӑнччӗ, анчах ку тӑшмансене тем каласан та усси пулас ҫуккине ӑнланса, тӑрук вӑйсӑрланса кайнӑ урисене аран-аран шутарса, чӑланалла кӗрсе кайрӗ.

Хыткан салтакӗ алӑк патнелле пырса теприне тем каларӗ те, лешӗ пуҫӗпе сулчӗ.

— Мальчик, вода! Ходи сюда!— кӑшкӑрчӗ вӑл.

Мурат, чӑлана кӗрсе пытаннӑскер, хӑра-хӑрах тух-

рĕ. Нимĕҫсем пит ҫăвасшăн пулнине аллисемпе туса кăтартрĕҫ.

— Идьем!

Картишĕнче вара вĕсем тем таранах ҫăвăнчĕҫ. Мурат кăштах хăюланчĕ те хыткан нимĕҫĕнчен вăл вырăсла калаҫма мĕнле майпа пĕлни ҫинчен ыйтрĕ.

— Ман аттен Микулай патша вăхăтĕнче Петербургра завод пулнă,— терĕ нимĕҫ.— Эпир унта пурăннă. Кайран, революци тухсан, сирĕн большевиксем ăна туртса илчĕҫ. Халь ĕнтĕ вăл завод каллех пирĕн пулать. Тепĕр уйăхран унта ҫитетĕп-ха эпĕ...

Мурат нимĕҫпе урăх пĕр сăмах та калаҫмарĕ.

— Ав епле шухăшлатăр эсир!— терĕ вăл хăй ăшĕнче.— Анчах пулаймасть пулĕ вăл... Пустуй ĕмĕтленетĕр! Памастпăр эпир сире нимĕн те!

Вĕсем пӳрте кĕнĕ ҫĕре Мурат амăшĕ апат хатĕрлесе янталанă иккен: ҫĕрулми шаритленĕ. Нимĕҫсем пĕрпĕрин ҫине пăхкаласа илчĕҫ (ҫăмарта выранне ҫĕрулми пĕҫерни кăмăла каймарĕ пулас), унтан ним чĕнмесĕрех хыпма тапратрĕҫ. Пысăк ҫатмана темиҫе минут хушшинчех тасатса хучĕҫ. Ҫисе ярсанах вара сĕт ыйтрĕҫ:

— Матка, молеко!

Мурат амăшĕ, чĕрине хытара-хытарах, пĕр куршак сĕт кăларса пачĕ. Часах вăл та пушанчĕ.

— Еще молеко! — ыйтрĕ ҫав хытканниех.

— Турăҫăм, кусене нимĕнпе те тăрантарса ҫитерес ҫук... — хăй тĕллĕн мăкăртатса илчĕ те амăшĕ, татах сĕт илсе кĕчĕ.

Тинех тăранчĕҫ пулас. Пируссем чĕртсе ячĕҫ. Кăшт калаҫкаласа ларчĕҫ. Унтан хытканни тăчĕ те Мурат амăшĕ патне утса пычĕ.

— Матка, теперь отдавай яиц,— терĕ вăл, аллине пăшалĕ ҫине хурса.

— Ҫăмарта ҫук пирĕн...— ун куҫĕнчен пăрăнма тăрăшрĕ хĕрарăм.

— Суятăн! Асту!..

— Чăнах...

— Эпин хамăр тупатпăр!

Нимĕç Мурат амăшне аяккалла тĕртсе ячĕ те, чăлана кĕрсе, ухтарма тапратрĕ. Унта нимĕн те тупайманнипе, тĕп сакайне сикрĕ. Çăмарта выранне Муратсем хĕлле валли хатĕрлеме пуçланă çăва çĕклесе тухса лартрĕ. Унтан, картишне чупса тухса, кĕлете кĕрсе кайрĕ. Пĕр ала çăмарта йăтса тухрĕ. Ăна пӳрте кĕртсе лартса, аслăк еннелле чупрĕ. Унта часах чăхсем ниçта кайса кĕрейми кăтиклеме тытăнчĕç. Унччен те пулмарĕ — нимĕç лупас айĕнчен ик хул хушшине те икшер чăх хĕстерсе сиксе тухрĕ. Тахăш вăхăтра ĕлкĕрнĕ вара чăхсен мăйĕсене пăра-пăра хума!

— Зер гут!*— терĕ вăл, çак пĕтĕм «тупăша» сĕтел çине купаласа хурса.

Муратпа амăшĕ хытнă пек пулса пăхса тăчĕç...

* * *

Хыткан нимĕçĕ Муратсен кил таврашĕнче ухтарса çӳренĕ хушăра тепри сĕтел хушшинче сигарет йăсăрлантарса, сăмси витĕр темле кĕвĕ ĕнĕркелесе ларчĕ, унтан тăрса малти стена çинчи тĕкĕр патне пычĕ. Шăрт пек сухал çитĕнсе ларнă янахне тытса пăхрĕ, темшĕн чĕлхине кăларса хăйне хăй витленĕ пек турĕ, унтан тĕкĕрпе юнашар çакăнсе тăнă сăнӳкерчĕксене пăхма тытăнчĕ. Шăп çав вăхăтра тепĕр нимĕçĕ тултан кĕчĕ те, ку ăна тӳрех кăчăк туртрĕ:

— Герберт...

Хытканни пычĕ. Ку вара шыçмак пӳрнипе тӳрех Мурат пиччĕшĕ икĕ çул каялла Хĕрлĕ Çартан янă сăнӳкерчĕкĕ çине пусрĕ:

— Совиет зольдат... Красноармейц!

---

* Питĕ лайăх!

— Большевик! — терĕ хытканни. Çавӑнтах чӑлаталла пӑхрĕ: — Тух-ха кунта, муттер... ват сысна, кил-ха!

Мурат амӑшĕ итлерĕ. Фашист ӑна аллинчен картӑ туртса ывӑлĕн сӑнӳкерчĕкĕ умне пырса тӑратрĕ.

— Кам ку? Сан ывӑлу-и? Ăçта вӑл халь? Вӑрçӑра? Пире хирĕç çапӑçать, çапла-и?

Хĕрарӑм пĕрре аслӑ ывӑлĕн сӑнĕ çине, тепре хӑй патнелле чупса пынӑ Мурат çине пӑхса илчĕ те нимĕн те чĕнмерĕ, пĕтĕм кӑкӑрĕпе ассӑн сывласа ячĕ çеç.

— Ну?! — Фашист, тути хĕррине çыртса, хĕрарӑма çавӑнтах çапса ӳкерес пек тӑчĕ.— Санӑн ывӑлу вĕт? Командир эппин — коммунист?

Амӑшĕ чĕнмерĕ...

— А-а, швайн! Чĕнместĕн?! — кӑшкӑрса ячĕ те вара фашист, хĕрарӑмӑн сылтӑм аллине пĕррех пӑрса лартрĕ.— Калаçтарма пĕлетпĕр эпир! Ну?

Мурат амӑшĕн алли тӳсме çук ыратса кайрĕ, çапах та тӳсрĕ вӑл, пĕр сӑмах та каламарĕ, йынӑшса илчĕ çеç.

— Каламастӑн? Эс эппин коммунист амӑшĕ? Ху та большевик? Ак сана station уншӑн, на!..— фашист ӑна пĕтĕм вӑйран питĕнчен чышрĕ.

Хĕрарӑм ӳкрĕ. Мурат, ниçта кайса кĕреймесĕр, сиксе чĕтреме тытӑнчĕ. Çук, хӑранипе мар, чĕринчи тарӑху капланса хӑпарнипе, фашистсене çакӑнтах тем туса тӑкас килнипе чĕтрерĕ вӑл: персе антарасчĕ, пырĕсене шӑлпа кӑшласа татасчĕ...

Нимĕç унӑн амӑшне тепре çапма аллине çĕклесен вара вӑл, хӑй мĕн тунине хӑй те чухламасӑр, ӑна хыçалтан пырса уртӑнчĕ, амӑшне татах çапасран чарма пикенчĕ. Анчах тепĕр салтакĕ ӑна çавӑнтах урайне çаварса çапрĕ.

— А-а, кляйн * большевик!..

* Пĕчĕк.

Фашистсем, çакăн хыççăн тата ытларах урса кайса, Муратпа унăн ватă амăшне ним майсăр хĕнеме тытăнчĕç.

— Ачана ан тивĕр... Хама вĕлерĕр, анчах ачана ан тивĕр,— йынăша-йынăша ӳкĕтлерĕ Мурат амăшĕ. Анчах усси пулмарĕ, этем сăнĕпе çӳрекен кашкăрсем нихăшне те хĕрхенмерĕç, ăçтан килнĕ унтан çапрĕç, тапрĕç, таканлă атă кĕлисемпе таптарĕç, Муратпа амăшĕ ним пĕлми пулсан тин кăмăлĕсем тулчĕç курăнать: сĕтел çинчи чăхсемпе çăмарта-çăва çĕклерĕç те тухса кайрĕç. Юнланса пĕтнĕ урайĕнчи амăшĕпе ачи пĕр хускалмасăр, аран сывласа, хушшăн-хушшăн йынăшса выртса юлчĕç...

Тепĕр кунне амăшĕ вилчĕ.

Мурат ыран çинчен тăраймиех чирлесе ӳкрĕ, амăшне пытарма та каяймарĕ, юрать — ырă кăмăллă кӳршĕсем ăна чиперех тирпейлесе çĕре чикрĕç.

Çавăнтан вара Мурат пĕччен тăрса юлчĕ.

Хытă хуйхăрчĕ вăл, темиçе кун хушши ним тума пĕлмесĕр çӳрерĕ, ниçта ларма-тăма ыран тупаймарĕ хăйне валли. Чăнах та, мĕнле пурăнтăр-ха ĕнтĕ ашшĕ-амăшĕсĕр, тăванĕсемсĕр тăрса юлнă вунтăватă çулхи ача?

Анчах та — халăх çинче çын пĕтмест, теççĕ.

Мурата кӳршĕсем пулăшрĕç.

Ахаль те питĕ туслă, килĕштерсе пурăнатчĕç те вĕсен колхозĕнчи çынсем, халь вара, тискер те хăрушă тăшман килсе кĕрсен, пурне те пĕр хурлăх, пĕр хуйхă пусса илсен, вăл туслăх тата ытларах ӳсрĕ, çынсем «пĕри — пуриншĕн, пурĕ — пĕриншĕн» текен йĕркепе пурăнма тытăнчĕç...

Мурат хăйсен пӳрчĕн алăкĕпе чӳречисене хăмапа çапса лартрĕ те виçĕ кил урлă тăварах пурăнакан Лизавет инке патне пурăнма куçрĕ. Лизавет инке ывăлĕ, Мурат пиччĕшĕ пекех, фронта кайнă та, халь вăл пĕчченех пулнă.



— Пуранкалапăр-çке, ачам... Пуранăпар епле те пулсан... Ватăпа вĕтĕ килĕштереççĕ вĕсем, эпир те майлашкалăпăр...— терĕ те Лизавет инке малтанхи кун, Мурата хăйĕн ачи пекех пăхма пуçларĕ.

* * *

...Çаван пек çаратса, çĕмĕрсе, пусмăрласа тухса кайнă хыççăн гитлеровецсем Муратсен ялне тата темиçе хут та пырса тухрĕç. Вĕсем пыра-пыра кайнипе ялта выльăх-чĕрлĕх те сайраланса юлчĕ, кайăк-кĕшĕк те пĕтрĕ. Нумай мăшкăл тӳсрĕç ял çыннисем, нумай вĕри куççуль тăкăнчĕ. Унпа пĕрлех — халăхра хăватлă тавăру кăмăлĕ ӳснĕçемĕн ӳссе, хаярланса пычĕ.

Пĕр ирхине ял хыçĕнчи çырмара икĕ нимĕç салтакĕн виллине тупнă, терĕç. Ку чăнах пулнă-мĕн. Нимĕçсем çав кунах пĕтĕм ял халăхне, ватти-вĕтти мĕнĕпех



пухса, пурне те темĕн тĕрлĕ хăратса, автоматсемпе юнаса, кăкăрсенчен тыта-тыта силлесе тĕпчерĕç:

— Калăр, кам тунă ку ĕçе?

— Айăплисене тупса, памасан — халех пурне те персе вĕлеретпĕр!

Чувашская Республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
г. Чебоксары Чувашской АССР



10058 - чув

— **Сирĕн ялтан кĕл тăватпăр! —** хăйăлти сасăсемпе кăшкăрчĕç фашистсем.

Никам та чĕнмерĕ. Çынсем çăварĕсене шыв сыпнă пекех тăчĕç... Пĕр ответ кăна пулчĕ:

— Пĕлместпĕр эпир... Нимĕн те пĕлместпĕр...

Хăратни нимĕн чухлĕ те пулăшманнине кура, нимĕçсен аслă офицерĕ халăх хушшинчен виçĕ старике туртса кăларчĕ те, кăшт аяккарах, пурне те курăнмалла вырăна илсе кайса тăратрĕ.

— Хĕрхенĕр хăвăрăн ватлăха: юлашки хут ыйтатăп! Кам вĕлернĕ пирĕн салтаксене? Эсир пĕлетĕрех!— хыттăн кăшкăрса ыйтрĕ вăл, пистолечĕпе тĕллесе.— Шухăшлама пĕр минут паратăп!

Стариксем çав-çавах «пĕлместпĕр» тесе пуçĕсене пăркаларĕç.

Вара офицер вĕсене пĕтĕм халăх умĕнчех пере-пере пăрахрĕ.

Виçĕ старик, пĕрин хыççăн тепри, çĕреластлатрĕç. Анчах фашист çынçиенĕсене ку та çитмерĕ: вĕсем стариксен юнланса пĕтнĕ кĕлеткисене ял вĕçнелле йытă виллисене сĕтĕрнĕ пек сĕтĕрсе кайса, уй хапхи каштинчен вĕренсемпе туртса çакрĕç.

— Кам пире хирĕç тăрать — вĕсене пурне те çакнашкал чуччу кĕтсе тăрать! — тесе пĕлтерчĕ офицер.— Кăтартăпăр эпир сире партизансене епле хӳтĕлемеллине, ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалла пулĕ!..

Виçĕ кун та виçĕ каç çакăнса тăчĕç вилесем. Вĕсен çывăхне никама та ямарĕç. Тӳсмелле мар шăршă саралма пуçласан тин вĕсене антарса пытарма ирĕк пачĕç.

Кун хыççăн кун иртрĕ, ял çыннисен пурнăçĕ йыварланнăçемĕн йыварланчĕ...

— Пурнăç мар ку, чăн-чăн тамăк!

— Кун пек пурăниччен — вилмелле кăна...

— Ахаль те вилсе пĕтетпĕр пуль ĕнтĕ, пурнăç пулас çук...

Çакӑн пек сӑмахсем кашни утӑмра тенӗ пекех илтӗнчӗç. Анчах вӗсене ваттисем, вӑйсӑрланса çитнисем, çемçерех кӑмаллӑ хӗрарӑмсем çеç каларӗç, çамрӑкраххисем, вӑй пуррисем урӑхла шухӑшларӗç, урӑх ӗмӗтсемпе пурӑнчӗç. Майлӑрах вӑхӑт çаврӑнса килессе çеç кӗтрӗç вӗсем.

Пӗр-пӗринпе калаçнӑ чух çынсем час та часах таврари вӑрмансенче çӳрекен партизансем çинчен асӑна пуçларӗç,— партизансен хӑюллӑ та паттӑр ӗçӗсем çынсене савӑнтарса вӗсен кӑмӑлӗсене çӗклерӗç, чӗрисене çутӑ шанчӑк вӗрсе кӗртрӗç.

Вӑл калаçусене Мурат хӑй те пӗрре мар илтрӗ. Питӗ маттур ӗçсем тӑваççӗ иккен партизансем: пӗр çӗрте нимӗçсен поездне çырманалла сиктереççӗ, тепӗр çӗрте çул тӑрӑх пыракан автомашинӑсене тапӑнаççӗ, салтакӗсене вӗлереççӗ, пурлӑхӗсене туртса илеççӗ.

Нумай пулмасть тата пӗр ялта фашистсен роти çӗр каçма чарӑннӑ, тет те, партизансем çӗрле вӗсем патне шӑппӑн пырса тухса — аллӑ салтака яхӑн гранатӑсемпе персе вакласа тӑкнӑ, тет...

— Эх, çавӑн пек отряда каясчӗ! — шухӑшла пуçларӗ Мурат.— Алла пӑшал тытасчӗ те кашни кун, кашни утӑмра шаккасчӗ фашистсене! Хӗнесе вӗлернӗ аннешӗн те, хама асаплантарнӑшӑн та, персе пӑрахнӑ Якур мучишӗн те таварасчӗ... Нимӗн чухлӗ те хӗрамӑттӑм çав, пӗр тумлам вӑй юлмиччен çапăçаттӑм!..

Куллен-кун вӑйланса пычӗ ку шухӑш Мурат пуçӗнче. Тӗлӗкре те курма пуçларӗ вӑл ӑна. Хӑй ӗнтӗ таххçанах партизан пулса тӑнӑ пек: аллинче — винтовкӑ, хулпуççийӗ урлӑ пулемет лентисем, пиçиххинчен гранатӑсем çакса янӑ...

Анчах ку ӗмӗте пурнӑçа кӗртме ниепле те май килмерӗ-ха. Таçта çӳреççӗ вӑл партизансем? Ӑçта шыраса тупса пӗрлешес вӗсемпе? Ниçта та тупас çук пуль. Çитменнине, вӗсем питӗ вӑрттӑн, никама курӑнмасӑр çӳреççӗ, тет. Ыйтса пӗлес — ялта никамран ыйтса пӗл-

ме çук. Ирĕксĕрех ĕнтĕ ним шарламасăр, пĕр-пĕр меллĕ самант килсе тухасса кĕтсе пурăнма тивет...

Мурат телейне, вăл саманта ытлашши нумай кĕтмелле пулмарĕ. Ăнсăртранах килсе тухрĕ вăл...

Пĕрре, çумăрлă-çиллĕ тĕттĕм каçхине, Мурат ыйхă витĕр Лизавет инке пӳрчĕн кайри чӳречинчен такам хуллен кăна шакканине илтрĕ. Малтанах уйăрса илме те хĕн пулчĕ: те çын шаккать, те чӳрече кантăкĕ çилпе чĕтренет. Анчах кантăк темиçе хутчен те пĕр пек шăкăртатнă пирки Лизавет инке, вырăн çинчен тăрса, кăмака кукринелле пычĕ. Мурат пуçне çĕклесех итлеме тытăнчĕ.

— Кам унта? — шăппăн ыйтрĕ Лизавет инке.

— Эпĕ ку, уçса курт...— терĕ тулти çын.

Кам вăл, мĕнле çын — ăна Мурат пĕлме пултараймарĕ, анчах унăн чĕри, теме сиснĕ пек, сиксе тухаслах тапа пуçларĕ, пуçĕнчи шухăшĕсем çиçĕм пек вĕçе-вĕçе илчĕç: тен, каллех нимĕçсем?.. Мĕн тума?.. Лизавет инкен халь нимĕн те çук ĕнтĕ, фашист салтакĕсем пĕтĕмпех çаратса тухнă... Тата — мĕншĕн-ха Лизавет инке унран тĕплĕн ыйтса пĕлмесĕрех алăк уçма кайрĕ?

Анчах кун хыççăн пĕр минут та иртеймерĕ — Мурат пĕтĕмпех ăнланса илчĕ. Чӳречерен шаккаканни— Лизавет инкен ывăлĕ пулнă...

Пӳрте каялла кĕрсенех, Лизавет инке хăйĕн ывăлĕн мăйĕнчен уртăнса, те савăннипе, те хурланнипе макăрса ячĕ:

— Эх, ывăлăм! Игнаша!... Чунăм!.. Эп сана хальччен ăçта та пулин вилсе выртрăн пуль, текех нихçан та кураймастăп пуль тесеттĕм. Çĕрĕн-кунĕн ăшран тухмарăн...

Игнат амăшне çурăмĕнчен ачашласа лăплантарма тытăнчĕ.

— Чарăн ĕнтĕ... Куратăн—сывах вĕт эпĕ, нимĕн те пулман мана! Макăрас выранне — çитер-ха мĕн те пулин, хырăм пит выçă, иртенпех çимен паян.

Вăл ăнсăртран кăмака еннелле çаврăнчĕ те тĕттĕмре Мурат тăнине курах кайрĕ.

— Кам ку, анне? — хăвăрт ыйтрĕ вăл амăшĕнчен.

— Э-э, каламарăм-и сана? Мурат вăл, Неçтĕр Коршунов шăллĕ,— терĕ ăна хирĕç амăшĕ.— Иксĕмĕр пурăнатпăр эпир унпа...

— А ма хăйсен килĕнче мар вăл?

— Пирĕн килте никам та çук...— Лизавет инке вырăнне ответ пачĕ Мурат, Игнат патнерех пырса.— Пĕччен эпĕ... Тăлăха юлтăм...

...Лизавет инке çимелли хатĕрлесен, вĕсем виççĕшĕ те кăмака кукрине вырнаçса ларчĕç те, вĕçĕ-хĕррисĕр калаçу пуçланса кайрĕ. Малтан Игнат амăшĕ хăй ывăлне ялта юлашки вăхăтра мĕн-мĕн пулса иртнисем çинчен каласа пачĕ, хăш-пĕр вырăнсенче ăна Мурат пулăшса пычĕ, уйрăм-уйрăм самантсем çинчен вăл каларĕ. Вĕсен хăруша та хурлăхлă калавне Игнат пĕр сăмах сиктермесĕр итлесе ларчĕ, сайра хутра çеç, чĕри тулса çитнипе, йывăррăн сывла-сывла ячĕ:

— Ах, йытăсем... Ирсĕрсем, çĕлен-калтасем!.. Мĕн хăтланаççĕ!..— хытăран хытă тарăхса ларчĕ вăл фашистсем çине.

Унтан кĕскен кăна хăй çинчен каласа кăтартрĕ.

— Эпир кунтан инçе мар,— терĕ вăл.

— Ăçта апла?

— Тĕрлĕ çĕрте çÿретпĕр: паян — кунта, ыран — тепĕр çĕрте. Тăшмана хăш тĕлте лайăхрах пырса çапма май пур — эпир çавăнта. Халь акă Кашкăр варĕнчен килтĕм... Сана çав тери курас килекен пулчĕ, анне, эс мĕнлерех пурăннине пĕлес килчĕ. Ирччен таврăнатăп, тесе хăвартăм юлташсене...

Ку сăмахсене илтсенех, Мурат пуçĕнче хăйне шанчăк паракан шухăш вĕçсе илчĕ.

— Эсир партизансем мар-и, Игнат пичче?

— Ун пек каласан та юрать... Анчах асту — кун çинчен нихçан та çавар уçма юрамасть!

— Пӗлетӗп, пӗлетӗп,— хавасланса кайрӗ Мурат.— Эсир мӗн тунине те пӗлетӗп... Эсир поездсене ҫырмана сиктеретӗр, машинӑсене туртсе илетӗр, хӑйсене пӗтеретӗр...

— А эс ӑҫтан пӗлетӗн вара ӑна? — тӗлӗннӗ пек пулчӗ Игнат.

— Пӗлмесӗр ара... Сирӗн ҫинчен ял ҫыннисем пӗр-маях асӑнаҫҫӗ, ҫав тери мухтаса калаҫаҫҫӗ!

— Ун пек ҫӳреме питӗ хӑруша пуль-ҫке, ывӑлӑм?— Игнат ҫине кӑмӑллӑ куҫӗсемпе пӑхса ыйтрӗ амӑшӗ.— Хӑвӑра хупӑрласа илсе пӗтерме пултараҫҫӗ вӗт... Ахаль ҫынсене те хӗрхенсе тӑмаҫҫӗ те... Сире вара пушшех...

— Вӑрҫӑ, аннеҫӗм! Темле те пулма пултарать... Анчах хӑраса тӑрсан ӗҫ тухмасть-ҫке. Кӗрешес пулать. Тӑшмана пирӗн кашни кун, кашни утӑмра пыра-пыра ҫапмалла, ӑна пӗр самантлӑха та сывлӑш ҫавӑрма памалла мар... Гитлер хурахӗсем пире парӑнтарса хӑйсен чурисем тума килчӗҫ, анчах эпир чура пуласшӑн мар... Пулмастпӑр та! Нихҫан та! Ҫавӑншӑн кӗрешетпӗр эпир, анне, ҫавӑншӑн нимрен хӑрамасӑр ҫапӑҫатпӑр. Эпир тӑкнӑ юн сая каймӗ, анне, пӗлсех тӑр: эпир ҫӗнтеретпӗрех!

— Вӑл ҫаплах ӗнтӗ, тӗрӗс...

— Акӑ, пӗр эрне каялла эпир Красавкӑ шывӗ хӗрринчи вӑрманта, ҫул ҫинче, вӗсен виҫӗ танкне пӗтерсе хутӑмӑр. Ӗҫӗ ҫапла пулчӗ. Инҫетренех вӗсен моторӗсен сассине илтрӗмӗр те, ҫулӑн икӗ енӗпе, тӗмӗсем ӑшне пытанса выртрӑмӑр. Хамӑр тӗле ҫитсен вара— пирӗннисенчен пӗри малти танкӗ айне гранатӑсен ҫыххине ывӑтрӗ. Самантрах питӗ вӑйлӑ взрыв пулчӗ те — танк чарӑнса ларчӗ. Ӑна пула кайрисем те чарӑнчӗҫ... Тытӑнтӑмӑр вара гранатӑсемпе, горючи тултарнӑ бутылкӑсемпе пеме! Виҫҫӗшӗ те ҫунма тапратрӗҫ... Танксем ӑшӗнче ларакан салтаксен ирӗксӗрех сике-сике тухмалла пулчӗ. Анчах пӗри те хӑтӑлаймарӗ, пурне те пирӗн пульӑсем хӑваласа ҫитсе тӑрӑнтара-тӑрӑнтара

антарчĕç... Унччен малтан, çавнашкалах, фронт патнелле боеприпассемпе апат-çимĕç илсе каякан темиçе грузовика аркатнăччĕ...

Тата чылай каласа кăтартрĕ Игнат: пытанса пырса вĕлернĕ часовойсем, сиктерсе янă складсем, тыткăнран хăтăлнă красноармеецсем çинчен... Унăн кашни калавĕ Мурата тата ытларах пăлхантарчĕ, кăмăлне çĕклерĕ, ку таранччен хăй ăшĕнче çеç тытса усранă шухăшне вăйлатнăçемĕн вăйлатрĕ.

Ерипен кăна шурăмпуç кăвакара пуçласан, Игнат кайма хатĕрленчĕ.

— Çутăличчен отряда çитес пулать манăн,—терĕ вăл.— Лере мана юлташсем кĕтсе тăраççĕ, вăхăтра çитмесен пăшăрханĕç тата. Эпĕ — асли-çке вĕсен.

— Командир-и? — ыйтрĕ Мурат.

— Командир. Тĕлĕнтĕн-и? Пултараймастăп пуль тетĕн-и? — çемçен кулса илчĕ Игнат.

— Çук, уншăн мар...— Мурат пĕр вăхăтлăха чарăнса тăчĕ те унтан тăрук персе ячĕ: — Манăн санпа пĕрле пырас килет!

— Мĕ-ĕн? — ăнланмĕш пулчĕ Игнат.

— Санпа пĕрле пырас килет, тетĕп... Илсе кай мана тархасшăн хăвăр пата!

— Хăрамастăн-и? Хăрушă вĕт унта, ăнсăртран вĕлерме те пултараççĕ...

— Нимрен те хăрамастăп! Хуть те темле хăрушă пултăр!

— Анчах алла пăшал тытса курнă-и-ха эс?

— «Ворошиловский стрелок» эпĕ! Леш пĕчĕк винтовкăран хамăр шкултa тем чухлех пенĕ!

— О-о! Питĕ маттур иккен эсĕ! — кулса ячĕ Игнат.— Апла пулсан — отряда илме те юрать сана, анчах халех мар-ха...

— Мĕншĕн? Çамрăк тетĕн-и? Эп вунтăватта кайрăм халь! Манăн БГТО * значокĕ те пур...— çав тери

* БГТО — будь готов к труду и обороне.

васкаса калама тытӑнчӗ ӑна Мурат. Хӑй ҫав вӑхӑтрах тумлана та пуҫларӗ.

— Эсӗ мӗн — чӑнах-и? — ыйтрӗ Игнат кӑна курса.

— Чӑнах пулмасӑр... Илсе каятӑн вӗт?

— Ҫук.

— Мӗншӗн?

— Йывӑр пулать. Партизан пурнӑҫӗ ҫӑмӑл мар вӑл, ачам. Унта вӑй та, тӳсӗмлӗх те, пурте кирлӗ. Выҫҫи те, сивви те пулать.

— Нимӗнле йывӑрлӑхран та хӑрамастӑп... Енчен те халь хӑвпа пӗрле илсе каймасан — хам пӗччен пыратӑп сирӗн пата! Шыраса тупатӑпах сире! Куран акӑ!

Игнат ун ҫине пӑхса тӑчӗ-тӑчӗ те — кулӗшрӗ.

— Юрӗ эппин, атя... Кайран курӑпӑр унта.

Ҫак самантран вара Муратшӑн пачах урӑхла, ҫӗнӗ пурнӑҫ пуҫланчӗ. Мурат партизан пулса тӑчӗ.

* * *

Отряд вӗтӗрех вӑрманти тарӑн ҫырмара вырнаҫнӑ пулнӑ. Игнатпа Мурат унта хӗвел тухас умӗн ҫитрӗҫ. Ҫӗр каҫа ҫывӑрманнипе тата пӗр вунӑ ҫухрӑм хушши хӑвӑрт утса килнипе Мурат самаях ывӑнчӗ. Игнат ӑна йывӑҫ тураттисенчен тунӑ ӳпле умне илсе пычӗ те:

— Ҫакӑнта кӗрсе кан, кайран эп сана килсе вӑратӑп,— терӗ.

Вара вӑл кӑнтӑрла иртиччен ҫывӑрнӑ. Татах та вӑранас ҫукчӗ пулӗ те, ҫывӑхрах такамсем хыттӑн калаҫни илтӗнсе кайрӗ:

— Ҫакӑ-и-ха вӑл? — ыйтрӗ пӗри.

— Самӑй ҫавӑ,— терӗ тепри.

— Ну, ку ытла пӗчӗкех мар-ха, чӗчӗ ачиех мар, ку пултармалла!

— Тӳрех калама хӗн те — пурӑнсан курӑпӑр-ха...

— Ашшӗне хывнӑ пулсан — аптрас ҫук!

Мурат куҫӗсене уҫрӗ те ӳпле алӑкӗ умӗнче Игнатпа

Микулай мучи, колхозра темиҫе ҫул хушши конюхра ӗҫленӗ старик, тӑнине курчӗ. Мурат вӑраннине асӑрхаса, вӑл тӳрех унпа калаҫма тытӑнчӗ.

— Ну, пурнӑҫсем мӗнле, шӑнкӑрч?

— Пыраҫҫӗ-ха, пурӑнатӑп,— мӑн ҫын пекрех пулма тӑрӑшса ответ пачӗ Мурат.

— Пирӗн пата килме шут тытрӑн пулать?

— Килтӗм ҫав...

— Питӗ аван ку, пит аван... Пирӗншӗн халь кашни ҫын хаклӑ. Санран та, тен, усӑ пулӗ. Ачи ҫивӗччӗ-ха эсӗ.

Микулай мучи ӳпле алӑкӗ умне кукленсе ларчӗ те чӗлӗмне табак тултарма тытӑнчӗ.



— Ак мӗнле ахӑр-самана ҫаврӑнса ҫитрӗ вӗт, ачам,— терӗ вӑл, кӑвакрах тӗтӗм йӑсӑрлантарма пуҫласа,— кам шутланӑ кун пек пуласса? Леш вӑрҫӑра эпӗ нимӗҫсене хирӗҫ сан аҫупа пӗрле ҫапӑҫнӑччӗ. Таҫта та пултӑмӑр: Карпатра, Галицире... Вӑл питӗ маҫтӑр пулеметчикчӗ пирӗн, икӗ Георгий хӗресӗ* илчӗ. Унтанпа ҫирӗм пилӗк

* Патша ҫарӗнче салтаксене панӑ наградӑ.

çул иртрĕ ĕнтĕ. Халь вăт санпа пĕрле çапăçатпăр акă. Анчах ун чухне эсĕ çут тĕнчере те пулман-ха вĕт, э?

— Пулман çав...

— Ну, аптрамăпăр-ха халь те. Эс мана ытларах итле, ялан манпа пĕрле пулма тăрăш, эп сана йăлтах вĕрентĕп. Вата салтак пултарать вăл.

Микулай мучи мĕншĕн кун пек каланине Мурат тăруках ăнланмарĕ, анчах çав вăхăтра калаçăва Игнат хутшăнчĕ.

— Мучи тĕрĕс калать,— терĕ вăл.—Отряда килтĕн пулсан, халь ĕнтĕ çапăçма вĕренес пулать. Çаванпа та эп сана унпа пĕрле пулма хушатăп...— Игнат пуçĕпе Микулай мучи еннелле сулчĕ.— Вăл ман умра саншăн ответ тытать. Илтрĕн-и?

— Юрать...

— Ничево, ашшĕпе килĕштернĕскер — ывăлĕпе те майлашăпăр-ха,— сухал вĕçне пĕтĕркелесе илчĕ Микулай мучи.

— Шанатăп... Çаванпа калатăп та ĕнтĕ.

Ўпле хыçĕнче темле хĕрарăмăн çав тери янравлă та илемлĕ сасси илтĕнчĕ:

— Пирĕн пата çĕнĕ хăна килнĕ, теççĕ. Ăçта вăл?

— Кунта, кунта,— терĕ ăна хирĕç Игнат, пуçне тулалла кăларса.— Кĕрсе кур! Паллаш!

Кĕçех алăкра сенкертерех тутăр çыхнă хĕр пуçĕ куранчĕ. Мурат ăна тўрех палласа илчĕ: ку — фермăра ĕнесем суса пураннă хĕр, Груша иккен. Мурат пиччĕшĕпе, Неçтĕрпе, пит туслă пуранатчĕç вĕсем вăрçăччен. Ял хушшинче вĕсем кĕçех пĕр-пĕринпе пĕрлешессн çинчен те калаçкалатчĕç. Тен, кăçал Груша Муратăн инкĕшĕ пулатчĕ-и, анчах та çак ылханлă вăрçă кансĕрлерĕ-çке!..

— А-а, Коршунов! — терĕ Груша хавассăн, çĕре сарса хунă йывăç тураттисем çинче ларакан Мурата курсан.— Хăçан çитрĕн? Пĕчченех-и? Мĕнле кун пек шут тытрăн тата?

— Игнат пиччепе килтём...

Груша хайӗн ҫывӑх таванне курнӑ пекех саванса калаҫа пуҫларӗ унпа. Ялтисем ҫинчен ыйтса пӗлчӗ, сӑмах майӗн Муратӑн пиччӗшӗ ҫинчен те ыйтрӗ, хайсен ялӗнчен отрядра тата кам-кам пуррине каласа пачӗ. Отряда нумайӑшӗ килнӗ иккен, Мурат вӗсем ҫинчен пӗлмен те. Кӳршӗри ялсенчен те йышлӑн пуханнӑ. Грушӑпа Микулай мучи каланӑ тӑрӑх, «Фашизма — вилӗм!» ятлӑ отряд ӗнтӗ самай пысӑк вӑях пулса тӑнӑ.

...Ку таранччен ҫынсем калаҫнине илтнипе ҫеҫ пӗлнисене вӑл халь хӑй куҫӗпе курчӗ. Отрядри ҫынсем пурте ӑна ҫав тери килӗшрӗҫ: хӑюллӑ, нимрен хӑраман, хастарлӑ халӑх пуханнӑ-мӗн-кунта. Ҫав вӑхӑтрах вӗсем — кӑмӑллӑ, йӑваш, пӗр-пӗриншӗн тем тума хатӗр, пӗр-пӗрине нихҫан та кӳрентерес ҫук, пӗр-пӗрине нимӗнле йывӑрлӑхра та пӑрахас ҫук ҫынсем пулнӑ...

Отряд командирӗ Игнат Дубов хушнӑ пек, Мурат пӗрмаях Микулай мучипе пӗрле ҫӳрерӗ. Апат та пӗрле ҫирӗҫ вӗсем, каҫхине те пӗрле ҫывӑрчӗҫ. Анчах ҫапах та Муратӑн чунӗ Игнат патнелле хытӑрах туртӑнчӗ, вӑл кашнинчех унпа ҫывӑх пулма тӑрӑшрӗ. Нимрен ытла ӑна Игнат пур йышши хӗҫ-пӑшала та ҫав тери лайӑх пӗлни кӑмӑла кайрӗ, вӑл унран пурне те пӗлме, вӗренме тӑрӑшрӗ.

Ҫамрӑк партизан ҫар ӗҫне ҫине тӑрсах вӗренесшӗн ҫуннине курса, Игнат хӑй те ӑна пулӑшса пычӗ. Пӗр эрне те иртмерӗ пуль — Мурат винтовкӑна та, ручной пулемета та пӗлекен пулчӗ, граната ывӑтма та хӑнӑхрӗ, анчах пуринчен ытла ӑна автомат кӑмӑла кайрӗ: вӑл кӗске, ҫӑмӑл, ятарласа Мурат валли тунӑ пекех. Пересе те пит хӑварт перет, пульӑсене пӑрҫа пекех сапать, спусковой крючок ҫине пусса тӑр кӑна...

Пӗринче, Игнат ҫав автомата тасатнине пӑхса тӑрсан-тӑрсан, тӳсеймерӗ Мурат, ыйтрӗ:

— Игнат пичче, мана та автомат парӑр-ха?..

— Пеме пӗлетӗн-и?

— Вĕрентĕм ĕнтĕ...

— Пит аван апла пулсан. Анчах та партизансем хăйсене валли хĕç-пăшал çапăçура тупаççĕ, çавна пĕлетĕн-и эс? Йĕрки çавăн пек пирĕн...

Çакăн хыççăн Мурат хăй валли автомат-пăшал туянас ĕмĕтпех пурăнчĕ. Тăшмана тĕл пулсан, çав пăшалпа ăна темĕн чухлĕ пĕтерсе тăкма пулать-çке!

* * *

Анчах та Мурат отряда пынăран вара питех пысăк ĕçсемех пулмарĕç-ха. Отряд сĕм вăрманти пĕр улах тарăн çырмарах тăчĕ, вырăнтан хускалмарĕ. Партизансем пĕчченшерĕн те, тăват-пиллĕкĕн те каç-каç таçта тухса кайрĕç, таврăнсан Игнатпа пăшăлтатрĕç. Вĕсем таврари ялсенче мĕн пулса пыни çинчен, гитлеровецсем ăçта мĕн туни çинчен пĕле-пĕле килчĕç пулмалла. Ытти партизансем ку вăхăтра пуринчен ытла хĕç-пăшалпа тăрмашрĕç — унпа мĕнле лайăхрах усă курмаллине вĕренчĕç, хăварт аварласа, хăварт тĕллесе пеме, гранатăсем ывăтма, минăсем лартма вĕренчĕç. Çапах та пĕр-икĕ хутчен самаях вĕри çапăçусем те пулса иртрĕç.

Пĕринче дозорта пулнă партизансем вăрманти пĕр пысăках мар уçланкă хĕрринче тăшманăн мотоциклисчĕсем * чарăнса тăни çинчен пĕлтерчĕç. Игнат çавăнтах пĕр аллă çын уйăрса илчĕ те, вĕсем хăйсем вырнаçнă çырмаран ансăр сукмаксем тăрăх хăварт кăна тухса кайрĕç. Тепĕр сехетрен партизансем çав уçланкăна пур енчен те çавăрса илчĕç. Игнатран пĕр утăм та юлман Мурат унпа пĕрле вăрăм курăк ăшшĕн упаленсе малалла тухрĕ те питĕ аван курчĕ: уçланкăра чăнах та пĕр 20—25 мотоциклист пухăннă иккен. Машинисене йывăççем айне тăратнă, хăйсем хĕвел ăшшинче: хăшĕ-

* Мотоциклпа çÿрекен салтаксем.

сем выртаççĕ, хăшĕсем пăшалĕсене тасатаççĕ, теприсем чăмлаççĕ, чĕлĕм туртаççĕ...

— Ай-ай, курортри пекех тыткалаççĕ хăйсене... Хурал та çук пулмалла! — терĕ Игнат шăппăн, ручной пулемета меллĕрех вырнаçтарса.— Халех ак эпир вĕсене çут тĕнче кăтартăпăр...

Мурат унпа юнашар пырса выртрĕ. Вăл питĕ хытă пăлханчĕ, чĕри сиксе тухас пекех тапрĕ. Боевой операцине вăл пирвайхи хут килнĕ-çке, партизансен чăн-чăн ĕçне пуçласа хутшăнать. Хăй куçĕ умĕнче нимĕç салтакĕсене курсан, вăл чăн малтанах темле çӳçенсе илчĕ: тахăш самантра Мурата нимĕçсем унăн тăван ялне бомбăсемпе аркатни, урамра çын виллисем выртни, унтан нимĕçсем яла пырса кĕни, амăшĕпе иккĕшне кĕнесе тăкни аса килчĕ. Хăй аллинчи карабина Мурат калама çук хытă чăмăртарĕ, унăн халех, ним тăхтаса тăмасăрах пеме пуçлас килчĕ. Çапах та — пемерĕ, мĕншĕн тесен приказсăр пеме хушман.

Минут иртрĕ, иккĕ иртрĕ...

— Хăçан пуçланать-ха? Мĕне кĕтет Игнат? Капла выртсан, тăшмана тартма та пулать! — çав тери пăлханчĕ Мурат.

— Ну, лайăхрах тĕлле! Ав, сарлака çурăмлине...— терĕ те Игнат юлашкинчен, пулеметран вăрăм черет каларса ячĕ. Ăна илтсенех, Мурат та курок çине пусрĕ. Çав самантра ытти партизансем те харăсах пур енчен те пеме тапратрĕç. Вăрманта пăшал кĕрĕслетни, пулеметсем шатăртатни çеç кĕрлесе тăчĕ...

Гитлеровецсем хăйсене çакнашкал сасартăк тапăнасса пачах та кĕтмен. Малтанхи пăшал сассисем илтĕнсенех, вĕсем ăнран тухса кайса ăшаланма тытăнчĕç. Унталла ыткăнчĕç, кунталла чупрĕç — пур çĕрте те вĕсене партизансен пульлисем çите-çите çапрĕç. Нумайăшĕ çавăнтах тирĕне-тирĕне кайрĕç, ӳкнисем упаленсе те пулин хăтăлма тăрăшрĕç — усси пулмарĕ...

Мотоциклсем тăна çĕртен нимĕçсен пĕр пулемечĕ

кӗске черетсемпе вӗрме тытӑнчӗ, анчах темиҫе самантранах ун патӗнче тахӑш партизанӗ ывӑтнӑ граната шартлатса ҫурӑлчӗ те — пулемет шӑпланчӗ.

Уҫланкӑра мӗн пулса пынине Мурат ҫав тери ҫивӗччӗн сӑнаса выртрӗ. Хӑй куҫӗпех курчӗ вӑл капкӑна лекнӗ фашистсем епле пӗтнине. Акӑ, вӗсенчен пӗри, суранланнӑ аллине тепринпе тытса, Мурат выртакан ҫӗрелле чупрӗ — йывӑҫсем хушшине тарса хӑтӑласшӑн пулчӗ пулас... Мурат ӑна карабинӗпе питӗ тӑрӑшса тӗллерӗ те персе ячӗ. Фашист ҫавӑнтах малалла тирӗнсе кайрӗ.

— Маттур, шӑллӑм! — кӑшкӑрчӗ Игнат, ҫав хушӑра Муратӑн ӗҫне курса выртнӑскер.— Пултаратӑн!

Темиҫе минутран партизансем уҫланкӑна тухрӗҫ. Ҫирӗм икӗ мотоцикл, автоматсем, винтовкӑсем, патронсем, радиостанци лекрӗ вӗсен аллине. Мотоциклсене партизансем пӗр ҫӗре купаласа ҫунтарса ячӗҫ, хӗҫ-пӑшалне, боеприпассене хӑйсемпе илсе таврӑнчӗҫ. Унсӑр пуҫне тата ҫапӑҫура аманнӑ икӗ партизана ҫӗклесе пымалла пулчӗ вӗсен...

— Лайӑх кун пулчӗ паян! — терӗ Игнат.— Пӗрмай кун пек пулса пырсан — питӗ аванччӗ!

Ҫак ҫапӑҫуран Мурат хӑй валли нимӗҫсен «шмайсер» текен хуп-хура та йӑлтӑркка автоматне туянса таврӑнчӗ. Ҫавӑншӑн вӑл мӗн тери савӑннине каласа пама та пӗлес ҫук. Пӗр самантлӑха та алӑран вӗҫертмерӗ вара вӑл ӑна, ҫывӑрнӑ чух та ыталаса выртрӗ...

Каҫхине ӳплере Микулай мучи Мурата мухтаса ларчӗ:

— Молодец, ачам! Аҫу ятне ҫӗртместӗн... Малашне те ҫавӑн пекех паттӑр пул. Асту: совет халӑхӗ хӑйӗн паттӑр ывӑлӗсене нихҫан та манмасть вӑл, яланах ырӑпа асӑнать!

Ӗҫсем малалла та ӑнса пычӗҫ.

Мотоциклсен отрядне аркатнӑ хыҫҫӑн тӑват-пилӗк кунтан Игнат Дубовӑн отрячӗ тӑшманӑн пысӑк обозне

тапӑннӑ. Нимӗҫсем, темиҫе ялти колхозниксене хӑйсен тыррине лавсем ҫине тиеттерсе, вӑйпах чугун ҫул станцине леҫтерме тытӑннӑ-мӗн. Паллах, вӑл тырӑ Германие каймалла пулнӑ. Ҫул тӑрӑх вӑрӑм обоз пынине асӑрхасанах, партизансем вӑрман хӗррине пытанса ларчӗҫ те, лавсем хӑйсен тӗлне ҫитсен, сасартӑк сиксе тухрӗҫ. Обоза сыхласа пыракан салтаксем тӗрлӗ енне тарма тытӑнчӗҫ, вӗсенчен чылайӑшне партизансем перепере ӳкерчӗҫ, колхозниксене каялла тавӑрчӗҫ.



— Киле кайӑр та пӗтӗм тырра пытарӑр, тӑшмана пӗр пӗрчӗ те ан парӑр,— вӗрентсе ячӗҫ вӗсене.

Колхозниксем партизансене тем пекех тав турӗҫ вара, кирлӗ вӑхӑтра вӗсене хуть те мӗнле пулӑшма сӑмах пачӗҫ.

— Сирӗншӗн нимӗн те шел мар.

Пуринчен ытла Мурат хӑйсен отрячӗ августӑн юлашки кунӗсенче тунӑ ӗҫе лайӑх астӑвать...

Вӑл акӑ мӗнле пулчӗ.

Пӗрре, хӗвел аннӑ вӑхӑтра, отряда ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирлӗ, питне-куҫне чӑрмаласа пӗтернӗ ватӑрах ҫын пырса тухрӗ. Ун ҫине пӑхсанах, вӑл юлашки вӑхӑтра тем те пӗр тӳсни, ҫывӑрманни, ывӑнса ҫитни палӑрчӗ. Дозорти партизансем ӑна Игнат патне илсе пырсан — вӑл ура ҫинче те аран тӑчӗ, сулӑнса кайса чутах ӳкетчӗ.

— Ӑҫтан килтӗн эс? — ыйтрӗ Игнат, ку ҫынна пӗр тунката ҫине лартса сывлӑш ҫавӑрса илме май парсан.

— Ивановкӑран... Пӗр вунӑ ҫухрӑм кунтан...—ас-

сăн сывласа ячĕ лешĕ, çамки çинчи тарне çĕтĕк пиншакĕн çаннипе шăлса.

— Ху çав ялсем-и?

— Çав ялсемех...

— Мĕн ятлă? Кам пулатăн?

— Прохор... Коровин... Нимĕçсем киличчен хамăрăн «Ленин çулĕпе» колхозра кладовщик пулса ĕçлеттĕм...

— Мĕн хыпарпа килтĕн? Каласа пар часрах.

— Ох, усал хыпарпа килтĕм, юлташсем!..— Вăл хăйне йĕри-тавра пуханса тăнă партизансене майĕпе пăхса çавранчĕ.— Паян ирхине пирĕн пата каллех нимĕçсем пырса кĕчĕç те пĕтĕм яла кутăн-пуçăн çавăрчĕç... Ĕмĕрне курманнине куртăмăр çав!..

Партизансем ун çывăхнерех куçса тăчĕç.

— Мĕн турĕç вара?

— Ухтарман кĕтес те юлмарĕ. Хайсем пирĕнне хĕç-пăшал шыратпăр терĕç, анчах алла мĕн лекнĕ — пĕтĕмпех сĕтĕрсе тухрĕç... Çимелли, кĕпе-тумтир, тăлăпĕ-кĕрĕкĕ, атти-çăматти, тĕрлĕ вак япаласем... Камăн сехет пур, камăн кĕмĕл кашăк, вăчăра — тĕппипех шăлчĕç. Унтан темиçе така пусса пĕçерттерчĕç те эрех ĕçсе супрĕç... Вара пушшех, çӳç-пуç вирелле тăрса каймалла ашкăнма тапратрĕç. Кашни çыннах çыпçăнчĕç, хĕнеме е каштаран туртса çакма сăлтав шырарĕç... Пуринчен ытла хĕрарăмсене йывăр килчĕ: вĕсене пĕр çирĕм çынна яхăн пухрĕç те шкул çуртне хăваласа кӳртрĕç... Унта мĕн пулса иртнине пĕлместпĕр, унтан хĕрарăмсем кăшкăрни, асаплăн макăрни, нимĕç салтакĕсем ахăлтатни çеç илтĕнчĕ. Алăк умне тăратнă часовойсем никама та çывăха ямарĕç, кĕске пăшалĕсемпе перес пекех тăчĕç... Нимĕн тума та пултараймарăмăр эпир: çара алăпа пăшал çине епле пырса кĕретĕн? Манпа кӳршĕре пурăнакан хĕрарăм, пĕр нимĕç салтакĕ унăн вунултă çулхи хĕрачине пахчаналла сĕтĕрме пуçласан — тӳсеймен, нимĕçе ал айне лекнĕ кĕреçепе

çапма тăнă та, лешĕ вара çаваншăн ăна та, хĕрне те персе пăрахнă...

Колхозник тараннăн сывласа ячĕ те шыв ыйтрĕ. Ăшĕ çав тери пиçсе çитнĕ иккен унăн: çур котелок шыва ним чарăнмасăр тенĕ пек ĕçсе ячĕ вăл. Унтан тахăшĕ тыттарнă пируса каçса кайсах ĕмме тытăнчĕ.

— Пуринчен тискерри ку та мар-ха,— терĕ вăл, кăшт тăхтасан.— Кăнтăрла иртсен, нимĕçсен тепĕр ушкăнĕ таçта, темле майпа тыткăна лекнĕ пилĕк хĕрлĕармееца илсе пычĕ. Шутлатăп та, вĕсем аманнă пирки лекнĕ пулмалла, тетĕп, мĕншĕн тесен кашниннех е пуçне, е аллине, е урине çыхнăччĕ... Пĕри уйрăмах хытă уксахлатчĕ, аран-аран утатчĕ...

— Ну-ну, вара?

— Мĕн турĕç вĕсене?

— Вĕлерчĕç-и? — колхознике часрах каласа пама васкатрĕç партизансем.

— Ан та калăр...— аллипе сулчĕ колхозник.— Аса илме те хăрушă. Фашистсем — тискер кайăкран та тискер кайăк иккен çав... Малтан пĕр вăхăт шкулта тытрĕç вĕсене... Допрос турĕç пулмалла. Ну, вĕсем допроссене епле майпа тунине халь пурте пĕлеççĕ: кашни ыйту хыççăнах е чышкăпа, е револьвер аврипе, е çĕçĕпе усă кураççĕ. Кусене те çавăн пекех тĕпченине эпир тӳрех ăнлантăмăр: пĕр-ик сехетрен, нимĕçсем çав хĕрлĕармеецсене урама каялла илсе тухсан, пăхма та çукчĕ вĕсем çине... Суранĕсене çыхнисене çура-çура антарнăччĕ, пичĕ-куçĕсем — чĕп-чĕр юн, аллисене каялла çыхнă, аттисемпе гимнастеркисене хывса илнĕ. Пĕринне вара... каларăм-çке, пĕри питĕ хытă уксахлатчĕ, терĕм... Çавăнне сылтăм хăлхине çĕçĕпе касса янăччĕ, унăн майĕ тăрăх çăра юн сăрхăнсах пыратчĕ. Вăл ĕнтĕ пĕр урине тепĕр уринчен ирттереймиех пулса çитнĕччĕ...— Колхозник каллех йывăррăн сывласа илчĕ. Партизансем, вăл малалла мĕн калассине кĕтсе, ним чĕнмесĕр тăчĕç.— Хĕрлĕармеецсене урам тăрăх тăвал-

ла илсе кайрĕç. Вĕсен умĕпе шăрт пек тăракан хĕрлĕ уссиллĕ самăр офицер утса пычĕ. Кăкри çинче «тимĕр хĕрес» сулланкаласа пыратчĕ унăн. Вăл хĕрессене Гитлер хăйĕн чи шанчăклă йыттисене парать, теççĕ. Хыçалтан, штыкĕсемпе хĕрлĕармеецсен çурăмĕсенчен тĕллесе, улт-çич салтак пычĕç...

— Ну ĕнтĕ, кусене персе пăрахма илсе кайрĕç,— терĕмĕр эпир, хамăр çынсене пĕтĕм чунтан хĕрхенсе. Хире тухсан, ку шухăш тата ытларах çирĕпленчĕ. Униче картинчен пĕр çĕр утăмра вĕсене шăтăк алттарма тытăнчĕç. Паллах ĕнтĕ — мĕн шăтăкĕ... Халран кайса çитнĕ хĕрлĕармеецсем аран-аран ĕçлерĕç, тимĕр хĕресли вĕсем çине текех кăшкăрсаваскатрĕ, хăшĕ те пулин ывăннипе чарăнса тăрсанах, ăна пырса тапрĕ...

— Эсир ăçта пултăр вăл вăхăтра? — хуллен ыйтрĕ партизансенчен пĕри, колхозникăн калавне пӳлсе.

— Чылай аякра тăтăмăр... Сывăха ямарĕç пире. вырăнтан хускалма тăрсанах пăшалĕсемпе юнарĕç...

— Унтан мĕн пулчĕ?

— Шăтăка хатĕрлесе çитерсен, хĕрлĕармеецсене пурне те ун хĕррине тăратрĕç. Ах, мăнтарăн! Çурăлса каяс патнех çитрĕç пирĕн чĕресем!.. Офицер вĕсен умĕпе пĕр-икĕ хутчен каллĕ-маллĕ уткаласа илчĕ. Пурне те йĕркипе пăхса тухрĕ. Унтан, сасартăк, вăл хăлхине каснă хĕрлĕармеец умĕнче чарăнчĕ те, ăна янах айĕнчен чышса пуçне çĕклеттерчĕ.

— Ан сывăр! Пăх çакăнталла,— терĕ вăл, аллипе шăтăк çине кăтартса.— Эсĕ хăвăрăн тăван çĕршĕн çапăçатпăр терĕн пасăр. Анчах эпир вăл çĕре сире ахалех парас терĕмĕр... Кашнине икĕ метр. Çитет-и? Ха-ха-ха!..

Офицер тата темскер каласшăнччĕ, анчах хĕрлĕармеец пӳлчĕ ăна.

— Ытла час кулатăн, фашист йытти! — терĕ вăл. Унăн сасси тĕлĕнмелле уççăн, çирĕппĕн янраса кайрĕ.— Эсир пирĕн çĕре валеçме нихçан та унăн хуçи

пулас çук!.. Вырăс çĕрĕ çинчен сирĕн аслаçăрсемпе аçăрсем епле тухса сирпĕннĕ — сирĕн те çаван пекех, каялла пăхмасăр тармалла пулать акă! Эсир пире нихçан та çĕнтерес çук!..

Ăна урăх калама памарĕç. Офицер темскер кăшкăрса ячĕ те, ун патнелле сиксе пырса, пĕррех пуçĕнчен çапрĕ. Хĕрлĕармеец шăтăка анса ӳкрĕ. Вара çав самантрах нимĕç салтакĕсем кĕреçесем тытрĕç те шăтăка тăпра тултарма тапратрĕç...

Хĕрлĕармеец çапах та паранасшăн пулмарĕ курăнать, пĕр ик-виçĕ хутчен те шăтăкран унăн пуçĕ курăнчĕ, анчах ăна кашнинчех каялла çапа-çапа антарчĕç. Юлашкинчен вăл: «Йытăсене йытă вилĕмĕ пулĕ!» — тесе кăшкăрнине çеç илтрĕмĕр... Анчах ăнланăр-ха эсир: вăл вилменччĕ вĕт, ăна чĕрĕллех çĕр айне турĕç! Чĕрĕлле! Пĕреххут, персе пăрахасчĕ малтан... асапĕ сахалтарах пулатчĕ унăн... Ак мĕнле япала курма тиврĕ пире. Ниçта кайса кĕме пĕлмерĕмĕр çав...

Колхозник калама чарăнчĕ. Таврара шăп пулчĕ. Çынсем пĕрин хыççăн тепри хăшт та хашт сывла-сывла илчĕç. Йывăр шухăшсем çавăрнчĕç вĕсен пуçĕсенче, унпа пĕрлех — нимĕç фашисчĕсене тата вирлĕрех, тата хаяртарах таварас, вĕсене ăçта тĕл пулнă — çавăнта вĕлерес, вутпа çунтарас кăмăл вĕресе хăпарчĕ.

— Ытти хĕрлĕармеецсене мĕн турĕç тата? — чылай вăхăтран ыйтрĕ Игнат. — Персе пăрахрĕç-и?

— Çук... Тем шухăш кĕчĕ офицера — ыттисене тивмерĕ çав. Вĕсене каялла илсе таврăнчĕç те шкул картишĕнчи сарайне питĕрсе лартрĕç.

— Вара халь те çавăнтах-и вĕсем? Таçта илсе тухса каймарĕç-и?

— Çавăнтах пулма кирлĕ. Нимĕçсем хăйсем тухса кайман-тăк, çавăнтах. Анчах хăйсем кĕçĕрех тухса каясси палăрмарĕ-ха, эпĕ çавăнпа чупса килтĕм сирĕн пата...

— Пирĕн çинчен ăçтан пĕлтĕн эсĕ?

— Халăх калаçать ара...

— Нимĕçсем каяс çуккине епле пĕлетĕн?

— Мĕншĕн тесен колхозниксене çаратса тухнă япаласем аплипех выртаççĕ, лавсем çине те тиемен. Каяс пулсан, вĕсене пăрахса хăварас çуках вĕсем.

— Ку тĕрĕс...

— Сире шанатпăр, тăвансем...— Колхозник каллех пурин çине те ыйтуллăн пăхса çаврăнчĕ.— Епле пулсан та тавăрасчĕ-çке вĕсене ку мăшкăлшăн. Ытла та тӳсме çук вĕт. Юриех сире систерме ячĕç мана хамăр ял çыннисем. Инçех мар кунтан, шăп тĕттĕм пулнă çĕре çитме пулать.

Партизансем пурте хăйсен командирĕ çинелле пăхрĕç. Игнат, вăтă юман çумне таянса, тарăн шухăша кайса тăчĕ. Унтан вăл колхозникрен вĕсен ялĕ мĕнле вырăнта ларни, çывăхра мĕнле çырма-çатрасем, вăрмансем пурри, нимĕçсен миçе çын пулма пултарни, вĕсем мĕнле хĕç-пăшалланни çинчен ыйтса пĕлчĕ. Колхозник хăй мĕн пĕлнине каларĕ: нимĕçсем пĕр аллă утмăл çынтан ытла мар, тупă тавраш çук вĕсен, пăшалсемпе кăна, терĕ.

Тепĕр сехетрен пĕтĕм отряд вырăнтан тапранчĕ. Çырма тĕпĕсемпе чăтлăхсем витĕр, сукмаксем тăрăх, ним шавсăр шуса пычĕ вăл.

Мурат пĕрмаях Микулай мучипе юнашар утрĕ. Халь унăн сылтăм хулпуççийĕ çинче хуп-хура автомат, пиçиххийĕ çинче нимĕçсен винтовкинчен вĕçертсе илнĕ кинжал евĕрлĕ сарлака штык пулчĕ. Вăхăтран вăхăта вăл мучипе пăч-пач сăмах хушкаларĕ.

— Сан ывăлу ăçта халь, мучи?

— Кам, Павăл-и?

— Ийя çав.

— Пĕлместĕн-и-мĕн? Вăрçă тухсан тепĕр куннех вăл сан пиччӳпе пĕрле фронта кайнă вĕт.

— Таçта ĕнтĕ халь вĕсем...

— Ăçта пулччăр? Çапăçаççĕ!

— Эсĕ ху нимĕçсемпе ĕлĕк те çапăçнă тетĕн-и-ха?

— Икĕ хутчен те çапăçнă. Малтан, кивĕ армире службăра пулнă чух, Рига патĕнче, унтан — вунсаккăрмĕш çулта, Хĕрлĕ Çар ĕретĕнче, Украинăра... Ну, Украинăра питĕ хытă патăмăр вара эпир вĕсене, каяллла çавăрнса пăхмасăрах тарчĕç!

— Эппин, халь эсĕ виççĕмĕш хут тĕл пултăн вĕсемпе? Çапла-и?

— Çапла пулса тухать! Хамăн ĕмĕрте икĕ хут хĕнесе ятăм вĕсене, виççĕмĕшĕнче пуçĕсене çапса аркатсах ярас пулать ĕнтĕ — унсăрăн чарăнас çук вăл тискер йăх!

Мурат унăн сăмахĕсемпе тулли кăмăлпах килĕшрĕ.

— Тата инçе-ши? — тесе ыйтрĕ вăл, тепĕр çур километр пек кайсан.

— Пур-ха. Ма ыйтатăн?

— Часрах çитес килет...

— Сан анчах мар, пурин те çавах пуль вăл,—терĕ ăна хирĕç Микулай мучи.

Вăл тĕрĕс калана. Çак самантра партизансен пурин те пĕр ĕмĕт пулнă: çитмелли вырăна часрах çитесчĕ те, тăшмана çавăрса илсе, пĕр фашист чунĕ юлмиччен пĕтерсе тăкасчĕ, совет çыннисене асаплантарнăшăн виçĕ хут ытларах тавăрасчĕ...

Мурат та çавăн çинчен шухăшлана.

Микулай мучи те.

* * *

Çурçĕр çитеспе отряд вĕтлĕх вăрманти пĕр уçланкăра чарăнчĕ.

— Çитрĕмĕр...

— Пĕр çухрăм та çура çеç, тет, кунтан...— пăшăлтатни илтĕнчĕ партизансем хушшинче.— Ялĕ çак уйăн леш вĕçĕнче, лупашкара ларать, тет...

Отряд командирĕ пурне те пĕр çĕрелле пухрĕ те йĕркеленсе ларма хушрĕ.

— Паян питех те вĕри çапăçу пулма пултарать, юлташсем,— терĕ вăл лăпкă сасăпа.— Тен, хальччен пулнă пур çапăçусенчен те вăйлăрах пулĕ вăл... Халех каласа хуратăп: ташмана çак ялта çĕнтермешкĕн пĕтĕм вăя хурса, пĕр шит те каялла чакмасăр çапăçмалла пулать. Çавăнпа та, кам та кам хăйне шансах каймасть, шикленет — вăл ан пытăр пирĕнпе, ан та кансĕрлетĕр...

Игнат пĕр вăхăтлăха шарламасăр тăчĕ.

— Пур-и ун пеккисем?

Никам та чĕнмерĕ ăна хирĕç.

— Çук эппин? Юрĕ... Халь ĕнтĕ хĕç-пăшалсене тĕрĕслĕр те канăр, кирлĕ самант çитсен вăратăпăр сире. Ташмана вăл чи тутлă ыйхăпа çывăрнă чух, сасартăк, кĕтмен çĕртен пырса çапас, тетпĕр. А эсир...— Игнат отрядри боевой расчет командирĕсем çине пăрнипе тĕлле-тĕлле илчĕ.— Чирков, Коробков, Ванюшев, тата... эсĕ, Мурат, халех манпа пыратăр. Атьăр, кайрăмăр...

«Ăçта илсе каять-ши?» — шухăшларĕ Мурат, анчах самантранах тавçăрса илчĕ: «Разведкăна...»

Вĕсем вăрмантан тухрĕç те хĕвеланăç еннелле утрĕç. Малта Игнатпа хайхи Прохор Коровин колхозник пычĕç. Уй урлă, таптаса пĕтернĕ ыраш хушшипе тăрĕрен тăрĕ пĕр çур сехет пек утсан, вĕсем самаях çăллĕ сăрт хĕррине тухса тăчĕç.

— Çакăнта,— терĕ партизансене ертсе килнĕ колхозник.

Малта, сарлака лупашкара, чăнах та, ытла пысăках мар ял вырнаçнă иккен. Каçĕ пит тĕттĕмех пулманнипе ялти ватă йывăççем, çуртсем, çывăхри картасем самаях палăрса тăраççĕ.

— Выртăр пурте,— хушрĕ Игнат.— Яланах астăвăр: çĕрле нихçан та сăрт çинче тăма юрамасть, аялтан пăхсан, вăл юпа пекех курăнать...

Разведчиксем выртрĕç. Ял еннелле пĕтĕм куç вăйĕпе тинкерме, итлеме тытăнчĕç.

Шăпах иккен, пĕр сасă та илтĕнмест.

— Кун каçа ашкăнса ыйăннă пулмалла, çывăраççĕ ĕнтĕ,— терĕ Прохор Коровин.

— Тен, тухса кайнă вĕсем? Килни те ахалех пулĕ? — иккĕленсе илчĕ пĕри.

— Эпир ăна халех пĕлĕпĕр ак,— терĕ Игнат.

Çавăнтах разведчиксене кăтартусем пама тытăнчĕ. Иккĕшне ялăн ту вĕçне, иккĕшне анат вĕçне тата иккĕшне ялăн леш енчи анкартисене «хыпашлама» хушрĕ.

— Ăçта мĕн пур — пĕтĕмпех пăхса тухăр. Май килсен — часовойсене «тирпейлеме» юрать, анчах — астăвăр, пĕр сас та пулмалла мар. Кам та пулин пĕрре пăшал персе ярсан — пирĕн пĕтĕм операци пĕтсе ларма пултарать... Тепĕр сехетрен çакăнтах пухăнатпăр. Ăнлантăр-и?

— Ăнлантăмăр.

— Кайăр.

— Ман ăçта каяс? — ыйтрĕ Мурат çав вăхăтра, хăйне ĕç хушасса кĕтсе илейменнипе.

— Эс манпа пыратăн,— терĕ Игнат.— Санпа эпир ял варрине кĕретпĕр.

Пурте саланчĕç. Таврара малтанхи пекех шăп пулчĕ, ялăн анат вĕçĕнче çеç пĕр йытă кахаллăн вĕркелесе илчĕ. Унтан инçетре çинçе саслă пĕртен пĕр автан авăтса ячĕ. Нимĕçсем килсе пĕтĕм яла çаварттарнă хыççăн урăх автан юлман та пулмалла ĕнтĕ, йăлтах пусса çинĕ, ку çеç темлерен хăтăлкаланă курăнать.

— Шăп çурçĕр,— терĕ Игнат,— вăхăт пур-ха пирĕн...

Вĕсем виççĕн — хăйсене ертсе килнĕ колхозник Прохор, Игнат, Мурат — паранкă йăранĕсем хушшипе упаленчĕç. Вăхăтран вăхăта чăрăнса, итлесе выртрĕç, унтан каллех малалла шурĕç. Пĕр пахчари хурлăхан тĕмисем ăшне пырса кĕрсен, Прохор урамалла тухрĕ.

Тӳсме çук вăрăм пек туйăнчĕç ку минутсем... Анчах вăл нумаях тăмарĕ, часах тавăнса шăппăн кăна пĕлтерчĕ:

— Урамра никам та курăнмасть...

Вара вĕсем виççĕшĕ те пахчаран тухса, çуртсем, хӳмесем çумĕпе йăпшăнса, йывăççем кутĕнче чарăнса тăрса, ял тăрăх аналла кайрĕç.

Хыта сăнарĕç вĕсем...

Шкул патнелле çывхарнă чух, ку вырăнта урам пушшех тĕттĕм пулнă май, тепĕр енне каçрĕç.

— Авă, курăр...— терĕ Прохор сасартăк, пĕр аллă метр кайсан.

Тинкерсе пăхрĕç.

Шкул умне нимĕçсем икĕ пулемет лартнă иккен. Çавăнтах икĕ часовой каллĕ-маллĕ ерипен кăна уткаласа çӳреççĕ.

— Хĕрлĕармеецсене хупнă сарайĕ хăшĕ? — ыйтрĕ Игнат.

— Картишĕнче...

— Çитсе пăхас пулать.

— Атьăр...

Разведчиксем каллех карта урлă каçса пахчана кĕчĕç. Улмуççисем, хăмла çырли тĕмисем хушшипе кушаксем пек шăппăн шурĕç.

— Акă... Çак, хăма витни,— аллипе тĕллесе кăтартрĕ Прохор.

Патнерех пычĕç. Игнат, пĕшкĕнсе ларса, хӳмери шăтăк витĕр шалалла пăхма тытăнчĕ. Чылай вăхăт пăхрĕ. Унтан тăчĕ те аллипе каялла сулчĕ.

— Картишĕнче темиçе пулемет, темиçе купа винтовкă тăрать. Анчах вĕсем леш енчерехре те—лайăхах курăнмаççĕ,— терĕ вăл, йывăççем айнерех кайса тăрсан.— Акă мĕн, Мурат. Санăн куçусем çивĕч пулма кирлĕ. Сарай хыçĕпе шуса кай та леш енчи хӳме витĕр пăхса винтовкăсем миçе купара тăнине шутлама тăрăш. Вĕсене шутласа кăларсан — салтаксен йышĕ те

палла пулать. Эпир унччен сарайӗнче мӗн пуррине пӗлме тӑрӑшӑпӑр.

Мурат пӗр сӑмах каламасӑрах командир мӗн хушнине тума кайрӗ. Малтан хӑмла ҫырли тӗмисем хушшипе сарай пуҫне тухрӗ, унтан, майӗпе, стена ҫуммипе шума тытӑнчӗ. Темле пулсан та, питӗ хӑрамалла-ҫке... Кам пӗлет, тен, пахчари кашни тӗмӗ хыҫӗнчех тӑшман куҫӗсем сӑнаҫҫӗ, кашни самантрах вӑл сан ҫине сиксе ларма хатӗрленет? Темшӗн Муратӑн сылтӑм алли хӑй тӗллӗнех пиҫиххирен ҫакӑнса тӑракан штык аврине чӑмӑртарӗ...

Акӑ ӗнтӗ, вӑл сарайӑн тепӗр вӗҫнелле ҫитрӗ. Икӗ утӑмранах — кӗтесрен пӑрӑнмалла. Унта мӗн-ши?

Таврара паҫӑрхи пекех шӑп.

Пахчара тӗттӗм.

Мурат пӗр утӑм малалла ярса пусрӗ...

Шӑпах ҫав самантра, сасартӑк, ҫӗр айӗнчен ӳссе тухнӑ пек, ун умне нимӗҫ салтакӗ тухса тӑчӗ. Хурҫӑ калпаклӑскер, пичӗ курӑнмасть.

Вӗсем кӑшт ҫеҫ пӗр-пӗринпе ҫапӑнмарӗҫ. Иккӗшӗ те самантлӑха юпасем пек хытса тӑчӗҫ. Иккӗшиншӗн те ку ытла та кӗтмен ҫӗртен пулчӗ те, малтанах иккӗшӗ те ним тума та пӗлмерӗҫ, пӗр-пӗрин ҫине вилӗм ҫине пахнӑ пек пӑхрӗҫ.

Паллах, вилӗм... Халех, ҫак самантрах... Тӑхтаса тӑмалли ҫук... Пӗр самант та!

Мурат штыкне ҫӗклерӗ те пӗтӗм вӑйне пухса фашиста чикрӗ.

Лешӗ ним тума та ӗлкӗреймерӗ, сулахай аллипе кӑкринчен тытса ерипен тӗшӗрӗлсе анчӗ.

Анчах кӑшкӑрма пултарнӑ-ха вӑл. Кӑшкӑрсан вара партизансен пӗтӗм ӗҫне пӗтерсе хунӑ пулӗччӗ. Ҫакна Мурат лайӑх ӑнланнӑ. Ҫавӑнпа вӑл, вӑхӑта ҫеккунт та сая ямасӑр, тӑшман салтакӗ урлӑ сиксе каҫрӗ те, часрах, хӑй пуҫӗнчи карттусне хывса, унӑн ҫаварне хупласа лартрӗ.

Нимĕç кăшт та хускалмарĕ. Тӳрех вилсе кайнă иккен.

Халь ĕнтĕ командир хушнине тумалли çеç юлчĕ. Сиксе тухас пек тапакан чĕрине пусарма тăрăшса, Мурат сарай леш енчи хӳме çумне йăпшăнчĕ те шăтăк витĕр кил хушшинчи винтовкă куписене шутлама тытăнчĕ. Шутласа пĕтерсенех каялла, Игнатпа Прохор тăрса юлнă çĕре кушак пек шăппăн чупрĕ.

— Пулчĕ-и? — ыйтрĕ Игнат.— Миçе шутласа кăлартăн?

— Сакăр купа,— терĕ Мурат.— Тата эпĕ...

— Тата темскер куртăн-и?

— Çук, эпĕ... нимĕçе вĕлертĕм!

— Мĕ-ĕн! Ăçта? Мĕнле майпа? — тĕлĕнсех кайрĕç Игнатпа Прохор. Вĕсен çакна ниепле те ĕненес килмерĕ. Ытла та тĕлĕнмелле вĕт-ха...

Ĕç мĕнле пулса иртнине Мурат хăвăрт-хăвăрт каласа пачĕ.

— Ĕненместĕр пулсан — кайса пăхăр...

— Эх, маттур та иккен эсĕ! — çурăмĕнчен çапса илчĕ Мурата отряд командирĕ.— Чăн-чăн партизан пулса тăтăн!..

* * *

...Разведкăна янисем пурте малтанхи вырăна пухăнчĕç. Кашниех хăй мĕн-мĕн асăрхани çинчен пĕлтерчĕç. Нимĕçсен хурал вăйлах мар иккен. Пур енчен пĕр харăс пырса çапсан — операци ăнăçлă пулма пултарасси уççăнах паларчĕ.

— Чуп отряда,— хушрĕ Мурата Игнат, разведчиксене итлесе пĕтерсен.— Халех пурте кунта килччĕр. Анчах астутарма ан ман: шав-мĕн ан пултăр!

Çавăнтах вăл разведкăран таврăннисене пĕр çĕре вырттарчĕ те партизансене ял патне ăçтан, хăш тĕлтен илсе пырса тăшмана епле тапăнмалли çинчен калама тытăнчĕ. Унăн планĕпе пурте килĕшрĕç. Вăрманта

юлнă ытти партизансем пырса çитсен вара, командирсем вĕсене хăвăртрах хайсене тĕллеттернĕ çĕре илсе кайрĕç.

Мурат каллех Игнатпа пĕрле пулчĕ. Вĕсем хыççăн тата çирĕм çын ытла пычĕç.

Каçхи тĕттĕмлĕх витĕр пĕр карта çумĕнчен тепĕр карта, пĕр йывăçран тепĕр йывăç патне, анкартисем, ансăр тăкăрлăксем тăрăх, пахчасем урлă шурĕç партизансем. Хĕç-пăшаллă çынсен тимĕр унки хĕсĕннĕçемĕн хĕсĕнсе пычĕ...

Ерипен çутăла та пуçларĕ. Шупкаланма тытăннă пĕлĕтре, унта та кунта, пăч та пач çăлтăрсем сӳнкелерĕç.

Игнат хăйĕн ушкăнневаскатрĕ. Унăн тăшман вырнаçнă çĕре хыçалтан пырса тухса, ăна никамран малтан тапăнмалла пулнă. Çавăнпа васкарĕ вăл. Операци ăнăçлă пуласси çавăнтан килнĕ-çке. Партизансем хăйсем те çакна лайăх ăнланчĕç, çавăнпа вĕсем те çине тăрсах васкарĕç...

Акă, вĕсем шкул пахчине кĕрсе, пĕр сехет каялла Мурат нимĕçе чиксе пăрахнă çĕрелле çывхарчĕç. Тепĕр темиçе минутран шкул пахчин виç енне вырнаçса выртрĕç. Йывăçсем кутĕнче, тарăн курăк ăшĕнче, аллисенчи винтовкăсене, автоматсене чăмăртаса, вĕсем сигнал пуласса кĕтрĕç.

Ытти вырăнсене кайнисем те ку хушăра çавнашкалах хатĕрленчĕç. Тимĕр ункă тăвăрланса çитрĕ. Халь ĕнтĕ ялтан пĕр фашист та тухса тарма пултараймĕ. Вĕсем ăçтан сиксе тухнă — çавăнтах пĕтмелле!

Шăп виçĕ сехетре шкул умĕнче Игнат ыватнă граната хыттăн шартлатса çурăлчĕ. Ун хыççăнах тата темиçе граната кĕрĕслетрĕ. Вăл сасăсем, ирхи шăплăха тăрук хускатса, анкартисем урлă, çырма-çатрасем тăрăх хумлăн-хумлăн янраса кайрĕç.

Ку ĕнтĕ партизансем çав тери кĕтнĕ сигнал пулчĕ.

Самантрах пур енчен те пĕр харăс пеме тытăнчĕç.

Ял урамĕсем пĕтĕм тавралăх пăшал-пулемет сассипе тулса ларчĕ. Уйрăмах, шкулпа тĕлме-тĕл çуртăн кил хушшинче вырнаçнă икĕ ручной пулеметпа автомат чарăна пĕлмесĕр шатăртататрĕç. Вĕсем хăйсен умĕнчи шкул чӳречисенчен тӳррĕн печĕç,— тăшман салтакĕсем пуринчен ытларах унта пулнă вĕт!

Çакна пачах та кĕтмен гитлеровецсем, ăнран тухса кайса, ним йĕркесĕр чупкалама тапратрĕç...

Шкулта выртнисем хăшĕ чӳречерен, хăшĕ крыльцаран тулалла сикрĕç, пахчаналла тарса ӳкме пикенчĕç, анчах вĕсен çулне пур çĕрте те пӳлсе лартнă иккен, ăçта пынă — унта переççĕ...

Çав вăхăтрах пăшал сассисене, нимĕç салтакĕсем тискеррĕн кăшкăрнисене, йытăсем вĕрнине, пĕтĕм ялĕпе тапраннă шăв-шава хупласа сывлăша хăватлă «урра» чĕтрентерсе ячĕ.

— Вилĕм фашистсене!—хытă кăшкăрчĕ тахăшĕ.— Вилĕм Гитлер йыттисене!

— Урра-а!..

— Урра-а-а...— янрарĕ таврара...

Партизансем, винтовкисемпе автомачĕсене малалла тытса, шкул патне чупса çитрĕç. Кунта вара пĕтĕмпех пăтрашса кайрĕ. Партизансемпе пĕрле çапăçава çак ялти кохозниксем те хутшăнчĕç, хăйсене асаплантарса мăшкăлланăшăн, пурлăхĕсене туртса илнĕшĕн, ним айăпсăр çынсен юнне тăкнăшăн хаяррăн тавăрма тытăнчĕç. Нимĕçсене çывăхранах тӳррĕн тĕллесе перепере антарчĕç, çапа-çапа ӳкерчĕç. Тарма тăнисене хăваласа çитсе, çавăнтах тĕп турĕç. Плена илесси çинчен никам та шухăшламарĕ.

— Йытта — йытă вилĕмĕ!

Мурат çаксене пĕтĕмпех хăй куçĕпе курчĕ. Вăл, пĕр вата йăмра çумне йăпшăнса, хăй тĕлĕпе чупа-чупа иртекен тăшмансене автоматĕнчи патронсем пĕтиччене персе тăчĕ. Патронсем пĕтсен, кӳршĕри лутра пӳрт çумне куклеиссе ларнă Микулай мучи патне

чупса куçрĕ. Унччен те пулмарĕ — урам варринчи кĕлет хыçĕнчен нимĕç кĕлетки курăнчĕ. Вăл хайĕн парабеллумĕпе така-ма тĕллеме пикенчĕ.

— Авă, авă, пăх!— теме ĕлкĕрчĕ Мурат. Микулай мучи персе те ячĕ. Нимĕç ўкрĕ. Ун хыççăн тата тепĕр тăшман курăнчĕ. Мучи ăна та персе антарчĕ те, сиксе тăрса, малалла чупрĕ.

Шкултан кăшт анатрарахра икĕ ста-



рик пĕр фашиста урисенчен сĕтĕрсе тухрĕç,— лешĕ кĕлет айне пытанма тапратнă-мĕн. Вĕсем патне кĕçех тепĕр ватăрах хĕрарăм чупса пычĕ.

— Çакă! Çакă вĕлерчĕ манăн кине! — тесе кăшкăрчĕ те вăл, нимĕçе аллинчи тимĕр сенĕкпе çĕр çумне пăталаса лартрĕ.

Хĕвел тухичченех пычĕ урамри çапăçу...

Тăшмансенчен темиçе çын çеç хăтăлкаларĕç курăнать. Унта та кунта, урлă та пирлĕ выртрĕç вĕсен виллисем.

Анчах партизансем енчен те çухатусемсĕр пулмарĕ. Чăн малтан Мурат хăйсене кунта ертсе килнĕ колхозник, хайхи Прохор Коровин, шкул крыльци умĕнче ӳппĕн выртнине курчĕ.

— Шел, çав тери аван çынччĕ...— терĕ ун патне пухăнса тăнă çынсенчен пĕри, Коровин кĕлеткине картишĕнчи курăк çине çĕклесе хурса. Пуля, унăн сулахай куçĕ айĕнчен кĕрсе, витĕрех тухса кайнă пулнă.

— Куртăм эп ăна,— терĕ тепри,— чи вĕри вăхăтра вăл ак çакăнта, кĕтесе тăрса, крыльца çинчен сикекен нимĕçсене рычакпа çапа-çапа антарчĕ. Авă, рычакĕ те кунтах выртать...

— Хай пурнăçне ахалех паман ĕнтĕ вăл...

Игнат ăна шкула кĕртсе хума хушрĕ.

Анат енчен тата ик çынна çĕклесе пычĕç. Пĕри — отрядри партизан, тепри — ку ялти колхозник иккен.

— Вĕсене те чысласа пытарас пулать,— терĕ Игнат.— Хисеплĕ вилĕм вĕсен, халăхшăн...

Кусемсĕр пуçне тата çич-сакăр çын аманнă. Вăл шутрах Микулай мучи пулнă, пуля ăна сулахай хулĕнчен лекнĕ те шăммине çĕмĕрсех кайнă. Мурат унăн суранне çыхма пулăшрĕ.

— Хытă ыратать-и, мучи? — ыйтрĕ вăл.

— Çу-ук, вăрăм туна çыртнă пек çеç,— пуçне пăркаларĕ лешĕ.— Суран темеллĕх те çук, темиçе тумлам юн тухрĕ те... Леш вăрçăра ун пек мар лекнĕччĕ те —

икĕ эрнеренех тӳрленсе çитрĕ. Пирĕн йăх — çирĕп вăл, паранмасть.

Анчах куна вăл юри, çамрăккисем юнран хăракан пуласран тата хăйне пĕр-пĕр яла вырттарса хăварасран шикленсе каларĕ. Чăннипе, алли питĕ хытă ыратрĕ унăн, юнĕ çаплах юхма чарăнмарĕ-ха. Аллине çыхса пĕтеричченех сăнĕ йăлт шурса кайрĕ...

Игнатпа темиçе партизан çав хушăра шкул картишĕнчи çуртсене ухтарма тытăнчĕç. Пурин алăкĕсене те питĕрнĕ иккен те, çăраççисене çапа-çапа ватма тиврĕ. Игнат чунтанах хăйхи тыткăнри хĕрлĕармеецсене шырарĕ, анчах тупаймарĕ. Картишĕнчи çуртсем пуш-пушах пулнă.

— Ăçта кайса чикнĕ-ши вĕсене? — пуçне çĕмĕрсе тăчĕ Игнат пĕр хушă.— Çакăнтах, терĕ-çке Прохор...

Вăл хăй тавра пухăннă çынсенчен хыттăн кăшкăрса ыйтрĕ:

— Тыткăна лекнĕ хĕрлĕармеецсене ăçта хупнă-ши вĕсем, кам пĕлет? Куракансем пулман-и?

Ответ паракан тупăнмарĕ, çынсем пĕр-пĕрин çине: «Эс пĕлместĕн-и?» — тенĕ пек пăхса илчĕç кăна.

— Эппин, ăсатнă ăçта та пулин...— чĕрене касса кайрĕ шиклĕ шухăш, анчах çав самантрах тахăшĕ сас пачĕ.

— Пахчара мар-и? Унта омшаник * пур...

Метр çура çӳллĕш хăма карта урлă пахчаналла епле сиксе каçнине Игнат хăй те сисмерĕ. Тӳрех омшанник алăкĕн урлуççине кăларса персе урипе тапрĕ. Шалтан темле нӳрĕк, çĕрĕк шăршă тапса тухрĕ.

— Кам пур кунта?! Тухăр халех!

Хирĕç сăмах чĕнес выранне шалтан вăйсăррăн, юлашки вăя пухса йынăшни илтĕнчĕ. Игнат хăвăрт кăна спичкă çутса ячĕ, вара омшаник урайĕнчи çĕрĕк улăм çинче çара уралла темиçе çын выртни курăнса кайрĕ.

---

* Пыл хурчĕсене хĕлле усрамалли çĕрпӳрт.

— Кунта! — кăшкăрчĕ Игнат.—Кунта, юлташсем!..

Партизансемпе колхозниксем, шăршлă омшаниксен темиçе хĕрлĕармееца çĕклесе тухса, сывлăмлă курăк çине хучĕç. Вĕсем çав тери вăйсăрланса, хавшаса çитнĕ-мĕн, калаçма мар, куçĕсене те уçма пултараймаççĕ. Йĕри-тавра пухăннă халăх хушшинче тăракан хĕрарăмсен, вĕсем çине пăхсанах, куççулĕсем шăпăртатса анчĕç.

Игнат, хĕрлĕармеецсем умне кукленсе, кашниннех ал тымарĕсене тыта-тыта тĕрĕслерĕ, юнпа, пылчăкпа вараланса пĕтнĕ пит-куçĕсенчен пăхма тытăнчĕ. Виççĕмĕшĕн аллине тытсан, вăл кăртах сиксе илчĕ те, çав тери тĕлĕннипе куçĕсем чарăлсах кайрĕç.

— Павăл! — пăчăртанса тухрĕ унăн пырĕнчен.— Павăл, эсĕ-и вара ку? Павăл, тетĕп!

Халăх кĕпĕрр... турĕ малалла.

Ыттисемпе пĕрлех пăхса тăракан Микулай мучи çавăнтах чĕркуçленсе ларчĕ.

— Ывăлăм! Ой, ывăлă-ăм!..— урмăшнă саспа йынăшса ячĕ те вăл, сывă аллипе хĕрлĕармееца хулпуççинчен ыталаса илсе, сассăр макăрма тытăнчĕ.

Халăх ним чĕнмесĕр тăчĕ, кансĕрлемерĕ Микулай мучие: унăн куççулĕсенче хуйхă çеç мар, савăнăç та пулнă вĕт. Ывăлĕн пурнăçне хăйĕн юнĕпе çăлнă-çке вăл кĕçĕр!..

...Кантăрла çитеспе Муратсен отрячĕ нимĕçсенчен туртса илнĕ тĕрлĕ пурлăха (вĕсем ял çыннисенчен çаратса тултарнине) халăха каялла таварса пачĕ, пĕтĕм хĕç-пăшала лавсем çине тиерĕ те ялтан каялла, вăрмана, тухса кайрĕ. Отряда ку ялтан пĕр çирĕм çын хутшăнчĕ, кашни килтенех фашистсенчен пытарса хăварнă апат-çимĕç пыра-пыра пачĕç. Тăшмансене тивĕçлипе таварнăшăн халăх партизансене тем пекех тав турĕ.

Мурат трофейлă çăмăл туппа кўлнĕ тĕреклĕ тимĕркăвак лаша çине утланса пычĕ. Çул тăршшипех унăн юрлас килчĕ, анчах партизан пурнăçĕ — вăрттăн пур-

наҫ, унӑн нихҫан та шавлама юрамасть, ҫавӑнпа та вӑл хӑй пӗлекен кӗвӗсене шӑл витӗр ҫеҫ шӑхӑркаласа пычӗ. Паллах, Мурат савӑнчӗ. Халь тин вӑл хӑйне чӑн-чӑн партизан тесе шутлама пултарнӑ. Малашне ӗнтӗ ӑна хӑйсен командирӗ пысӑк ӗҫсемех шанать пулӗ-ха. Ҫав ӗҫсене тума, вӗсем темле йывӑр пулас пулсан та, Муратӑн вӑй та, хӑюлӑх та ҫителӗклӗ...

* * *

Пӗр сӗм вӑрманта, хӑйсемшӗн меллӗ вырӑнта чарӑнса тӑрсан, партизансем чӑн малтан аманнисене лайӑхрах вырнаҫтарма тӑрӑшрӗҫ. Вӗсем валли йывӑҫ турattисенчен хӳшӗсем турӗҫ, выртмашкӑн, курӑк сарса ҫемҫе вырӑнсем хатӗрлерӗҫ. Хӗрлӗармеецсемпе пӗрле Микулай мучие те вырнаҫтарчӗҫ. Вӑл хӑй тем пек паттӑрланма тӑрӑшрӗ пулсан та, юн нумай кайни вӑйсӑрлатсах ҫитерчӗ ӑна. Алли ыратнӑҫемӗн ыратса, темшӗн шыҫса пычӗ.

Отрядри темиҫе хӗрарӑм медсестрасем вырӑнӗнче пулчӗҫ кунта. Шура·халатсем ҫеҫ ҫитмерӗҫ вӗсене.

— Астӑвӑр, суранлисене лайӑхрах пӑхса, часрах сыватса парӑр мана! Вӑхӑчӗ мӗнлине хӑвӑрах пӗлетӗр, кашни боец ылтӑнран хаклӑ! —васкатрӗ Игнат хӗрарӑмсене.

— Ахаль те чунтанах тӑрӑшаҫҫӗ-ха,— вӗсен хутне кӗчӗ Микулай мучи.— Пуринчен ытла — ҫакӑ... (Вӑл Груша ҫине кӑтартрӗ.) — Тухтӑр пулмалла-мӗн унӑн, анчах вӑл салтак пулса пӑшал ҫакса ҫӳрет...

— Чим-ха, тен, тухтӑр та пулӑпӑр, малтан тӑшмансене хӑвалаcа ярар,— терӗ лешӗ.

— Ун чухне эп сана хамӑн кин тӑватӑп-ха! Курӑн! — куҫне хӗссе илчӗ Микулай мучи.— Ҫамрӑкрах пулсан, хам авланмалла та, ҫӳҫсем кӑштах сайраланчӗҫ ҫав. Анчах ывӑла илсе паратӑпах!

Пурте кӑмӑллӑн кулса илчӗҫ.

— Ытла аякрине ӗмӗтленетӗн-ҫке эс!—терӗ Груша.

— А мĕн? — пуçне çĕклерĕ старик.— Эп яланах лайăх ĕмĕтсемпе пурăнатăп. Телейлĕ пурнăç тавранатех вăл пирĕн пата. Вăхăт нумаях та иртмĕ — пирĕн çĕр çинче пĕр Гитлер йытти те юлмĕ, вĕсем таптанă уй-хирсем каллех чечекленме тытăнĕç, пирĕн заводсем каллех тулли кăкăрпа сывлĕç. Пурнăçра мĕн кирлĕ— пурте ытлашшипех пулĕ. Ку чухнехи кунсене халапсемпе юрăсенче çеç асăнăпăр... Ĕненĕр мана, çаплах пулать ку! — сывă аллипе сулса илчĕ вăл.

— Эс лăпкăн вырт-ха, мучи, сана питех хусканма юрамасть,— чарчĕ ăна Груша. Ĕнерпе паян Микулай мучин сывлăхĕ чылай начарланнине сисрĕ вăл.— Аллу тата шыçать ав, эс пур — çаплах хускататăн ăна.

— Чăнах, лăпкăрах вырт,— ӳкĕтлерĕ ăна Игнат та.

— Чĕрĕ çын ăçтан пĕрене пек выртăр ĕнтĕ? — çаплах чарăна пĕлмерĕ Микулай мучи.— Чĕреллĕ вĕт эпĕ!

— Асту, итлемесен яла ăсататпăр! — хуллен юнарĕ Игнат.

Тин чаранчĕ вара Микулай мучи. Игнат унăн ывăлĕпе тантăш çеç пулнă пулин те, вăл кăштах шикленнĕ унтан: командир вĕт, çитменне — питĕ пултаруллă, ăслă çын...

Каçалапа мучин сывлăхĕ татах начарланчĕ, шăмшакĕ калама çук вĕриленсе кайрĕ, вăл суранлă аллине тек-текех тыта-тыта пăхрĕ.

— Шыçать вĕт, халерă...

Унтан, вăхăчĕ-вăхăчĕпе тĕлĕрнĕ пек пулса, вăл йынăша пуçларĕ. Улшу калаçма тытăнчĕ. Груша кун çинчен часрах Игната пĕлтерчĕ, анчах вĕсем иккĕшĕ те ним тума та пĕлмерĕç, старик пурнăçĕ пысăк хăрушлăха кĕрсе пынине çеç ăнланчĕç: унăн алли шыçнăçемĕн шыçса, тата шыçнă май кăвакарса-хуралса пычĕ.

Пĕрин хыççăн тепри пухăна пуçларĕç партизансем ун патне. Ку ырă мар хыпара илтсен, Мурат та чупса кайрĕ вăл выртакан хӳшше, çынсене сиркелесех ма-

лалла иртсе тăчĕ. Игната шутламасан, халĕ Микулай мучи уншăн чи хисеплĕ çын пулнă-çке, ăна вăл тăван ашшĕне юратнă пекех юратнă. Çаванпа та старик асапланни çине пăхса тăма çав тери йывăр пулчĕ ăна...

...Çĕршер çулхи çӳллĕ юман тăррисене ирхи илемлĕ хĕвел ачашлама тытăннă чух Микулай мучи сывлами пулчĕ.

— Мĕнешкел хĕрӳллĕ чĕре сӳнчĕ...— терĕ унăн пуç вĕçĕнче тăракан Игнат, кĕç-вĕç юхса анас куççулĕсене аран-аран чарса.— Ун пек чĕре пурин те пулмасть вăл... Эх, мучи, мучи!.. Кĕтсе илеймерĕн пулать эпир çĕнтерессе!..

Мурат вара тӳссе тăраймарĕ, хӳшĕрен чупса тухса пĕр йывăç кутне, таран курăк ăшне выртрĕ те, калама çук хурланса, кӳтсе çитнĕ чĕрине çăмăллантаричченех макăрчĕ. Амăшĕ вилнĕренпе те кун пек макăрманччĕ вăл...

Микулай мучи вилни пĕтĕм отрядшăн пысăк хуйхă пулчĕ. Ытла та пурте юратнăччĕ-çке ăна, кашниех вăл старике хăйĕн çывăх тусĕ тесе шутланă. Вăл отрядра чи ватти пулнăшăн çеç те мар, çынсене çав тери пĕтĕçтерме, хавхалантарма, ĕненекен тума пĕлнĕшĕн хисеплеçĕ...

Унăн ывăлне кун çинчен пĕлтермерĕç... Павăл нимĕçсен тыткăнĕнче пулнă хыççăн тин çеç самайланма пуçланăччĕ-ха, вырăн çинчен те тăраймастчĕ, каççерен вĕриленсе выртатчĕ, апат та латлăн çиейместчĕ. Çаванпа та Игнат ăна пăлхатас темерĕ.

— Сывалса çиттĕр, ун чух вара каласа пама та пулĕ...

Унпа пурте килĕшрĕç.

Микулай мучие, унтан-кунтан тупса пынă хăмасенчен тупăк туса, пĕр ватă юман айне пытарчĕç. Унăн вилтăприне вăрманта пухнă чечексен пысăк çыххисемпе илемлетрĕç. Юман хуппине пĕр вырăнта вартаса тасатрĕç те çĕçĕпе касса кĕскен кăна çырса хучĕç:

*Лӑпкӑн çывӑр,*
*хаклӑ Микулай мучи...*
*Фашизм тӗп пулӗ!*

Тепӗр кунне отряд кунтан урӑх çӗрелле куçса кайрӗ. Ивановкӑ ялӗнче фашистсен гарнизонне аркатнӑ хыççăн вӗсен ку тӑрӑхра тытӑнса тӑма юраман, тӑшман отряд йӗрӗ çине ӳксе ӑна хупӑрласа илме пултарнӑ.

Çынсем лашасене кӳлнӗ, япаласене тиенӗ вӑхӑтра Мурат тата тепӗр хут Микулай мучин вилтӑпри патне чупса кайрӗ. Пӗр хушӑ вӑл шанма пуçланӑ чечексем çине пӑхса тӑчӗ, унтан пиçиххинчен çакӑнса тӑракан штыкне туртса кӑларчӗ те юман çине çырни çумне васкасах çапла хушса хучӗ:

*«Эпӗ саншăн тавӑратӑпах! Мурат».*

Ку сӑмахсене вӑл ытахальтен çырмарӗ, ку вӑл ватӑ паттăр тупӑкӗ умӗнче тупа туни пулчӗ. Кайранхи вӑхӑтра Мурат çав тупана çирӗп тытса пычӗ.

* * *

...Çаксем çинчен йӗркипе аса илсе выртнӑ Мурат тул çутӑласпа тин çывӑрса кайрӗ те хӗвел чылай çӳле хӑпарса ирхи сывлӑма типӗтме ӗлкӗрсен çеç куçӗсене уçрӗ. Татах та çывӑратчӗ пулӗ те, ӑна тахӑшӗ хулпуççинчен лӑскарӗ:

— Тӑр, Мурат... Мӗнле йӑла вӑл çак таран çывӑрасси?

Ӑна вӑратма Груша пынӑ иккен.

— Мӗн пулнӑ? — хӑвӑрт ыйтрӗ Мурат, ун çине нумай çывӑрнипе хӗрелнӗ куçӗсемпе пӑхса.

— Нимех те пулман. Апат çиес пулать часрах. Пире иксӗмӗре командир чӗнет, таçта ярасӑн пулмалла...

Мурат йӑпӑр-япӑр сиксе тӑчӗ те, кутамккине ҫурӑм хыҫне, автоматне кӑкӑр умне ҫакса, Груша хыҫҫӑн утрӗ.

Игнат пӗр йывӑҫ айӗнче, майӗпе йӑсӑрланакан кӑвайт умӗнче тарӑн шухӑша кайса, чӗлӗм туртса ларатьмӗн. Унӑн чӗркуҫҫийӗ ҫинче ҫак район картти выртнӑ.

— Ну, мӗнле кантӑр?— ыйтрӗ вӑл, Муратпа Груша ун патне пырса тӑрсан.

— Пит аван,— терӗ Мурат.— Ним сисми ҫывӑрнӑ.

— Юрать апла пулсан...— Игнат чӗлӗм тӗпне кӑвайт ҫине пӑрахрӗ.— Эп сире паян ик-виҫ яла кайса килме хушасшӑнччӗ, анчах ку ӗҫе ырана хӑвармалла пулать.

— Ма апла тата? — ыйтрӗ Груша.— Паян та каймa пултаратпӑр.

— Ҫук, ыран каятӑр. Урӑх ӗҫ сиксе тухрӗ...

— Мӗн-ши?

— Каламa та пӗлмелле мар-ха.— Игнат тарӑннӑн сывласа илчӗ.— Кӗҫӗр эпир пӗр хыпар пӗлтӗмӗр... Нимӗҫсем, пире шыраса, урсах кайнӑ, тет. Темиҫе кун каялла вӗсем пирӗн яла пынӑ, тет те, ял ҫыннисене хӗнесе, тем тӗрлӗ асаплантарса пӗтернӗ, тет. Пӗр карчӑка ҫакса хӑварнӑ, пӳртне ҫунтарса янӑ. Ку хыпар— манӑн анне ҫинчен пулӗ, тетӗп... Ҫавна кайса пӗлес пулать паян. Кунтан инҫе мар, пӗр вун сакӑр ҫухрӑм ҫеҫ пулать, ирччен таврӑнатпӑр...

— Кампа каясшӑн вара эс унта? — ыйтрӗ каллех Груша.

— Пӗр виҫҫӗн-тӑваттӑн кайсан та ҫитет.

— Мана та илсе кай! — Игнат куҫӗнчен пӑхрӗ Мурат.

— Сана ахаль те илсе каяс тетӗп ҫав, эс кирлӗ пулатӑн,— терӗ ӑна хирӗҫ Игнат.— Тата Петька Журкинпа Мишка Есюнина илсе каяс,— ҫитет вара. Хатӗр пул!

Игнат чӗрине пысӑк хуйхӑ пырса тивни сисӗнчӗ:

вăл пĕртте ытти чухнехи пек мар, темле пусăрăнчăклă, сăмахсене тăсса калаçрĕ. Ăш-чикĕ хытă вăркана пулас çав унăн. Амăшĕ пирки пăшăрханнă вăл...

Игнат сăмахĕсене илтсен, Мурат та калама çук пăлханса кайрĕ. Неушлĕ нимĕçсем Лизавет инкене чăнах та çакса вĕлернĕ? Эх, урнă йытăсем!.. Çĕлен-калтасем!.. Ваттине те, вĕттине те хĕрхенмеççĕ... Епле аван çынччĕ Лизавет инке! Муратăн амăшĕ вилсен — ăна никам та мар, вăл усрарĕ вĕт хăй патĕнче, хăйĕн тăван ачине пăхнă пек пăхрĕ... Чăнах вĕлернĕ пулсан, тата хытăрах тавăрма тытăнас пулать фашистсене, ăçта май килнĕ — унта, кашни кун, кашни каç, таттисĕр!

Каçченех çавăн пек шухăшсемпе çӳрерĕ Мурат. Хĕвел çӳллĕ йывăç тураттисем хыçне пытанма пуçланă чух вара вĕсем тăваттăн — Игнатпа Мурат тата ялан хăюллă та нимрен хăраман Петька Журкинпа Мишка Есюнин партизансем нимĕç автомачĕсене кăкарĕсем умне çакрĕç те вăрмантан тухса кăнтăр еннелле утрĕç.

* * *

Ял хĕрринчи пĕчĕк пӳртре пурăнакан Марина ятлă тăлăх арăм çурçĕр тĕлĕнче чӳречерен такам хуллен шакканипе вăранса кайрĕ.

—Кам ку?— хăраса ыйтрĕ Марина.

— Уç-ха...— терĕ тулти сас.

— Мĕн кирлĕ ара? Çĕр выртмалли кирлĕ пулсан— вырăн çук, хам та пилĕк ачапа пурăнатăп.

— Пĕлетпĕр ăна. Уç эсĕ, ан хăра...

Тулти саса Маринăна паллана пек туйăнчĕ.

— Игнат сассиех ку, ăçтан килсе тухма пĕлчĕ пулать? — шухăшларĕ те вăл, хуллен кăна çенĕке тухса уçрĕ.

Вăл йăнăшман, ку чăнах та Игнат иккен. Унпа пĕрле пӳрте тата виççĕн кĕчĕç, вĕсем те хăйсен ялĕсемех-мĕн: Мурат, Журкин, Есюнин. Вĕсем пурте ялтан

тухса кайса çухалнăранпа вăхăт нумай иртнĕ ĕнтĕ, çавăнпа Марина питĕ тĕлĕнчĕ...

— Епле-ха эс, хамăр çынсене те кӳртесшĕн мар, инке? — тесе малалла иртсе ларчĕ Игнат.— Сывă пурăнатăн-и-ха?

— Тăруках паллаймарăм çав, каçар,— терĕ хыпаланса ӳкнĕ Марина.— Эсир килесси ман асра та пулман та... Тата хăрушă вĕт халь, темле çын та çӳрет те... Айăпа ан хурăрах!

— Çук, çук... Эпир сан патна ĕçпе кĕтĕмĕр.

— Мĕн усă кӳрĕп-ши вара эп сире?

Игнат чĕлĕм чĕркесе тивертрĕ те юлташĕсем çине пăхса илчĕ.

— Ялта нимĕçсем пур-и?

— Юлмарĕç пулмалла, ĕнер каçхине пурте тухса кайрĕç, тенине илтрĕм.

— Камран илтрĕн?

— Паçăр çăл кутĕнче хĕрарăмсем каларĕç. Савели Нилыч патĕнче пĕр пиллĕкĕн тăратчĕç, вара ĕнер каç, тырă лавĕсене ăсатса пĕтерсен, вĕсем те кайрĕç, тет.

«Савели Нилыч» тенине илтсенех Игнат тутине çыртса илчĕ. Ку çын вăл ялан Совет влаçне хирĕç пыракан çын пулнă, колхозсем пуçланнă чух ăна раскулачить тунă, ун хыççăн пĕр-икĕ çул хушши тĕрмере те ларса тухнă. Тĕрмерен таврăнсан вара, чире персе, вăл урама та тухма пăрахнă, ялти пур çынсем çине те кашкăрла çеç пăхса пурăннă. Вăл Совет влаçне, колхоз йĕркине, ялти активистсене çав тери курайманнине пурте пĕлнĕ, анчах юлашки çулсенче никама та усăнах сиен кӳменнине кура — тивмен ăна. Лешĕ, ватă йытăлла, хăйне валли майлă самант килсе тухасса çеç кĕтнĕ-мĕн...

— Мĕншĕн-ха нимĕçсем ун патĕнче пурăннă? — хăйĕн шухăшне çирĕплетме юриех ыйтрĕ Игнат.— Нимĕçĕсем вăйпа пырса кĕнĕ-ши е хăй чĕннĕ вĕсене?

— И-и, чунăм, ан та кала ĕнтĕ! — терĕ Марина.—

Пирӗншӗн чи хӑруша тӑшман пулса тӑчӗ халь вӑл. Пӗтӗмпех сутӑнчӗ. Староста вӗт! Пӗртте вырӑс ҫынни пек мар, пӗрмай леш симӗс тирлӗ шуйттансем майлӑ ҫаптарать. Сӑмах та хушмалли ҫук, тӳрех кӑшкӑрса пӑрахать: «Юман тӑрринче сулӑнкаласа тӑрас килекен пулчӗ-и?» — тет. Миҫе ҫын пуҫне ҫирӗ ӗнтӗ! — Марина хурлӑхлӑн сывласа илчӗ.

— Кама-кама тытса пачӗ-ха вӑл? — ун ҫывӑхнерех куҫса ларса ыйтрӗ Игнат.

— Анну ҫинчен илтрӗн пуль вӗт?

— Кӑшт ҫеҫ илтрӗм-ха...

— Хавӑр кил патне кайса пӑхмарӑн-и-ха эс?

— Ҫук, тӳрех сан патна кӗгӗмӗр.

— И-и, чунӑм, апла пулсан...— Маринӑн сасартӑк сасси тытӑнса ларчӗ, вӑл ӳсӗрсе илчӗ.— Ял ҫыннисене сутма Савели Нилыч шӑп сан аннӳрен пуҫларӗ... Сана илтме те йывӑр та-ха ун ҫинчен, ҫавах та каласа парам-ха эппин.

— Кала ҫав, йӗркипех кала! — терӗ Игнат, темле йывӑррӑн сывлама тытӑнса.

— Сан ҫинчен ялта: Игнат Дубов партизанра ҫӳрет, текен хыпар тухрӗ. Ахаль партизан та мар, партизансен пуҫлӑхӗ, теҫҫӗ. Такам кӑларнӑ вӑл сӑмаха, те — тӗрӗс, те — суя, пӗлместӗп. Ну, ку сӑмаха Савели те илтнӗ ӗнтӗ... Темиҫе кун қаялла, яла нимӗҫсен карательнӑй отрячӗ килсен, сан аннӳне тӳрех староста патне сӗтӗрсе кайнӑ. Савели тӗллеттернӗ ӗнтӗ ун ҫине, паллах, урӑх никам та ҫӑвар уҫас ҫук... Ҫав ҫӗлен ӗҫӗ вӑл!

— Унтан мӗн пулнӑ?

— Допрос тума тапратнӑ, сан ҫинчен пӗлесшӗн пулнӑ. Аннӳ каламан пулмалла, тен, пӗлмен те-и вӑл нимӗн те. Пӗлсен те калас ҫук та-ха... Тытӑннӑ вара ӑна хӗнеме... Савели арӑмӗ Гирька старикӑн хӗрне калана, тет: ну, шуйттан карчӑкӗ, тимӗр пекех ҫирӗп, мӗн тӗрлӗ асаплантармарӗҫ пуль — пурӗпӗр тӳсрӗ,

ывалĕ çинчен ним те шарламарĕ вĕт, пĕтĕмпех пĕлмĕш пулчĕ, тесе каларĕ, тет. Нимĕçсем ăна допросра мĕн-мĕн тунине пĕр çав Савели арăмĕ çеç пĕлет, эпир пĕлместпĕр, анчах тепĕр кунне мĕн пулнине — аса илме те хăруша! Ирхи апат вăхăтĕнче пĕтĕм ял халăхне урама хăваласа тухрĕç. Ниçталла пăрăнмалли те çук — йĕри-таврах пăшаллă салтаксем тăраççĕ. Кĕçех пире пурне те урам варринчи çулăн икĕ енĕпе тăратса тухрĕç. Кашни пилĕк çын урлă — нимĕç салтакĕ. Мĕн пулать-ши ĕнтĕ, мĕн тума кун пек тăратса тухрĕç-ши, тетпĕр. Унччен те пулмарĕ — сылтăм енчен: «Килеççĕ, килеççĕ!» — тени илтĕнчĕ. Пурте унталла пăхрăмăр та, сан аннӳне илсе килнине куртăмăр... Малта — пăшаллă салтак пырать, ун хыççăн — аннӳ... Çара пуçăн, пичĕ-куçĕ ним палăрми шыçса, кăвакарса, хуралсаларнă, темиçе çĕрте ӳчĕ татăла-татăла кайнă, хăрах ури çине аран пусать... Кăкри умне вара пĕр аршăн çурă сарлакăш хăма çакнă, ун çине пысăк саспаллисемпе «партизан» тесе çырнă. Чĕресем пăчăртансах ларчĕç çав пирĕн ăна курсан... Тӳсмелле мар вĕт!..

Маринăн пит çăмартисем тăрăх çут шăрçа пек куççулĕсем юхса анчĕç.

— Кала, инке, малалла кала, ман пĕтĕмпех пĕлес пулать,— терĕ Игнат, тӳсейменнипе ура çине сиксе тăрса.

— Халь те калатăп çав,— куçĕсене çаннипе шăлса илчĕ Марина.— Ăçтан тӳсен каламасăр? Санăн тавăрас пулать вĕт куншăн, епле те пулсан хытăрах тавăрасах пулать...

— Кайран мĕн пулчĕ?

— Нимĕç салтакĕсене сан аннӳне хĕнеме тăратса тухнă-мĕн... Кашниех алла патак тытнă та, кашниех ăна, хăй тĕлне çитсен, мĕн пур вăйпа турта-турта çапать. Анчах аннӳ пĕр сас та кăлармасть,— çав тери тĕлĕнтĕмĕр эпир! Салтаксем çапмассерен карт! та карт! сике-сике илет çеç... Унтан хăвăр тĕле илсе çитерчĕç.

Эпир пӗлмен те: хӑваран пӳрте хирӗҫ ҫакса вӗлермелли такан туса лартнӑ пулнӑ вӗсем. Аннӳне тӳрех ун айне пырса тӑратса, пуҫӗнчен мӑйкӑч тӑхӑнтартрӗҫ...

— Ну, ватӑ йыт ами, юлашки хут ыйтатпӑр санран: ӑҫта ывӑлу? — ун патне пырса кӑшкӑрчӗ вырӑсла пӗлекен нимӗҫӗ.— Асту, юлашки хут, урӑх ыйтса тӑмастпӑр! Кала!

Аннӳ пуҫӗпе ҫеҫ сулчӗ:

— Пӗлместӗп... Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа та курман эп ӑна...

Нимӗҫ кӗсйинчен тутӑр кӑларса сулчӗ... Ҫав самантрах вара темскер кӗмсӗртетрӗ, шартлатрӗ, ҫӗр кисренсе илчӗ, ҫулӑм, тӗтӗм йӑтӑнса тухрӗ, пӗренесем, юпасем, ҫунакан улӑм тӗркисем сирпӗнчӗҫ. Вӗсем сирӗн пӳрте сывлӑшалла сирпӗтрӗҫ. Пӳрт вырӑнне ҫунӑк турпас купи ҫеҫ юлчӗ...

Нимӗҫ тата тепре тутӑрӗпе сулчӗ. Аннӳне мӑйкӑчлана вӗренӗн тепӗр вӗҫӗнчен тытса тӑнӑ салтаксем ӑна пӗррех туртрӗҫ те, аннӳн пуҫӗ ҫӳлти кашта патне ҫитсен, аялтан ҫыхса лартрӗҫ. Аннӳ темиҫе хут туртӑнкаласа илчӗ, унтан вара алли-урисем лӑстах тӑсӑлчӗҫ. Вилсе кайрӗ, мӗскӗн... Эпир те ни чӗрӗ, ни вилӗ тӑтӑмӑр... Кӗҫех хайхи вырӑсла пӗлекен нимӗҫ сасси илтӗнчӗ:

— Куратӑр-и, выльӑхсем? Аставӑр халӗ: кам партизансемпе ҫыхӑнать, кам вӗсене пулӑшать — пурне те ҫакӑн пек тӑватпӑр. Саланӑр!

«Саланӑр!» тесенех, пӗтӗм халӑх тӗрлӗ ҫӗрелле чупрӗ. Пурин те ҫак хӑрушлӑхран часрах пӑрӑнса каяс килчӗ ӗнтӗ, тата кашниех нимӗҫсем хӑйне тытса айӑпсӑрах айӑплӑ ҫын тӑвасран хӑрарӗ пулас. Эп хам та киле мӗнле чупса ҫитнине астумастӑп...

Марина каласа пӗтерчӗ те каллех куҫҫульне шӑлса илчӗ. Партизансем вӑрахчен ним чӗнмесӗр ларчӗҫ. Хӗрарӑмӑн хӑрушӑ калавӗ вӗсене пурне те калама ҫук пӑлхатса, хумхатса ячӗ. Вӗсенчен кашниех — ҫав шут-

рах Мурат та — Игнатӑн амӑшне ҫав тери тискеррӗн вӗлерттернӗ Савелие епле майпа лайӑхрах таварасси ҫинчен ҫеҫ шухӑшларӗ халь.

Никамран малтан Игнат тӑчӗ.

— Атьӑр,— терӗ вӑл.— Каяр хамӑр ҫулпа.

— Таҫталла ҫул тытатӑр ӗнтӗ? — ыйтрӗ Марина.

— Хамӑр та пӗлместпӗр-ха,— терӗ Игнат темле тӑрук ҫӗтсе ларнӑ сасӑпа. Хытӑ пӑлханчӗ ҫав вӑл...— Сывӑ пулса юл, тавтапуҫ сана ял хыпарӗсене пӗлтернӗшӗн...

— Хыпарӗ ырӑскер мар та, мӗн тӑвассу пур... Эп айӑплӑ мар ӗнтӗ...

— Айӑплисене тупӑпӑр эпир.

Партизансем пӗрин хыҫҫӑн тепри Маринӑн кушӑрханӑ аллине чӑмӑртарӗҫ те тулалла тухрӗҫ. Сарай хыҫӗнче Игнат хайӗн юлташӗсене тем ҫинчен пӑшӑлтатма тытӑнчӗ. Лешсем, унпа килӗшсе, пуҫӗсемпе суласула ҫеҫ илчӗҫ. Унтан вӗсем чылай хуша анкартисем хыҫӗпе шӑппӑн утса пычӗҫ те пӗр картишне кӗрсе тӑчӗҫ.

— Ну, Мурат, пуҫла...— терӗ Игнат.

Вара Мурат, йӑпӑрт кӑна крыльца ҫине хӑпарса, ҫенӗк алӑкӗнчен шаккарӗ.

— Савели пиччӗ, уҫ-ха...

Шалтан ытла часах сас памарӗҫ, тата пӗр икӗ хут шаккамалла пулчӗ. Пӗр-ик минутран тин кил хуҫи сасси илтӗнчӗ.

— Мӗн кирлӗ?

— Уҫ-ха, сӑмах пур...

— Кам вара эс?

— Эп — Марине ачи, Ванькка... Пирӗн патри ҫырмара нимӗҫсен машинӗ пылчӑк ӑшне кӗрсе ларнӑ та, сана чӗнме ячӗҫ. Халех пӗр вунӑ ҫын тупса пымалла, тет, машинӑна туртса кӑларма...

— Ват, шуйттансем, ҫӗреҫҫӗ вӑхӑтне пӗлмесӗр,— мӑкӑртатса илчӗ те Савели алӑка шӑнкӑртаттарса

уҫрӗ.— Кӗр, ҫиччас кайӑпӑр. Кам ячӗ сана ман пата?

— Темле нимӗҫ. Офицер. Старостӑна халех тупса кил, терӗ. Васка. Ҫилленӗҫ тата!

Савели пӳртелле кӗрсе кайрӗ, Мурат крыльца ҫинчех тӑрса юлчӗ. Вӑл кӗсйинчи пистолетне пачӑртарӗ. Тепӗр ик минутран вара, Савели нимӗҫсене пулӑшма кайма хатӗрленсе тухсан, крыльца ҫинчен ун хыҫҫӑн утса анчӗ те шӑппӑн кӑна шӑл витӗр команда пачӗ ӑна:

— Тӑр! Ниҫта та каймастӑн. Руки вверх!

Ун ҫине хулпуҫҫи урлӑ ҫаврӑнса пӑхнӑ Савели тӑруках юпа пек хытса тӑчӗ. Арҫын ача ӑна пистолетпа тӗлленӗ иккен, халь тесен халь персе яма пултарать...

— Мӗн эс? Чипер...— теме ӗлкӗрчӗ ҫеҫ Савели. Крыльца тепӗр енчен виҫҫӗн чупса тухрӗҫ. Пӗри унӑн пуҫне михӗпе хупласа лартрӗ, тепри аллисене каялла сыхма тапратрӗ.

— Сас кӑларсанах — пуля туянатӑн! — асӑрхаттарчӗҫ ӑна.— Эпир — партизансем. Ут!



Савелин хăйне мĕн хушнине итлемелли çеç юлчĕ.



Хĕвел тухнă вăхăталла ăна отряда илсе пычĕç те пур партизансене пухсан тин куçĕсене салтса ячĕç. Савели вара чăн та чăнах капкăна лекнĕ кашкăр пек чĕтресе, унталла-кунталла куç харши айĕпе сиввĕн пăхкаласа тăчĕ...

— Çак тискер кайăк,— терĕ Игнат, партизансем умне тухса тăрса,— пирĕн çынсене нимĕç фашисчĕсене сутса пуранна. Вăл манăн аннене çактарнă, ман килçурта сывлăша сиктернĕ... Ун кĕсйинче эпир тата икĕ список тупрăмăр, пĕринче — партизансен ячĕсем, тепринче — Германие чуралăха яма юрăхлă çамрăксен ячĕсем... Акă вĕсем! — Игнат икĕ хут листи кăларса кăтартрĕ.— Пурĕ 85 çынна сутма хатĕрленнĕ вăл.

— Эх, йытă!..

— Хура юн, çĕлен!

— Ирсĕр чун...— шавласа кайрĕç партизансем.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ ăна? — ыйтрĕ Игнат.

— Паллах, пемелле!

— Калаçса тăма та кирлĕ мар...

— Эп те çапла шутлатăп,— терĕ Игнат.— Çавна çеç тивĕçлĕ вăл! Ирĕклĕ совет халăхĕн ячĕпе...

Игнат предателе карабинĕпе тĕллеме çеç тытăннăччĕ — сасартăк лешĕ, чĕркуçленсе ларса, пуççапма тапратрĕ:

— Ырă халăх! Тархасшăн каçарăр... Йăнăшрăм эпĕ... Каçарăр, малашне ун пек тумăп, сирĕн майлă пулăп... Хама хĕрхенмесен те, ачасене хĕрхенĕр...

Партизансем ун ҫине калама ҫук йӗрӗнсе пăхса тăчӗҫ. Савели мӗн тери ытларах ыйтнă — ҫав тери тарăху ӳссе пычӗ вӗсен чӗрисенче. Тахăшӗ тӳсеймерӗ, хыттăн кăшкăрса ячӗ:

— Пер! Мӗн пăхса тăратăн тата? Пер!..

Ҫав самантрах пăшал сасси кӗрлесе кайрӗ.

* * *

Пӗррехинче, Крутой Яр ятлă пысăк салара гитлеровецсен гарнизонӗ вырнаҫни ҫинчен пӗлсен, Игнат Дубов Мурата ҫавăнта кайса килме хушрӗ.

— Вӗсен орудийӗсене, огневой точкисене, автомашинисене шутласа тухма тăрăш, вӗсем ăҫтарах тăнине лайăхрах астуса юл... Салтакӗсем мӗнле ҫуртсенче, хăш тӗлерехре пурăнаҫҫӗ? Ҫавсене тӗплӗрех пӗлсе килсен, эпир ун ҫинчен Пысăк Ҫӗр ҫине пӗлтерме тăрăшăпăр, вара, тен, пирӗннисем пӗр-пӗр каҫхине самолетсем ярӗҫ. Ну, пирӗн самолетсем килсессӗн унта мӗн пулассине хăвах чухлатăн...

— Ăнланатăп,— терӗ Мурат.

— Вӗҫтер эппин. Анчах асăрханса ҫӳре, кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗре пырса ан сӗкӗн.

— Пӗлетӗп, пирвайхи хут каймастăп вӗт-ха.

Мурат, яланхи пекех, ыйткаласа ҫӳрекен ачалла тумланчӗ, хулпуҫҫи урлă кивӗ хутаҫ ҫакрӗ, аллине туя тытрӗ те вăрмантан вăрттăн сукмаксемпе тухса Крутой Яр еннелле ҫул тытрӗ. Унта ҫитме виҫ-тăватă ял витӗр тухмалла. Чăн та ӗнтӗ, ҫав ялсене кӗмесӗр, вӗсен айккипе иртсе кайма та май пур, анчах Мурат, халь чăн-чăн разведчик пулса, пур ҫӗртине те курас, пӗлес, тесе шут турӗ. Разведчик тăшман ҫинчен мӗн тери ытларах пӗлсе таврăнать — унăн ӗҫӗ ҫав тери усăллăрах пулать.

Малтанхи икӗ ялӗнче Мурат нимех те асăрхамарӗ. Темиҫе киле кӗрсе «христарати» ыйтрӗ. Ыр чӗреллӗ

хĕрарăмсем ăна пĕр-икĕ çăкăр татки, пĕçернĕ пилĕк-улт çĕрулми пачĕç. Хай çинчен тем ан шутлаччăр тесе, вăл ялта нимĕçсем пурри-çукки çинчен те ыйтмарĕ. «Пур пулсан, хамах курăп-ха», терĕ. Нимĕçĕсем кунта чăнах та çук-мĕн. Анчах виççĕмĕш ялне пырса кĕнĕ чух вăл уй хапхи патĕнчех гитлеровецсен чылай пысăк ушкăнне тĕл пулчĕ. Лешсем çемçе симĕс курăк çинче картла выляса лараççĕ-мĕн. Ку ытла та кĕтмен çĕртен пулнипе Мурат çухалсах кайрĕ, ним тума пĕлмесĕр самантлăха чарăнса тăчĕ.

Ăна тӳрех асăрхарĕç.

— Ăçта каятăн? — ун патнелле темиçе утăм ярса пусрĕ пĕр нимĕçĕ, пысăк хура куçлăх тăхăннăскер.

— Кунтан тепĕр ялне, Завражная,— терĕ Мурат, тăрук хăранине путарса.— Унта манăн кукамай пурăнать... Ватăскер...

— Кукамай, тетĕн? — шанмасăр тепĕр хут ыйтрĕ гитлеровец.— Ан суй! Куçунтан пăхсах куратăп — суятăн! Ак ку санăн мĕнле хутаç? Мĕн чикнĕ эс унта?

— Çимелли çук та, çула май ыйткаласа çӳретĕп, кукамай валли...

Самăр нимĕç хутаçа çăтăр-çатăр хыпашласа илчĕ, унтан каллех Мурата витĕр шăтарас пек пăхрĕ.

— Пĕтĕмпех суятăн, сысна çури! Кала тӳррипе, кам хушнипе килтĕн эс кунта? Мĕн тума?

— Пан офицер...— куçĕсене мăчлаттарса пăхрĕ Мурат самăр нимĕç çине.— Кам ятăр-ха мана? Эпĕ — тăлăх ача, манăн никам та çук. Аттепе аннене партизансем персе пăрахрĕç, сирĕн майлă пулнă тесе...— хăй шутламан çĕртенех чееленсе илчĕ вăл.— Халĕ, никам çуккипе, кукамай патне каятăп ак...

— Эс мана çаплах улталама хăтланатăн-и? Кăтартăп эп сана! — Гитлеровец Мурата çав тери хытă çупса ячĕ.— Кала! Партизансем янă вĕт сана? Ăçта вĕсем? Кала, пыйтлă йыт çури!

Вăл Мурата тата тепре, малтанхиничен те хытăрах

çупрĕ. Мурат ӳкрĕ, пуçĕпе хытă çĕре çапăнса макăрса ячĕ.

— Нимĕнле партизансене те пĕлместĕп эпĕ!..— кăшкăрчĕ вăл куççулĕ витĕр.— Нихçан та курман, илтмен те вĕсем çинчен! Эпĕ кукамай патне каятăп. Шанмастăр пулсан, ярăр кама та пулин манпа пĕрле, тĕрĕслетĕр вăл... Эп ултавçă мар, чăннине калатăп!

Куççулĕсене çаннипе шăла-шăла Мурат ура çине тăчĕ, хутаçне çурăм хыçнелле вырнаçтарса çакрĕ. Нимĕçсем çав хушăрах хайсен чĕлхипе пакăлтатса илчĕç, унтан леш мăн куçлăхли, Мурата çупа-çупа яраканни, ун еннелле çавăрăнчĕ те вырăсла каларĕ:

— Зăвражнăй ялне ак çак салтакпа пĕрле каятăн.— Вăл пĕр ватăрах, ырхантарах салтак çине тĕллесе кăтартрĕ.— Анчах асту, тарма ан шутла. Тӳрех персе ӳкерет вăл сана!

Нимĕн тумалли те юлмарĕ Муратăн, малалла салтакпа пĕрле каймалла пулчĕ. Хăех айăплă ара: «Шанмастăр пулсан, ярăр кама та пулин манпа пĕрле», тесе хăй каларĕ вĕт леш куçлăхлă самăр нимĕçе... Мĕн тумалла ĕнтĕ халь? Мĕн шутласа тупмалла? Шалт аптрас пулать! Ку нимĕç, ун хыçĕнчен автоматпа утаканни, тĕрĕслеме пырать: Мурат чăнах та кукамăшĕ патне каять-и е çук-и? Тен, ăна çавăн пек те хушса янă пуль: енчен те ку ача пире улталанă, Зăвражнăйра унăн нимĕнле кукамăшĕ те çук пулсан — çавăнтах пер те пăрах ăна! Анчах Муратăн унта кукамăшĕ мар, пĕр паллана çын та çук вĕт-ха! Мĕн тери ухмахла лекрĕ вăл! Мĕн мурĕшĕн каларĕ пуль нимĕçсене хăйпе пĕрле кама та пулин тĕрĕслеме ярасси çинчен! Тен, ун пек тума вĕсен хăйсен ăсĕ çитместчĕ те пуль?

Тем тĕрлĕ те шухăшласа пăхрĕ Мурат халь мĕнле майпа хăтăласси пирки, анчах нимĕн те шутласа тупаймарĕ.

Çулĕ кĕскелсех пычĕ. Вăхăта кăштах та пулин тăсас тесе, Мурат юри ерипен утрĕ. Хăй шухăшларĕ,

шухăшларĕ... Акă ĕнтĕ ял хĕрри. Урам вĕçĕ. Урамĕ тÿптÿрĕ, таçта çитиех тăсăлать.

— Где живьйот твой бабка? — вырăс сăмахĕсене хуçкаласа ыйтрĕ нимĕç-конвоир.

Мурат аллипе малалла сулса кăтартрĕ. Хăй, урам варрипе утнă май, пĕр вĕçĕм унталла та кунталла пăхса пычĕ.

«Пĕр-пĕр ватă хĕрарăма курсанах çăлăнатăп!» — шухăшларĕ вăл. Анчах урамра никам та курăнмарĕ. Ялта пурте вилсе пĕтнĕ тейĕн. Тăшман куçĕ тĕлне пулас мар тесе, килĕсенчен тухмаççĕ пуль ĕнтĕ...

Чылай утрĕç Муратпа нимĕç сарлака урампа. Унтан Мурат урамăн сулахай енчи çăлтан шыв ăсса тăракан пĕр карчăка асăрхарĕ те, çавăнтах нимĕç еннелле çавăнса, аллипе çав карчăк çине тĕллесе:



— Ман кукамай! — терĕ.

Вара çав самантрах малалла ыткăнчĕ те, çур минутран карчăка майĕнчен ыталаса илчĕ, ик-виç хутчен чуптурĕ, унтан васкаса пăшăлтатма тытăнчĕ:

— Кинемей, тархасшăн мана хăвăрăн мăнуку тесе йышăнăр! Тархасшăн мăнук тейĕр, унсăрăн мана çав нимĕç халех персе пăрахать!..

Карчăк ку ача хăйне мĕншĕн тархасланине тŷрех тавçăрса илчĕ куранать, аллинчи витрине çĕре лартса Мурата çурăмĕнчен лăпкама тытăнчĕ.

— Çитрĕн-и, ачам, тинех килтĕн-и? Хăçантанпа кĕтетĕп эп сана, пепкеçĕм...— Ай-уй-уй, начарланса кайнă-çке эсĕ, чунăм...

Кĕçех вĕсем патнé нимĕç-конвоир çитсе тăчĕ. Ун умĕнче карчăк Мурата тата хытăрах ачашлама пуçларĕ.

— Ах, мăнтарăн, мĕн чухлĕ куççулĕ тăкрăм эп сана кĕтсе... Чунăм, ылтăнăм!

— Киндер... малшик твой? — ыйтрĕ нимĕç.

Карчăк Мурата ытамĕнчен ячĕ те, ун çине çав тери хаяррăн пăхса, тăрук кăшкăрса пăрахрĕ:

— Манăн çав! Камăн пултăр тата? Ман мăнук, ман хĕрĕн ачи!.. Анчах сана мĕн кирлĕ? Мĕншĕн сĕтĕрĕнсе çŷретĕн эс ун хыççăн, мăйракалла шуйттан?! Халер çук сире валли, ылханлă йăх! Çŷретĕр кунта хĕрарăмсемпе тата ача-пăчапа çапăçса, вилме маннăскерсем! Кай кунтан! Кай, теççĕ! Халех çухал ман куç умĕнчен!.. Ак, эп сана, явăла..·— Карчăк, кукленсе, çĕрте выртакан картлă кĕвентене илчĕ те нимĕçе пĕррех хăмсарчĕ: — Яратăп ака пĕрре пуç урлă, хăван ятна та манса кайăн!..

Нимĕç пĕр-икĕ утăм каялла чакрĕ те автоматне ярса тытрĕ.

— Хальт, бабка! Ми тебя зейчас пуф-пуф... стреляйт!

— Пер ара, пер! Хăрамастăп! — кăшкăрчĕ карчăк. Хăй çавăнтах пĕр аллипе Мурата ыталаса тытрĕ.

Нимĕç малти тимĕр шăлĕсене кăтартса кулса илчĕ те, каялла çавăрăнса, урам тăрăх тăвалла утрĕ. Кăшт кайсан, карчăкпа Мурат çине тепĕр хут пăхса, чышкипе юнарĕ.

— Ут, ут хăвăн çулупа! — кăшкăрчĕ ун хыççăн хаюллă карчăк.

— Тавтапуҫах сана, кинемей, вилӗмрен ҫӑлса хӑвартӑн мана, ӗмӗрне те манмӑп,— терӗ Мурат хуллен.

— Мӗн тав тумалли пур унта? — терӗ карчӑк, тулли витрисене картлӑ кӗвенте вӗҫӗсемпе ҫаклатса.— Эпир пӗрне-пӗри пулӑшмасан, кам пирӗн хута кӗрӗ? Атя ман пата, мӗн те пулин ҫитерсе ярӑп сана...

Ҫӗнӗ «кукамӑшӗ» патӗнче пӗр сехет пек ларсан, Мурат малалла, Крутой Яр еннелле кайрӗ. Халь ӗнтӗ вӑл, нимӗҫсем тытас-тӑвас пулсан, хӑйне ҫак ял ачи, ҫав ырӑ кӑмӑллӑ карчӑк мӑнукӗ теме пултарнӑ. Анчах ӑна тек никам та тытса чармарӗ, икӗ кунтан вӑл отряда питӗ паха сведенисем илсе килчӗ.

...Ҫакӑн хыҫҫӑн Мурат тата ҫивӗчрех ҫӳрерӗ, тата ытларах хӑюланчӗ. Игнат пӗлме хушнисене, темле кансӗр, йывӑр пулсан та, пӗлсе пычӗ вӑл. Халь те, Игнат ҫӗнӗ разведкӑна каясси ҫинчен каласан, ку приказа вӑл савӑнсах йышӑнчӗ. Хӑварт кӑна апат ҫирӗ, пиншакӗпе аттине, автоматне, пиҫиххи ҫинчи штыкне отрядӑн начхозне пачӗ, ун вырӑнне хӗвне пистолет чикрӗ те, кӗсйине икӗ симӗс чӑмӑркка гранатӑ хучӗ. Разведкӑна вӑл яланах ҫавӑн пек хӗҫ-пӑшалланса ҫӳренӗ...

Ҫур сехет те иртмерӗ пуль — вӑл Игнат патне каялла пырса тӑчӗ:

— Эпӗ хатӗр, Игнат пичче!

— Маттур!

Кӗҫех Груша та ҫитсе тухрӗ. Вӑл пит те ҫӗтӗк-ҫатӑк тумланнӑ, чирлӗ ҫын пек пулса аллине туя тытнӑ, хӑй ҫулӗнчен нумай ватӑрах пек курӑнать.

Игнат вӗсем ҫине пӑхрӗ-пӑхрӗ те аллисене сӑтӑркаласа илчӗ ҫеҫ.

— Питӗ аван... Кун пек ҫи-пуҫпа сире чӑнах та пӗр фриц та партизан теме пултараяс ҫук!..

— Ҫав кирлӗ те пире.

— Тӗрӗс, тӗрӗс.

Шӑп кӑнтӑрла Игнат вӗсене чӑтлӑхри ҫырма тӑрӑх

пĕр ансăр çул çине илсе тухрĕ. Ку çул хĕвелтухăçĕнчен хĕвеланăçнелле тăсăлса выртать.

— Пирĕн дозорсем çак çырман икĕ енĕпе пулаç-çĕ,— терĕ Игнат.— Ун пек-кун пекрех пулас пулсан, çакăнта тарса ŭкме тăрăшăр. Кунта вара вĕсене лайăх курăнать çук ... кучченеç лекĕ. Анчах тăшман йышлă пулсан — аяккалла пăрса ярас пулать, хамăра палăртма кирлĕ мар.

— Пĕлетпĕр-çке, пирвайхи хут мар,— аллипе сулчĕ Мурат.

— Ну, вĕçтерĕр... Телей пултăр.

— Сывпул.

Груша пĕр еннелле утрĕ, Мурат — тепĕр еннелле.

Сарт çине хăпарса пĕр километр пек кайсан, Мурат тăруках тŭп-тŭрĕ проççек çине тухрĕ те вĕçĕмех ун тăрăх пычĕ. Утма питĕ аван пулчĕ, хĕвел хĕртсе пăхнă пулин те — йывăççен хŭттинче шăрăх пулмарĕ, хăлхара пĕрмай вăрманти кайăксем юрлани янраса тăчĕ.

Тепрер сехетрен вăл тип-тикĕс те сарлака хире тухрĕ. Кунта ытла нумаях та пулмасть вăйлă çапăçу пулса иртнĕ пулмалла... Çав тери хăватлă ŭснĕ çур тыррине калама çук таптаса, пăтраштарса пĕтернĕ. Унта та кунта снарядсемпе бомбăсем ŭксе çуралнипе пулнă шăтăксем курăнаççĕ, ванчăк тупăсем, сăмсисемпе çĕрелле тăраннă хура хĕреслĕ танксем, çунса кайнă автомашинăсем выртаççĕ...

Вăрмантан тухсан ăçталла каймалли çинчен Игнат каланине астуса, Мурат вăрман хĕррипе сылтăмалла утрĕ. Хайĕн куçĕсем йĕри-таврара мĕн пуррине сăнасах пычĕç. Ниçта та никам та курăнмарĕ-ха, аван пулчĕ.

Пĕр пĕчĕк çырма урлă каçнă чух ун сăмсине тŭсме çук йывăр шăршă пырса çапрĕ.

— Таçта виле пур пулмалла...— шухăшларĕ Мурат.— Кам-ши?

Савăнтах лапсăркка шĕшкĕ тĕми айĕнчен тимĕрленĕ атăллă ура курăнчĕ. Шиклене-шикленех Мурат

тӗмӗ патнелле пычӗ. Нимӗҫ салтакӗ выртать иккен... Хӑрах ури ҫук, санӗ кӑвак тӑпра тӗслӗ пулса кайнӑ, пӑлӗсене йӗрнӗ, куҫӗсем выранне — епресе таракан хӗрлӗ шатаксем кӑна,— ҫӑхансем кӑларса кайнӑ пулмалла. Ҫав тери ирсӗр!.. Темиҫе утӑм кайсассӑн тата тепӗр виле тӗл пулчӗ, унтан тата, тата... Сахалтан та пӗр вӑтӑр-хӗрӗх ҫын пулӗ. Пурте ӗнтӗ ҫӗрме тытаннӑ.

— Хытӑ шакканӑ кунта вӗсене...— терӗ Мурат хӑй-не хӑй.— Пулеметпа ҫулнӑ пулмалла. Ай снаряд лекнӗ-и. Ҫав кирлӗ!

Шӑршӑран хӑтӑлас тесе, вӑл уттине хӑвӑртлатрӗ. Хушӑран хушӑ чупсах кайрӗ.

Часах малта икӗ ҫыран хушшипе авкаланакан юханшыв та курӑнакан пулчӗ. Игнат каланӑ тӑрӑх, Мурат ҫитсе курмалли ялсем шӑпах ҫав шыв хӗрринче пулма кирлӗ. Инҫех те мар пулас ӗнтӗ...

Сасартӑк Мурат тӑпах чарӑнса тӑчӗ. Таҫта ҫывӑхрах, йывӑҫсем хушшинче, ҫын йынӑшнине илтрӗ вӑл. Ерипен, вӑйсӑрланса ҫитнӗ сасӑпа йынӑшать такам:

— Ах... ай... ай...

Муратӑн пӗтӗм ӳт-пӗвӗ сӳ! туса кайрӗ.

— Мӗнле ҫын-ши? Хамӑрӑн-ши? Тӑшман-ши? Пырса пӑхас-ши, иртсе каяс-ши?

Татах итлерӗ... Йывӑҫсем хушшинчи ҫын йынӑшни каллех илтӗнчӗ.

— Мӗн пулать те мӗн килет,— татӑклӑн шухӑшларӗ Мурат.— Тен, хамӑр ҫын пулӗ, ӑна пулӑшас пулать-и, тен?

Вӑл хӗвӗнчи пистолетне хыпашласа пӑхрӗ те сасӑ илтӗннӗ ҫӗрелле хӑюллӑн утрӗ. Анчах та патне ҫитсен тӗлӗннипе чӗлхине ҫыртсах лартрӗ.

Унӑн умӗнче, таптаса лутӑркаса пӗтернӗ курӑк ҫинче, тахҫан шурӑ тӗслӗ пулнӑ сарӑппанлӑ ҫамрӑк хӗрарӑм выртать. Вӑрӑм хура ҫӳҫӗ чӑлмакланса пӗтнӗ унӑн, пылчӑкпа вараланнӑ ҫурӑк-ҫарӑк сарӑппанӗ ҫара юн, хӑй аран-аран, юлашки сывлӑшпа сывлать...

Малтанах Мурат ним тума пӗлмесӗр тăчӗ. Паллах ӗнтӗ, çак вилес пек выртакан хӗрарăм — пирӗн çын вăл, ăна — тем тесен те — нимӗçсем асаплантарса, амантса пăрахса хăварнă... Анчах — мӗнле пулăшас ăна? Мӗнле çăлас? Часрах пӗр-пӗр вăйпитти çынна чӗнсен пит аван пулмалла та... Никама та тупас çук вӗт кунта! Çав тери пăчăртанса килчӗ Муратăн чӗри... Тата пăртакках шухăшласа тăчӗ те вăл, пирвайхи яла çитсенех пӗр-пӗр хӗрарăма кун çинчен каласа парса, епле пулсан та çакăнта чӗнсе килме шут турӗ. Иккӗн килсен — пулăшма пулатех ăна, яла çӗклесе кайма та пулать. Курса тăнă çӗртех, хамăр çынна епле пулăшу памасăр иртетӗн вара?

Мурат, часрах яла çитес тесе, сиккипех ыткăнчӗ. Çав вăхăтра хӗрарăм каллех вăраммăн йынăшса ячӗ:

— Ах, а-ах... шыв... шы-ыв!

Мурат ун патне каялла чупса пычӗ.

— Шыв!..— Чăнах та, суранланнă çынна шыв кирлӗ-çке! Микулай мучи те вилес умӗн пӗрмай шыв ыйтрӗ...

Нумай пулмасть урлă каçса килнӗ пӗчӗк çырма тӗпӗнче çăлкуç тапса тăратчӗ,— Мурат çакна астуса илчӗ те тӳрех çавăнталла чупрӗ. Ун телейне, çăлкуç патӗнче тахăшӗ пăрахса хăварнă чылаях пысăк пушă консервă банки тупăнчӗ. Мурат ăна пӗр-икӗ хутчен чӳхесе тăкрӗ те, хӗрри таранах куççулӗ пек таса шыв тултарса, каялла васкарӗ. Хӗрарăм халь те малтанхи пекех ним хускалмасăр выртать. Мурат хăрах аллипе унăн пуçне ерипен çӗклесе, тепӗр аллипе консервă банкине тути патне илсе пычӗ.

— Ӗç, ӗç... шыв илсе килтӗм...

Тутине сив шыв перӗнсен, хӗрарăм çăварне карсах ячӗ. Мурат ăна ӗçтерме тытăнчӗ. Çур минутран банкăра пӗр тумлам шыв та юлмарӗ.

— Тата кирлӗ-и? Илсе килес-и? — ыйтрӗ Мурат.

Хӗрарăм чӗнмерӗ, анчах вăл çăмăлраххăн сывлама

пуçлани сисĕнчĕ. Тата ĕçтерсен — татах çамăлланĕ тесе, Мурат тепĕр хут шыв патне чупса кайса килчĕ. Халь вара хĕрарăм çурри таран çеç ĕçейрĕ. Тайăнтарнă банкăри юлашки шыв унăн пичĕпе майĕ тăрăх юхса анчĕ...

Мурат унтан уйрăлса кайма шутламарĕ-ха, малалла мĕн пулассине кĕтсе сăнаса тăчĕ. Ун шучĕпе, шыв ĕçнĕ хыççăн хĕрарăм кăшт та пулин самайланмалла пек ĕнтĕ. Вăл халĕ ку çын кам иккенне, мĕн майпа çакнашкал пулса выртнине çав тери пĕлесшĕн пулчĕ... Чăнах та, ытла нумаях кĕтмелле пулмарĕ унăн. Пĕр пилĕк минут пек иртсен—хĕрарăм хуллен кăна куçне уçрĕ те хăй умĕнче пĕшкĕнсе тăракан Мурат çине пăхрĕ. Темле тĕлĕнсе, ним чĕнмесĕр, халиччен курман япала çине пăхнă пек...

— Кам эсĕ?—хуллен ыйтрĕ Мурат.

Хĕрарăм чĕнмерĕ, анчах унăн куçĕсем тата тимлĕрех пăхнăн туйăнчĕ.



— Кам эс? — тепĕр хут ыйтрĕ Мурат.— Мĕн пулчĕ сана? Питĕ асапланатăн та, пулăшас терĕм...

— Эс ху кам? — аран сас кăларса ыйтрĕ куна хирĕç хĕрарăм.

— Эпĕ-и? — Мурат, тăлăх ача... Аннене нимĕçсем вĕлерчĕç те, пĕччененех çӳретĕп халь. Эс манран ан хăра... Шыв ĕçес килет пулсан, татах илсе килетĕп эпĕ.

— Кирлĕ мар...

— Тен, санăн çиессӳ килет, манăн пĕр татăк çăкăр пур.

— Тавтапуç, эп халь çиме пултарас çук...

— Ура çине тăратсан, утма пултаратăн-и эппин? Эп сана киле кайма пулăшăп.

Хĕрарăм каллех халтан кайрĕ пулмалла,— унăн куçĕсем хупăнчĕç. Вăл темиçе хутчен йывăррăн сывла-сывла илчĕ, унтан çывăрса кайнă пек пулчĕ. Чылайран тин куçĕсене тепĕр хут уçса, Мурат çине çав тери тархаслanăн пăхма тытăнчĕ.

— Манăн пĕр тумлам та вăй çук, утаймастăп эпĕ... Пуç çаврăнать, ăш пăтранать,— терĕ вăл.

— Вăл апла пуль те-ха, кунта выртсан та май килмест вĕт, мĕн те пулин тăвас пулать...

Хĕрарăм пĕр хушă шухăша кайнă пек выртрĕ.

— Акă мĕн, шăллăм,— терĕ вăл унтан.— Мана пулăшасах тетĕн пулсан, çаканти пĕр яла кайса кил тархасшăн... Инçе мар, шыв хĕрринче, Журавлихă ятлă ял... Çав ялăн анат вĕçĕнче, шкул çурчĕпе юнашар, Акулина Петровна ятлă карчăк пурăнать. Çавна шыраса туп та халех ман патăма килме хуш... Урăх нимĕн те кирлĕ мар вара.

— Халех чупатăп! — ура çине сиксе тăчĕ Мурат.

— Ятне астурăн-и?

— Акулина Петровна терĕн вĕт?

— Кай эппин...

Мурат каллех вăрман хĕррипе тăсăлакан канав çине тухрĕ, хăй паçăрах курнă ял патнелле вĕçтерчĕ.

Асăрханасси-тăвасси çинчен те манса кайрĕ вăхăтлăха. Часах вăл юханшыв патне çитсе тухрĕ, чăнкă çыран тăрăх тӳрĕрен тӳрĕ чупса анчĕ, шыв урлă йĕмне çĕклемесĕрех шăмпăртаттарса каçрĕ те яла кĕчĕ.

...Ку ял çурри ытла çунса кайнă иккен. Илемлĕ улăхра йĕркеллĕн вырнаçса ларнă типтерлĕ çуртсем нумайăшĕ халь кăмрăк та кĕл пулса тăнă. Çунса пĕтейменнисем ишĕле-ишĕле аннă. Урам хĕррипе тăвалла утнă май, Мурат пĕр харăсах икĕ ĕç туса пычĕ: хăйсен отрячĕ валли мĕн кирлине пĕлме тăрăшрĕ тата Акулина Петровнăн килне шырарĕ. Куçĕсем пĕр енчен тепĕр еннелле сиккелесе çеç пычĕç унăн.

Акă, вăл хăрах кĕтессине снаряд лексе хăйпăтса кайнă нумай чӳречеллĕ çурт тĕлне çитрĕ.

— Çакă пулĕ-ха вĕсен шкулĕ...— шухăшларĕ те вăл, çав самантрах çуртăн крыльци умĕнче хăяккăн выртакан симĕс тимĕр листине курчĕ. Ун çине «Журавлихăри вăтам шкул» тесе çырнине вулама май килчĕ.

Кунта çитиччен тĕрĕсех килнине чухласа илсе, Мурат тӳрех шкулпа юнашар картишне кĕрсе кайрĕ. Кунта вăл йĕри-тавралла пăхкаларĕ, анчах никам та курăнмарĕ.

— Хуçисем пӳртре пуль-ха,— тесе, крыльца çине хăпарчĕ. Алăкне уçасшăн пулса тĕкрĕ — алăкĕ уçăлмарĕ, ăна шал енчен тĕкĕленĕ иккен. Шаккарĕ — сас паракан пулмарĕ. Татах шаккарĕ. Каллех ăна хирĕç никам та тухмарĕ.

— Мĕн мурĕ? Килте никам та çук-ши? Анчах манăн епле пулсан та тупас пулать вĕт-ха вĕсене, тупмасан леш хĕрарăм пĕтме пултарать, эпĕ пĕр-пĕччен нимĕн те тăваймастăп...— пăшăрхана пуçларĕ те Мурат, алăка чышкисемпе шанлаттарма тытăнчĕ.

Пĕр виçĕ минут иртрĕ çапла. Унтан тин шалта такам хуллен кăштăртатни, пӳрт алăкне уçса çенĕкелле тухни илтĕнчĕ.

— Кам унта? — ыйтрĕ лăпка сасă.
— Уçăр-ха, ĕç пур,— терĕ Мурат.
— Кам вара эс?
— Пĕр ача... Акулина Петровна килте-и?
— Мĕн тума кирлĕ вăл сана?
— Уçăр, вара йăлтах каласа паратăп...

Алăка ерипен уçрĕç. Мурат умне хура тум тăхăннă, çав тери кăмăллă, кăвак куçлă пĕчĕкрех карчăк тухса тăчĕ. Мурат çине питĕ тĕлĕнсе пăхрĕ вăл.

— Кам кирлĕ сана?
— Акулина Петровна...
— Эпĕ вăл. Мĕн калас тетĕн?

Мурат савăнсах кайрĕ. Вăл васкавлăн, пĕр шухăшран тепĕр шухăш çине куçса, карчăка епле те пулин часрах ăнлантарасшăн пулса калама тапратрĕ.

— Мана сирĕн пата пĕр çын ячĕ... Вăл вăрманта чĕп-чĕр юн выртать. Эпĕ канав хĕррипе утаттăм та, йывăççем хушшинче çын йынăшнине илтсе, ун патне пытăм, анчах вăл калаçма та пултараймасть. Шыв ĕçтерсен тин сирĕн пата килме хушрĕ. Чĕнсе кил, терĕ...

Мурат каланăçемĕн карчăкăн сăнĕ улшăнса пычĕ, унăн алли-урисем те, пĕркеленчĕк тутисем те чĕтреме тытăнчĕç.

— Кам вара вăл çын? Арçын-и, хĕрарăм-и?
— Хĕрарăм, хĕрарăм! Çамрăк-ха хăй. Шурă платйĕпе. Çӳçĕ хура. Эс ăна паллатăн-и?
— Палласси... Ман кин пуль ĕнтĕ вăл! — Карчăкăн пичĕ тăрăх шултра куççуль шăрçисем шăпăртатса анчĕç.— Ăна нимĕçсем тытса кайнăччĕ...
— Макăрса ан тăр, атя эппин часрах ун патне,— терĕ Мурат.— Халь çинех каймасан, кайран тата япăхрах пулма пултарать. Ахаль те вăйсăрланса çитнĕ...
— Каяс пулать çав...— лăпланма тăрăшрĕ карчăк.

Вăл, пӳрте кĕрсе, кăвакарнă çӳçĕ çине тутăр уртса тухрĕ те Мурат хыççăн утрĕ.

Малтанах вĕсем нимех те калаçмарĕç, унтан, шыв

урлă каçса вăрман патнелле çывхарма пуçласан, Мурат, сăмах хускатса, майĕпе ун-кунăн ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Пĕрмай ахлата-ахлата хуйхăрса пынă карчăк пăртакках лăпланнă пек пулчĕ, Мурат камне пĕлсен — хăйсем юлашки кунсенче мĕн-мĕн тӳссе ирттернисем çинчен йĕркипех каласа пачĕ.

Икĕ кун хушшинче фашистсем вĕсен ялне виçĕ хутчен пырса кайнă. Яланхи пекех — çаратнă, çĕмĕрнĕ, пусмăрланă. Ку карчăкăн ывăлĕ — ялти учитель пулнăскер — нимĕçсем киличчен ялтан тухса кайнине пĕлсен, ӳсĕр фашистсем вĕсем патне ушкăнĕпех пырса кĕнĕ те карчăкне те, унăн кинне те асаплантарма тытăннă: малтан ывăлĕ çинчен тĕпченĕ, унтан аллисене каялла пăрма тапратнă, чĕрнисем айне йĕп чиксе янă... Юлашкинчен, карчăк ним пĕлми пулсан, вĕсем унăн кинне таçта илсе тухса кайнă. Мурат пырса каличчен карчăк ун çинчен пĕр нимĕн те пĕлмен, ăна ăçта та пулин персе вĕлернĕ е çакса хăварнă пуль, тесе шутланă. Мурата халь вăл тем пекех тав турĕ, анчах кинне чĕррĕн кураймасран çав тери пăшăрханса пычĕ...

— Тин аптрамасть пулĕ-ха, манран чиперех юлчĕ... Ан кулян-ха ытлашши, ăшна ан çунтар пустуй,— лăплантарма тăрăшрĕ Мурат.

Часах вĕсем çамрăк хĕрарăм выртнă çĕре çитрĕç. Вăл татах вăйсăрланса кайнă-мĕн, карчăк ыйтнине хирĕç аран-аран темиçе сăмах каларĕ.

Асаплантарса пĕтернĕ хыççăн фашистсем ăна пистолетран персе пăрахса хăварнă иккен. Анчах та вĕлереймен, пуля чĕререн инçе те мар, сулахай хулпуççи витĕр тухса кайнă.

— Мĕн тăвăпăр ĕнтĕ? — куççуль тулли куçĕсемпе пăхса илчĕ Мурат çине карчăк.

— Суранне хăвăртрах çых. Ахаль те юн нумай кайнă та унăн, татах юхма пултарать. Пĕтет вара...

Карчăка çапла каларĕ те, хăй çавăнтах çĕçĕ кăларса вăрман ăшнелле кĕчĕç. Кăшт тăрсан вăл, ал туни

хуланăш икĕ кашта тата вĕтĕрех хуран тураттисем сĕтĕрсе тухса, наçилкка майлаштарма тытăнчĕ. Ăна туса çитерсен, вĕсем карчăкпа иккĕшĕ аманнă хĕрарăма ерипен çĕклесе ун çине хучĕç. Хĕрарăм асаплăн йынăшса ячĕ.

— Тӳс ĕнтĕ епле те пулсан, Лена... Чунна хытарсах тӳс...— терĕ карчăк йăваш сасăпа.— Киле çитерес тетпĕр-çке сана...

Муратпа карчăк наçилккана ик вĕçĕнчен тытрĕç те часрах ялалла утрĕç. Анчах кунта та чăрмавсăр пулмарĕ. Вăрмантан тухнă-тухманах вĕсен умне таçтан мурĕнчен виçĕ юланутлă нимĕç сиктерсе пырса чарăнчĕç.

— Хальт!

— Стой, руссиш швайн! — кăшкăрса ячĕç вĕсем.

Паллах, чарăнмалла пулчĕ...

— Кам ку?

— Мĕнле çын?

— Ăçта каятăр? — тĕпчеме пуçларĕç гитлеровецсем.

Мурат пĕрре тăшмансем çине, тепре Акулина Петровна çине пăхса илчĕ те, вăл хăранипе шурса кăвакарса кайнине кура, пĕтĕм ответа хăй çине илме шут турĕ.

— Чирлĕ çынна тухтăр патне илсе каятпăр,— терĕ вăл.

— Суятăн!

— Мĕн суяс манăн... Пăхсах курăнать.

Анчах ăна ĕненмерĕç. Пĕри хăйĕн лачкам шыв пулнă лашине наçилкка çумнех ташлаттарса пычĕ те сывламан пекех выртакан Ленăна пĕррех саламатпа хырăмĕ урлă туртса çапрĕ.

— Встайт!

Карчăк аллинчи наçилкка вĕçĕ лачах тухса ӳкрĕ. Лена вăрăммăн йынăшса ячĕ. Мурат та чутах ăнран каятчĕ...

— Ма тиветӗр чирлӗ ҫынна? Вӑл ахаль те вилет, курмастӑр-и-мӗн? — кӑшкӑрса ячӗ вӑл хаярран, кайран-малтан мӗн пуласси ҫинчен шухӑшламасӑрах. Хӑй аллинчи наҫилкка вӗҫне часрах ҫӗре хучӗ те Ленӑна витнӗ тутӑра вӑштах сирсе пӑрахрӗ.

— Авӑ — епле юн юхнӑ!..

Нимӗҫсем пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ те урӑх ним каламасӑрах малалла вӗҫтерчӗҫ — ҫул ҫинче тусан ҫеҫ мӑкӑрланса юлчӗ. Мурат вӗсен хыҫӗнчен чылай вӑхӑт ҫав тери кураймасӑр, пӗтӗм чун-чӗрипе тарӑхса пӑхса тӑчӗ. Пуринчен ытла вӑл чирлӗ Ленӑна саламатпа ҫапакан ылтӑн шӑллӑ фашиста лайӑх астуса юлчӗ.

— Эх, улахрах ҫӗрте тӗл пуласчӗ ӑна... отрядпа пӗрле чух,— ассӑн сывласа илчӗ те вӑл, каллех наҫилккана тытрӗ.

— Атя, шӑвар хуллен...

Вӗсем майӗпе утрӗҫ. Лена йынӑшрӗ, карчӑк ӑна пула таттисӗр ӗсӗклесе пычӗ, Мурат пуҫӗнче тӑхлан пек йывӑр шухӑшсем ҫаврӑнчӗҫ. Халь ҫеҫ пулса иртни ниепле те куҫ умӗнчен каймарӗ. Шухӑшланӑҫемӗн чӗрери тарӑху вӑйлансах пычӗ.

— Ҫынсем мар ҫав, чӑн-чӑн тискер кайӑксемех вӑл фашистсем! Игнат пичче тӗрӗс калать: фашистсем пек усал чӗрчунсем те ҫук ҫӗр ҫинче... Мӗн чухлӗ юн юхтараҫҫӗ, мӗнешкел хурлӑх кӑтартаҫҫӗ ним айӑпсӑр ҫынсене...

Нимӗҫсем пӗтернӗ ҫынсем пӗрин хыҫҫӑн тепри аса килчӗҫ Мурата: хӗненине тӳсейменнипе вилсе кайнӑ амӑшӗ, Ивановкӑри ҫапӑҫура вӗлернӗ Якур мучи, уй хапхинчен ҫакнӑ виҫӗ старик, чӗрӗллех шӑтӑка чикнӗ хӗрлӗармеец, разведчик Прохор, Микулай мучи... Мӗнешкел аван ҫынсемччӗ вӗсем пурте!

— Эх, хӑҫан тулӗ-ши ку фашистсен шӑпи!.. — ассӑн сывласа илчӗ Мурат. Кӑкӑртан сиксе тухас пек тапрӗ унӑн чӗри...

Ленӑна киле илсе ҫитерсен, карчӑк ӑна пӑртак

канма тата апат ҫиме сӗнчӗ, анчах Мурат тек тӑрасшӑн пулмарӗ.

— Каймалла манӑн, эп хам ӗҫсене туса ҫитерменха,— терӗ вӑл.—Каҫалла сулӑнчӗ ӗнтӗ, ав, хӗвелӗ ӑҫта ҫитнӗ...

— Апла пулсан, тепӗр чух ҫула май кӗрсе тух, яланах кӗтнӗ хӑна пулӑн, эпир сана манас ҫук нихӑҫан та!

— Кам пӗлет, тен, тӳр килӗ...

— Сывӑ пул эппин, ҫулу телейлӗ пултӑр! — ыр сунса ӑсатрӗ ӑна Акулина Петровна.

— Чипер юлӑр...

* * *

Мурат кӳршӗри яла ҫул тытрӗ. Нимӗҫсем кунта та ҫук иккен, анчах вӗсем темиҫе кун малтан кунта пулни питӗ лайӑх палӑрнӑ. Ҫавнашкалах ҫуннӑ-ишӗлнӗ ҫуртсем, ванчӑк хапхасем, тем сӑлтавпа урама кӑларса пӑрахнӑ сӗтел-пукансем, темӗн те пӗр... Ҫыннисем курӑнмаҫҫӗ: те вӑрмансене тарса пӗтнӗ, те пӳрчӗсенчех питӗрӗнсе ларaҫҫӗ. Пурӗ те пӗр карчӑкa ҫеҫ тӗл пулчӗ Мурат, вӑл та хӑлхи илтменскер иккен.

Виҫҫӗмӗш яла пырса кӗрсен, вӑл пӗр ҫурт тӗлӗнче вунӑ-вунпилӗк ҫын пухӑнса тӑнине асӑрхарӗ те ним шиксӗрех вӗсем патнелле утрӗ.

— Ахальтен пухӑнман-ха вӗсем, темскер пулнӑ пуль, пӗлес,— терӗ вӑл. Патнерех пырсан хапха умӗнче пӗр метр ҫурӑ тӑршшӗ тупӑк хупӑлчи тӑнине курчӗ.

— Кам вилнӗ кунта? — ыйтрӗ Мурат хӑйпе пӗр ҫулсенчи шурӑ ҫӳҫлӗ ачаран.

— Ҫаксен хӗрачи...— терӗ лешӗ.

— Мӗн... чирлесе вилнӗ-и?

— Ҫук...— Ача пуҫне пӑркаларӗ.— Халь кам чирлесе вилет?

— Мӗн пулнӑ эппин?

— Юнне юхтарса илнӗ унӑнне.

Мурат нимĕн те ăнланмарĕ. Этемĕн юнне юхтарса илнине вăл халиччен нихçан та илтменччĕ. Йăнăш ăнлантăм пулĕ тесе, тепĕр хут ыйтрĕ:

— Мĕн терĕн эсĕ?

— Пĕтĕм юнне юхтарса илнĕ тетĕп-иç..

— Эс чипер калаç-ха, тĕрĕсне кала!

— Халь те суймастăп,— кăмăлсăр пулчĕ шурă çÿçлĕ ача,— сана улталама мĕн мана?

— Ĕненмелле мар...

— Эп те ĕненменччĕ те — кайран ĕненмеллех пулчĕ.

— Мĕнле пулнă-ха вăл? Камсем хăтланнă ун пек?

— Камĕ паллах ĕнтĕ — нимĕçсем. Вĕсене хăйсен аманнă салтакĕсене часрах сыватма этем юнĕ кирлĕ пулнă. Кунтан инçех мар, пĕр ялта, вĕсен госпиталь пур, тет. Вăт, пирĕн еннелле килнĕ те, çырмара вылякан пилĕк-ултă хĕрачана вăйпах илсе кайса, вĕсен пĕтĕм юнне юхтарса илнĕ. Кайран хăйсене çул çине кăларса пăрахнă... Каçхине вĕсене хамăр ялсем тупса килнĕ.

— Эх, шуйттансем...

— Мĕн калăн!

Çак вăхăтра кил хушшинче хĕрарăм сассисем илтĕнчĕç. Тахăшĕ антăхса каяс пек макăрчĕ — вилнĕ хĕрачан амăшĕ пулас.

— Пытарма каяççĕ,— терĕ шур çÿçлĕ ача.

Мурат çынсенчен уйрăлчĕ те тăвалла утрĕ. Малалла мĕн пулассине курса тăрас килмерĕ унăн. Çынсен куççульне вăл юлашки вăхăтра ахаль те пит нумай курнă. Ытла та нумай...

Нимĕçсем çак тавраша пулнине Мурат ĕнтĕ тĕплĕн пĕлчĕ: хăй куçĕпе те сăнарĕ, çынсенчен те тĕпчерĕ. Анчах çак виçĕ ялта вĕсем пĕри те курăнмарĕç. Паçăр уйра тĕл пулнă юланутлă салтаксем хăш тĕлтен килсе тухса ăçталла кайнине те пĕлме май килмерĕ.

«Игнат пичче çилленет пуль те-ха, ним тума та

çук...» — шухăшларĕ те Мурат, ял вĕçне тухсан, вар пуçĕпе пăрăнса, хайсен отрячĕ тăнă вăрман еннелле васкарĕ.

Хĕвел чылаях каçалла сулăннăччĕ ĕнтĕ, йывăççемпе çуртсен ĕмĕлкисем вăрăмлансах пычĕç, майĕпе кăштах сулхăнлатма та пуçларĕ. Муратăн темиçе çырмапа икĕ уй урлă каçмалла, çавăнпа та вăл, каç пулса лариччен отряда çитес тесе, хăвăрт утрĕ, анаталла анмалли вырăнсенче кĕсйинчи гранатăсемпе хĕвĕнчи пистолетне—çапкаланса ыраттарасран—аллисемпе тытса чупсах пычĕ. Вăрман хĕррине çитиччен йĕп-йĕпе тара ӳкрĕ вара, чĕри те хыттăн кăртлатса тапакан пулчĕ.

Паçăрхи проççек çине тухсан, вăл майĕпентерех ута пуçларĕ.

— Инçе мар ĕнтĕ, часах çитетĕп...

Вăрман халь кăнтăрлахи пек те мар илемлĕ. Темĕн çӳллĕш йывăç тăррисем каçхи хĕвелпе çемçен хĕрелсе тăраççĕ, вĕсен хушшипе çутă сенкер пĕлĕт курăнать, ура айĕнче кĕççе пек çемçе курăк кăштăртатса пырать. Унта та кунта ыванма пĕлмен чĕвĕлти кайăксем хăйсен хаваслă юррисене таттисĕр кĕвĕлеççĕ. Сывлăш уçă, таса, сывлама çăмăл... Нихăçан та тухас килес çук ку вăрмантан!

Мурат хăйсен ялĕ çывăхĕнчи вăрмана аса илчĕ. Вăл вăрман кунтан пĕчĕкрех ĕнтĕ, анчах унта та пит аван. Çуркунне, пирвайхи чечексем шăтса тухнă вăхăтра, унта ялан ĕнесене çитерсе çӳренĕ, уçă сывлăшра юрла-юрла савăннă. Çулла тĕрлĕрен çырла çиме, кăмпа татма кайнă, сĕткенлĕ туратсенчен шăхличсем туса янратнă. Кĕр енне вара, пĕтĕм вăрман ылтăн тĕспе витĕне пуçласан, пĕрни-пĕрнипе сап-сарă майăр татнă... Юлашки ик-виç çул хушшинче вăл вăрмана пушшех çӳрес килекен пулнăччĕ: колхоз унта темĕн пысăкăш кӳлĕ туса кĕмĕл тĕслĕ пулă ĕрчетрĕ. Чалăш çырман ик енĕпе сахалтан та икçĕр вĕлле лартса тухса «пыл фабрикĕ» турĕ. Вăрмантах ферма картисем ӳссе ларчĕç,

унта кунĕн-çĕрĕн сĕт, çу, хăйма юхтаратчĕç. Анчах халь ку ырлăхран нимĕн те юлман: пулă кÿллине колхозниксем хăйсем татса ячĕç, утарпа фермăна нимĕçсен бомбисем аркатрĕç...

Пĕрмай асаилÿсем ăшне путса пынипе Мурата хăй проççек вĕçне пит час çитнĕ пек туйăнчĕ. Йăнăш килмерĕм-ши тесе, вăл енчен-енне пăхкаласа илчĕ. Анчах та тĕрĕсех килнĕ иккен, вăл паçăр Игнат илсе тухнă ансăр çул çинче тăнă. Çавăнпа та лăпкă кăмăлпах сылтăмалла пăрăнчĕ те уттине хăвăртлатрĕ.

Вăрманта майĕпе тĕттĕмлене пуçларĕ.

— Тепĕр кăшт кайсан çул сулахаялла пăрăнмалла-ха,— шухăшласа пычĕ Мурат,— вăл тĕлте снаряд лекнипе ик еннелле çурăлса аннă вата хурама пулма кирлĕ, унтан çырма... Çырман ик енче — пирĕн дозорсем. Хуллен шăхăрсан...

Анчах шухăша вĕçне çитерме пулмарĕ: малта, çул çинче, лаша ури сассисем илтĕнчĕç. Мурат тăпах чарăнчĕ.

— Кам-ши?

Пĕр харăсах темиçе тĕрлĕ шухăш çуралчĕ унăн. Самантран çав шухăшсенчен пĕри çиеле тухрĕ:

— Нимĕçсем кусем, пирĕннисем каплах çÿрес çук... Мĕн тăвас? Часрах вăрман ăшнелле тапса сикес-и? Тен, пытанас мар? Мĕн пуласси пулĕ вара. Çук, пытанмастăп!

Сасартăк темле вĕри хăюлăх тулчĕ унăн чĕрине. Сылтăм аллипе кĕсъери гранатăна чăмăртаса тытрĕ, сулахаййипе пуçĕнчи карттусне пусса лартрĕ те çирĕппĕн малалла утрĕ. Вăл темиçе утăм тунă çĕре — çул кукринчен юланутлă нимĕçсем йĕнерĕсем çинче сиккелесе тухрĕç...

Мурата курсанах малта пыраканни лашине чарчĕ.

— Хальт! — терĕ те вăл, кайрисене чарăнма хушса, аллине çĕклерĕ.

Юланутсем тăпах пулчĕç.

Мурат та çул варрине юпа пек тăчĕ. Çав самантрах хăй малти нимĕçне палласа илчĕ.

— Пасăрхи ку!.. Ылтăн шăллă... Татах тĕл пултăмăр иккен...— çиçсе илчĕ шухăш Мурат пуçĕнче.

— Ăçта каян? — ыйтрĕ нимĕç.

— Кукамайсем патне... Çак вăрман хыçĕнчи яла,— ун куçĕнчен ним шиксĕр пăхса хуравларĕ Мурат.

— Мĕнле ял вăл?

— Осиновкă...—(Ку ял ятне ирхине Игнат асăннăччĕ, унта Груша разведкăна кайрĕ).

— Хăш ялтан килетĕн?

— Журавлихăран. Ав çавăнта, шыв хĕрринче...

— Çул çинче кама та пулин куртăн-и?

— Çук, никама та курман...

— Суятăн вĕт?

— Çук, суймастăп. Акă...— Мурат пăт та пат хĕрес хурса илчĕ.

Нимĕç хăй хыçĕнчи салтаксем çине пăхрĕ те пĕринпе тем çинчен хăйсен чĕлхипе калаçрĕ. Кайран каллех унăн пăтранчăк куçĕсем Мурат çине тăранчĕç.

— Потапова ялне пĕлетĕн-и эс?

— Ма вара?

— Ыйтса ан тăр, тӳррипе кала: пĕлетĕн-и?

Мурат ку ял ятне те илтменччĕ халиччен, анчах хăй те пĕлмерĕ, темшĕн — пĕлетĕп, терĕ.

— Мĕнле каймалла унта?

«Аха, кусем çул шыраççĕ! Юрать...— çиçĕм пек хăвăрттăн тавçăрса илчĕ Мурат.— Пасăр Игнат пире Грушăпа иксĕмĕре асăрхаттарнăччĕ...»

— Хам ертсе кайма пултаратăп сире,— терĕ вăл.

— Эс пире каласа кăтарт.

— Калама пĕлмелле мар çав, çулĕ пит нумай юплĕ, унталла та кунталла пăрăнать... — юптарма тытăнчĕ Мурат. Çав хушăрах унăн шухăшĕ калама та çук хăвăрт ĕçлерĕ, ун пуçĕнче çав тери хăюллă та хăрушă план йĕркеленсе пычĕ...

— Апла пулсан — илсе кай! — хушрĕ ылтăн шăлли.— Хăвартрах, эпир васкатпăр!

— Атьăр...

Нимĕçсем лашисене каялла çавăрма тытăнчĕç. Мурат çул хĕррипе пăранса вĕсенчен мала иртрĕ. Çав хушăрах вăл, тăшмансем çине хăяккăн-хăяккăн пăхса, вĕсем миçен пулнине шутласа тухрĕ. Малти офицерĕпе пĕрле шутласан — вунвиççĕн иккен.

— Нумаях мар... Шел — юланутпа, хăшĕсем тарса ÿкме пултараççĕ. Анчах та — курăнĕ-ха...

Пурте вырăнтан хускалчĕç. Мурат нимĕçсем умĕпе аран ĕлкĕрсе пычĕ. Чĕри вара кĕç сиксе тухас пекех тапрĕ. Пуçри шухăшсем пĕрин çине тепри капланса пычĕç, йĕркене кÿртме те йывăр пулчĕ вĕсене.

— Мĕнрен пуçлас? Хамăрăннисене епле майпа лайăхрах систерес? Халех, халех татăкла шут тăвас пулать... Ака ĕнтĕ, хайхи снаряд хуçса ыватнă йывăç курăна пуçларĕ, унтан çырма та инçе мар... Дозорсем...

Нимĕçсем Мурат çурăмĕ хыçĕнче йĕтем çинчи тăрнасем пек какăлтатса калаçса пыраççĕ. Малти нимĕçĕн — леш ылтăн шăлли — лаши час та часах Мурат пуçĕ çине вĕри сывлăшпа сывларĕ, çавăн пирки унăн тек-текех малалла чупса каймалла пулчĕ.

Темиçе хутчен вăл кĕсъери гранатине тыта-тыта чăмăртарĕ. Лаша таптасран хăрана пек пулса, каялла çаврăна-çаврăна пăхрĕ.

Ака ĕнтĕ çырма хĕрри. Кунта çул тата ансăртарах, сукмак пек кăна. Иккĕн-виççĕн юнашар пыма май çук. Çырма тĕпĕнче — лачака. Ун урлă та тăруках каçма пулмасть, тытăнса тăма тивет.

— Эх, пирĕн дозортисем вăхăтра асăрхасассăнччĕ! — йывăррăн сывласа илчĕ те Мурат, пысăк утăмсемпе аналла чупса анчĕ. Çырма тĕпĕнчи лачака урлă вăл темиçе хутчен кушак пек çămăллăн сиксе каçса кайрĕ, унтан йăпăр-япăрах сăрта çити улăхса каялла пăхрĕ. Нимĕçсем çырманалла майĕпе, пĕрин хыççăн

тепри анаççĕ иккен, хăшĕсем лачака хĕрринех çите пуçланă. Самантран вĕсен лашисем лачака ăшне кĕме хăраса чаранса тăчĕç. Салтакĕсем вĕсене ата кĕлисемпе тапса, шăй та шай кăшкăрса хăвалама тытăнчĕç.

— Шăтăрт!—турĕç Муратăн шăлĕсем. Çав самантрах вăл кĕсйинчен пĕр гранатине туртса кăларчĕ те, пĕтĕм вăйне пухса, ăна нимĕçсем кĕпĕрленсе тăнă çĕрелле вăркăнтарчĕ.

Пĕтĕм вăрмана янратса ячĕ граната çурăлнă сас. Кунпа пĕрлех çырман ик енчен те ручной пулеметсем шăтăртатма тытăнчĕç.

— Рра-та-та-та...

— Та-та-та...

Мурат иккĕмĕш гранатине кăларса ыватрĕ.

Каллех янраса кайрĕ вăрман...

Унтан вара пирĕн çамрăк партизан часрах пĕр пысăк йывăç хыçнелле сикрĕ те хĕвĕнчи пистолетне туртса кăларчĕ. Уншăн халь чи шиклĕ самант çитрĕ. Мĕн пулĕ-ши малалла?.. Паллах ёнтĕ, пулеметсенчен дозорта тăракан партизансем переççĕ, урăх кунта никам та пулма пултараймасть. Ку питĕ аван-ха, çав тери аван. Эппин, Мурат нимĕçсене ертсе килнине вĕсем курсах тăнă!..

Вăл, йывăç хыçĕнчен пуçне кăштах кăларса, çырма тĕпнелле пăхрĕ. Унта, лачака хĕрринче, пилĕк-ултă нимĕç алли-урисене саркаласа выртаççĕ, çавăнтах темиçе лаша тапкаланать. Кĕçех Мурат йывăç тĕмисем хушшипе сăрталла упаленекен нимĕçсене асăрхарĕ. Пистолетне — пенĕ чух сиккелесрен — турат çине хучĕ те умлăн-хыçлăн темиçе хут печĕ. Анчах тивни-тивменнине курма пулмарĕ — нимĕçсем те пеме тапратрĕç. Ик-виçĕ пуля пĕр харăсах Мурат пытаннă йывăçа чăнклатса пырса çапăнчĕç.

Темиçе самант тăхтаса тăрсан, вăл юманăн тепĕр енчен пăхрĕ. Тăруках никама та курмарĕ, çавăнпа та, пистолетне хатĕрех тытса, йывăç хыçĕнчен çур кĕлет-

ки таранах тухрĕ. Тухма кирлĕ мар-мĕн... Мурат кĕлетки курăнсанах, пĕр пуля ун хулпуççине пырса çапрĕ, тепри пит çăмартине шăйăрса иртсе кайрĕ...

Икĕ çĕртен суранланнăскер, Мурат ластах ÿкрĕ. Çав самантрах унăн куçĕ умĕнче çута-сара ункăсем шуса иртрĕç. Темле, питĕ ĕшеннĕ пек, çывăрас килнĕ пек пулса кайрĕ. Йĕри-тавра-ра таттисĕр таклатакан пулеметсемпе уйрăм пăшал сассисем таçта инçетелле кайса çемçелсе пынă пек туйăнчĕ. Тепрер минутран вăл ăна та илтми пулчĕ. Унăн айĕнчи чаплă кавир пек кăпăшка симĕс мăк вĕри юнпа хĕреле пуçларĕ...



* * *

Вăл тепĕр ирхине, хĕвел илемлĕн хĕрелсе тухнă вăхăтра тин тăна кĕчĕ. Куçĕсене уçсанах, çав тери шыв ĕçес килнине туйса, çĕкленесшĕн пулчĕ, анчах кăшт хускалсанах хулпуççийĕ тӳсме çук ыратса кайрĕ унăн. Вара вăл ĕнер мĕн-мĕн пулнине йĕркипе аса илме тăрăшрĕ. Хай хулăн йывăç хыçне пытанса нимĕçсене пеме тытăнни таран астуса çитерчĕ, анчах çавăн хыççăн унăн шухăшĕсем татăлчĕç.

— Кайран мĕн пулнă-ши? Нимĕçсене тартман-ши? Хамăрăннисем ăçта-ши, епле-ши? — ыйту хыççăн ыйту çуралчĕ унăн пуçĕнче.

— Хама тупса пулăшнă-ха вĕсем,— шухăшларĕ вăл кăштах выртсан, хăйĕн пичĕпе хулпуççине çыхнисене хыпашласа.— Хăйсем ăçта-ши вара? Мана пĕччен пăрахса хăварма пултарман-çке вĕсем? Ах, шыв ĕçесчĕ...

Нумай кĕтмелле пулмарĕ. Мурат часах хăй хыçĕнче йывăç тураттисем чăштăртатнине, икĕ çын васкасах ун патнелле çывхарнине илтрĕ. Кусем — пĕри Игнат, тепри — Микулай мучин ывăлĕ, хай пĕркунне нимĕçсен тыткăнĕнчен хăтарнă Павăл пулнă. Вĕсем ирхи вăрманта чылай çӳренĕ пулмалла — урисем чĕркуççи таранах йĕпеннĕ.

— А-а, тинех куçна уçрăн-и, герой?— Мурат патне кукленсе ларчĕç Игнатпа Павăл.— Ну, кăмăлсем мĕнлерех?

— Аптрамасть те... питĕ шыв ĕçес килет.

Павăл ăна флягăран шыв пачĕ, Игнат унăн суранĕсене мĕнле çыхнине пăхкалама тытăнчĕ.

— Тĕрĕс, аптрамаллах пулас çук-ха, Груша сурану-сене çыхнă чух хам пăхса тăтăм,—терĕ вăл.—Суранĕсем хăрамаллах мар...

— Груша таврăннă эппин? Ăна нимĕн те пулман-и? — пĕлесшĕн пулчĕ Мурат.— Ман пек лекмен-и вăл?

— Çук, çук, чиперех тавранчĕ. Таçта, икĕ юланут хăваларĕç, тет те — тытайман, тарса ӳкнĕ ку. Хăй питĕ лайăх сведенисем тупса килнĕ вара... Сан мĕнле? Мĕн куртăн?

— Манăн нимех те çук. Никамах та курăнмасть унти ялсенче. Пĕр хĕрарăма вилесрен хăтартăм çеç.

— Епле майпа?

Мурат кĕскен кăна Акулина Петровнăн кинĕпе пулнă историе каласа пачĕ.

— А ку кавалеристсемпе ун пек тума мĕнле ăс çитертĕн эсĕ? Тĕлĕнтертĕн вĕт!

— Çапла май килчĕ те ара...— лăпкăн кăна ответ пачĕ Мурат.— Çул ыйтаççĕ те — кăтартас, терĕм.

— Леш тĕнчене каймаллине-и?— кулса ячĕ Павăл.

— Ара, вĕсене пĕр çав çула çеç кăтартмалла ĕнтĕ...

— Тĕрĕс, Мурат, маттур!—ун куçĕнчен ăшшăн пăхса илчĕ Игнат.— Пĕрине те тарма памарăмăр вĕт, веçех поминальнике çыртăмăр!

— Ылтăн шăллăскер пурччĕ вĕсен, командирĕ пулмалла...

— Çапла, çапла, обер-лейтенант...

— Вăл та лекнĕ-и?

— Кăнна! Сан гранатупах тирпейленнĕ!

— Ах, лайăх-çке эппин!..— таранннăн сывласа илчĕ Мурат.— Пуринчен ытларах манăн çавна таварас килетчĕ. Вăл кашкăр манăн куç умĕнчех вилес пек чирлĕ хĕрарăма хĕнесе тăкрĕ...

— Маттур, маттур, Мурат. Эсĕ чăн-чăн Сусанин пекех тунă ку ĕçе! — терĕ Павăл.— Малашне эпир сана куншăн Сусанин тетпĕр ĕнтĕ...

Мурат ку сăмахсене ăнлансах çитмерĕ.

— Ма ун пек? Кам вăл Сусанин?

— Илтмен-и вара эс ун çинчен? Учитель шкулта каласа кăтартманччĕ-и вара вĕреннĕ чух?

— Çук...

— Э-э, Сусанин вӑл вырӑс халӑхӗн питӗ чаплӑ ҫынни пулнӑ! Тахҫан ӗлӗк-авал, пӗр виҫӗ ҫӗр ҫул каялла, пирӗн ҫӗр ҫине халь нимӗҫ фашисчӗсем килсе кӗнӗ пек, поляксем килсе кӗнӗ... Ҫавнашкалах — ҫаратнӑ, пусмӑрланӑ, вӗлернӗ... Ҫавӑн чухне вӗсен пӗр ушкӑнӗ ҫул ҫухатнӑ та Иван Сусанин ятлӑ ватӑ хресчене хӑйсене ҫул кӑтартса пыма хушнӑ. Сусанин тӑшмансене сӗм вӑрманалла илсе кӗрсе кайнӑ... Ӗҫ хӗлле пулнӑ, шартлама сивӗ, пилӗк таран юр... Кайсан-кайсан, Сусанин вӗсене юриех нимӗнле те каялла тухма ҫук вырӑна ертсе кӗнине кура, урса кайнӑ поляксем ӑна ҫавӑнтах вакласа тӑкнӑ... Анчах хӑйсем те хӑталайман, ҫавӑнтах пӗтнӗ. Пит хакла панӑ вара Сусанин хӑйӗн пурнӑҫне...

— Паттӑр старик пулнӑ эппин! Пирӗн Микулай мучи пек...

— Вырӑссен пит нумай пулнӑ ун пек паттӑрсем, шутласа та кӑларас ҫук вӗсене,— ҫирӗплетрӗ Игнат.— Ют ҫӗртен тӑшмансем килсе кӗрсен, пурне те пӗтерсе тӑкнӑ... Пӗрне те тӗрӗссӗн кӑларса яман!

Калаҫу пӗр вӑхӑтлӑха чарӑнчӗ.

Мурат каллех, Павӑлӑн флягине илсе, темиҫе ҫӑвар шыв сыпрӗ.

— Юрать-ха урараН тивмен, вара тата кансӗртерех пулатчӗ,— терӗ вӑл, пӑраннӑ чух хулпуҫҫийӗ ыратнипе тути хӗррине ҫыртса.— Сывалсан, куншӑн виҫӗ хут ытларах тавӑратӑп-ха вӗсене...

— Паллах, тавӑратпӑр,— терӗ Игнат.— Тӑшмана тӗппипе аркатиччен ҫапӑҫусем нумай пулаҫҫӗ-ха.— Вӑл ура ҫине тӑчӗ те, вайлӑ аллисене саркаласа, шӑмӑ сыпписем шатӑртатиччченех карӑнса, анасласа илчӗ.

— Кӗҫӗр каллех ҫывӑрман ку,— шухӑшларӗ ун ҫинчен Мурат.— Епле тӳсет кӑна...

— Ну, хускалас пулать,— терӗ Игнат.— Эпир сана, ҫывӑрма никам та ан кансӗрлетӗр тесе, юри халӑхран аяккарах вырттарнӑччӗ. Сан патӑнта каҫранпах

Груша ларчӗ. Халь атя ӗнтӗ, халӑх патне кайӑпӑр, апат та хатӗр пулмалла.

Игнатпа Павӑл, ачана иккӗшӗ ик хулӗнчен тытса, ура ҫине тӑма пулӑшрӗҫ те унпа пӗрле ҫырма тӑрӑх анаталла утрӗҫ.

— Кун пек пулсан — часах иртсе каять!— савӑнӑҫлӑн шухӑшларӗ Мурат.— Чиперех утма пултаратӑп вӗт...

Анчах вӗсем ҫирӗм-ҫирӗм пилӗк утӑм та каяймарӗҫ пулӗ, сасартӑк инҫетре те мар пӑшал сассисем кӗрслетрӗҫ.

— Мӗне пӗлтерет ку?— нимӗн ӑнланмасӑр, пӗрпӗрин ҫине пӑхса, виҫҫӗшӗ те тӑпах чарӑнса тӑчӗҫ вӗсем.

Пӑшал сассисем татах илтӗнчӗҫ. Кӗҫех автомат шатӑртатса илчӗ. Тахӑшӗ ҫывӑхрах вӑраммӑн шӑхӑрса ячӗ...

— Облава, юлташсем!— куҫӗсене ялкӑштарса илчӗ Игнат. Ҫавӑнтах Мурата аллинчен тытрӗ:— Эсӗ тӳрех анаталла кай, эпир кунта халӑха оборонӑна тӑратар...

— Юрӗ, юрӗ... Каятӑп!

Игнатпа Павӑл часрах чупрӗҫ, пӗччен юлнӑ Мурат, сулахай аллипе сылтӑм чавсине тытса, мӗн май килнӗ таран уттине хӑвартлатрӗ. Туратсем питӗнчен ҫапнине те, йӗплӗ йывӑҫсем аллисене чӗрнине те пӑхмарӗ вӑл.

— «Часрах, часрах... отрядран юлсан — пӗтетӗп...»— васкатрӗ вӑл хӑйне.

Пӑшал сассисем ҫывхарнӑҫемӗн ҫывхара пуҫларӗҫ.

— Мӗнле пулчӗ-ха ку? Пирӗн ҫинчен кам пӗлтерме пултарнӑ вӗсене? Ӗнер пӗр фашистне те тартмарӑмӑр, терӗ-ҫке Игнат? Хӑшӗ те пулин тарса ӳкнех ӗнтӗ, шуйттан!— тарӑхупа тулчӗ Муратӑн чӗри.

Унччен те пулмарӗ, унӑн хӑлхине мотор кӗрленӗ сасӑ пырса кӗчӗ. Вӑл ҫӳлелле пӑхрӗ те, хӑй ҫинеллех самолет вӗркӑнса килнине курчӗ. Ку ӗнтӗ тӑшман самолечӗ, Мурат ӑна тӳрех палларӗ: ҫунаттисем айӗнче

хура хӗрессем палӑраççӗ. Пӗркунне Муратсен ялӗ çине те çавӑн пеккисем бомбӑсем пӑрахрӗç...

— Пире шырать ку! — хӑвӑрт тавçӑрса илчӗ те Мурат, часрах тӗмӗ ӑшнелле кӗрсе тӑчӗ. — Ыттисем пытанма ӗлкӗрччӗрех!

Фашист самолечӗ чӑнах та совет партизанӗсене шырана. Çырма тӑрӑх анаталла пӗр-ик километр пек вӗçсе кайсан, вӑл кӑштах кӑна каялла çаврӑнчӗ... Такама асӑрхарӗ пулмалла, умлӑн-хыçлӑн темиçе бомба пӑрахрӗ. Пӗтӗм çӗр, пӗтӗм вӑрман чӗтренсе-çӳçенсе илнӗ пек туйӑнчӗ вӗсем сиксе çурӑлсан...

— Неушлӗ лекрӗ пуль? Неушлӗ пӗтерчӗ-ши? — ниçта кайса кӗрейми пӑлханчӗ Мурат.

Нимӗç çӑханӗ кунпа лӑпланмарӗ, вӑл ку çырмара пӗр чӗрӗ вырӑн та хӑварас мар тесе шут турӗ пулмалла. Мурат тӗмӗ айне, вӑрӑм курӑк ӑшне выртрӗ. Самолет ун çийӗпе тепӗр хут иртсе кайса каллех çаврӑнчӗ те, тата аяларах анса, пур пулемечӗсенчен те пӗр харӑс пеме тапратрӗ.

— Урна йыта! — тесе çӳлелле пӑхрӗ Мурат. — Эх, зенитнӑй пулемет пуласчӗ çакӑнта...

Анчах шухӑшне вӗçне çитерейменӗ вӑл, — сылтӑм пӗççинчен ӑна темле йывӑр япала хыттӑн çапнӑ пек туйӑнчӗ. Часрах ӑна аллипе тытса пӑхрӗ те — ӑнланчӗ:

— Каллех!..

Унӑн шӑлаварӗ витӗр çӑра юн сӑрхӑнса тухрӗ...

— Пӗтерчӗ мана ку шуйттан... — терӗ Мурат.

* * *

...Усӑсӑр çухатусем тӑвас мар тесе, Игнат Дубов хӑйӗн помощникне, Павӑла, хайхи Микула мучи ывӑлне, отрядӑн пысӑк пайне халех çырма тӑрӑх вӑрттӑн çӗре илсе кайма хушрӗ, хӑй вара, пӗр çирӗм çынпа, чакса каякансене хӳтӗлесе тӑма юлас, терӗ.

— Шӑв-шав ытларах тӑвӑр, — терӗ вӑл хайпе пӗрле юлнисене. — Эпир мӗн чухлӗн пулнине пӗлмеççӗ-ха

вёсем, ан тив — пире пит нумаййăн тесе шутлаччăр... Вăрманта фрицсем ахаль те ытла хăюллах пулакан мар. Дистанци — вунă метр, пĕр-пĕрне куçран ан çухатăр!

Партизансем оборонă йышăнса тăшмана тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе выртрĕç. Анчах унччен те пулмасть пуç тăрринче фашист самолечĕ куранчĕ. Çывăхрах темиçе бомбă ӳкрĕ, унтан самолет вăрман çине вĕри тăхлан сапма пуçларĕ.

Питех те кансĕр пулчĕ пĕр хушă...

— Мурат... Вăл ăçта-ши?— çамрăк тусĕ çинчен аса илчĕ пысăк чул хыçĕнче автоматне пăчăртаса выртакан Игнат.— Ыттисемпе пĕрлешме ĕлкĕрчĕ-ши, çук-ши?

Самолет тата тепĕр хут пульăсем тăкса иртсе кайрĕ. Тăшман енчен пăшал-пулемет сассисем çывхарса килме пуçларĕç.

— Ултанлас кусене!— шут турĕ Игнат.— Отряд çулĕ çинчен пăрас!

Çавăнтах цепь тăрăх приказ пачĕ:

— Пурин те çырман сулахай енне каçмалла!

Капла туни питĕ тĕрĕс пулчĕ. Отрядăн пысăк пайĕ, Павăл ертсе пынипе, çырма тăрăх аналла, улахрах вырăнсене шурĕ. Игнат, хăйĕн ушкăнĕпе пачах урăх çĕрелле пăранса, нимĕçсене йăнăш йĕрпе илсе пычĕ. Пĕрре кунталла, тепре унталла пăранчĕ вăл... Пĕр-ик сехет хушши çапла муталаса пынă хыççăн нимĕçсем енчен пеме пăрахрĕç — партизансене хуса çитессе шанмасăр татăлса юлчĕç пулмалла. Тен, хăйсене ытла шалалла илĕртсе кӳртсе, сасартăк çавăрса илесрен хăрарĕç-и. Игнат вара хăй çыннисене пĕр çĕре пухрĕ те каç пуличчен Павăл ертсе кайнă партизансен ушкăнĕпе пĕрлешрĕ.

— Мурат пур-и санпа пĕрле?— ыйтрĕ Игнат нимрен малтан.

— Çук,— терĕ Павăл.

— Епле çук?

— Курман эп ăна... Иксĕмĕр леш çырмара пĕччен тăратса хăварнăранпа та курман.

— Ак япала! А эп ăна санпа пĕрле килнĕ пуль тесе... Çухатрăмăр эппин ачана!

— Тен, килĕ-ха... кĕтĕпĕр.

— Ăçтан килтĕр, эпир ăçталла кайнине те пĕлмест вăл!

— Неушлĕ нимĕçсен аллине лекрĕ пуль? Пĕтет вара пирĕн çамрăк паттăр! Хĕрхенсе тăрас çук вĕсем— партизан, ача пулин те...

— Кама та пулин ăна пулăшма хушмаллаччĕ... Епле ăс çитмерĕ пулать пирĕн!..

...Мурата çухатни пĕтĕм отрядшăн пысăк хуйхă пулчĕ.

Пурте шеллерĕç ăна, тек-текех асăнса ырларĕç, хăй тĕллĕнех çитсе тухасса кĕтрĕç. Анчах каç та пулчĕ, çĕр те иртрĕ, ĕнерхи пекех хĕвел илемлĕн хĕрелсе тухрĕ— Мурат отряда пымарĕ.

— Шырас пулать,— терĕ Игнат татăклăн.— Ытла та шел ачана, отрядшăн питĕ усăллă çын пулса çитнĕччĕ...

Тепĕр ирхине, апат çисенех, Павăл хăйпе пĕрле икĕ çамрăкрах партизана илчĕ те ĕнер килнĕ йĕрпе Мурата шырама тухса кайрĕ. Вĕсем таврăнасса Игнат кунĕпех кĕтрĕ, пăшăрханнипе лара-тăра та пĕлмерĕ.

— Пулма пултараймасть... Пĕтмен вăл, ачи çав тери чĕрĕ, вашават вĕт-ха! — лăплантарма тăрăшрĕ Игнат хăйне хăй. Анчах каç кулĕм таврăннă Павăл та ырă хыпар илсе килеймерĕ.

— Çук... Питĕ тĕплĕн шырарăмăр, вăрманта ухтарман вырăн та хăвармарăмăр — усси пулмарĕ... Ниçта та çук! Йĕп пекех çухалнă!..

Çĕрле отряд малалла хускалса кайрĕ. Пĕрре нимĕçсен куçĕ тĕлне пулнă хыççăн ку тăрăхра тек чăрăнса тăма юраман. Çитменнине тата отрядăн боеприпассем

сахалланчӗҫ, вӗсене фронт ҫывӑхнерех кайса тупма тивнӗ.

Игнатпа Груша ҫул тӑршшӗпех хӑйсен пӗчӗк тусӗ пирки кулянса пычӗҫ. Мурат пуҫӗпех ҫухалассине вӗсен ниепле те ӗненес килмерӗ.

— Ҫук, пулма пултараймасть... Тупӑнатех вӑл!— терӗ Игнат ҫирӗппӗн.

— Тупӑнсан тем пекехчӗ те...

* * *

Мурат чӑнах та ҫухалман.

Талӑк та ҫурӑран, шӑп ҫурҫӗр тӗлӗнче, вӑл Журавлихӑри Акулина Петровнӑсен алӑкне пырса шаккарӗ...

Малтан, вӑрманта, йӗмӗ витӗр юн сӑрхӑнса тухнине курсанах, вӑл, хӑйне ҫак самантра никам та килсе пулӑшас ҫуккине ӑнланса, ҫӗтӗлме пуҫланӑ кӗпе аркине часрах туртса ҫурчӗ те пӗҫҫине хытӑн ҫыхса лартрӗ. Самолет татах пеме тытӑнсан каллех лектерӗ тесе, темле хӗн пулсан та, ку вырӑнтан урӑх ҫӗрелле шуса кайрӗ. Ҫурхи шыв юххипе алтӑннӑ пӗр лупашкана ҫитсе выртрӗ. Сывламан пек пулса, малалла мӗн пулассине кӗтрӗ вӑл. Самолет кунталла текех таврӑнмарӗ, анчах пӑшал сассисем ҫывхарсах пычӗҫ. Вӑтӑр-хӗрӗх утӑмра нимӗҫле кӑшкӑрнисем те илтӗнчӗҫ.

— Кунталлах килеҫҫӗ вӗт... Куҫ тӗлне пулсан — ҫакӑнтах персе е чиксе пӑрахаҫҫӗ!— чӗри ыратса пӑчӑртанса илчӗ Муратӑн. Вӑл лупашка тӑрӑх тӑвалла упаленсе кайса ҫӳллӗ хупахсем айне пытанчӗ.

Чылай выртрӗ вӑл кунта. Малтанах питӗ хытӑ пӑлханчӗ, хӑй патне нимӗҫ салтакӗсем кӗҫ-вӗҫ пырса тухассӑн туйӑнчӗ ӑна, анчах пуҫ тӑрринче мотор кӗрлемерӗ ӗнтӗ, пӑшал сассисем ҫырман сулахай еннелле, инҫетрен инҫете кайса ҫухалчӗҫ, унтан пачах та илтӗнми пулчӗҫ.

— Аҫталла кайрӗҫ-ши пирӗннисем? — шухӑшларӗ

Мурат.— Мĕн пулса иртрĕ-ши унта? Епле тупас халь манăн вĕсене?

Таврара пĕтĕмпех шăпланса çитсен, вăл ерипен кăна лупашкаран тухрĕ. Çавăнтах хăйĕн вăйĕ çуккине, пуçĕ çаврăннине, пĕтĕм шăм-шакĕ вĕриленнине сисрĕ, икĕ суранĕ те темле шалтан туртса ыратрĕç унăн.

— «Мĕн тăвас? Ăçталла каяс?» — çак шухăшсем çĕмĕрчĕç халь унăн пуçне. Таçти ют вăрманта — пĕччен, аманнă, пĕр татăк çăкăрсăр... Часах каç та пулать ĕнтĕ — хĕвел самаях аялалла аннă. Çын килсе пулăшасса шанма хĕн. Чăнах та, партизансем килсе шырама пултараççĕ ĕнтĕ, анчах — те тупаççĕ, те çук? Пĕр вырăнта ларса май килмест, мĕн те пулин шутласа кăларас пулать...

Вăл çырма тĕпне анса шыв ĕçрĕ те, çемçе курăк çине тайăлса, пĕр кана çутă сенкер пĕлĕтелле пăхса выртрĕ. Çакăнта вара ун пуçне килĕшӳллĕ шухăш пырса кĕчĕ пулмалла. Майĕпе ура çине тăчĕ, пĕр турат касса илсе туя турĕ те хĕвеланăç еннелле сĕнкĕлтетрĕ.

Нумай вăхăт иртрĕ. Вăрмантан тухиччен каç та пулчĕ. «Тĕттĕм çĕрте ăçталла каймаллине те пĕлмĕп, çулне-йĕрне те тупаймăп» тесе, Мурат пĕр шĕшкĕ тĕми-айне кĕрсе ларчĕ те хăй сисмесĕрех çывăрса кайрĕ. Хĕвел тухнă чух вăрансан вара майĕпе малалла утрĕ. Аманнă ури халь ĕнерхи пек те мар хытă ыратрĕ унăн. Кашни ярса пусмассерен çав вырăнтан çĕçĕпе чикнĕ пек туйăнать. Çавăнпа та унăн каяс çулĕ питĕ вăраххăн кĕскелсе пычĕ. Ытах йывăрланма пуçласан ларалара канчĕ, темиçе хутчен тĕлĕркелесе те илчĕ, унтан каллех малалла кайрĕ. Яра кун иртрĕ, каллех каç та пулчĕ çапла...

Анчах çапах та юлашкинчен вăл хăй çитме ĕмĕтленнĕ пӳрт алăкĕ умне çитсе шаккарĕ...

— Кам ку? — илтĕнчĕ паллана карчăк сасси.

— Эпĕ,— терĕ Мурат, хал кайса çитнипе алăк хăлăпĕнчен çатăрах тытса.

— Кам вара эс? Паллаймастӑп-ҫке сана?

— Мурат эпӗ, виҫӗмкунхи ача... Сирӗн Ленӑна ҫӗклесе килни.

Алӑк шӑнкӑртах уҫӑлчӗ. Мурат аманнӑ урине аран-аран ҫӗклесе алӑк урлӑ каҫрӗ те сулӑнса кайрӗ.

— Мӗн пулнӑ сана, ачам, чирлерӗн-им? — ик хул айӗнчен тытрӗ ӑна Акулина Петровна.

— Кайран калӑп... Вӑй пӗтрӗ манӑн, — теме ҫеҫ пултарчӗ Мурат.

Акулина Петровна ӑна пӳртелле ҫавӑтса кӗчӗ те хыпаланма тытӑнчӗ. Ҫимелли те, ӗҫме сӗт те сӗнчӗ, анчах Мурат нимӗн те йышӑнмарӗ, суранӗсене лайӑххах ҫыхса яма ҫеҫ ыйтрӗ. Акулина Петровна вара пӗтӗмпех ӑнланчӗ — урӑх ӑна-кӑна ыйтса тӑмарӗ, ахаль те вӑйсӑрланса ҫитнӗ ачана татах калаҫтарса ывӑнтарас темерӗ. Вӑл унӑн суранӗсене майласа ҫыхрӗ, ҫемҫе вырӑн сарса канлӗрех вырттарчӗ те тепӗр пӳлӗме кӗрсе кайрӗ. Кунта вӑл, виҫӗмкун вӑрмантан илсе килнӗренпе пуҫне ҫӗклеймесӗр выртакан Лена ҫумне пырса ларса, Мурат ҫинчен пӗлтерчӗ.

— Епле пулсан та, лайӑххах пӑх эс ӑна, анне, — терӗ Лена, куҫҫулӗсене ҫӑтса, — сыватма тӑрӑш. Ачи пит аван пулмалла, пӗчӗк пуҫӗпех партизана кайнӑ...

— Пӗлетӗп ӗнтӗ, — тарӑннӑн сывласа илчӗ Акулина Петровна.

* * *

Йывӑр чирлесе выртрӗ Мурат. Ури хытӑ ыратнипе вӑл малтанласа вырӑн ҫинчен те анаймарӗ. Апат та ҫиес килмерӗ унӑн. Акулина Петровна ӑна чӑн та хӑйӗн ачине пӑхнӑ пекех пӑхрӗ, йывӑрлансах ҫитнӗ вӑхӑтсенче унӑн пуҫ вӗҫӗнчен те уйрӑлмарӗ, килӗнчи пур-ҫук апат-ҫимӗҫне ҫине тӑрсах сӗнчӗ:

— Ҫи, ачам, ҫи, унсӑрӑн вӑй кӗмест сана... Ху часрах сывалса каллех фашистсемпе ҫапӑҫма каяс тетӗн вӗт! Вӑй пулмасан епле кайӑн-ха эсӗ?

Кун пек чух Мурат хӑйне ирӗксӗрлесех ҫиме тӑ-

рашрĕ: хайшĕн Акулина Петровна питĕ тарашнине кура, вăл ăна амăшĕ выраннех хисеплерĕ, мĕн каланисене яланах итлерĕ.

Çамрăк ўт-пў тўсĕмлĕ, пур суран-çăпана та часах çĕнтерет те каллех малтанхи виçене ларать. Муратăн та çавнашкалах пулчĕ. Аманнăранпа икĕ эрне çитнĕ тĕле вăл выран çинчен тăрса ерипен çўре пуçларĕ. Малтан пўртре кăна уткаларĕ, унтан картишне те тухрĕ, пахчаналла та кайса çўрекен пулчĕ. Унта-кунта çўресе таврăнсан вара, Акулина Петровнăн халь те сывалайман кинĕ выртакан пўлĕме кĕрсе унпа ларчĕ.

Çанталăк вăл кунсенче калама çук аван тăчĕ — кулленех хĕртсе хĕвел пăхрĕ, пахчари тутлă йышши панулмисем пиçсе пычĕç. Мурат вĕсене татса кĕрсе Ленăна хăналарĕ. Тепĕр чух унăн пуçĕ вĕçне ывçи-ывçипе илемлĕ чечексем илсе пырса лартрĕ.

Вĕсем питĕ туслашса кайрĕç. Мурат ĕнтĕ ун çинчен пĕтĕмпех ыйтса пĕлчĕ. Лена çирĕм виçĕ çулта кăна иккен, пĕлтĕр çуркунне Смоленск хулинчи аслă шкултан вĕренсе тухнă та Акулина Петровнăн ывăлĕпе пĕрле кунти шкула ĕçлеме килнĕ. Питĕ лайăх пураннă вĕсем. Ĕçĕсем ăннăçемĕн ăнса пынă,— Лена упăшки художник пулнă, çав тери илемлĕ картинăсем ўкернĕ, вĕсене облаçри выставкăна та янă; Лена хăй тата аспарах шкула — аспирантурăна кайма хатĕрленнĕ... Унăн ĕмĕчĕсене пĕтĕмпех çак хаяр ташмансем килни аркатса тăкнă. Яла гитлеровецсем килсе тухиччен пĕр эрне малтан Лена та упăшкипе пĕрле хăй ирĕкĕпех фронта тухса каймалла пулнă, анчах ку вăхăтра Акулина Петровна хытă чирленĕ пирки килтех юлма тўр килнĕ унăн.

— Питĕ кулянатăп фронта каяйманшăн,— терĕ вăл.

Пĕрре, Мурат хăй çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа парсан, Лена ăна хăй çывăхнерех чĕнсе илчĕ те аллинчен тытса ачашларĕ.

— Юл пирĕн пата. Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе киличчен епле те пулин виççĕмĕр пуранкалапăр...— терĕ вăл.

Мурат кăштах шухăшласа тăчĕ те пуçне пăркаларĕ.

— Юлмастăп...

— Мĕншĕн?— ыйтрĕ Лена.— Пурĕпĕр никам та çук вĕт санăн, ăçта кайма пĕлĕн? Отряду та таçта...

— Çавах пултараймастăп,— терĕ Мурат.— Кама та пулин тупса отрядах каятăп, фашистсене хирĕç çапăçакансем нумай вĕт...

— Вăл апла та-ха, çапах...

— Эп халь хăнăхнă ĕнтĕ, çапăçма пултаратăп!

Кун çинчен урăх калаçу пулмарĕ вара.

Мурат хăй ăшĕнче ку ялтан кайса партизансен пĕр-пĕр отрядне кĕресси çинчен ытларах та ытларах шухăшла пуçларĕ, анчах ку ĕçе тăруках тума пулмарĕ-ха. Пĕр енчен, ку вăхăта унăн ури пĕтĕмпех тӳрленсе çитменччĕ, тепĕр енчен, пĕр-пĕччен тухса кайсан, ним тума та пĕлес çукки тытса тăчĕ ăна.

— Юлташ тупас пулать,— шухăшларĕ вăл хăй ăссĕн.— Анчах та ăçта, кама тупмалла? Кунта эпĕ никама та палламастăп...

Чĕрере вĕресе тăракан ĕмĕте пурнăçа кĕртессине ирĕксĕрех кунран кун вăраха хăварса пыма тиврĕ. Ку вара питех те кичемлетрĕ ăна, тунсăхлатма пуçларĕ. Кичемлĕхне сирсе ярас тесе, вăл, час-часах Акулина Петровнăсен пахчи витĕр тухса, хирсемпе çырма-çатрасем тăрăх çӳрерĕ. Унăн шухăшĕсем яланах кунтан таçта инçете вĕçрĕç, вăл кашни самантра тенĕ пекех хăйсен отрядне, хăйшĕн чи çывăх çынсене — Игната, Грушăна, Павăла аса илчĕ.

— Ăçта-ши халĕ вĕсем? Мĕн тăваççĕ-ши?

Мурат çак ик-виçĕ эрне хушшинче таврара мĕн пулса пынисене нимĕн те пĕлмерĕ. Темшĕн-çке, ку яхăнта нимĕççем те питех курăнмарĕç. Акулина Петровна калана тăрăх, çак кунсенче вĕсен ялне пĕлтĕр колхоз арманне çаратнăшăн Гжатск хулинчи тĕрмене

хупнă Мишка Булдыгин текен этем тавраннă имĕш, нимĕçсем ăна ял пуçлăхĕ туса лартнă, халь пĕтĕм ĕç-сене ун урлă туса пыраççĕ иккен.

Пĕр ирхине Мурат çавнашкал шухăшсемпе пăт-рашса, çĕрулми йăранĕсем хушшипе утса пычĕ-пычĕ те, хăй сисмесĕрех çыран хĕррине çитсе тухрĕ. Аялта, çемçе утă куписем евĕрлĕ хăва йывăççисем хушшипе, пĕр виç-тăватă метр сарлакăш тап-таса шыв юхса выр-тать. Инçетре те мар, çўллĕрех йывăç хўттинче, пĕр шур çўçлĕ ача икĕ вăлтапа пулă тытса ларать.

— Пулă та пур-ши вара кунта? — шухăшларĕ те Мурат, çыранран аялалла анчĕ.

— Хыпать-и? — ыйтрĕ вăл, пулăçă патнерех пырса тăрса.

— Сана мĕн ĕç? — темшĕн пит сиввĕн йышăнчĕ лешĕ.

— Ахаль ара...

— Ахаль пулсан — иртсе кай, ан кансĕрле! — куç шуррисене кăтартрĕ пулăç.— Çўреççĕ сулланса.

Мурата ку кулăшла пек туйăнчĕ.

«Пăх-ха эс ăна, епле паттăр ларать, çывăха та ан пыр ун патне... Эккей!»

— Пит хаяр-çке эс, тусăм,— юри çемçен калаçма тытăнчĕ вăл.

— Хаяр пулăн!

— Мĕншĕн апла?

— Çавăнпах.

— Темскер пулнă-им?

— Пулнă пулсан та, эс пулăшас çук вĕт.

— Кам пĕлет, тен, пулăшăп та?

— Ан сўпĕлтет пустуй, вилнĕ çынна чĕртеймеççĕ.

— Кам вилнĕ вара?

— Атте.

— Фашистсем вĕлернĕ ĕнтĕ ăна. Çапла-и?

Шур çўçлĕ пулăçă тинех пуçне Мурат еннелле ça-вăрса пăхрĕ.

— Ăҫтан пĕлетĕн?

Мурат унпа юнашар кукленсе ларчĕ.

— Халь пурне те вĕсем вĕлереҫҫĕ, ҫаванпа пĕлетĕп. Сан аҫуна мĕн турĕҫ?

— Виҫĕмкун ирхине ирех пирĕн пата виҫҫĕн пырса ухтарчĕҫ. Сан патра хĕҫ-пăшал пур, эсĕ партизансене пулăшатăн, терĕҫ... Тупасси — тупаймарĕҫ, анчах пурĕпĕрех персе пăрахрĕҫ. Унпа пĕрле пирĕнтен икĕ кил урлă пурăнакана печĕҫ тата. Хамăр тĕлтех, ҫырма хĕррине илсе тухса юнашар тăратрĕҫ те...

— Хĕҫ-пăшалĕ ăҫта выртнă вара сирĕн?— куҫран тӳррĕн пăхса ыйтрĕ Мурат. Кун пек тăрук ыйтнипе, пулăҫă пĕр вăхăт ниепле ответ та параймарĕ, куҫĕсене мăчлаттарса илчĕ ҫеҫ.

— Хĕҫ-пăшал-и? Вăл... вăл ҫук пирĕн.

— Вуҫех те ҫук-и?

— Ҫук, курман эп ăна...

Мурат урăх ыйтмарĕ. Вăл ку ачасен хĕҫ-пăшал чăнах та пуррине, анчах ăна тĕплĕн пытарнине туйса илчĕ. Паллах, Мурат хăй пулсан та калас ҫук-ха ĕнтĕ ун ҫинчен.

Вăл пĕр хушă чĕнмерĕ, пулăҫпа юнашар ларса, вăлта хулкки ҫине пăхрĕ.

— Чим-ха,— терĕ пулăҫă кăшт тăхтасан,— нумаях пулмасть эсĕ пирĕн яла пыманччĕ-и?

— Хăҫан вăл? Ăҫта?

— Пĕрре... Ку яла мар, теприне, Рыбья Слободана... Нимĕҫсем пĕтĕм юнне юхтарса илсе вĕлернĕ хĕрачана пытарнă кун. Эс манран ун чухне ҫул ыйтса пĕлтĕн.

— Чăнах-ҫке! — Мурат та палласа илчĕ ăна.— Астăватăп. Калаҫрăмăр ун чух, тĕрĕс.

— Малтанах эс мана таҫта курнă ҫын пек туйăнтăн...

Пулăҫ Мурат ҫине сиввĕн пăхма пăрахрĕ. Вăл унпа халь хапăл тусах калаҫма, ыйтса пĕлме тытăнчĕ.

— Эс мĕн ятлă çав?

— Мурат. Эс ху тата?

— Митька, теççĕ мана. Хăшĕсем Дмитрий Иваныч, теççĕ. Атте Иван ятлăччĕ манăн, колхозра тимĕрçĕре ĕçлетчĕ.

— Аннӳ пур-и?

— Пур та — аттене вĕлерне хыççăн хытă чирлесе ӳкрĕ çав, вырăн çинчех выртать. Шăллăмпа йăмăк апат ыйтаççĕ — килте нимĕн пĕçерсе памалли те çук, нимĕçсемпе полицайсем пĕтĕмпех шăлса тухса кайрĕç.

— Япăх ĕнтĕ вăл... Анчах манăн унтан та япăхрах. Манăн кил те, тăвансем те çук. Тăр-пĕччен эпĕ. Тăлăх-турат...

— Ăçта пурăнатăн вара, апла пулсан?

— Ăçта май килнĕ — çавăнта...

Калаçу çыхăнсах пычĕ. Пĕр çур сехет хушшинче пĕр-пĕрине тахçантанпа палласа пурăннă пекех тус-лашрĕç вĕсем. Калаçнă майăн Митька пĕр вăлтине Мурата тыттарчĕ те — иккĕшĕ юнашар ларсах шăкăлтат-ма тытăнчĕç. Пулли аван кĕчĕ, Митькăн хайпе пĕрле илсе пынă салтак котелокĕ часах çурри ытла тулчĕ. Мурат пĕр вăхăтлăха пур хуйха-суйха та, ку кунсенче пуçран тухман шухăшсене те манчĕ. Вăл Митькăна хайсен колхозĕн кӳллинче пĕлтĕр-виçĕмçул епле чаплă пулăсем хунани çинчен, сĕрекепе пĕрре сĕрсех пăчĕ-пăчĕпе кĕмĕл пек ялтăртатакан шултра карассем туртса кăларни çинчен каласа кăтартрĕ.

Хĕвел кăнтăралла çитме пуçларĕ, ирхине самаях сивĕ пулнă шыв, сывлăш ăшăннă май, лĕпех пулса кайрĕ.

— Атя, Мурат, шыва кĕрер,— сĕнчĕ Митька.

— Кĕмелле те, сурана тем пулмасть-ши?— иккĕленчĕ Мурат.

— Мĕнле сурана?

Мурат чĕлхине çыртсах лартрĕ. Хăйĕн çĕнĕ юлташне чылай япаласем çинчен каласа пачĕ вăл паян, ан-

чах хӑй икӗ хутчен аманни ҫинчен ҫавар та уҫмарӗ: темле пулсан та, партизанра ҫӳренине ҫынна тӳрех пӗлтерме юрамасть вӗт! (Кун ҫинчен ӑна Игнат темиҫе хутчен те асӑрхаттарнӑччӗ.) Анчах халӗ, ҫавартан сӑмах тухса кайсан, ирӗксӗрех каласа пама тӳр килчӗ. Калани те усӑллӑ пулчӗ—Митька ун ҫине пачах урӑхла, чӗререн хисеплесе, ӑшшӑн пӑхма тытӑнчӗ.

Вӗсем кӗпе-йӗмсене хывса хучӗҫ те пилӗк таран шыва кӗрсе тӑчӗҫ. Нумайранпа шыв курман кӑвакал пек — Митька тӳрех ишме, чӑмма, чӑмпӑртатма тапратрӗ. Мурат пӑртак тытӑнса тӑчӗ, халь ҫеҫ ҫӗнӗ ӳтпе витӗне пуҫланӑ суранӗсене сиен кӳресрен хӑрарӗ вӑл. Кашни ҫуллах шыва кӗрсе пурӑннӑскере, ӑна ку тем пекех ыррӑн туйӑнчӗ. Вӑл хӑлхисене хупласа шыва чӑмрӗ, месерле выртса ишенҫи турӗ...

Туссем ҫак ытарма ҫук шывра тата чылай хушӑ чӑмпӑлтатса киленетчӗҫ пулӗ, анчах сывлӑшра сасартӑк моторсем хаяррӑн кӗрлени илтӗнсе кайрӗ. Муратпа Митька иккӗшӗ те пӗр харӑсах ҫӳлелле тинкерчӗҫ. Унтан Митька ҫыраналла сиксе тухрӗ.

— Ава, ава!.. Кур-ха, кунталла килеҫҫӗ! — аллипе ҫывӑхри вӑрман еннелле кӑтартрӗ вӑл.

— Куратӑп,— терӗ Мурат, хӑй те васкасах шывран тухса.

Вӑл хӗвеланӑҫ енчен виҫӗ самолет ҫав тери хытӑ вӗҫсе килнине курчӗ: пӗри — чылай малта, иккӗшӗ — ун хыҫҫӑн. Вӗсем кун пек пыни ӑна кӑштах тӗлӗнтерчӗ.

— Чим-ха, епле ку?

Куҫӗсене хӗвел ҫутинчен ывҫисемпе картласа, вӑл тата тинкererех пӑхрӗ. Ҫавӑнтах вара ӑнланса илчӗ:

— Икӗ фашист пирӗн летчика хӑвалаҫҫӗ! — пӑлханса хыттӑн кӑшкӑрса ячӗ вӑл: — Пӑх лайӑхрах! Малти — пирӗн, «хурчка», кайрисем — «мессершмиттсем»... Куратӑн-и, пачах расна вӗсем?

Йӑнӑшман иккен партизан куҫӗ! Мурат хӑй сӑмах-



не каласа пĕтеричченех кайри самолетĕнчен пĕри пулемечĕсенчен темиçе черет каларса ячĕ. Унтан тепри те çаван пекех турĕ... Малта пыраканни вара, кутăн-пуçăн çаврăнкаласа, питĕ хăвăрт ӳкме тапратрĕ.

Куна курсан, Муратпа Митькăн çамкисем çине шăпăрах сив тар тапса тухрĕ.

— Пĕтрĕ вĕт!..

— Персе антарчĕç, шуйттансем!..

— Ма хуть парашютпа сикмерĕ-ши хăй! — ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр тăчĕç вĕсем...

Анчах та ку пирĕн летчикăн чеелĕхĕ çеç пулнă-мĕн. Çĕр çумне çитесси пĕр çĕр — çĕр аллă метр çеç юлсан, «хурчăка» пĕррех месерле çаврăнса илчĕ те, тӳп-тӳрĕ кашта тăрăх хăпарнă пек, çӳлелле хăпарса кайрĕ. Ачасем «ах!» тесе те илеймерĕç — совет летчикĕ, хăйĕн машинне пĕр нимĕçĕ хыçне илсе çитерсе, пулеметран вăрăм черет каларса ячĕ. Çав самантрах фашист самолетне вут хыпса илчĕ, вăл, темĕн пысăкăш вутпуççи пек çунса, çĕрелле чашкăрса анчĕ.

— Аха-а, лекрĕ-и!

— Хăй вилĕмне тупрĕ, çăхан!..

— Халех тепри персе анать акă, курăн!

— Тарать, тарать!

— Хуса çитет ăна вăл...

Ачасем самолетсем çинчен куçĕсене илмесĕр сăнаса тăнă вăхăтра сывлăшра калама та çук хăватлă кĕрешӳ пуçланса кайрĕ. Самолетсем пĕрре çӳлтен парахнă чул пек аялалла чăмса анаççĕ, тепре çурта пек

тӳррӗн вӗҫсе ҫӳлелле хӑпараҫҫӗ, кӑшт майлӑрах самант пулсанах пӗр-пӗрин ҫинелле пулеметсенчен переҫҫӗ... Ҫакна курса тӑрса, Муратпа Митька вӑлтисем ҫинчен те, хӑйсем ҫаппа-ҫарамас тӑнине те манса кайрӗҫ.

— Хӑшӗ ҫӗнтерет-ши ӗнтӗ? Ах, пирӗнни ҫиеле тухтӑрах!..



Чылай вӑхӑт пычӗ пӗлӗтри ҫапӑҫу. Юлашки самантсенче совет самолечӗ пеме те чарӑнчӗ, халӗ вӑл пӗрехмай нимӗҫ самолечӗн хӳри патне ҫавӑрӑнса тухма тӑрӑшрӗ.

— Эх, патронсем пӗтрӗҫ пулмалла унӑн! — кулянса илчӗ Мурат. — Ҫапӑҫура патрон пӗтнинчен усалли нимӗн те ҫук ӗнтӗ...

— Чим! — аллинчен ҫавӑрса тытрӗ ӑна Митька. — Хӑвалать! Хӑвалать! Ҫитет!

Чӑнах та, питӗ маттуррӑн чӑмса ҫавӑрӑнкаласа илнӗ хыҫҫӑн совет «хурчӑки» нимӗҫ самолечӗн хыҫне тухрӗ те ӑна хӑвалама тытӑнчӗ. Вӗсен хушши ҫав тери хӑвӑрт кӗскелсе пычӗ...

Ҫисӗм пек хӑвӑрт вӗҫекен совет машини хӑйӗн пропеллерӗпе тӑшман хӳрине пырса касрӗ...

«Мессершмитт» тӑруках малалла ыткӑннӑ пек пулчӗ, унтан пӗрре пӗр еннел-

ле, тепре тепĕр еннелле чалăшса илчĕ те ним чарусăр, кутăн-пуçăн çавăрăнкаласа ӳкме тытăнчĕ.

— Пулчĕ!

— Ку та пĕтрĕ! — çăмăллăн сывласа илчĕç хăйар çинче тăракан çамрăк сăнавçăсем. Анчах вĕсен савăнăçне кĕтмен хурлăх пĕтерсе хучĕ: нимĕçе хӳринчен пырса çапсассăн, совет самолечĕ хăй те ванчĕ пулмалла, вăл çилпе вĕçсе каян турпас пек унталла та кунталла ывтăнма пуçларĕ. Темиçе самантран ун çумĕнчен пĕчĕк кăна хура пăнчă уйрăлса, аялалла чăмрĕ.

— Летчикĕ сикрĕ! — терĕ Мурат.

— Парашютсăрах-и? — тĕлĕнсе, хăраса ыйтрĕ Митька.

— Каярахпа уçать пуль...

— Атя-ха, çӳле кайса пăхар! Тен — уçалмасть?

— Атя!

Вĕсем хăвăрт кăна тумланса сăрта хăпарса çитиччен çывăхри вăрман çийĕнче, хĕвел çутинче, сенкер пурçăн парашют тăрри йăлтăртатма тытăннă-мĕн. Икĕ нимĕçе персе ӳкернĕ совет летчикĕ ерипен кăна çĕрелле анса пычĕ.

— Шăп Хура Вар пуçне анчĕ! — терĕ Митька.

— Инçе-и вăл?

— Пĕр çухрăм çура пулĕ. Ма ыйтан?

— Кайса пăхас пулать... Пирĕн летчик вĕт вăл, пирĕншĕн çапăçнă. Кам пĕлет, тен, аманнă, тен, ăна пулăшу кирлĕ?

— А эпир мĕн тума пултаратпăр вара? — иккĕленерех тăчĕ Митька, тусĕ тăруках кун пек шут тытнинчен тĕлĕнсе.

— Эпир-и? Тем те тума пултаратпăр,— хĕрӳленсех ĕнентерме пикенчĕ Мурат.— Суранне çыхса яма та, хăйне никам курман çĕре пытарма та, çул кăтартса яма та... Эс военнăй çын марри тӳрех курăнать çав! Пымастăн пулсан — эп пĕчченех каятăп!

Митькан каясси те килчĕ, тытанса тăма сăлтав та пулчĕ.

— Эп киле кайса шăллăмпа йăмăка апат пĕçерсе çитересшĕнччĕ... Каларăм вĕт — анне чирлĕ.

— Ăна та тума ĕлкĕретпĕр. Атя часрах!

Туссем тек тытăнса тăмарĕç, çырма хĕррипе тăсăлакан сукмак тăрăх Хура Вар патнелле чупрĕç.

Пĕр çухрăм пек кайса уçăрах вырăна тухсан, вĕсем çырма леш енчи уй тӳпинче кăвайт хунă пек тĕтĕм йăсăрланнине асăрхарĕç.

— Ава, хайхи çунса пĕтме те пуçланă! — хаваслансах тĕллесе кăтартрĕ ун çине Мурат. Тата 500—600 метртан вĕсем çĕрулми ани çинче тепĕр нимĕç самолечĕн çĕмрĕкĕсене курчĕç. Халь çеç сывлăшра вирхĕнсе çӳренĕ машинăран кукăр-макăр тимĕр купи кăна пулса тăнă.

— Ку та ĕнсине хуçнă!

— Çав кирлĕ те ăна...

Çапах та, вĕсене халь тăшманăн ванчăк самолечĕсем мар, парашютпа аннă хамăр летчик интереслентерчĕ. Вĕсем часрах ăна çитсе курасшăн пулчĕç.

— Тĕрĕссипе, хăш тĕлерех анчĕ-ха вăл? — ыйтрĕ Мурат хăй хыççăн утса пыракан Митькăран, вăрман хĕррине çите пуçласан.

— Ав çаванта... Калатăп вĕт — хам куçпах куртăм тесе,— аллипе тепĕр еннелле сулчĕ Митька.

Виç-тăват минутран вĕсем Митька кăтартнă çĕре çитрĕç. Анчах таврара никам та куранмарĕ.

— Ăçта шырăпăр? — Мурат куçĕнчен пăхрĕ Митька.

— Çак çырман тепĕр енĕпе каяр-ха. Асту вара, лайăхрах сăнаса пыр...

— Юрĕ.

Иккĕшĕ те, çак таврашрах аннă совет летчикне еплерле пулсан та тупса пулăшас кăмăлпа, ăна çине тăрсах шырама тытăнчĕç.

* * *

...Сергей Малинин летчик, паян ташман тылне чылай инçете кайса, разведкăра çӳрерĕ. Вăл хăйсен командованийĕ валли пит те кирлĕ сведенисем пухнă та часрах каялла килме васкарĕ. Приказа ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн унăн кăмăлĕ çав тери çĕкленчĕ, çавăнпа та вăл, самолет моторĕ пĕр тикĕссĕн ĕçлесе пынă май, текех хăйĕн юратнă юррине юрласа пычĕ:

— А он, мятежный, ищет бури,
Как будто в бурях есть покой...

Сасартăк ăна икĕ нимĕç истребителĕ тапăнчĕç. Ахалĕн хăтăлма май çуккине кура, Малинин вĕсемпе çапăçма шут турĕ.

Кун хыççăн мĕн пулнине вулакан пĕлет ĕнтĕ...

Иккĕмĕш нимĕçĕ ăна ик уринчен те суранланă,— Малинин педальсем çине те аран-аран пусрĕ. Çапах та, пĕтĕм вăйне пухса, вăл нимĕçе хӳререн пропеллерпа пырса çапса ӳкерчĕ, унтан вара хăйĕн те самолетне пăрахсах парашютпа сикмелле пулчĕ. Çăра туратсем хушшипе шуса анса кайнă чух унăн парашючĕ йывăç тăрринчен çыхланса ларчĕ. Темиçе хутчен те вăл хăйĕн кĕлеткин йывăрăшĕпе туртăнса аяларах анма тăрăшрĕ, анчах та усси пулмарĕ. Çав хушăрах урисенчи юнттисем ăшне юн тулса пыни сисĕнчĕ.

Питĕ кансĕр пулчĕ ăна, çапах та çухалса каймарĕ вăл. Хăрах аллипе парашют лямкинчен тытăнса тăрса, тепринпе комбинезон кĕсйинчен кинжал туртса кăларчĕ те васкасах хăйне чăрмантаракан стропасене татма пуçларĕ...

Парашют тыткăнĕнчен хăтăлнă хыççăн вăл суранĕсене çыхма ларчĕ. Асапланкаласа хăрах унттине хыврĕ — ун ăшĕнчен юн юхса анчĕ, теприне хывма тăчĕ — хывăймарĕ, кунчине çĕçĕпе çурса кăлармалла пулчĕ.

— Начар ман ĕçсем,— шухăшларĕ вăл.— Инçех каяс çук эпĕ ку урасемпе...

Сулахай урине пуля шăпах пакăлчак айĕнчен шăтарса тухнă иккен. Хускатмалла та мар ыратрĕ вăл. Çапах та, хытă туртса çыхнă хыççăн юн юхма чарăнчĕ. Тепĕр урине çыхма тытăнсан, Малинин хăйĕнчен инçетре те мар такам хуллентереххĕн шăхăрнине илтрĕ. Вăл çав самантрах пистолетне туртса кăларчĕ те, кирлĕ пулсанах пеме хатĕрленсе, ик енче икĕ çын каласнине сывламасăр итле пуçларĕ...

— Ăçта эсĕ? — ыйтрĕ пĕри.

— Кунта...— сас пачĕ тепри.

— Мĕн те пулин куртăн-и?

— Çук. Эс тата?

— Эп те...

— Мĕн?

— Курман.

— Малалла каятпăр-и?

— Атя, ут...

Çакăн хыççăн пĕр хуша сасăсем илтĕнмерĕç, калаçаканнисем малалла иртсе кайрĕç пулмалла...

— Камсем пулчĕç-ши кусем? Хамăраннисем-ши?— иккĕленсе илчĕ летчик, анчах çавăнтах хăйне хăй лăплантарчĕ:— Хамăраннисем пулмалла, вырăсла калаçрĕç... Анчах мĕн шыраççĕ-ха вĕсем кунта? Мана-ши?

Пĕр пилĕк минут та иртмерĕ пулĕ — вăрманта каллех паçăрхи пек шăхăрчĕç. Унтан пĕри теприне чĕнчĕ:

— Кил кунта...

— Тем куртăн-и?

— Кил, тетĕп!

— Халех!

Малинин часрах урине çыхса пĕтерме пикенчĕ.

— Хам патах килсе тухсан, енчен те тăшмансем пулсан — пурĕпĕр чĕррĕн тыттармастăп!—Летчик хăй умне хунă пистолетне каллех алла тытрĕ.— Хама вĕлериччен пĕр пиллĕкĕшне пĕтеретĕпех!

Лăпсăркка çамрăк йывăç тураттисене сиркелесе, ун умне Муратпа Митька тухса тăчĕç.

— Здравствуйте, летчик юлташ,— аллине карттус ӑмси ҫумне тытса илчӗ Мурат.

— Здравствуйте... шӳт тумастӑр пулсан,— терӗ Малинин, хӑй умӗнчи ача чунтанах ҫар ҫынни евӗрлӗ пулма тӑрӑшнинчен кӑштах кулса.

— Сывлӑхсем мӗнле?

— Аван-ха. Хӑвӑр епле?

— Эпир те аван-ха...

— Пионерсем-и эсир?

— Эп пионер, куна — пӗлместӗп...— Мурат пуҫӗпе Митька ҫинелле сулса кӑтартрӗ.— Ҫапах та, аван юлташ вӑл, шанма пулать. Фрицсене ман пекех кураймасть, вӗсем ун ашшӗне персе вӗлернӗ.

— Санӑн хӑвӑн аҫу ӑҫта тата?

— Вӑл тахҫанах вилнӗ. Аннене нумай пулмасть фашистсем...

— Ну, паллӑ ӗнтӗ...— Малинин ачасене тата тепӗр хут тинкеререх пӑхса илчӗ те: «Кусемпе ӗҫ тума пулать, лайӑхрах калаҫтарса ыйтса пӗлес-ха...» — тесе шухӑшларӗ.

— Мӗн ура ҫинче тӑратӑр? Ларӑр,— терӗ вӑл, хӑй таврашӗнче ҫемҫе курӑк ҫине кӑтартса.— Тӗл пулнӑ майӗпе, паллашар ӗнтӗ пӗр-пӗринпе!

Ачасем ларчӗҫ.

— Хӑш ялтан-ха эсир? — ыйта пуҫларӗ Малинин.

Ответ параканни каллех Мурат пулчӗ.

— Митькӑсен ялӗ кунта юнашарах, манӑн — инҫе, пӗр вӑтӑр-хӗрӗх ҫухрӑма яхӑн. Пӗлместӗп, тен, фашистсем ӑна хальччен ҫунтарса та янӑ-и...

— Ку таврара нимӗҫсем нумай-и?

— Пур ҫав, шакалсем пекех ҫӳреҫҫӗ.

— Сирӗн ялта та-и?—Малинин Митька ҫине пӑхрӗ.

— Мурат каларӗ вӗт — аттене вӗлерчӗҫ, тесе...

— Так, так...

Летчик пирус кӑларса чӗртрӗ те пӗр вӑхӑт ним чӗнмесӗр шухӑша кайса ларчӗ. Ачасен те калаҫма

самах тупӑнмарӗ, вӗсем халь, ун ҫинчен пӗлесшӗн ҫунса, куҫ илмесӗр пӑхса ларчӗҫ.

— Эсир кунта эп парашютпа аннине курнипе килтӗр-и? — чылайран тин ыйтрӗ Малинин.

— Сана курнипе ҫав,— пуҫӗпе сулса илчӗ Мурат.

— Куракансем татах пулчӗҫ-ши?

— Пӗлместӗп. Тен, пулнӑ та-и... Кантӑрла вӗт, ҫутӑ.

— Эсир хӑвӑр шут тунипе килнӗ эппин, такам хушнипе мар?

Мурата ку ыйту кӑштах тӗлӗнтерчӗ, ӑна хӑйне шанман пек туйӑнчӗ.

— Никама та курман эпир...— Митькӑпа шыва кӗнӗ чух эс парашютпа аннине асӑрхарӑмӑр та...— ӑнлантарма тытӑнчӗ вӑл,— тен, пулӑшу кирлӗ пуль, терӗмӗр. Тӗрӗссипе каласан, летчик юлташ, эпӗ вӗт...

— Мӗн?

— Партизан эпӗ!

— Ну-у?—тӑруках ӗненесшӗн пулмарӗ Малинин.— Хӑҫан пулнӑ вара эс партизанра, ӑҫта?

Мурат темиҫе сӑмахпа хӑй ҫинчен каласа пачӗ. Унӑн хуть те епле пулсан та летчика килӗшес, ун кӑмӑлне каяс, хӑйне чӑн-чӑн боец вырӑнне шутлаттарас килчӗ. Сывалма пуҫланӑранпах ним тума пӗлмесӗр тунсӑхласа пурӑнакanskер, вӑл халь, ҫак летчикпа пӗрлешсе, ҫӗнӗрен ӗҫе тытӑнма май пуласса шанчӗ...

— Питӗ аван ку,— терӗ летчик, унӑн калавне итлесе пӗтерсен.— Эппин эсӗ те, ман манерлех, ирӗксӗр посадка тунӑ?

Вӑл кӑмӑллӑн кулса илчӗ.

— Ҫапла пулса тухать ҫав,— кӑштах именчӗ Мурат,— икӗ эрне ытла ӗнтӗ ним усӑсӑр ҫапкаланса ҫӳретӗп.

Летчик пирус тӗпне аяккалла ывӑтрӗ те таранӑн сывласа ячӗ.

— Ну, вӑл нимех те мар-ха, тусӑм, уншӑн ан

кӳрен эс. Пирӗн халь малашне мӗн тăвасси ҫинчен шухăшламалла...

— Тӗрӗс,— килӗшрӗ Мурат. Хăйӗн чӗри вара ҫав тери саванăҫлăн тапма тытăнчӗ: капла каланипе летчик хăех унпа пӗр шутлă пулса ӗҫлеме чӗннӗ вӗт. Нумайранпа шырана юлташ хăех тупăнчӗ эппин!

— Чăн малтан, ачасем, сирӗн мана ăҫта та пулин, шанчăклăрах ҫӗре вырнаҫтарас пулать. Манăн урасем иккӗшӗ те аманнă, пӗччен эпӗ ниҫта та кайма пултараймастăп. Хăвăрах ăнланатăр пуль — манăн халь никама те курăнма юрамасть... Ҫавăн пек вырăн тупма пултаратăр-и? Сывалса ура ҫине тăриччен пурăнма...

Мурат Митька ҫине пăхса илчӗ.

— Мӗнле шутлатăн эс?

— Темле-ҫке...

— Кӗтсе тăмалли ҫук, халех мӗн те пулин тăвас пулать! Шухăшла-ха лайăхрах, эс кунти ҫын вӗт. Хамăр тăрăхра пулсан, эпӗ пӗр минут та тытăнса тăрас ҫукчӗ.

— Шырăр-ха, шырăр, ачасем,— тепӗр хут ыйтрӗ Малинин. Унăн суранӗсем халь ăна вăйсăрлатма пуҫларӗҫ, вăл хăйӗн шăм-шакӗ вӗриленме тытăннине туйрӗ, ҫавăнпа та вăл часрах ăҫта та пулин вырнаҫасшăн пулчӗ...

Муратпа Митька темӗн тӗрлӗ те шухăшласа пăхрӗҫ—ниепле те кирлӗ пек вырăн тупăнмарӗ. Пур ҫӗрте те хăрушă пек, ют ҫынсем курма пултарас пек туйăнчӗ: ял хыҫӗнчи ҫырмара юхăнса ларакан кирпӗч сарайӗнче те, вăрманти кивӗ утарта та, пахчари мунчара та...

— Хамăр патра, пӳрт маччи ҫинче епле-ши?—терӗ Митька юлашкинчен.— Унта пирӗн тем мурӗ те ҫакса тултарнă, пытанма пит аван...

— Чăнах та! — хапăлласах йышăнчӗ ку шухăша Мурат.— Унтан лайăх вырăн та кирлӗ мар. Вӗсен ашшӗне нимӗҫсем персе пăрахнă, текех партизан шырама

пырас çук вĕсем патне. Лайăхрах маскировкă тăвас та... Килĕшетĕн-и? — ыйтрĕ летчикран.

— Эсир аван тетĕр те — килĕшес пулать,— терĕ лешĕ.

— Хăçан каятпăр вара, халех-и? — ыйтрĕ Митька.

— Çук, каççăр каймастпăр,— терĕ летчик.— Пирĕн никам куçĕ тĕлне те пулма юрамасть, ăна эсир хăвăрах лайăх ăнланатăр...

— А эпĕ çапла шухăшлатăп,— куçĕсене хĕсерех пăхрĕ Мурат.— Эпир халлĕхе кунта юлăпăр, Митька хайсен килне кайтăр. Ăна унта амăшĕ те кĕтет, тата вăл выран хатĕрлетĕр те — яла пырса кĕме хăрушши-хăруш марри çинчен пĕлсе килтĕр. Кайран вара, тĕттĕмленсен, виççĕмĕр пĕрле кайăпăр... Çиткелĕпĕр епле те пулсан...

Çапла, Митькăна яла çитсен мĕн-мĕн тумаллине вĕрентрĕç те, вăл килне кайрĕ, Малининпа Мурат юлчĕç.

— Çакна туртса антарасчĕ,— терĕ Малинин, халь те йывăç тураттисенчен çакăнса тăракан парашют çине кăтартса.— Ытла та паллă йĕр вăл — пĕр-пĕр тăшман ăна курсанах çав таврара ухтарма тытăнма пултараççĕ...

Мурат уринчи аттине хывса пăрахрĕ, унтан летчикран çĕçĕ илсе, йывăç тăрринелле йăпăр-япăр улăхса кайрĕ. Темиçе минутран пурçăн парашют шыв пекех çĕрелле юхса анчĕ. Мурат ăна аяккарах илсе кайса пĕр самаях тарăн лупашкана пăрахрĕ, унтан, пачах курăнмалла мар тăвас тесе, çиелтен тăпра сапрĕ, хăрăк туратсем хурса тултарчĕ.

Вăл ĕнтĕ тахçантанпах фронтри хыпарсене пĕлесшĕн çунатчĕ те — халь шăпах май килчĕ. Малинин ăна Хĕрлĕ Çарăн юлашки вăхăтри пит те паттăр ĕçĕсем, хаяр çапăçусем çинчен каласа пачĕ... Вĕсене итлесе ларнă май, хайхи каç пулса килни те сисĕнмерĕ.

— Çапла, тусăм, пирĕн ĕççем аванлансах пыраççĕ,— терĕ ăна Малинин юлашкинчен,— эпир халь кул-

лен-кунах фашистсен салтакӗсемпе офицерӗсене пинӗ-пинӗпе пӗтеретпӗр, вӗсен техникине те, хӗҫ-пӑшалӗсене те аркататпӑр... Ан кулян, хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва ҫак тискерсенчен тасатса ҫитерес кунсем ҫитеҫҫех вӗсем. Куран ака — тӑшмана эпир малашне хальхи пек те мар вайлӑн ҫапса аркатма пуҫлӑпӑр!

Мурата Микулай мучин сӑмахӗсем аса килчӗҫ:

— Телейлӗ пурнӑҫ таврӑнатех-ха пирӗн пата,— тенӗччӗ вӑл вилес умӗн. Эх, ма ҫук-ши вӑл халь ҫакӑнта! Епле савӑннӑ пулӗччӗ вӑл ҫак летчик пӗлтернӗ хыпарсене илтсен!

...Митька хӗвел аннӑ вӑхӑтра таврӑнса пычӗ.

— Ну, мӗнле унта? — ыйтрӗ унран Мурат, Митька хӑйӗнпе юнашар ҫемҫе курӑк ҫине ларсанах.

— Пурте йӗркеллӗ...

— «Кашкӑрсем» тӗл пулмарӗҫ-и?

— Ҫук.

— Выран хатӗрлерӗн-и?

— Хатӗрлерӗм.

— Аннӳ пӗлет-и?

— Шарламарӑм... Вӑл халь те самайланман та, пӑшӑрхантарас темерӗм. Кирлех пулсан, кайран та калама пулать, вӑл хирӗҫех пулас ҫук. Эсир мӗнле пурӑнатӑр кунта? Выҫса аптрарӑр пуль? Ме ака...

Митька хӗвӗнчен тӑвар сапнӑ пӗр чӗл хура ҫӑкӑрпа чӑмӑрла пӗҫернӗ икӗ сив паранкӑ кӑларса Мурата тыттарчӗ.

— Ҫикеле ҫакна. Килте урӑх нимӗн те ҫук та...

— Юрӗ-ҫке, ку та тем пекех,— тав турӗ Мурат.

— Ҫи, ҫи... Вай кӗтӗр.

Малинин кӑшт кӑна тӗлӗрсе кайнӑччӗ, анчах Митька пырсанах вӑранчӗ. Ыйӑннипе тата суранӗсем турткипе унӑн куҫӗсем хӗрелнӗ, сӑнӗ шуранкаланнӑ. Митька ӑна та ҫӑкӑр сӗнчӗ, анчах вӑл ҫиме килӗшмерӗ. Ун выранне хай кӗсйинчен шоколад кӑларса ачасене пӗрер татӑк хуҫса пачӗ.

— Пысӑк тав сире, ачасем... Нихҫан та манмӑп эсир мана ыр тунине!

—Мӗн тавӗ пултӑр,— терӗ ӑна хирӗҫ Мурат кӑшт именерех,— пирӗн выранта пулсан, кашни совет ачиех ҫапла тумалла... Эпир вӗт такама мар — хамӑр ҫынна пулӑшатпӑр!

Майӗпе тӗттӗмленчӗ; янкӑр уяр тӳпере ҫут ҫӑлтӑрсем ахах пӗрчисем пек йӑлтӑртатма тытӑнчӗҫ, инҫетри ялсем хыҫӗнчен вут ҫинче хӗртнӗ ҫурла еверлӗ уйӑх хӗрелсе тухрӗ...

Туссем тӑчӗҫ те ялалла утрӗҫ. Хӑрах ури ҫине пачах пусайман летчик ачасен хулпуҫҫийӗсем ҫине тӗрӗнсе пычӗ. Яла ҫитиччен вӗсем темиҫе хут та канчӗҫ, мӗншӗн тесен летчик халтан кая пуҫларӗ.

Митькӑсен анкартине пырса кӗрсен, вӗсем юлашки хут чаранса тӑчӗҫ. Митька тепӗр хут хайсен килне чупса кайса тӗрӗслесе килчӗ.

— Кӗме юрать, таврара шӑпах, пирӗннисем пурте ҫывӑраҫҫӗ,— тесе пӗлтерчӗ вӑл.

Вӗсем вара пахчари улмуҫҫисен хӳттинелле кӗрсе ҫухалчӗҫ.

* * *

Акулина Петровнӑпа Лена патне Мурат ирхине тин кайрӗ. Пӳрте кӗнӗ-кӗменех вӗсем ӑна иккӗшӗ те тӗпчеме тытӑнчӗҫ:

— Ӑҫта ҫухалса ҫӳрерӗн капла, ачам?

— Мӗншӗн ҫавӑн пек ним пӗлтермесӗр каятӑн?

— Питӗ шутсӑр хӑрарӑмӑр...

— Кам та пулин нимӗҫсен аллине тытса пачӗ пуль тесе, чун юлмарӗ вӗт саншӑн!

Анчах Мурат хӗрарӑмсене темиҫе сӑмахпах лӑплантарчӗ: эпӗ хӑрушӑ ҫӗре ниҫта та кайман, хам валли юлташлӑх пӗр ача тупрӑм та — унпа пӗрле пулӑ тытрӑмӑр, кайран вӗсем патне кайса ҫывӑртӑмӑр, терӗ. Кӑшт тӑхтасан — тӳссе тӑраймарӗ (улталама аван мар

терĕ пулмалла çав), совет летчикĕпе пулнă историе каласа пачĕ...

— Куншăн мухтатăп вара сана! — тăруках пуçне çĕклесе, кăмăллăн пăхса илчĕ ун çине Лена.— Ăçтан кун пек маттур пулма пĕлнĕ эс!

— Ачи — герой ĕнтĕ, калаçмалли те çук,— ун шухăшне çирĕплетрĕ Акулина Петровна та, апат хатĕрлесе.

Часах вĕсем виççĕшĕ те сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç. Ĕнертенпех тăрлавлăн çимен Мурат каçса кайсах çиме тытăнчĕ, хĕрарăмсене пăч-пач кăна сăмах хушкаларĕ. Çитменнине, вăл каллех юнашар яла, Митькăсем патне кайма васкарĕ, мĕншĕн тесен унăн халь пĕрмаях хăйĕн çĕнĕ тусĕсемпе пулас килчĕ...

Сасартăк урам алăкне шаккани илтĕнчĕ.

— Кам килет-ши ĕнтĕ? — терĕ те Акулина Петровна тулалла пăхрĕ. Унтан тăрук чĕречерен аяккалла пăрăнчĕ:

— Пĕтрĕмĕр! Мишка Булдыгин! Нимĕçсен тумĕпе, пăшалпа...— Унăн сăнĕ самантрах кăвакарса кайрĕ, тути хĕррисем чĕтреме тытăнчĕç.— Ырра мар ку! Ой, ырра мар! Пытан, Мурат, часрах пытан!

— Мĕншĕн? — ăнланаймарĕ Мурат.— Нимĕç мар вĕт вăл? Вырăс çынни?

— Нимĕç мар та — нимĕçсен йытти çав. Астумастăн-и, каланăччĕ вĕт сана... Нимĕçсем лартнă староста, бандит, хăйне «бургомистр» текенни! Пытан часрах, сисме пултарать...

— Ăçта пытанас? — çурăмран вĕри шывпа сапнă пекех сиксе тăчĕ Мурат.

Хапхаран татах шаккарĕç.

— Ман тӳшек айне! — терĕ Лена.— Халь тин ниçта кайма та çук ĕнтĕ... Тухса уç, анне!

Акулина Петровна çенĕхе тухса Булдыгинпа пĕрле каялла кĕриччен — Лена Мурата тӳшек айне туса, çиелтен утиял витсе хучĕ. Мурат вара ним хускалма-

сăр, сывлăшне пусарса, пÿртри çынсем калаçнине пĕр сăмах сиктермесĕр итлесе выртрĕ...

— Каçарăр чĕнмесĕр килнĕшĕн! — илтрĕ Мурат ĕçкĕпе çĕтсе ларнă арçын сассине.

— Килех, килех, иртсе лар,— терĕ сĕтел хушшинчи Лена.— Тен, пĕрер стакан чей ĕçĕн? Сахăр çук та...

— Тав-ха, уншăн килмен,— илтĕнчĕ Булдыгин отвечĕ.

— Тем ĕçпеччĕ? — ыйтрĕ Акулина Петровна.

— Налог пирки. Нимĕçсен командованийĕ хушнă тăрăх, пирĕн ялăн çак икĕ кун хушшинче вĕсем валли апат-çимĕç пухса памалла.— Булдыгин ÿсĕрсе илчĕ.— Хамăра хушнă чухлĕ пухса памасан, пире питĕ вăйлă лекме пултарать. Никама та хĕрхенсе тăма хушман...

— Çапла пуль ĕнтĕ, çаплах пуль,— терĕ Акулина Петровна.— Эсĕ вара... вĕсен агенчĕ пекки пулатăн-и-ха?

— Çук, эпĕ фюрер хушнипе лартнă бургомистр.

— Ăнланаймастăп-çке ку хăрушă сăмахсене...

— А санăн вĕсене ăнланма та кирлĕ мар. В общем эпĕ — власть. Çавна пĕлни те çитет пока сире.

— Пурнăç ăнчĕ эппин санăн? Пуçлăх пултăн? — чĕтресе илчĕ Лена сасси.— Ыр курмалла кăна... Аван ку, питĕ аван...

— Советсем вăхăтĕнчи мар ĕнтĕ! — хăйĕнчен тăрăхланине те сисеймерĕ Булдыгин.— Анчах вăл тарам-ха. Эпĕ тунă разнарядкă тăрăх, сирĕн 5 кило çу, 20 литр сĕт, 100 çăмарта, 10 кило какай памалла. Ыран ирпе çаксем пурте ман патра пулмасан...— Булдыгин каллех ÿсĕрсе илчĕ.— Мĕн пулассине калама пĕлейместĕп. В общем — ырах пулмасть.

— Пирĕн нимĕн те çук-çке, иртнинче пĕтĕмпех тиесе тухса кайрĕç,— терĕ ку цифрăсенчен хăраса ÿкнĕ Акулина Петровна.— Ăçтан тупса парас, шухăшла-ха..,

— Пĕлместĕп,— шăл витĕр сурчĕ Булдыгин.—Пырса памасан — кайран хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр вара.

— Персе парахсан та, ҫакса вӗлерсен те тупаймастпăр...

— Ну, ку вăл сирӗн ӗҫ! — Булдыгин тăчӗ те аллинчи винтовкине ҫӗре кӗмсӗрт! тутарса таратрӗ.— Малтанах астутаратăп — каҫару пулмасть. Сире — пушшех ҫамăллăх памӗҫ, сирӗн ывăл хӗрлисем патӗнче вӗт. Ун ҫинчен нимӗҫсен командованийӗ тӗп-тӗрӗс пӗлсе тăрать. В общем — вӗсен приказӗсене вăхăтра туса пымасан — хăвăр хапхаранах сулкаланса тăма та тӳр килӗ...

— Тура пул...— Акулина Петровна, тархасласа, ун патнелле утма пикеннӗччӗ, анчах Лена тăруках хӗп-хӗрлӗ пулса кайса сиксе тăчӗ:

— Анне, намăса пӗл!

— Ҫапла! — каллех шăл витӗр сурчӗ Булдыгин. Хăвăра сиен ан кӳрӗр. Паянах пырса парсан тата авантарах пулать. Хăваршăн.

Урăх нимӗн те каламарӗ вăл, тимӗрленӗ аттисемпе кӗмсӗртеттерсе тухса кайрӗ.

— Пӗтрӗмӗр, тинех пӗтрӗмӗр, пуҫа ҫиетех ку!..— хыпăнса ӳкрӗ Акулина Петровна.— Мӗн тăвас пулать ӗнтӗ, ăҫта кайса кӗрес, епле майпа ҫăлăнас?

Лена чӗнмесӗр ларчӗ, вăл та ӗнтӗ ку ҫӗнӗ хурлăхран епле те пулсан ҫăлăнмалли май шырарӗ пулмалла. Пăчланса ҫитнӗ Мурат тата кăшт выртрӗ те хуллен кăна сас пачӗ:

— Мана тухма юрать-и халь?

— Ах, чăнах-ҫке! — васкаса пырса уҫрӗ ăна Лена.— Эс пӗтӗмпех илтсе выртрăн-и, Мурат?

— Илтрӗм... Сиксе тухса пăвма тытăнас патнех ҫитрӗм ҫав.

— Э-эй, ун пек юрать-и, ачам? Вара эс хăвна та, пире те халех пӗтереттӗн вӗт!

— Халь те ҫавăнпа кăна тӳссе выртрăм.

— Мӗн тăвăпăр ӗнтӗ? Мӗн шутласа тупăпăр?

Виҫҫӗн виҫӗ тӗрлӗ шухăшларӗҫ вӗсем, анчах чуна

лăплантармалли ответ пурĕпĕр тупăнмарĕ, пуç çине капланса килнĕ хăрушлăха епле майпа сирсе ярассине пĕлмерĕç вĕсем.

Кăнтăрла çитеспе Мурат анкартисем хыçĕпе Митькăсен ялне кайрĕ. Картишĕнче вут-шанкă татса ларакан Митькăпа пĕр-ик сăмах хушса илсен, вăл мачча çине йăпшăнса хăпарчĕ.

Летчик çыварать иккен. Мурат пĕр кивĕ ещĕк çине ларчĕ те шухăша кайрĕ. Çак икĕ уйăх хушшинче миçемĕш хут ĕнтĕ унăн пуçне йывăр шухăшсем çĕмĕрчĕç!.. Чăнах та, ку таранччен вăл яланах тĕрĕс çул тупса пыначчĕ, ума темле йывăрлăх тухса тăрсан та, ăна çĕннĕччĕ. Анчах паянхи ыйтăва ниепле те татассăн туйăнмарĕ.

Епле çăлас-ха Акулина Петровнăпа Ленăна? Паллах, вĕсем леш ирсĕр сутăнчăк Булдыгина нимĕн те тупса параймаççĕ, вара вăл хăй каланине тума та пултарать... Уншăн вĕсен вилĕмĕ нимĕне те тăмасть. Тытĕ те — çактарĕ... Тепĕр тесен, Акулина Петровнăпа Ленăна çеç мар, ялти ытти çынсене те çав хурлăхах кĕтет, вĕсем те ним айăпсăрах пĕтме пултараççĕ... Çук, мĕн те пулин шухăшласа тупасах пулать! Тен — летчик пулăшĕ?

Урам тăрăх автомобиль кĕрлесе иртсе кайрĕ. Мурат ваштах сиксе тăрса кăвакарчăн шатăкĕ витĕр пăхрĕ те урампа машинă хыççăн машинă пынине курчĕ. Пурне те туп-туллиех тиенĕ, анчах вĕсем çинче çар хатĕрĕсем мар, кил таврашĕнчи япаласем выртнă. Тӳрех пăхсан — пĕр-пĕр колхоз тақта урăх çĕре куçса каять темелле: арчасем, тимĕр койкăсем, сепараторсем, çĕвĕ çĕлемелли машинсем, ача вăлашкисем, тĕкĕрсем...

Машинăсен шавĕпе Малинин та вăранчĕ.

— Мĕн пулнă унта? — ыйтрĕ вăл Муратран.

— Нимĕçсем пирĕн пурлăха турттараççĕ...

— А-а... Паллă ĕнтĕ. Çаратуçă-çар тесе вĕсене

ахальтен каламан çав. Кашни утăмрах çаратаççĕ, ниме те тиркесе тăмаççĕ.

Çаратнă пурлăха тиенĕ машинăсем иртсе кайсан, урамăн анат вĕçĕнче выльăх кĕтĕвĕ курăнчĕ. Тусанпа витĕннĕ нимĕç салтакĕсем сахалтан та 300—400 пуç выльăх хăваласа пыраççĕ-мĕн. Хăйсем ним майсăр кăшкăрашаççĕ, чупкалаççĕ, унталла-кунталла пăрана-кан выльăхсене патаксемпе çите-çите çапаççĕ... Муратăн чĕри калама çук пăчăртанса илчĕ. Кам пĕлет, тен, вĕсен колхозĕнчи выльăхсем те пур çак кĕтӳре? Фашист харампырĕсем валли пăхса ӳстернĕ-ши вара çак ăратлă сурăх-сыснасене? Пăрахасчĕ пĕр-икĕ бомбă — тискер кайăксене тăрантариччен луччă ахаль пĕтчĕр!

Малинин çĕкленчĕ те пӳрт çамки патнелле упаленсе пычĕ.

— Ну, тусăм, ку ахальтен мар!— терĕ вăл, хăмасем хушшипе урамалла пăхса.— Чăн калатăп сана — куншăн савăнмалла кăна пирĕн.

Мурат ун çине ăнланмасăртарах пăхса илчĕ.

— Вĕсем пирĕн пурлăха илсе кайнăшăн савăнмалла-и?

— Уншăн мар, ăнлан эсĕ... Ку вĕт фашистсем каялла чакма тытăннине, тарма тапратнине пĕлтерет! Хăйсен пилĕкĕсене çапса хуçиччен çаратнă пурлăха тартса ĕлкĕресшĕн. Вилĕмĕ çывхарса килнине сиснĕ вăл анчăксем — акă мĕн, тусăмçăм!..

* *

Унăн сăмахĕсем тĕрĕсех пулнă.

Малининпа Мурат çак инçетри ют ялта, пĕчĕк пӳрт маччи çинче, нимĕçсем тарма тытăннине сăнаса ларнă вăхăтра, вĕсенчен 40—50 километртра питĕ вăйлă çапăçу пынă. Ĕмĕрхи вăрмансен хӳттинчен гитлеровецсен позицийĕсем çинелле йывăр орудисем таттисĕр персе тăнă, пĕлĕтре пĕр чарăнмасăр хĕрлĕ çăлтăрлă истребительсемпе бомбардировщиксем кĕрленĕ,

анла хирсем тăрах хăрампа, тусанпа витĕннĕ танксем вилĕм сапса ыткăнна. Нимĕçсем туна укрепленисем, блиндажсем сывлăшалла сирпĕннĕ, унтан та кунтан каркаласа пĕтернĕ йĕплĕ пралук картисем çĕр ăшнелле таптанса кĕнĕ. Пĕтĕм сывлăш хăватлă взрывсен сассипе чĕтренсе тăнă...

Юлашки темиçе кун хушшинче пирĕн полксем хамăрăн нумай ялсене, саласене, станцăсене каялла тытса илнĕ, нумай пин совет çыннисене фашистсен тыткăнĕнчен хăтарнă. Вĕсем пĕр чарăнмасăр Е. хули патнелле çывхарса пынă. Хĕрлĕ Çар çите-çите çапнипе нимĕçсен ку вырăнта хăйсен машинисене, хĕç-пăшалне, вилнĕ-аманнă салтакĕсене пăрахса хăварсах чакма тивнĕ...

Анчах каялла чакмалли çулĕ такăр пулман вĕсен. Ытти чух та тăшмана пĕр канăç паман партизансем халь пушшех хăюланнă. Ăçта çитнĕ унта ислетнĕ вĕсем Гитлер хурахĕсене. Вĕсен йышĕ те кунран кунах пысăкланнă.

Игнат Дубовăн отрячĕ те ку хушăрах ӳссе кайрĕ. Мурата çухатнăранпа вăл хăйĕн отрядне нумай çĕре илсе çитерчĕ, нимĕçсене сахал мар сиен кӳчĕ, темиçе хутчен питех те пысăк налетсем туса, çĕнĕ хĕç-пăшал туянчĕ. Вара çав ăнăçлă налетсем хыççăн кашнинчех унăн отрядне 30—40 çын хутшăнчĕ. Отряд çар уставĕсем хушнă пек йĕркеленчĕ,— унăн ротăсем, взводсем пулчĕç, вĕсен пуçĕнче — çар ĕçне пĕлекен хăюллă командирсем тăчĕç. Нумай пулмасть, пĕр юханшыв хĕрринче, вăл тепĕр пысăк отрядпа тĕл пулчĕ. Ку отряд фронт çывăхĕнче çӳренĕ иккен, çавăнпа та фронтри ĕçсене питĕ лайăх пĕлсе тăнă. Вĕсен тата радиостанци те лайăх ĕçленĕ — Мускавпа çыхăнма пултарнă. Игнатпа нумай вăхăт калаçса пурин çинчен те тĕплĕн ыйтса пĕлнĕ хыççăн ку отрядăн командирĕ— вата коммунист — ăна малашнехи ĕçре питех те кирлĕ пулмалли канашсем пачĕ, унтан Игнатăн отрядне

хисепе илесси çинчен Мускава пĕлтерчĕ. Ик кунтан вара Мускавран самолет вĕçсе килчĕ те отряд валли радистпа радиостанци антарса хăварчĕ.

— Ну, эпир те ĕнтĕ текех вăрманти упасем пек пурăнмастпăр,— пĕтĕм тĕнчере мĕн пулса пынине пĕлетпĕр!— саванса кайрĕç кун пирки партизансем.

Кӳршĕри отряд командирĕ Игната çак вырăнсенчен Е хули таврашнелле кайма сĕнчĕ:

— Нимĕçсем çак кунсенче чакма тытăнасси паллах, вĕсен çулне картласа тарма парас пулмасть, салтакĕсене пĕтернисĕр пуçне, вĕсен обозĕсене тата-тата илес пулать...

Игнат унпа килĕшрĕ те икĕ кун хушшинче хăй отрядне аллă çухрăм таран каялла илсе кайрĕ, кунта вара тăшман тылĕсене тата хытăрах çĕмĕрме хатĕрленчĕ.

Пĕр ирхине вăл вăрман хĕрринчи чи çӳллĕ йывăç тăрне улăхса йĕри-тавралла биноклыпе пăхса сăнама тытăнчĕ. Чылай вăхăт пăхрĕ, кашни çырманах, кашни хир лаптăкнех тĕрĕслерĕ. Çĕре ансан вара хăйне аялта кĕтсе тăнă Павăлпа Груша умне ларчĕ те, карттă çине чылайччен пăхса, хуллен кăна пĕлтерчĕ:

— Эпир каллех пĕркунхи вырăнсене çитсе тухрăмăр. Хамăр çине облава тунă вăрман та инçе мар кунтан. Сасартăк çак тăрăхра Мурат тупăнсан, э? Вăт, лайăх пулĕччĕ!

— Çук, шанмастăп эп, çавăн чухне бомбăсем айне пулса вилнех пуль вăл,— пуçĕпе сулчĕ Груша.— Сыва пулнă пулсан — татахчĕ, анчах вăл унччепех аманнăччĕ вĕт. Вăхăчĕ те чылай иртрĕ унтанпа...

— Пĕлме çук,— терĕ Павăл.— Кăчухне апла та, капла та пулма пултарать. Тен, тупăнĕ те...

* * *

Каçалла сулăнсан летчик Муратпа Митькăна хăй патне чĕнсе илчĕ те çапла вĕрентме тытăнчĕ.

— Эпир кунта ҫакӑн пек ларса пуранниничен ним усси те пулас ҫук, тусӑмсем... Урамалла ытларах тухса ҫӳрӗр-ха, нимӗҫсем ӑҫталла кайнине пӗлме тӑрӑшӑр. Малашне ку пире питӗ кирлӗ пулма пултарать. Ял ҫыннисем мӗн калаҫаççӗ унта — ӑна та хӑлхана чикӗр. Тата... акӑ мӗн, ачасем.— Малинин сӑмахне татрӗ те хӑйӗн ҫамрӑк тусӗсене куҫӗсенчен пӑха-пӑха илчӗ.

— Митя, ку пуринчен ытла санран килет...— терӗ летчик малалла.— Мана пӗр шанчӑкла ҫын кирлӗ. Вӑл чӑн-чӑн совет ҫынни пултӑр. Аҫупа ҫывӑх, туслӑ пулнӑ ҫынсене аса ил-ха... Тӑрӑшса ӗҫленӗ колхозниксене...— Митькана шухӑшлама пулӑшса пычӗ вӑл.— Пур-и ҫавӑн пек ҫынсем?

— Пур,— терӗ Митька.

— Кам?

— Хамӑртан темиҫе кил урлӑ ҫеç, Иван Степанч. Унӑн ывӑлне нимӗҫсем пирӗн аттепе пӗрле персе пӑрахрӗҫ.

— Тен, татах тупӑпӑр?

— Анат кукӑрти Антон Сырков аттепе пит туслӑччӗ. Сапожник вӑл, хӑрах уралласкер.

— Урине мӗн пулнӑ?

— Ӑна вӑл ӗлӗкхи вӑрҫӑрах ҫухатнӑ, тет.

— Ку та аван,— терӗ летчик.—Татах та пур-и тен, шыраса пӑх-ха...

— Эс пӗр ҫын анчах терӗн вӗт?— тӗлӗнерех пӑхрӗ ун ҫине Митька.

— Ытларах пулни кансӗрлемест. Туссем мӗн тери нумайтарах, ҫӗр ҫинче пурӑнма ҫав тери авантарах... Ну, урӑх ҫук пулсан, малтанлӑха ку та ҫитӗ эппин.

— Мӗн тӑвас тетӗн вӗсемпе?

— Вӑл халех паллӑ мар-ха, анчах эсир кӗҫӗр, тӗттӗмленсен, вӗсенчен хӑшне те пулин ман пата чӗнсе килӗр. Малтан унпа эп калаҫса пӑхӑп, унтан вара пурӗ пӗрле шут тӑвӑпӑр...

— Юрĕ.

Тепĕр çур сехет пек вăхăт иртсен ачасем, мачча çинчен анса, урама тухрĕç.

— Пăх-ха, пăх!— Мурат çаннинчен картах туртрĕ Митька, тепĕр аллипе хĕвелтухăçнелле кăтартса.— Пушар!.. Епле вăйлă çунать...

— Çунтараççĕ... Эх, шуйттансем!— ассăн сывласа ячĕ Мурат.— Хайсене пĕрерĕн-пĕрерĕн тытса çав вутта пăрахасчĕ!..

Вĕсенчен виç-тăват çухрăмри яла темиçе çĕртен вут хыпса илнĕ иккен, шăрăхпа типсе çитнĕ кил-çуртсем çав тери вăйлăн, краççын сапнă пекех ялкăшса çунаççĕ. Чарусăр çулăм пĕр çурт хыççăн теприне çавăрса илнĕ, пĕлĕтелле йывăр хура тĕтĕм йăсăрланса хăпарнă...

— Мĕнрен тухнă-ши?— терĕ Митька, пушар еннелле шиклĕн пăхса.

— Айван та иккен эсĕ!— кăмăлсăр пулчĕ кун пирки Мурат.—Паллах — нимĕçсем хыптарнă... Çав ялти çынсем тарахтарнă ĕнтĕ вĕсене! Ну, атя.

Вĕсем тăвалла, нимĕçсен машинисемпе обозĕсем иртсе кайнă еннелле утрĕç. Урамра никам та курăнмарĕ. Çич-сакăр килтен иртсен, пĕр пралук пуçĕнче, вĕсем нимĕçсен икĕ машини тăнине курчĕç. Темскер пăсăлнă пулмалла — вĕсем патĕнче темиçе салтак шавласа тăрмашаççĕ. Хыçалтан каллех мотор сассисем илтĕнчĕç — анатран ула-чăла сăрласа пĕтернĕ автобус евĕрлĕ машинăсем хăпарни курăнчĕ.

— Атя хăвăртрах, хире тухар!— терĕ Мурат.— Курса юлас пулать ăçталла кайнине...

Анчах нумай та каймарĕç вĕсем — хайхи машинăсем (Мурат самантрах шутласа тухрĕ вĕсене — çичĕ машинă) ялваррине çитсе чарăнчĕç. Вĕсен ăшĕнчен пĕр харăсах темиçе çын сиксе тухрĕç, хăшĕ-пĕрисем пралук вĕçĕнче тăракан машинăсем патне чупса кайрĕç. Пĕр пўрт умĕнчи чие пахчи çумне лăпчăннă Му-

ратпа Митька вӗсем ҫине куҫ илмесӗр пăхса тăчӗҫ...

Гитлеровецсем, тем ҫинчен хыттăн шавласа, аллисемпе сулкалашаҫҫӗ, унта-кунта тӗллесе кăтартаҫҫӗ.

— Темскер шыраҫҫӗ,— Митькăна айăкӗнчен тӗртсе илчӗ Мурат.

Тата кăшт шавласа тăнă хыҫҫăн нимӗҫсем машинисене каллех хускатрӗҫ те тӳрех ял Совет ҫурчӗ умне пырса тăратрӗҫ. Муратпа Митька та вӗсенчен юлмарӗҫ: пӗлес пулать-ҫке вӗсем мӗн тунине...

Пӗри — асли пулмалла ӗнтӗ — хыттăн кăшкăрса команда пачӗ. Вара салтаксем ял Совет ҫуртне темле пысăк ещӗксем, тимӗр арчасем, хут ҫыххисем ҫӗклесе кӗртме тытăнчӗҫ.

— Аха-а, кунта вырнаҫаҫҫӗ иккен-ха!— темшӗн саванса илчӗ Мурат.—Лере ытлашши вӗри пулнă пулмалла, аяккарах тарса килчӗҫ!

— Хире кайăпăр-и?— ыйтрӗ Митька.

— Кирлӗ мар ӗнтӗ,— пуҫӗпе сулчӗ Мурат.

— Эппин, Иван Степанча кайса чӗнер?

— Атя...

Ачасем каялла кайрӗҫ. Паҫăр икӗ грузовик чарăнса тăнă пралукран вӗсене хирӗҫ хура качака ҫаватнă ҫӗтӗк-ҫатăк тумтирлӗ, пуҫне пичӗ-куҫӗ курăнмиех чӗркесе лартнă курпунтарах хӗрарăм тухрӗ.

— Журавлихăна тӳррӗн каймалли ҫул ăҫта кунта, ачасем?— тесе ыйтрӗ вăл, вӗсен ҫывăхнерех пырса.

— Ак ҫапла, тӳрех...— кăтартрӗ Митька.

— Инҫе-и кунтан?

— Ҫук, пӗр ҫухрăм ҫура ҫеҫ.

Мурата сасартăк ку хӗрарăм сасси паллана пек туйăнчӗ. Тахҫан, таҫта — анчах та илтнех вăл ку сасса...

— Мӗн тума каятăн эс унта? Кам патне?— юриех, хӗрарăма татах калаҫтарас шутпа ыйтрӗ Мурат.

— Качакана така патне илсе каятăп,—терӗ лăпкă саслă хӗрарăм.— Унта ăратлă лайăх така пур, теҫҫӗ...

Мурат пӗтӗм ҫан-ҫурӑмӗпе ҫӳҫенсе илчӗ, ун чӗри кӑрт-кӑрт-кӑрт турӗ. Вӑл пӗр-икӗ утӑм малалла ярса пусрӗ те хӗрарӑма куҫӗсенчен пӑхрӗ.

— Груша!— чутах кӑшкӑрса яратчӗ Мурат.

— Ан шарла,— терӗ хӗрарӑм, хӑрах куҫне кӑшт ҫеҫ хӗссе илсе.— Эс мана палламастӑн, эп те сана пӗлместӗп. Эпир пӗр-пӗрине нихҫан та курман... Ӑнлантӑн-и?

— Чухлатӑп... Анчах манӑн санпа калаҫас, ыйтса пӗлес килет. Мӗн тӑвӑпӑр?

— Ан васка. Майлаштарӑпӑр. Ҫынсен куҫӗнчен пӑранас пулать малтан...

Ҫак кӗске калаҫу питӗ хӑвӑрт тата вӗсем хӑйсем кӑна илтмелле пулса иртрӗ. Митька вӗсем ҫине ним ӑнланмасӑр пӑхса тӑчӗ. Мурат та ӑна тӑруках нимӗн те калаймарӗ: пӗрре Груша ҫине, тепре урама тӑрӑх унталла та кунталла пӑхса илчӗ. Урамра ку чухне кун пек темиҫен пухӑнса тӑма юраманнине пӗлсе, часрах аллипе сулчӗ.

— Митька, эс халех Иван Степанч патне кай-ха эппин. Калаҫса пӑх, анчах асту, асӑрханарах...

— Эс пымастӑн-и-мӗн?

— Эп ҫак хӗрарӑма ҫул кӑтартса ярам-ха... Халех таврӑнатӑп, нумай тӑмастӑп!

Мурат мӗн пирки сасартӑк кун пек шут тунине Митька ниепле те тавҫӑрса илеймерӗ. Питӗ тӗлӗнмелле пек туйӑнчӗ ӑна ку. Анчах ним те шарламарӗ, кайма хушнӑ ҫӗрелле утрӗ.

Вӑл кайсанах Мурат Грушӑна васкатма тытӑнчӗ:

— Атя часрах ҫав пралукалла, унта пӗр-пӗр пахчана кӗрӗпӗр. Яла халь ҫеҫ нимӗҫсем килсе тулчӗҫ. Эп малтан каям, эс ман хыҫҫӑн пыр... Асту, куҫран ан ҫухат.

— Юрать, шӑллӑм, юрать...

Ҫавӑнтах вӑл, урам урлӑ каҫса, хӗсӗк пралукалла кӗрсе кайрӗ. Чӗри ҫав тери савӑнҫлӑн тапрӗ унӑн:

вăл каллех хăйĕн чи хаклă, чи çывăх тусĕсене тупрĕ вĕт!.. Кĕтмен çĕртен!..

Темиçе минутран Мурат пĕр пĕчĕк кăна çатан арпалăха пăрăнса кĕчĕ. Часах Груша та çитрĕ.

— Ку качакине мĕн тума сĕтĕрсе çӳретĕн эс? — нимрен малтан ыйтрĕ Мурат.

Груша кулса ячĕ.

— Юлташлăх! Пĕччен çӳреме кичем вĕт атту...

— Çук, эс ăннипе...

— Ай ăнланмастăн?

— Çук.

— Ара, эпĕ партизан маррине кăтартма! Боец хăçан качака çавăтса çӳренине курнă эс? Капла мана кам мурĕ разведчик тесе шутлама пултартăр? Игнат тупса каларчĕ ăна...

— А-а, маскировка иккен!

Вĕсем арпалăха шаларах кĕрсе пĕлтĕрхи улăм купи çумне ларчĕç те, васкаса, анчах питĕ шăппăн, çывăхрах тăракан çын та илтмелле мар калаçма, пĕрпĕринчен ыйтса пĕлме тытăнчĕç.

...Ыйтса пĕлмеллисем çав тери нумай пулнă-çке вĕсен, çав тери! Хăçантанпа курман пулать те! Сăмаха Мурат пуçласа ярасшăнччĕ, вăл ĕнтĕ Грушăна: «Ну, каласа пар часрах, мĕнле унта сирĕн...— теме те ĕлкĕрчĕ, анчах Груша ăна вăйлă аллипе хулпуççинчен ыталаса илсе хăй çумнелле пăчăртарĕ те, ун куçĕсенчен пăхса:

— Чим-ха, шуйттан çури, малтан эс хăв çинчен каласа пар! — терĕ.— Мĕн чухлĕ кулянтăмăр пуль эпир сан пирки, мĕн чухлĕ хуйхăртăмăр пуль, мур ачи! — Мурата вăл хăй çумнелле тата хытăрах пăчăртарĕ.— Эс çухалнă хыççăн эпир сана темиçе кун шырарăмăр. Отряд командирĕ ятарласа çынсем ярса пĕтĕм таврари вăрмана ухтарттарчĕ, анчах эсĕ йĕп пекех пултăн... Ну, пирĕн текех вăл вырăнта тăма юраман та, сансăрах кайрăмăр вара. Анчах сана асăн-

ман кун та пулман пирĕн. Пурте хĕрхенетчĕç сана, Дубовпа иксĕмĕр вара — пуринчен те ытларах... Кала ĕнтĕ халь, ăçта çӳрерĕн эсĕ, мĕнле пурăнтăн, кунта епле килсе лекрĕн? Мĕн таватăн ку ялта, ăçта выртса тăркалатăн, кам тăрантарать сана?

Мурат вара ăна хай леш вăрманти бомбежка вăхăтĕнче аманса тăр-пĕччен выртса юлнă хыççăн хăйĕн мĕн-мĕн тӳсме, мĕн курма, мĕнлерех çынсемпе паллашма тӳр килни çинчен пĕтĕмпех, тĕпĕ-йĕрĕпех каласа кăтартрĕ. Груша арçын ача çинчен куç илмесĕр итлесе ларчĕ, хушшăн-хушшăн, ăна хулпуççирен лăпкаса, ыйтусем пачĕ. Мурат аманнă хыççăн Журавлихăри Акулина Петровнăпа Лена патне аран-аран çитсе ӳкни çинчен, пĕррехинче кĕтмен çĕртен полицай пырса кĕрсен хăйне епле пытарни, вĕсен калаçуне тӳшек айĕнчен итлесе выртни çинчен каласа панă чух Груша сăн-пичĕ тĕксĕмленчĕ, хаярланчĕ, анчах та Мурат хăйсем Митькăпа иккĕшĕ аманнă летчика шыраса тупса ăна шанчăклă çĕре пытарни çинчен каласан, хĕр сăнĕ çуталсах, хавасланса кайрĕ.

— Ну, маттур! Тупата, маттур! — терĕ те вăл, ачана тепре пăчăртаса, ăна çамкинчен чуптуса илчĕ.— Партизанах çав эсĕ!

Хăйне çаван пек мухтанипе Мурат именсе кайрĕ.

— Мĕн маттурĕ унта...— терĕ вăл.— Хурлăха лекнĕ хамăр çынна епле пулăшмастăн-ха? Эпир вăл летчика пытарман пулсан, ăна леш Булдыгин йышши пĕр-пĕр полицай тăшмансен аллине тытса пама пултарнă вĕт...

— Пур-ха çав ун пек сутăнчăк йытăсем,— каллех улшăнчĕ Груша сăнĕ,— çĕлен-калтасене пĕтернĕ пекех пĕтерес пулать вĕсене!

Халь вара Мурат ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Пуринчен малтан вăл отряд командирĕ, хăй чунтан юратнă Игнат Дубов çинчен ыйтрĕ.

— Чиперех-и вăл? Аманман-и?

— Çук, аманман, сывă,— терĕ Груша. Унтан çемçен, кăмăллăн кулса илчĕ: — Тĕлĕнетĕп эпĕ вăл çынран — те хурçăран тунă ăна? Пĕркунне, эпир пĕр станцие тапăнса бензин, боеприпас склачĕсене сиктернĕ чух, вăйлă çапăçу пулчĕ. Хамăраннисене темиçе çын çухатрăмăр, чылайăшĕ аманчĕç. Çав çапăçура пульăсем пирĕн командирăн сăран карттусне икĕ çĕртен шăтарнă, курткă аркине, çаннине çурса кайнă, анчах ӳтне пĕр нимĕн те лекмен! Кайран, базăна таврăнсан, унăн «аманнă» тумтирне кашниех тытса пăхса тĕлĕнтĕмĕр...

— Телейлĕ вăл,— терĕ Мурат.

— Хăй те çаплах калать, эпĕ телейлĕ çăлтăр айĕнче çуралнă, çавăнпа вилĕм манран хăй хăраса аяккалла тарать, тет...

— Ыттисем мĕнле пурăнаççĕ? Микулай мучи ывăлĕ мĕнле? — часрах пĕлесшĕн çунса Груша куçĕнчен пăхрĕ Мурат.

— Эс Павăл çинчен ыйтатăн-и?

— Çавăн çинчен çав.

— Пурăнать. Йĕркеллех. Питĕ лайăх çапăçать. Анчах пĕррехинче чутах лекмен-мĕн...— Груша ассăн сывласа илчĕ.— Тĕрĕссипе — лекнĕ, тес пулать.

— Фрицсен аллине-и? Епле майпа çăлăннă вара?

— Майне тупнă. Тепри, хавшакраххи пулсан, пуçĕпех пĕтетчĕ ĕнтĕ, анчах ку, харсăрскер, аптраман.

— Вĕçерĕнсе тарнă-и? Каласа пар-ха эппин, питĕ пĕлес килет...

— Ĕçĕ çапла пулчĕ вăл. Пĕр вунă-вуникĕ кун каялла эпир ăна питĕ лăпăс-лапăс тумлантартăмăр та нимĕçсен гарнизонĕ тăракан Большая Липовка ялне кăларса ятăмăр.

— Ытлашши чăрсăрланса ан çӳре,— вĕрентрĕ ăна Игнат Петрович,— енчен те гарнизона пырса кĕме май пулмасан, каялла таврăнса кил, уншăн сана никам та ятлас çук, терĕ.

Павăл хăюлăнах тухса кайрĕ, аллине нимĕнле хĕç-пăшал та паманшăн çеç кăмăлсăр пулчĕ. Анчах ун пек инçетри разведкăна хĕç-пăшалпа кайма юраманнине пĕлетĕн вĕт-ха эсĕ. Çул çинче вунă хут та чарса ухтарма пултараççĕ, çумра пăшал тавраш тупăнсан — пĕтрĕн вара!

Пирĕн шутпа, Павăл пĕр талăкран каялла çаврăнса çитмеллеччĕ. Анчах вăл килмерĕ. Пурте пăшăрханма пуçларăмăр. Хăшĕ-пĕрисем ăна шырама каясси çинчен те калаçкаларĕç ĕнтĕ. Анчах Дубов пире лăплантарма тăрăшрĕ.

— Килет вăл, таврăнать... Ун пеккисем лекмеççĕ. Курăр акă, тĕрĕс-тĕкелех килсе çитет!

Çапла каларĕ пулин те, хăй те питĕ пăлханчĕ, эпир ăна аванах туйрăмăр: лара-тăра та пĕлмест, çăвартан пăрахмасăр чĕлĕм туртать...

Тата тепĕр талăк иртрĕ, Павăл çаплах таврăнмарĕ.

— Ну, лекнех ку...— терĕмĕр вара.— Унăн йĕрĕпе каяс, кам аллине çакланнине те пулин пĕлес пулать,— тетпĕр.

Анчах тепĕр ирхине, тул çутăлнă чух, пирĕн дозорнăйсем хир тăрăх вăрман еннелле пĕр юланут тÿрĕрен тÿрĕ ыткăнса килнине асăрханă. Çывăхарах килсен, вăл нимĕç тумĕпе пулнине уйăрса илнĕ.

— Кам вăра ку? Нимĕç-и, е юри çавăн пек тумланнă партизан? — иккĕленнĕ дозорнăйсем.— Персе ÿкермелле-и куна е тивмелле мар?

Пĕчченскер, хăйсене вăл нимех те тума пултарайман, çавăнпа та пемен вĕсем çав юланута. Анчах шаппăр кăпăк пулнă лаша вăрман хĕррине çитсен, тĕмĕсем хушшинчен пиллĕкĕн-улттăн сиксе тухса, унăн çулне пÿлнĕ.

— Хальт! Стой! Кам эсĕ? Ăçта каятăн? — пурте пĕр харăс тĕлленĕ ун çинелле.

— Эсир мĕн, шуйттансем, хамăр çынсене паллами пултăр-и? — хаяррăн кăшкăрса янă юланутçă.



Ку çын — пирĕн Павăл пулнă...

Базăна çитесси çитнĕ вăл, анчах лаши çинчен çĕре анма тăрсанах тăсăлса ÿкнĕ. Унăн пĕр урине пуля çĕмĕрсе тухнă иккен, ури çине пусайман та вăл, хăй те пĕтĕмпех халран кайнă.

Эпир ăна часрах чăтлăхри хÿшше кайса хутăмăр та суранне çуса тасатса çыхрăмăр. Сăмах майĕн каласан, пирĕн отрядра халь тухтăр та пур — çавăнпа та аптрамастпăр...

— Ăçтан тупрăр тухтăрне? — ыйтрĕ Мурат.

— Тепĕр отрядран илсе пычĕç. Унта вĕсем иккĕн пулнă, пирĕн — ху пĕлен — пĕрре те çукчĕ. Ку енчен аван халь. Эмелĕсем те çителĕклĕ.

— Кайран, кайран мĕн пулчĕ? Павăлĕ сывалать-и? Тата разведкăра мĕн пулнă унпа, кам учĕпе тарса пынă вăл? — пурне те часрах пĕлесшĕн пулчĕ Мурат.

— Павăлĕ туяпа çÿрекен пулчĕ ĕнтĕ. Сывалать,

кăшт уксахлать кăна. Пульли шăмминех çĕмĕреймен. Нимĕç аттисен кунчи питĕ хулăн вĕт, çав пулăшнă пулмалла пăртак. Разведкинче вара вăл темĕн те пĕр курса пĕтнĕ. Ун çинчен вăл пире çав кунах, ыратни кăшт лăпланнă пек пулсанах каласа кăтартрĕ... Большая Липовкăна вăл йĕркеллех çитнĕ. Ял тавра, сăрт хĕррипе, унти çынсем — паллах, нимĕçсем хĕсĕрленипе ĕнтĕ — кукăр-макăр траншейăсем алтнине курнă та çавăнта çитсе ыттисемпе хутăшса кайнă. Хайне нимĕнпе те палăртас мар тесе, вăл та çĕр чавнă, каçхине вара халăхпа пĕрле яла пырса кĕнĕ. Пĕр старик Павăла хăй килне кĕртнĕ, паранкă пĕçерсе çитернĕ. Çавăнтах çыварнă вăл. Анчах унăн тăшман çинчен пĕлмелле-çке! Ирхине Павăл урама тухнă та, урам тăрăх ерипен утса, нимĕçсен огневой точкисем хăш тĕлерех вырнаçнине, танкĕсем, автомашинăсем ăçта тăнине сăнаса пынă. Малтанлăха пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулнă-ха. Унтан сасартăк вăл хăйне хирĕç пĕр нимĕç офицерĕпе икĕ полицай утса пынине асăрханă. «Кусемпе çывăх тĕл пулсан ырри пулас çук,—шухăш вĕçсе илнĕ Павăл пуçĕнче.— Полицайсем — кунти çынсем, вĕсем кашни ют çыннах уйăрса илме пултараççĕ... Пытанас!» Вăл тӳрех пĕр калинккерен кĕрсе кайнă. Анчах картишĕнче сăнчăрлана йытă пулнă-мĕн, ют çын кĕнине курсанах каçса кайса вĕрме тытăннă... Çав самантрах чӳречере нимĕç салтакĕсен сăнĕсем куранна. Павăлăн халь ни каялла, ни малалла кайма май килмен. Урамра — нимĕç офицерĕпе полицайсем, кунта та нимĕçсем...

Шухăшласа тăма вăхăт пулман. Павăл, хăй çинеллех сикекен йытăран паранса, картлашкасем тăрăх хăпарнă, пӳрте кĕнĕ.

— Ыра кун пултăр пурне те,— пĕшкĕнсех пуç тайнă вăл.

— Ыра кун пултăр сана та,— тенĕ кăмака кукринче тăрмашакан кил хуçи карчăк.

Нимĕçсем — вĕсем тăваттăн-пиллĕкĕн пулнă, кар-

чăк патёнче хваттерте тăнă — нимĕн те чĕнмен-ха, Павăл çине шанмасăртарах, иккĕленерех пăхнă çеç.

Павăл тӳрех кил хуçи патнелле утса пынă. Унăн халĕ мĕн те пулин тупса калаçмаллах пулнă унпа.

— Инке, мана староста кирлĕччĕ, вăл сирĕн пата килнĕ терĕç... Ăçта кайрĕ-ши кунтан, пĕлместĕн-и? — ыйтнă карчăкран. Çав вăхăтрах нимĕçсем хăй çине шăтарас пек пăхнине пĕтĕм шăм-шакĕпе туйса тăнă.

— Килмеллеччĕ те, килеймерĕ-ха. Ерçеймерĕ пулинех,— тенĕ карчăк, Павăл çине пĕрре пăхсассăнах ку каччă епле те пулсан нимĕçсенчен хăтăлмалли мел шыранине ăнланса. Вăл пушă витре тытса алăк патнелле кайнă, Павăл ун хыççăн утнă. Анчах шăп çав вăхăтра вĕсене хирĕç алăкран хайхи урамра тĕл пулнă тăсланкă офицерпа икĕ полицай кĕнĕ. Офицера курсанах пӳртри салтаксем, сиксе тăрса, аллисене малалла тăсса, пурĕ пĕр харăс: «Хайль Гитлер!» — тесе йытă вĕрнĕ пек кăшкăрса илнĕ.

Çав вăхăтра карчăкпа Павăл çенĕке тухнă.

— Пытан часрах, ачам! Сик çаканталла! — çенĕкĕн хыçалти алăкне уçса кĕлет айнелле кăтартнă карчăк.— Хăвăртрах! Ĕнер сан пеккине тытса килчĕç те пĕр наччасра персе пăрахрĕç...

— Тавтапуç, кинемей! — аллипе сулнă та Павăл, кĕлет айнелле шуса кĕрсе кайнă.

Унччен те пулман, пӳртрен хайхи полицайсем сиксе тухнă.

— Ăçта кайрĕ леш çын? — васкаса ыйтнă вĕсем крыльца çинче чӳлмекрен шыв юхтарса аллине çуса тăракан карчăкран.

— Мĕн тума кирлĕ пулчĕ вăл сире? Паллатăр-им эсир ăна? — тăрăхларах хуравланă карчăк.

— Палламастпăр çав, кунти мар, ют çын вăл!— тенĕ полицайсенчен пĕри.— Тытас пулать ăна пирĕн! Тем тесен те бандит вăл, партизан! Ăçталла кайрĕ, тетĕп!

— Нимле бандит та, партизан та мар-ха вăл, кÿршĕри Ермаковка çынни, эп ăна тахçанах пĕлетĕп,— калаçăва тăсса, полицайсене юри чарса тăнă çав карчăк.

— Пирĕн ăна çавах тытас пулать, офицер хушрĕ! — кăшкăрса илнĕ полицай.— Кала часрах, ăçталла кайрĕ? Пахчаналла-и, урамалла-и?

— Мĕн курман вăл ман пахчара?—тенĕ карчăк.— Асăрхамарăр-им, чип-чиперех калинккепе урама тухрĕ. Инçех те каймарĕ пуль-ха, кирлех пулсан кайса тытăр...

Полицайсем урамалла ыткăнна. Карчăк часрах çенĕкĕн хыçалти алăкне уçнă та хыттăн пăшăлтатса каланă:

— Ачам, ачам! Халь тар ĕнтĕ, кĕлет айĕнчен пахчаналла тухмалли шăтăк пур унта!

Анчах Павăл хăех çав шăтăка аслăлатма тытăннă-мĕн. Темиçе самантранах вăл пахчари çăра чиесемпе хурлăхан тĕмисем ăшне чăмнă...

Халь ĕнтĕ Павăл ирĕкре пулнă, ялтан тухса хамăр вырнаçнă вăрман еннелле те кайма пултарнă, анчах та вăл хăйне хушса янисене тĕплĕрех тума ĕмĕтленнĕ. Уйрăмах, ăна урамра илтĕнекен шăв-шав пăшăрхантарнă: урам тăрăх танксем, автомашинсем иртсе пынă, стройпа салтаксем утнă...

— Пире, партизансене хирĕç ямаççĕ-ши кусене? — шухăш вĕçсе илнĕ разведчик пуçĕнче.— Фронта каймаççĕ-ха вĕсем, фронт инçе. Тата, вĕсене фронта ăсатас пулсан, тепĕр еннелле, чугун çул станцийĕ патнелле илсе каймалла-ха. Тем тесен те, карательнăй экспедици хатĕрлеççĕ!..

Темиçе пахча урлă каçнă хыççăн Павăл, хăра-хăрах, тепĕр хут урама тухнă. Пĕр хапха патĕнче пухăннă ял çыннисем çумне пырса тăрса, иртсе пыракан танксене, автомашинăсене, салтаксене шутлама тытăннă. Çавна май хăй пысăк хăрушлăхра пулнине те,

хайён çав тери асăрханмаллине те манса кайнă пулас вăл. Сасартăк ун умне паçăрхи карчăк киленче тĕл пулнă икĕ полицай тухса тăнă. Иккĕшĕ те автоматсемпе.

— Ут пирĕн уммăн! Аллусене хыçалалла тыт! — хушнă вĕсем.

Павăл çавăнтах вĕсене çапа-çапа ӳкерме, ăçталла та пулин тарма шутланă, анчах полицайсем ăна автомачĕсемпе тĕллесех тăнă, сылтăм аллисен шĕвĕр пӳрнисене спусковой крючоксем çинчех тытнă. Павăл кăшт кăна хускалсанах, вĕсем ăна ала пекех шăтарса тăкма пултарнă...

...Ана мечĕк евĕр çавракан та шыçмак майор, гарнизон коменданчĕ, допрос тунă. Унăн хутла-хутла янахĕ айĕнче «тимĕр хĕрес» курăннă,— пĕр сăмахпа каласан, Павăл чи хăрушă тăшман аллинех лекнĕ. Хăй умĕнче мĕнле çын тăнине çав фашист тӳрех чухласа илнĕ.

— Партизан! Ёнер çеç пĕрине çаксаттăмăр, паян акă сана çакатпăр! Виселицă хатĕрриех пур. Çапах та эсĕ вилĕмрен хăтăлма пултаратăн-ха. Каласа пар ним пытармасăр...

Анчах майор Павăла нумаях допрос туса ларайман. Ана сасартăк телефонпа таçта чĕнсе илнĕ. Тухса каяс умĕн Павăла хаяррăн каласа хăварнă:

— Каçчен шухăшлама пултаратăн. Эпир мĕн ыйтнине каласа парас теместĕн пулсан, виселицă çинче сулкаланса тăма хатĕрлен. Пирĕн сăмах кĕске пулать! Çапла!..

Павăла сарайне тĕксе кĕртсе питĕрсе хунă. Çăланас шанчăк та пулман халь унăн, çавăнпа та хăй отрядран пĕр гранатă та пулин чиксе тухманшăн çав тери ӳкĕннĕ: хам пĕтес пулсан та, темиçе фашиста тирпейлеттĕм хуть!..

Таçта, вăрман енче, сасартăк тупă сассисем илтĕнсе кайнă...

«Ахăртнех, нимĕçсем вăрман çине наступлени пуçлаççĕ пулмалла... Ман юлташсем çапăçаççĕ ĕнтĕ паян, тен, мана та кĕтеççĕ, анчах эпĕ вĕсем патне нихçан та таврăнас çук ĕнтĕ...» — салху шухăшсем яваннă Павăл пуçĕнче.

Вăхăт çав тери вăраххăн, тÿсмелле мар ерипен шунă. Тултан часовой каллĕ-маллĕ уткалани çеç илтĕннĕ. Ыванса, халтан кайса çитнĕ Павăл кăштах тĕлĕрсе кайнă пек пулнă, анчах та кĕçех сарай алăкĕ уçăлнă та, ăна икĕ салтак каллех пÿрте илсе кĕртнĕ.

Пÿртре халь, комендантсăр пуçне, ун пекех самăр, анчах нумай çÿллĕрех, тĕреклĕрех фельдфебель ларнă. Вăл вырăсла пĕлекенскер, тăлмачă пулнă иккен.

— Ан ну, бандит, хывса пăрах пальтуна! — тенĕ вăл тÿрех, чышкипе сĕтел çине çапса илсе.

Павăл хускалман, çаплипех тăнă.

— Вăхăта сая ан яр, тытăн часрах калама, пурĕпĕр çакатпăр,— сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса каланă тăлмачă. Павăл чĕнмен. Пĕр çур минут пек вăхăт иртсен, фельдфебель сассине кăшт йăвашлатнă: — Паллах, эсĕ ухмах пулмасан, партизансем çинчен пĕтĕмпех каласа парсан... Çут тĕнчере пурăнма та пултаратăн-ха. Ку çеç те мар, нимĕç командованинчен наградă та туянма пулать...

Павăл халь те чĕнмен.

— Ну, мĕн çăвара шыв сыпнă пек тăратăн тата?

— Эп çакна çеç калама пултаратăп сире...—ерипен кала пуçланă вара Павăл,— хам пурнăçра эпĕ нимле партизансене те курман, вĕсем мĕн тĕслине те пĕлместĕп, илтмен те вĕсем çинчен. Урăх ан та ыйтăр манран, усси пулмасть.

— Суятăн! Пулать! Калаçтаратпăр эпир сана, бандит! — сиксе тăнă та тăлмачă тÿрех аллипе парабеллум кабурне ярса тытнă.

— Вĕлерсен те, пĕр сăмах та илтейместĕр! Урна йытăсемпе калаçмастăп! — пурĕпĕр çăланас çуккине

пĕлсе, пĕтĕм чĕререн, çилĕпе кăшкăрнă ăна хирĕç Павăл.

Фельдфебель пĕр самантлăха майор çине пăхса илнĕ, унтан çавăнтах аллине сарлакан сулса ярса, Павăла хăлхинчен çав тери хытă çапнă. Павăл сулăнса стена çумне пырса çапăннă, анчах ӳкмен. Фельдфебель вара ăна чăннипех урса кайнă пек хĕнеме тапратнă. Майор та сĕтел хушшинчен чупса тухнă, фельдфебеле аяккалла сирсе, Павăла кăкринчен ярса тытнă.

— Ну, калатăн-и халь? — Вăл темиçе хут Павăл пуçне стена çумне çапăнтарнă.— Калатăн-и, тетĕп, йытă!

Павăл тек тӳссе тăрайман. Вăл, меллĕ самант тупса, пуçне кăштах пĕкнĕ, унтан ăна тăрук çĕклесе, майора янах айĕнчен питĕ хытă шанлаттарнă, лешĕ вара чĕлхине çыртсах лартнă пулмалла, йынăшсах илнĕ, Павăл кăкринчен тытнă аллине те вĕçертсе янă, каялла чакнă. Çав самантрах Павăл, пĕтĕм вăйне пухса, мăнтăр нимĕçе икĕ ури хушшинчен тапнă. Лешĕ пĕр икĕ метр ывтăнса кайнă...

Çакна курса тăнă фельдфебельпе пӳртре пулнă икĕ салтак харăсах Павăл çинелле сикнĕ. Вĕсем Павăла вĕлересех тенĕ ĕнтĕ, анчах çав вăхăтра урамра, Павăла асаплантарнă пӳрт умĕнчех, умлăн-хыçлăн икĕ бомбă хăрушла кĕрслетсе çурăлнă. Пӳрт сив чир тытнă пек чĕтренсе илнĕ, кантăксем чăнкăрах ванса сирпĕннĕ, сĕтел çинчи эрех кĕленчисем те алăк патнелле вăркăннă...

Ял çине пирĕн штурмовиксен ушкăнĕ вĕçсе пынă иккен. Вĕсем бомбăсем тăкнă, тупписенчен пенĕ, пулеметсенчен çунтарнă. Урамра вут-çулăм ялкăшнă, тăпра, хăрăм сирпĕннĕ. Питĕ вăйлă налет пулнă вăл...

Самантрах пӳртре пĕр нимĕç те юлман, вĕсене урамри взрыв хумĕ шăлса кăларса ывăтнă пекех пулнă. Пурте пахчана, сарай хыçĕнче чавса хатĕрленĕ хушăк-шăтăксене тарса пытаннă. Павăл тапса ӳкернĕ

мечĕк пек майор çеç халь те урайĕнчех выртнă, анчах вăл та, йынăша-йынăшах, алăк патнелле упаленме тытăннă.

Урамра бомбăсем пĕрин хыççăн тепри çуралнă, аяллăн вĕçекен самолетсен моторĕсем хăрушла хаяррăн кĕрленĕ, таттисĕр пулеметсем шатăртатнă...

Мĕн пулса иртнине самантрах тавçăрса илсе, Павăл тӳрех алăк енчи стена çинче çакăнса тăракан автоматсем патнелле сикнĕ. Пĕрне илнĕ те хырăмĕпе шуса алăк умне çитнĕ майора автомат аврипе пуçĕнчен пĕрре çапсах тирпейлесе хунă, унтан, алăка шалтан çаклатса, унăн мундирне хывса илсе хăй тăхăнса лартнă. Майор мундирĕ ăна аслă пулнă, анчах кун пирки шутласа тăма май килмен халь. «Ах, самолетсем ытларах вĕçчĕрччĕ, тепĕр пилĕк минут та пулин тăхтаччăрччĕ...» — тесе шухăшланă Павăл. Ун телейне, штурмовиксем çаплах кĕрленĕ-ха, çаплах бомбăсем пăрахнă, тупписенчен пенĕ, пулемечĕсенчен сапнă.

Юлашкинчен Павăл майорăн «вальтерне» * илсе çакнă, автоматăн обоймисене кăларса хăй çумне чикнĕ те картишне сиксе тухнă. Никам та курăнман. Бомбежкă пуçлансанах пӳртрен тухса варкăннă нимĕçсем халĕ те пахчари шăтăк-хушăксенчех выртнă пулмалла... Вара Павăл пĕр çеккунт та тытăнса тăман, урама тухса тăвалла чупнă. Çул çинче вăл штурмовиксен пархатарлă ĕçне курнă: урампа пынă автомашинăсем йăлт арканнă, хăшĕ çуннă, вĕсенчен кăшт аяккарахра башнисем, тупписемсĕр тăрса юлнă танксем йăсăрланнă...

Совет самолечĕсем халь те ял çинчен кайманнипе (вĕсем хăйсене валли татах «объектсем» ширанă пуль çав!) урамра пĕр чĕрĕ чун та пулман. Анчах, пулнă пулсан та, аллине автомат тытса чупакан «нимĕç

* «Вальтер» — нимĕç офицерĕсен пистолечĕ.

майорне» кам чарма хӑйна пулӗччӗ-ши? Пирӗн Павӑл халь — партизансен разведчикӗ мар, «нимӗҫ майорӗ» пулнӑ вӗт-ха!..

Хытӑ чупнӑ Павӑл. Штурмовиксем вӗҫсе кайиччен унӑн епле пулсан та ҫак ялтан тухса ҫухалмалла пулнӑ. Урам вӗҫне ҫитесси аллӑ метр пек кӑна юлсан, вӑл пӗр пӳрт умӗнчи шурӑ хуранран кӑкарса тӑратнӑ икӗ лашана курах кайнӑ. Лашисем иккӗшӗ те йӗнерсемпех пулнӑ. Нимӗҫсен связнойӗсем е кам та пулин урӑххи таҫтан таврӑннӑ пулмалла та ӗнтӗ, яла кӗрсенех бомбежкӑ пуҫланнипе лашисене йӑпӑр-япӑр кӑкаркаласа, бомбӑсемпе пульӑсенчен ҫӑлӑнмалли шӑтӑк-ҫурӑк шыраса таҫта тапса сикнӗ.

Павӑл тӳрех пӗр лаши патне чупса пынӑ та чӗлпӗрне салтса утланса ларнӑ. Вара тепӗр ҫур минутранах вӑл, пуҫне лаша мӑйӗ патнех пӗксе, уй тӑрах ҫил пек ыткӑнса пынӑ. Ним те кансӗрлемен халь ӑна, вӑл читлӗхрен кӑларса янӑ кайӑк пекех пулнӑ. Ун хӑлхисенче ҫил ҫеҫ шӑхӑрнӑ. Лаши ахаль те ҫӗмрен пекех ыткӑннӑ пулсан та, Павӑл ӑна пӗрмай хӑваланӑ, таттисӗр хӑваланӑ...

Пӗр икӗ километр хушши уй тӑрах ҫулсӑр-мӗнсӗр ыткӑнса пырсан, вӑл сасартӑк хӑйне хирӗҫ нимӗҫ салтакӗсем килнине асӑрханӑ. Тӗрӗссипе, вӗсене малтанах курма та пулман, мӗншӗн тесен лешсем темле ҫырмаран е тарӑн лупашкаран тухнӑ. Вӗсем ҫине пырса тухсан ырри пулас ҫуккине пӗлсе, Павӑл вут пек хӗрсе кайнӑ лашана часрах тепӗр еннелле, сылтӑмалла пӑрнӑ та малаллла тӑпӑртаттарнӑ. Гитлеровецсем Павӑла автоматсемпе винтовкӑсенчен пеме тапратнӑ, пӗр пульли вара ӑна уринчен ҫитсе ҫапнӑ. Анчах Павӑл ҫаплах, пӗр чарӑнмасӑр, малаллах, малаллах ыткӑннӑ...

Груша калама чарӑнчӗ те Мурат ҫине пӑхса илчӗ.

— Унтан мӗн пулнине эп сана каларӑм ӗнтӗ. Хамӑрӑн базӑна вӑл чиперех ҫитнӗ, анчах лаши ҫинчен

ансанах тăсăлса ӳкнĕ. Эпир ăна эмеллеме тытăнтăмăр...

— Ну, паттăр та иккен Микулай мучи ывăлĕ! — хавассăн, çăмăллăн сывласа ячĕ Мурат.— Ашшĕнех хывнă пулмалла. Микулай мучи хăй те пит паттăрччĕ вĕт, тем пулсан та пуçне усмастчĕ...

— Астăватăп вăл старике, пит лайăх астăватăп,— терĕ Груша.

— Эп хам вара ăна ĕмĕрне те манассăм çук...

* * *

...Ывăлне нимĕçсем персе вĕлернĕренпе Иван Степанч Додонов килтен ниçтах та тухман. Хăй ăшĕнче вăл хаяр та тăтăклă тавăру кунĕ çавăрăнса килессе çеç кĕтнĕ. Хутран-ситрен вăл питĕ вăрттăн, асăрханса, çывăхри вăрмана кайса килнĕ,— унта, шанчăклă вырăнта, сахалтан та пĕр взводлăх хĕç-пăшал выртнă. Çав хĕç-пăшал часах кирлĕ пуласса Иван Степанч çирĕппĕн шанса пурăннă.

Паян та кунĕпех килтен тухмарĕ вăл. Ун тĕлĕпе пĕрмаях нимĕçсен машинисем, обозĕсем, выльăх кĕтĕвĕсем иртрĕç, вĕсем çине пăхсан — ун чĕри çурăлса каяс пек ыратрĕ.

— Хăçан çитĕ-ши ку хурахсене тавăрмалли самант? — ыйтрĕ вăл хăйĕнчен хăй, анчах ответ тупăнмарĕ...

Каç пулнă чух унăн çенĕк алăкне хуллен шăкăртаттарчĕç. Иван Степанч пӳртрен тухрĕ те кам килнине ыйтмасăрах алăка уçрĕ. Ун патне Митька килнĕ иккен.

— А-а, Митюк! Килех, килех, ачам! — сасартăк çемçелчĕ Иван Степанчăн кăмăлĕ.— Ма пĕртте кĕрсе тухмастăн? Юрамасть ун пек пĕр-пĕрине пăрахма...

— Халь те килтĕм вĕт,— терĕ Митька, алăк патĕнчи пукан çине ларса.— Ытти чух вăхăт пулмарĕ. Пĕлетĕн вĕт — килте ĕçлекенни эп кăна...

— Вӑл ҫапла ӗнтӗ, шуйттан гитлерӗсем пире иксӗмӗре те тӑлӑха тӑратса хӑварчӗҫ...

Митька чӗнмерӗ, вӑл халь хӑй мӗншӗн килнине еплерех каласа парасси ҫинчен шухӑшларӗ. Ӑҫтан-ха тӑрук персе яратӑн ун ҫинчен?

— Ну, мӗнле хыпарсем пур ялта? — каллех сӑмах пуҫларӗ Иван Степанч, пӑхӑр чӗлӗмне табак тултарса.— Эп ниҫта та тухса ҫӳреместӗп те — пӗлместӗп...

— Эп те пӗлместӗп,— терӗ Митька.— Наҫтаҫ инке ҫук-и?

— Ҫук-ха, таҫта тухрӗ.

— Эппин, эс килте пӗчченех ларатӑн-и?

— Пӗчченех. Сана Наҫтаҫ инкӳ кирлӗччӗ-и?

— Ҫук.

— Ма ыйтан эппин?

— Ахаль ара. Ӑна та нумайранпа курман та...

Иван Степанч чӗлӗмне чӗртсе ячӗ те, пукан илсе, Митька патнерех пырса ларчӗ.

— Ҫӗр ҫинче ахаль нимӗн те пулмасть, ачам,— терӗ вӑл.— Пур япалан та хӑйӗн сӑлтавӗ пур. Акӑ эпӗ, вунӑ ҫул чӗлӗм туртманскер, каллех туртма пуҫларӑм — ӑш вӑркана пирки пулчӗ. Нимӗҫсем пирӗн халӑха асаплантараҫҫӗ, пӗтӗм пурлӑха турттарса каяҫҫӗ. Ҫаратнӑ пурлӑхпа пуясшӑн, значит. Эс те ман пата ахаль килмен ӗнтӗ, тем сӑмах пурах санӑн, куҫӑнтан пӑхсах куратӑп.

— Пур ҫав...— сӑмах ҫаврӑнса килнӗшӗн савӑнса кайрӗ Митька.— Пӗр ӗҫпе килтӗм эп, Иван Степанч.

— Кала эппин, ан пытар. Ют ҫынсем мар эпир.

— Питӗ вӑрттӑн ӗҫ... Никама та пӗлтерме юраманскер...

— Юрӗ, юрӗ. Кала эс, кунта эпир иксӗмӗрех.

— Пирӗн пата пыр-ха... Халь мар, тӗттӗмленсен. Унта пӗр ҫын пур, санпа курса калаҫасшӑн.

Иван Степанч пуканне татах Митька ҫывӑхнелле сиктерчӗ.

— Мĕнле ҫын, ывăлăм? Кам вăл? Тăшман-и, тус-и?

— Тус. Аманнăскер...

— Боец эппин?

— Летчик.

— Епле лекнĕ вăл сирĕн пата?

— Хамăр тупса килтĕмĕр.

— А-ава мĕн! — Иван Степанч тĕлĕннипе пуҫне сулкаласа илчĕ.— Пит лайăх ăнлантăм...

— Пыратăн-и? — ун куҫĕнчен пăхрĕ Митька.

— Паллах, пыратăп! — Вăл тути хĕррине ҫыртса, кăштах шухăша кайса ларчĕ.— Маттур Митька, аҫунах хывнă эс...

— Пĕччен мар эпĕ, манăн юлташ пур. Эпир иксĕмĕр тупса килтĕмĕр ăна. Самолет ҫинчен сикрĕ те...

— Юлташĕ кам?

— Аякран килнĕскер, ман пекех тăлăх ача. Вăл та пирĕн патра халь.

— Аван, аван... Ăнланатăп кăштах...

— Эппин, пыр. Иккĕшĕ те куратăн вара.

— Ним те ан шарла. Тĕттĕмлентĕр кăна — ҫитетĕп.

Митька тухса кайрĕ. Иван Степанч сӳннĕ чĕлĕмне васкасах чĕртрĕ те пӳртре каллĕ-маллĕ утма тытăнчĕ. Ку таранччен хăй ăшĕнче пусарса пурăннă шухăшсем сасартăках мăн пĕвене татса кайнă ҫурхи шыв пек кĕрлеме тапратрĕҫ. Туйрĕ вăл: тимĕрҫĕ патне ăна ахаль чĕнмеҫҫĕ, унта такам пысăк ĕҫ пуҫласшăн...

Урамра ҫын сăнĕ паларми пулсанах Иван Степанч, хăй киленчен тухса, пахчасем урлă Митькăсен килĕ еннелле кушак пек йăпшăнса утрĕ.

* * *

Пĕлĕтре ҫăлтăрсем ялкăшма пуҫличченех калаҫса ларчĕҫ Муратпала Груша.

Мурат ĕнтĕ калама ҫук савăнчĕ. Унăн тусĕсем пур-

те сывă иккен, ку хушăра темĕн тĕрлĕ чаплă ĕçсем тунă, Мускавпа çыхăннă... Вĕсем, çитменне, кунтан ытла инçетрех те мар тăнă, часах вĕсемпе пуринпе те тĕл пулма май килнĕ.

— Халь Митькăсем патне кайăпăр,— терĕ Мурат, тулта тĕттĕмленсе çитме пуçласан.— Унта мана тахçанах кĕтеççĕ ĕнтĕ...

— Каяр эппин, калаçмаллине калаçса пĕтертĕмĕр пулас,— килĕшрĕ унпа Груша.— Ну, тăр, партизан-разведчик!— мĕшлетсе выртакан качакине урипе тĕртрĕ вăл.

Мурат кулса илчĕ:

— Ну, тупнă та вара... фокус!

— Мĕн тăвассу пур, пытанмалли май тупас пулать вĕт,— терĕ Груша.— Кирлех пулсан — ку чухне упа та çаватса çӳрĕн!

...Вĕсем Митькăсем патне çитичченех унта Иван Степанч Додонов пынă пулнă. Ачасем хăй патне «шанчăклă çынсене» илсе пырасса кĕтсе ларнă летчик унпа паллашса самаях калаçма ĕлкĕрчĕ. Вăл ăна хăйĕн планне каласа пачĕ: ялта юлнă арçынсене пухас та, летучий отряд пекки туса, çак кунсенчех тăшмана хирĕç кĕрешме тытăнас... Иван Степанч малтанах летчикăн сăмахĕсене ним чĕнмесĕр итлерĕ (вăл хăй татăкла шут тумасăр нихçан та калаçман), каярахпа вара, Малинин хăйĕн планне питех те тĕплĕн шухăшласа тунине кура, чĕринче мĕн пуррине темиçе сăмахпах пĕлтерчĕ:

— Эс каланисем — тахçанах пирĕн пуçра çӳреççĕ вĕсем, тăванăм. Ак çакăнта та тӳсме çук вĕресе тăрать.— Вăл хăйĕн кăкри çине кăтартрĕ.

— Мĕн тытса чарать эппин сире? — ыйтрĕ летчик.

— Ертсе пыракан тупăнмарĕ. Пĕркунне пирĕн пит маттур каччăсем пурччĕ — вĕсене кĕтмен çĕртен пере-пере вĕлерчĕç...

— Халь ун пирки тытăнса тăмăпăр. Çакна çеç ка-

ласа пар эс мана: хăюллăрах çынсем пухаятăн-и? Вунпилĕк, çирĕм...

— Ытларах та тупăпăр.

— Питĕ аван! Халь ĕнтĕ хĕç-пăшал тупмалли май шырас пулать.

Иван Степанч пĕр хушă чĕнмерĕ, унтан ассăн сывласа илчĕ те:

— Вăл пур-ха пирĕн, ăна эпир тахçанах хатĕрлесе хунă,— терĕ.— Çавăн пирки пĕтрĕç те ĕнтĕ пирĕн ачасем.

— Апла пулсан, çынсемпе халех калаçма тытăн эсĕ. Кампа калаçсан усă пулассине хăвах чухламалла, сана лайăхрах курăнать...

— Ăна пĕлетĕп-ха.

— Кĕçĕрех кай вĕсем патне.

Аялта, пӳрт умĕнче, такам ерипен кăштăртатни илтĕнчĕ. Летчикпа Иван Степанч пĕр вăхăтлăха шăпăртах пулчĕç. Кĕçех пусма тăрăх хăпаракан Мурат хуллен сас пачĕ.

— Эс ăçта çухалтăн кĕçĕр? — кăмăлсăр пулнă пекрех ыйтрĕ Малинин.— Кĕтсе ывăнтăм сана... Мĕн пулчĕ?

— Ним те пулман, Сережа пичче,— пăшăлтатма тытăнчĕ ăна хирĕç Мурат,— эп сан патна питĕ хаклă хăна илсе килтĕм...

— Кам тата вăл? Мĕнле çын?

— Астăватăн пуль, эп сана темиçе хут та хамăр отрядри Груша ятлă хĕр çинчен каланăччĕ...

— Ну, ну, пит лайăх астăватăп.

— Çавă килчĕ вĕт!

— Епле? Эс вĕсене çухатнăччĕ-çке? — тĕлĕнчĕ Малинин.— Ăçтан килсе лекнĕ вăл кунта?

Мурат ун çывăхнерех пычĕ те пĕтĕм историе — малтан пуçласах — каласа кăтартма тытăнчĕ, анчах летчик нумаях итлемерĕ ăна, пĕр-ик минутранах чарчĕ,

— Хайне илсе кил-ха кунта, ёç хăвăртрах пулĕ.

— Çиччас! — килĕшрĕ Мурат. Вăл, пусма тăрăх вăшт кăна анса кайса, темиçе минутранах Грушăпа пĕрле таврăнчĕ.

— Ака вăл, Сережа пичче! Паллашăр!..

Летчик тĕттĕм çĕртех Грушăн аллине тытса чăмăртарĕ.

— Мана — Сергей, теççĕ. Мурат сирĕн çинчен часчасах асăнатчĕ те, çав майпа сире эпĕ тахçанах пĕлетĕп. Анчах курса паллашма тӳр килессе ниепле те шутламан вара... Эсир питех те кирлĕ вăхăтра килсе тухрăр пирĕн пата.

— Аван апла пулсан,— терĕ Груша.

— Мурат пирĕн пурнăç çинчен каларĕ пуль сире...

— Кăшт калакаларĕ.

— Эпир те ĕçе тытăнас тетпĕр. Вăйсем пухасшăн. Ака Иван Степанч — кунти çын—хăйсен ялĕнче юлнă колхозниксене ура çине тăратма сăмах пачĕ. Тен, халĕ сирĕнпе çыхăнма май килĕ...

— Паллах, çыхăнас пулать.

— Ман шутпа, пире валли халь питĕ аван самант килсе тухрĕ. Ку ялта нимĕçсен штабĕ вырнаçрĕ вĕт.

— Чухларăм-ха эп ăна...

...Тĕттĕм урамсем тăрăх гитлеровецсен патрулĕсем çӳрерĕç, таçта инçетри ялсем çунни курăнчĕ, тахăш тĕлте çынсем кăшкăрашрĕç, темле çинçе сасла йытă вĕрчĕ — чĕнмен хăнасене килне кӳртесшĕн мар пулчĕ пулмалла. Унтан анат енчен каллех моторсен шавĕ илтĕнчĕ — яла татах тулли машинăсем пырса кĕчĕç пулас. Вĕсем хыççăн темиçе çăмăл оруди, заряд ещĕкĕсем сиккелесе чăнкăртатса пычĕç.

Ялта нимĕçсем йышланнăçемĕн йышланчĕç.

Çав вăхăтра тимĕрçĕ пӳрчĕн маччи çинче пилĕк совет çынни — пилĕк патриот — таччăн пĕр çĕре пухăнса ларса, усал тăшмансене епле майпа вирлĕрех

пырса çапасси çинчен канашласа ларчĕç. Вĕсене пĕр ĕмĕт, пĕр туртăм, хĕрÿллĕ чĕрисенче хĕмленсе таракан хаяр курайманлăх пĕтĕçтерчĕ...

Кашни хăйĕн шухăшне каласа пачĕ. Кашниех тăшмана хăш енчен ытларах сиен кÿмелли, ялтан çапса кăлармалли майсем сĕнчĕ. Пĕрин сĕнÿне те ахаль ирттерсе ямарĕç вĕсем — пур енчен те сÿтсе яврĕç. Юлашкинчен вара Малинин пурин шухăшĕсене те пĕтĕçтерсе каларĕ:

— Çапла тăвăпăр эппин, юлташсем... Иван Степанч халех хăйĕн çыннисене хатĕрлет. Кĕçĕр май килмесен те — ыранхи кун пурне те хĕç-пăшал валеçсе парать. Грушăпа Мурат хăйсен отрядне каяççĕ... Отрядри хыпарсене эпир ыран каçалапа пĕлетпĕр. Митька кунĕпех ялта мĕн пулса пынисене сăнать. Каç пулсассăнах эпир хамăр хатĕрленсе çитни çинчен систеретпĕр. Шăп çурçĕрте е кăшт каярах, пирĕн налет пуçланать. Пур енчен те пĕр харăс, сигнал тăрăх... Çапла-и?

— Çапла тăвасчĕ,— терĕ те Иван Степанч, кайма хатĕрленсе тăчĕ.

— Питĕ лайăх план,— килĕшрĕ Груша та.— Часрах отряда çитсе пĕлтересчĕ ман ăна. Унта та хатĕрленме вăхăт кирлĕ.

— Кайăр, çулусем такăр пулччăр,— ыр сунчĕ вĕсене летчик.

Иван Степанч, Груша, Мурат — кашниех унăн аллине тыта-тыта чăмăртарĕç те, мачча çинчен шăппăн кăна анса, лупас айĕнчи хăма шăтăкĕ витĕр анкартинелле тухрĕç. Тулта кăвак çутă та çапа пуçланăмĕн. Çырмаран çăра пăс пек шурă тĕтре хăпарнă, пĕлĕтри çăлтăрсем пăч та пăч сÿнкеленĕ...

— Çутăласси нумай юлман, васкас пулать,— терĕ Иван Степанч шăппăн, йĕри-тавралла пăхкаласа.— Сирĕн тата çулĕ те çывăхах мар...

Вĕсем ик еннелле уйрăлса кайрĕç.

* * *

Ялтан тухсан, Муратпа Груша пӗр ҫухрӑм пек ҫулсӑр-мӗнсӗрех утрӗҫ те кӗҫех ытла таранах мар ҫырма хӗррине ҫитсе тӑчӗҫ.

— Кунта питӗ чӑнкӑ, сӗвекрех выран тупар-ха,— терӗ Мурат, тӗттӗм ҫырма тӗпнелле пӑхса. Чикеленсе кайсан, ӗнсене те хуҫма пулать...

Вӗсем тата анатарах утрӗҫ.

Хирте пӗр сас-чӳ те илтӗнмерӗ, ура айӗнчи сывлӑмлӑ курӑк ҫеҫ чӑштӑртатса пычӗ.

— Ҫакӑнтан пӑрӑнатпӑр пуль,— терӗ Груша шӑппӑн,— ҫырманалла пӗр лупашка аннине асӑрхаса. Анчах кун хыҫҫӑн вӗсем вунӑ утӑм та малалла ярса пусаймарӗҫ, лупашкаран вӗсен умне икӗ хура кӗлетке тухса тӑчӗҫ.

— Стой, русс!

— Хальт! Хенде хох! Рука верх! — хӑлхаран йывӑр япалапа ҫапнӑ пек янраса кайрӗҫ ют сӑмахсем.

Ытла та кӗтмен ҫӗртен пулчӗ ку. Муратӑн сасартӑках куҫӗсем хуралса килчӗҫ, чӗри тапма чарӑннӑн туйӑнчӗ.

— Тарас!.. Ӑҫталла тарас? Переҫҫӗ...— ҫиҫӗм пек шухӑшсем вӗҫсе илчӗҫ унӑн пуҫӗнче. Ответ тупиччен пӗр нимӗҫӗ, аллисене малалла кӑнтарса, Мурат патнелле ыткӑнчӗ, тепри — Груша ҫинелле. Мурат каялла сиксе ӳкрӗ, нимӗҫӗн тимӗр пек хытӑ алли вара Муратӑн хулпуҫҫине чавса илме ҫеҫ ӗлкӗрчӗ — вӑл хӑй мӗн тунине лайӑххӑн чухламасӑрах, пур вӑйне пухса ҫыранран аялалла сикрӗ. Ун ҫывӑхӗнченех умлӑн-хыҫлӑн темиҫе пуля шӑхӑрса иртрӗ, унтан пӗр вӑтӑр-хӗрӗх метр аяккарах гранатӑ ҫурӑлса кайрӗ. Мурат ҫырма тӗпӗнчи хӑмӑш ӑшне лӑпчӑнчӗ те хӑварт-хӑварт упаленме тапратрӗ. Унӑн чӗркуҫҫийӗсем ҫемҫе пылчӑк ӑшне путрӗҫ, хытнӑ хӑмӑш аллисене касрӗ.

— Часрах... Часрах кунтан аяккарах тарса

ӳкес...— хыттӑн тапрӗ Мурат чӗри. Ҫав вӑхӑтрах пуҫӗнчен тепӗр шухӑш самантлӑха та тухма пӗлмерӗ:

— Груша епле-ши? Тытрӗҫех-ши вара ӑна?..

Чылайччен упаленнӗ хыҫҫӑн вӑл, пуҫне ҫӗклесе, сывламасӑр итлерӗ. Анчах темле тӑрӑшса итлесен те, ун хӑлхине пӗр сас та пырса кӗмерӗ. Паҫӑрхи пекех шӑп, хӑрушла лӑпкӑ, тӗттӗм...

Муратӑн тӑнлавӗсенчи юн тымарӗсем ҫурӑлса каяс пекех тапса тӑчӗҫ. Чӗри те лӑпланма пӗлмерӗ.

— Таврӑнас пулать... Сережа пиччене пӗлтерес... Эх, асӑрханса ҫитеймерӗмӗр! Пӗреххут, чӑнкӑ ҫӗртенех анмаллаччӗ. Халь отряда ҫитесси те, Игната курасси те пулмарӗ!..— хурлӑхлӑн ӳкӗнсе илчӗ вӑл. Унтан сӑрталла чакаланса хӑпарчӗ те паранкӑ йӑранӗсем хушшипе каллех Митькӑсен ялӗ еннелле упаленме тытӑнчӗ.

* * *

Груша хӑтӑлаймарӗ...

Ансӑртран тытнӑ ҫынсенчен пӗри ҫырмана сикнине курсан, нимӗҫ салтакӗ ӑна тӳрех прикладпа кӑкринчен ҫапса ӳкерчӗ, унтан вара ун аллисене каялла пӑрма тапратрӗ. Груша пӗтӗм вӑйне пухса кӗрешрӗ, нимӗҫе чышрӗ, ҫыртрӗ, хӗвӗнчи пистолетне кӑларма тӑрӑшрӗ, анчах Мурата тартнӑ тепӗр салтакӗ пырса пуҫӗнчен атӑ кӗлипе тапсан — ӑнран кайнӑ пекех пулчӗ.

Унӑн аллисене каялла туртса ҫыхса лартрӗҫ.

— Встайт! — винтовкипе ҫурӑмран чышрӗ ӑна пӗр салтакӗ.

— Пошел, руссиш зобак! Форвертс марш!

Аллисенчен ҫыхса лартнӑ пирки Груша ниепле те тӑраймарӗ. Вара нимӗҫсем ӑна, иккӗн ик енчен тытса, вӑйпа туртса тӑратрӗҫ.

— Мах шнель! Ходи быстро!

«Пӗтрӗм пулас... Тинех кусенчен вӗҫернеес ҫук

эпĕ... Шел,— чĕри пăчăртанса илчĕ Грушăн.— Штаба, пĕр-пĕр чи хăрушă тăшман аллине кайса параççĕ ĕнтĕ. Гестапоран чĕррĕн тухасси пулас çук. Ах, ма асăрхануллăрах пулмарăмăр-ши? Мурат тарса ӳкме пултарчĕ пулсан аванччĕ хуть... Мĕн тăвĕç-ши, мĕн курма тӳр килĕ-ши?

Хыçалтан такам хуса çитесрен хăранă пекех, нимĕççем ăна питĕ хăвăрт уттарчĕç. Çине-çинех çурăмĕнчен прикладсемпе тĕке-тĕке илчĕç, хăйсен хушшинче тем çинчен хаяррăн калаçса пычĕç...

Хĕвелтухăç майĕпе хĕреле пуçларĕ, улăхран ирхи нӳрлĕх туртăнчĕ, анчах Грушăна пăчă пулчĕ. Ял патне çитиччен унăн çан-çурăмĕ тарласа кайрĕ, хăйне такам пăвса пынă пек туйрĕ. Урампа хăпарнă чух вăл пур еннелле те тинкерсе пăхса пычĕ, анчах нимĕç часовойĕсемсĕр пуçне никам та курăнмарĕ...

Ăна ял Совет çуртне илсе кĕртрĕç. Пĕр салтакĕ алăк патĕнче сыхлама юлчĕ, тепри коридоран леш вĕçĕнчи алăкран кайса шаккарĕ.

Пӳлĕмре темскер кĕмсĕртетсе анчĕ. Сĕтел хушшинче ларакан çын, сасартăк сиксе тăрса, айĕнчи пуканне тӳнтерсе ячĕ курăнать.

Алăкран, кăшт тăрсан, шала кĕнĕ салтакăн пуçĕ курăнчĕ. Вăл Грушăна сыхласа тăраканнине кăчăк туртрĕ:

— Комм гер! Ляуф!..*

Хуралçă Грушăна хулпуççинчен тытрĕ, анчах Груша ун аллине йĕрĕнчĕклĕн сирсе пăрахрĕ те, пĕтĕм кăкрипе сывласа илсе, коридор тăрăх çирĕппĕн утса кайрĕ...

— Темле асаплантарсан та... нимĕн те пĕлейместĕр!..

* * *

Обер-лейтенант Эрих Клебер юлашки кунсенче питĕ тарăхса çитнĕ, урнă пекех пулса кайнă, 1939-мĕш

* Кил кунта! Чупни пе!,,

çултанпа вăл Европăри нумай çĕршывсем тăрăх турист пек кăна урăнса çÿренĕ: Польшăна, Франције, Бельгие, Голландие, Чехословакине çитнĕ. Пур çĕрте те çăмăллăнах çĕнтерсе пыма хăнăхни унăн пуçне çаварсах янă; вăл, кутăн тытнă выльăх кăшманĕ пек тăрăхла пуçлăскер, Гитлерăн ытти нумай офицерĕсем пекех — «аслă Германи» çарне çĕр çинче никам та çĕнтерме пултараймасть тесе каппайнă. Совет Союзĕ çине килсе тапăннă чух хăйсен «фюрерĕ» хыççăн — пĕтĕм вырăс çĕрне темиçе эрне хушшинчех тытса илетпĕр, тесе кăшкăрнă. Чăнласах, ĕненсех кăшкăрнă вăл... Вăрçăн малтанхи кунĕсенче Совет çĕрĕ çинелле чылаях кĕрсе кайма май пулни ун кăмăлне тата пушшех çĕклентерсе янă. Вăл кашни ик-виçĕ кунрах Гамбург хулинчи хăрах куçлă лавкка çăн тип пулă пек хĕрĕ патне мухтанчăк çырусем ярса тăнă.

«Ик эрнерен эпир Мускавра пулатпăр...»

«Наполеон тăвайманнине эпир тăватпăр!»

«Пирĕн пĕр виллă Мускавра, тепĕр виллă Атăл çинче, виççĕмĕшĕ Крымра пулать,—çакна шансах тăр, чунăмçăм Эльза»,— тесе çырнă вăл.

Унтан хăйĕн савниййĕ валли умлăн-хыçлăн посылкăсем «организацилеме» тытăннă. Ниме те тиркесе тăман вăрă-хурах йăлисене вĕренсе çитсе, вăл алла мĕн лекнĕ — çавна тултарнă: пальтосем, пушмаксем, кĕпесем, хĕрарăмсен кăкăр çаккисем, кĕмĕл кашăксем, ача ĕмкĕчисем, эрех черккисем — пĕтĕмпех хута кайнă. Вунă посылкă ытла ярса панă вăл çавăн пек.

Анчах совет боецĕсем калама çук хытă тăнă, вĕсем хирĕç тăрасси кунран кунах вăйланнă. Нимĕçсемшĕн малалла каймалли майсем пĕтсе ларнă. Эрих Клеберăн роти çапăçусенче сайралса юлнă пирки ăна виçтăватă хутчен пополнени панă, анчах вăл та ик-виç кунтах пĕтнĕ.

«...Ивансем урса кайрĕç пулмалла,— тесе çырнă вара обер-лейтенант хăйĕн савниййĕ патне.— Паян вы-

рассен артиллерийĕ сакăр сехет хушши пĕр чарăнмасăр печĕ. Таврара пĕр çĕр лаптăкĕ те тĕрĕс-тĕкел юлмарĕ... Тăвата унтер-офицер, хĕрĕх çичĕ салтак пĕтрĕç манăн паян...»

Ĕçсем кунран кунах начарланнă. Совет салтакĕсем ир те, каç та, кăнтăрла та канăç паман нимĕçсене.

«Пурнăç мар ку, тамăк! — тесе çырнă Клебер пĕринче, питĕ вăйлă бомбежкă хыççăн.— Ним те ăнланмастăп, пуçа тăм тултарнăн туйăнать. Вырăссем пире пачах та сывлăш çавăрма памаççĕ. Иккĕмĕш кун ĕнтĕ продовольстви çук, эпир выçă. Пирĕн пата килекен обоза партизансем тапăнса туртса илнĕ, тет. Хăрушă сăмах вăл — партизан! Сисĕнет — пирĕн салтаксем халь киле каясси çинчен çеç шухăшлаççĕ... Ĕнер иккĕшне çар трибуналне патăм — хăйсене хăйсем перепере амантнă. Сана текех курăп-ши эпĕ, чунăмçăм Эльза?»

Совет полкĕсем хĕссе пынипе вĕсен участокĕнче талккишĕпех отступлени пуçланса кайнă. Клеберсен батальонне те хĕвеланăçнерех куçса тăма хушнă. Вĕсен пĕрмай вăрманлă, шурлăхлă вырăнсемпе пымалла пулнă. Кунта вара фронтринчен те кансĕртерех килнĕ вĕсене: партизансем ăнран кăларнă... Е сасартăк тапăнса харăсах аллă-утмăл çын пĕтереççĕ, е обоза татса юлаççĕ, е постра тăракансене сĕтĕрсе каяççĕ! Хăйсене — курса та юлма çук...

«Пĕрне те пулин тытасчĕ! Пĕрне кăна!.. Кăтартăттăм вара эп хам мĕн тума пултарнине. Ĕмĕр асăнĕччĕç!» — шăлне çыртса чышкисене чăмăртанă Клебер, партизансем çинчен асăнсанах.

Кĕçĕр секретра пулнă салтаксем совет партизанне тытса килни çинчен пĕлтерсен вара — тăруках сив чир тытнă пек, пĕтĕм кĕлеткипе чĕтреме ернĕ вăл.

Груша пÿлĕме пырса кĕрсен, темиçе самант хушши вăл нимĕн те калаймарĕ, ăна кĕç çисе яма хатĕрленнĕ пек пăхрĕ çеç. Груша та ун çине куç харши айĕпе

сиввĕн, епле пулсан та татăклă ответ пама хатĕрленсе пахрĕ.

— Русс? — хыттăн ыйтрĕ Клебер, тăрсан-тăрсан. Тĕрĕссипе, вăл пĕр хуша тĕлĕнсе те тăчĕ: «Партизана илсе килтĕмĕр»,— тенине илтсен, вăл хăй ларакан пӳлĕме халех калама çук хăруша, çӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ, кĕреçе анлăш хура сухаллă, урлă та пирлĕ пулемет лентисем, гранатăсем, пистолетсем çакса тултарнă тискер сăнлă этем кĕрсе тăрасса кĕтнĕччĕ. Ун выранне кунти ялсенче кашни кунах тĕл пулакан хресчен хĕрне çеç курчĕ вăл. Ним хăрушши те çук ун çумĕнче... Неушлĕ çакă партизан вара?

Тĕплĕрех тĕпчесе пĕлме шут турĕ вăл. Анчах пĕр те пĕр ку чакăр куçлă хĕрача чăнах та партизан пулсан, вара мĕн тумаллине пĕлĕп, терĕ.

— Русс? — татах ыйтрĕ Клебер.

— Вырăс,— терĕ Груша, куçĕсем çине анма пуçланă çӳç пайăркисене тӳрлетсе.

Клебер алăк патĕнчи салтака тем хушрĕ те, лешĕ хăварт чупса тухса кайрĕ.

— Партизан? — ыйтрĕ нимĕç.

Груша пуçне пăркаларĕ.

— Çук.

— Коммунист? Комсомоль?

— Çук...

Обер-лейтенант васкасах сигарă чĕртсе ячĕ те çăра тĕтĕме çине-çинех çăтма тытăнчĕ. Хайĕн куçĕсем Грушăна çаплах çирĕç, йывăррăн сывланипе унăн сăмса çунаттисем сиккелерĕç, халхи вĕçĕсем те хĕрелсе кайрĕç...

Груша инçетри тăван ялĕнче юлнă ватă амăшĕпе йăмăкне аса илчĕ... Мĕн тăваççĕ-ши вĕсем çак самантра? Туяççĕ-ши мĕн те пулин? Амăшĕ ăна хытă сыхланса çӳреме хушнăччĕ — май килмерĕ... Текех таврăнасса кĕтеççĕ пулĕ-ха... Кĕтсе илеймеççĕ ĕнтĕ. Вăхăт нумаях та иртмĕ — нимĕççене хăвалаçа ярĕç, сывă

юлнисем пурте тăван килĕсене таврăнса ĕçе тытăнĕç, анчах Грушăна кĕтни кăлăхах пулĕ. Çапах та паллана çынсем пурте ыр сăмахпа асăнĕç-ха, çамрăк пуçне халăх телейĕшĕн хучĕ, тейĕç...

Майĕпе Грушăн шухăшĕсем отрядри юлташĕсем çине куçрĕç.

— Мурат пĕлтерчĕ-ши вĕсене, çук-ши? Ним калама та ĕлкĕреймерĕм-çке... Хăй чухласа илсен кăна ĕнтĕ...

...Алăкран халь çеç таçта тухса чупнă салтакпа пысăк куçлăхлă унтер-офицер килсе кĕчĕç. Обер-лейтенант ăна хăй патнелле чĕнсе темскер каларĕ. Ку тăлмачă пулнă иккен, ăна юриех Грушăна допрос тума чĕнсе пынă.

Тăлмачă куçлăхне хывса шăлчĕ, унтан каллех тăхăнса Груша çине чалăшшăн пăхрĕ те тĕпчеме тытăнчĕ.

— Кала-ха, хитре хĕр, мĕн ятлă çав эс?—терĕ вăл, вырăс сăмахĕсене кутăн-пуçăн çавăркаласа.

— Мĕн тума кирлĕ вăл сире? — тӳрех татса хучĕ Груша.

— Ыйтнине калас пулать, унсăрăн эпир урăх майпа калаçтаратпăр,— тутине пăркаласа илчĕ тăлмач.— Ну... Мĕн ятлă?

— Маруська.

— Аван ят... Миçе çулта?

— Çирĕмре.

— Хăш ял çынни эсĕ?

— Инçетрисем, кунтан курăнмасть. Петровкăсем.

— Так, так... Партизана хăçан кайнă? — тăрук сассине хытарса ыйтрĕ тăлмач.

— Ниçта та кайман эп. Партизан та, никам та мар. Мана йăнăшпа тытса килчĕç кунта. Эп тăвансем патне кайма тухнăччĕ... Çĕрле çул çухатрăм, йăнăш пулчĕ.

Тăлмачă ун сăмахĕсене обер-лейтенанта куçарса

пачĕ. Лешĕ ун çине хаярран пăхрĕ те чышкипе сĕтел çине шаккаса илчĕ.

— Найн, найн!..* — Çавăнтах салтака приказ пачĕ. Салтак вара ним каламасăрах Грушăна хăй патнелле карт! пăрса тăратрĕ те — малтан тутрине сӳсе илчĕ, унтан пиншакне хывтарчĕ, кĕпине вĕçертме тытăнчĕ...

— Ан тив! Намăссăр! — салтака чавсипе аяккалла сирчĕ Груша. Вăл хăйне ухтарма тытăннине ăнланчĕ. Ку ăна пĕтĕмпех пĕтерсе хума пултарать, мĕншĕн тесен унăн хĕвĕнче пистолет пур. Паçăр, çырма хĕрринче кĕрешнĕ чух, вăл ăна ниепле те кăларса пăрахма ĕлкĕреймерĕ. Салтак ăна ним намăса пĕлмесĕр хыпашларĕ...

Груша салтака хулпуççийĕпе тĕртсе ячĕ.

— Ан çыпçăн, ирсĕр!

Клеберпа тăлмачă пĕр харăс сиксе тăчĕç.

— Молчайт! Зобак! — темле çинçен çухăрса ячĕ Клебер. Унччен те пулмарĕ — Груша патне хăй ыткăнса пырса, салтакпа пĕрле ун тумне турткаласа çурма, сĕвсе пăрахма тапратрĕ. Урнă йытă пекех пулса кайрĕ вăл... Кăптăрт! — тухса ӳкрĕ Груша хĕвĕнчи пистолет.

— О-оо! — куçлăхне йăпăр-япăр хывса пăхрĕ тĕлĕнсе хытнă тăлмачă.— Халь пĕтĕмпех паллă!

— Партизан!..

— Кала, йытă, ăçта сирĕн отряд? — йывăррăн хашкама тытăнчĕ тăлмач.

Груша нимĕн те чĕнмерĕ, хăйне халех асаплантарма тытăнасса кĕтсе шăлĕсене хытăрах çыртса лартрĕ çеç.

— Кала тӳррипе, ăçта сирĕн отряд?

Груша чĕнмерĕ.

Тăлмачăпа обер-лейтенант пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

— Итле эсĕ,— терĕ кун хыççăн тăлмачă, пĕр хушă

---

* Çук, çук!

юриех йаваш пек пулма тăрăшса.— Хĕрхен хăвăн пурнăçна! Çĕр çинче пурăнасах тетĕн пулсан — эпир ыйтнисене пĕтĕмпех каласа пар. Çăлăнмалли май — пĕр çав кăна санăн. Пурин çинчен те йĕркипе каласа парсан — халех кăларса яратпăр, хуть те ăçта кай. Анчах калаçмасăр тăрсан... Ну?

Груша тутисене те хускатмарĕ.

— Ну? — ун куçĕнчен шăтарасла пăхрĕ тăлмачă.— Кала йĕркипе. Халĕ ĕнтĕ тунса тăмалли çук, эсĕ партизан пулнине тĕп-тĕрĕс пĕлетпĕр. Сана таçта темле ĕç хушса яна пулнă, анчах эсĕ пирĕн салтаксен аллине лекнĕ. Санпа пĕрле юлташ пулнă, вăл тарнă. Çапла вĕт?

— Çук...

— Çук мар, çапла! Кала йĕркипе: ăçта тăрать сирĕн отряд? Миçе çын унта? Кам сирĕн командир? Мĕнле хĕç-пăшал пур сирĕн? Çак сведенисене парсан, каллех калатăп, çак самантрах кăларса ятарпăр. Ну?..

Самахпа илĕртни çитмест — тăлмачă сĕтел хушшинчен тухса Грушăпа юнашар тăчĕ те аллине ун хулпуççийĕ çине хучĕ. Хайĕн кăвак кантăк тĕслĕ куçĕсем чарăна пĕлмесĕр сиккелерĕç.

— Кала, кала часрах... Хăвăн пурнăçна çăлатăн вĕт. Эс халĕ çамрăк-ха, санăн пурăнас пулать...— ачашланçи турĕ вăл.— Итле пире, эсĕ...

— Эп нимĕнле партизансене те пĕлместĕп,— терĕ Груша.— Эп курман вĕсене. Вĕлерĕр, çакăр, çунтарса ярăр — урăх нимĕн те каламалли çук манăн!

Нимĕççем иккĕшĕ те юпа пек хытса тăчĕç. Анчах ку пĕр самантлăха çеç пулчĕ. Тепĕр самантĕнчех обер-лейтенант ăна янахĕнчен çапса ӳкерчĕ. Унтан вăл ăна тапрĕ, чышрĕ, çӳçĕнчен çĕкле-çĕкле пуçĕпе урайне çапрĕ, таптарĕ...

— Татах! Лайăхрах! Хытăрах! — мĕкĕрчĕ тăлмачă. Груша ĕнтĕ вĕçне çитичченех тӳсес терĕ. Вăл пĕр йынăшнă сас та кăлармарĕ, чи хĕнлĕ самантсенче

шăлĕсене шăтăртаттарчĕ çеç. Нимрен ытла вăл хăйĕн пуçне тата чĕре таврашне сыхлама тăрăшрĕ.

Хашкакан пулса çитсен, офицер сĕтел пуçĕнчи пукан çине йывăррăн пырса ларчĕ. Салтака пуçĕпе сулчĕ те, лешĕ пачах анраса çите пуçланă Грушăна вайпах турткаласа ура çине тăратрĕ. Ӳкес мар тесе, Груша стена çумне тайăнчĕ, нимĕçсем çине урăх пачах та пăхмарĕ. Унăн тăнлавĕсем тăрăх çăра юн тумламĕсем сăрхăнса анчĕç, пуçĕ çав тери шавларĕ, шăмă сыпписем сăрлатса сурса тăчĕç...

— Халь калаçатăн-и? Пăртак ăс кĕчĕ-и? — ыйтрĕ тăлмачă хăйăлтатакан сасăпа.

Груша çамки тăрăх куçĕсем çинелле юхса анакан юна шăлса илчĕ те пуçне ерипен кăна пăркаларĕ.

— Пĕр сăмах та каламастăп... Эп нимĕн те пĕлместĕп...

— Курăпăр!

— Куратăр ĕнтĕ...

— Молчать! Халех кала, сысна: ăçта сирĕн отряд? Миçе çын унта?

Груша пĕр хушă шухăшласа тăчĕ те сулăна-сулăнах сĕтел патне пырса тăчĕ. Куçĕсем темле уйрăмах хыттăн ялкăшрĕç унăн...

— Питех пĕлес килет-и? — ыйтрĕ вăл хуллен.— Итле эппин: пирĕн отряд пур çĕрте те вăл... Вăхăтлăха сирĕн алла лекнĕ ялсенче миçе çын пур — çавсем пурте партизансем! Ватти те, вĕтти те, арçынĕ те, хĕрарăмĕ те! Шутласа кăларăр!

— Санпа кулса калаçмаççĕ! — чышкипе сĕтел çине çапрĕ тăлмачă.— Эс тĕрĕсне кала! Халех кала!

— Урăх каламалли нимĕн те çук манăн,— терĕ Груша.— Пĕр сăмах та çук, илтрĕн-и?

Тăлмачă обер-лейтенанта куçарса пачĕ, çав самантрах, Клебер хушнă тăрăх, салтак Грушăн аллисене каялла пăрса хучĕ. Ыратнипе Груша кукленсех ларчĕ, анчах пĕр сăмах та каламарĕ.

— Ăçта?! — кăшкăрчĕ тăлмачă.— Ăçта сирĕн отряд?

Салтак, унăн аллине татах пăрса, мăкăлтас патнех çитерчĕ. Груша пурĕпĕр шарламарĕ. Анчах хăй ăнран кая пуçларĕ...

* * *

Яла Мурат хĕвел тухнă вăхăтра тин çитрĕ. Нумаях та пулмасть çыварса кайнă летчика вăл хулпуççинчен хуллен кăна тĕртсе вăратрĕ. Тĕттĕм çĕрте лешĕ ăна тăруках паллаймарĕ пулас, часрах пуç айĕнчи пистолетне çавăрса тытрĕ, анчах палласа илсен — калама та çук тĕлĕнчĕ.

— Мĕн пулнă? Ма килтĕн? — темскерле ырă мар ĕç пулнине сиссе ыйтрĕ вăл.

— Ăнмарĕ...— хаштах сывласа ячĕ Мурат.

Малинин ăна хулпуççинчен пăчăртаса тытрĕ.

— Мĕнле апла? Груша ăçта?

— Лекрĕ пулмалла, эп ăна кураймарăм,— терĕ те Мурат салхуллăн, ĕç мĕнле пулни çинчен каласа пачĕ.

— Кĕтсех тăрас пулать ĕнтĕ — халĕ вĕсем хуралсене темиçе хут вăйлатаççĕ, килрен киле ухтарма тапратаççĕ. Ялти çынсене хĕç-пăшал парса çирĕп ушкăн тума хĕн пулать. Игнат Дубовăн отрячĕ пирĕн çинчен нимĕн те пĕлмест, унпа çыхăну çук... Мĕн мурĕ тăвас пулать? — пăлханса кайрĕ Малинин.

— Калама та пĕлмелли çук çав,— килĕшрĕ Мурат.— Ытла та кĕтмен çĕртен пулса тухрĕ ку...

— Ну, юрĕ, кăшт кĕтер-ха, ĕçсем малалла мĕнле пулса пырĕç,— терĕ пăртакках ларсан Малинин.— Кам пĕлет, тен, Груша та хăтăлнă?

Çапах та, вăл Муратпа Митькăна урама сăнама кăларса ячĕ. Ачасем нумай та çӳремерĕç — хашкаса каялла чупса таврăнчĕç.

— Ял Совечĕ умĕнче фашистсем çын çакмалли такан тăваççĕ. Виселицă,— пĕлтерчĕ Мурат. Унăн кăва-

карса кайнă тутисем чĕтресе тăчĕç.— Ик юпине лартнă, халь урлă каштине хураççĕ...

— Ку вара ытла та япăх! — Малинин та санран палăрмаллах улшăнчĕ. Ун пуçĕнчи шухăшсем тата хытăрах явăнма тапратрĕç.

— Мĕн тăвас? Мĕн тăвас? — çак ыйту тухса тăчĕ ун умне. Ответне халь питĕ хăвăрт тупмалла пулнă, пĕр минут та кĕтсе тăма юраман.

— Дубов отрячĕ хăш тĕлте тăнине пĕлетĕн-и эс?— ыйтрĕ Малинин тепĕр темиçе самантран, Мурата куçĕнчен пăхса.— Груша каларĕ-и сана?

— Каларĕ...

— Кайса тупма пултаратăн-и?

— Тупатăп.

— Апла пулсан — халех вĕçтер. Хуть епле пулсан та, вĕсем кунтарах килме тăрăшчăр, пĕрмай çыхăну тытма май пултăр. Эпир кунта мĕн пулнине сăнаса пырăпăр... Анчах та хăвăртрах каялла таврăнма тăрăш!

— Юрать, Сережа пичче!

Мурат хăпăл-хапăл пуçтарăнчĕ те урамалла тухрĕ. Унта та кунта нимĕç салтакĕсем çӳреççĕ. Пĕр хушă иккĕленсе тăчĕ: урампа каяс-ши, анкартисем хыçне тухас-ши? Унта та, кунта та тытса чарма пултараççĕ...

— Ара, манăн маскировкă пур-иç! — Груша çавăтса килнĕ качакана аса илчĕ Мурат.— Манăн та уса курас унпа!

Мурат картишĕнче çӳрекен качакана çавăтрĕ те урампа хăюлăнах тухрĕ. Нимĕç салтакĕсем ун çине çавăнса та пăхмарĕç. Ял Совет тĕлĕнче çеç, Мурат виселица çине пăхма чарăнса тăнине курса, пĕри хаяррăн алăпа сулчĕ:

— Иртсе кай часрах!

Мурат малалла утрĕ. Уй хапхинчен тухсан, вăл Журавлиха енчен темиçе çын килнине асăрхарĕ. Варринче — чечеклĕ сараппан тăхăннă çара пуçлă хĕр-

арăм. Ку ăна татах темле ырă мар япала пек туйăнчĕ...

Качакине çул хĕрринчи курăка çитернĕ пек пулса, хапха патĕнче тытăнса тăчĕ вăл, çулпа утакансем çине куç илмесĕр пăхрĕ. Журавлихă енчен темиçе гитлеровец, вĕсемпе пĕрле ахаль тум тăхăннă тепĕр çын — Акулина Петровнăн кинне, Ленăна тытса килеççĕ-мĕн. Ленăн çав тери шурăхса, улшăнса кайнă питне темиçе çĕртен шăйăрса пăрахнă, сараппанне çуркаласа пĕтернĕ.

— Эх! Ку та лекнĕ!— яштах турĕ Мурат чĕри.— Никам та мар, хайхи Булдыгин сутнă ĕнтĕ ăна. Ахаль тум тăхăнни çавă пулĕ-ха. Чăнах çавă, йытă, сутăнчăк!

Çынсем хăйпе танлашсан, Мурат хĕртнĕ тимĕр çинче тănă пекех пулчĕ. Лена ăна палларĕ. Вăл картах сиксе илчĕ, темскер калама тăчĕ, анчах сăмах хушсан Мурата та пĕтерсе хурассине тавçăрса илнипе çеç нимĕн те чĕнмерĕ.

— Чупас!.. Халех отряда çитсе пĕлтерес! Халь пĕтĕмпех манран килет... Эх, ĕлкĕресчĕ!

Вăрман хĕррине çитсен, качакине ирĕке ярса хăварса, вăл çырмасемпе шурлăхсем урлă Игнат Дубовăн отрядне шырама чупрĕ.

* * *

Ниçта чарăнса тăмасăр чупрĕ вăл... Ытлах пўлĕнме пуçласан, сывлăш çавăрса илме пĕр хуша утса пычĕ, унтан каллех чупрĕ. Лачкам шыва ўкрĕ хăй, çири кĕпи çурăмĕ çумне çыпçăнса ларчĕ.

— Пĕтĕмпех манран килет... Эп отряда вăхăтра çитсе пĕлтермесен — Грушăпа Лена иккĕшĕ те пĕтеççĕ, пулаймасть вара вĕсене çăласси...— çине-çине мăлатукпа шаккана пек янраса пычĕ унăн пуçĕнчи шухăш.

Акă ĕнтĕ, вăл икĕ уй урлă каçса пĕр пысăк, вăрманлă çырма хĕррине çитсе тухрĕ. Çырмара — самаях анлă шыв юхса выртать, сахалтан таултă-çичĕ метр



сарлакăш пулĕ. Ана тарахра Мурат кĕпер курчĕ. Кĕперĕн икĕ вĕçĕнче те нимĕçсен часовойĕсем çÿреççĕ.

— Тытаççĕ кусем мана, — шухăшларĕ Мурат. Унтан вăл çырма хĕррипе тăвалларах чупса кайрĕ, кĕпер курăнми пулсан вара сăртран анчĕ те, шыва кăкăр таран кĕрсе, вăрăм хăмăшсем хушшипе ишме тытăнчĕ...

Сив шывра пулни ун шăм-шакне уçалтарсах ячĕ, çаванпа та вăл татах çăмăллăн чупрĕ.

Хĕвел кăнтăр тĕлнелле çитме пуçларĕ.

Мурат ансăр проççек тăрăх унталла та кунталла пăхса пычĕ. Груша калана тăрăх, вĕсен отрячĕ таçта çак таврашра тăмалла.

— Тĕрĕс, тĕрĕс... Акă, такам пăрахса хăварнă кивĕ урапа выртать...— сăнаса утрĕ Мурат.— Акă, вăрман чиккине кăтартакан юпа... Çакăнтах вĕсем, çакăнтах!

— Стой! — терĕ тахăшĕ çав самантра. Лапсăркка йывăç тĕмĕсем хыçĕнче винтовкă затворĕ шакăлтатса илчĕ.

Мурат тăпах чарăнса тăчĕ. Вăрмантан вăл палламан икĕ çамрăк сиксе тухрĕç те тÿрех ăна автомачĕсемпе тĕллерĕç. Карттусĕсем çинчи хĕрлĕ хăюсем тăрăх, Мурат, вĕсем партизансем пулнине тавçăрса илсе, пĕртте çухалса каймарĕ.

— Кам эс? — ыйтрӗҫ ҫамрӑксем.

— Мурат... Курмастӑр-им?

— Ӑҫта каятӑн?

— Сирӗн пата килтӗм. Игнат Дубов отрядне, «Фашизма — вилӗм!» тенине шыратӑп.

— Кам ячӗ сана кунта?

— Никам та яман, хам килтӗм...

— Отряд ҫинчен ӑҫтан пӗлетӗн эппин?

— Калаҫрӗҫ!

Партизансем пӗр-пӗрин ҫине пӑхса илчӗҫ. «Ку — кам та пулин ятарласа янӑ шпион мар-ши?» — терӗҫ пулмалла.

— Кӗр-ха кунта! — Мурата кӑчӑк туртса вӑрманалла чӗнчӗ пӗри.

Мурат тарӑха пуҫларӗ. Ара, патне ҫитнӗскере чӑрмантарса тӑраҫҫӗ! Дозорнайсем татах тӗпчеме пуҫласан, вӑл тек тӳссе тӑраймарӗ, тӳррӗн каласа хучӗ вӗсене:



— Сирӗнпе юмах ярса тӑма вӑхӑт ҫук манӑн! Ӑҫтине пӗлетӗр пулсан — часрах Игнат Петрович патне илсе кайӑр! Ман васкас пулать. Лере нимӗҫсем партизансене ҫакаҫҫӗ, эсир шӑл хӑйратӑр...

— Мӗнле партизансене? Ӑҫта? — пӗр харӑс, тӗлӗнсе ыйтрӗҫ ҫамрӑксем.

— Грушӑна эсир пӗлетӗр-и? — ҫилӗпе пӑхрӗ вӗсем ҫине Мурат.

— Пӗлетпӗр... Пирӗн хӗр вӑл...

— Анчах ăçта вăл халь?

— Разведкăна кайнăччĕ пулас...

— Кайнăччĕ! — витлесе илчĕ Мурат.— Ăна нимĕçсем тытнă, пĕлетĕр-и? Хальччен çакмарĕç пулсан — пырать-ха, виселицине ирех туса çитернĕччĕ. Ну? Тата мĕн пăхса таратăр? Ăçта Игнат? — хăтăрса такрĕ Мурат.— Атьăр часрах ун патне!

Самантранах вĕсем вăрманалла кĕрсе кайрĕç.

* * *

...Нумайччен ним пĕлми выртнă Груша тăна кĕрсе куçĕсене уçсанах, обер-лейтенант Клебер ăна каллех хăй патне çавăтса кĕртме хушрĕ.

— Юлашки хут тĕпчесе пăхар, тен, мĕн те пулин калĕ,— терĕ вăл тăлмача.— Паçăрхи пекех кутăнланса тăрсан, халех çакатпăр вара!

— Ох, вăл совет халăхĕ!— пит-куçне пăркаласа илчĕ тăлмача.— Вилеççĕ, çапах та паранмаççĕ! Эпир ĕнтĕ миçе çынна çакнашкал тытса асаплантартăмăр пуль, анчах камран пĕр путлĕ сведени илтĕмĕр?

— Никамран та илеймерĕмĕр çав,— килĕшрĕ Клебер. Вăл сĕтел çине чавсаланчĕ те пӳрнисемпе тăнлавĕсене пăчăртарĕ.— Нихçан та парăнтараймастпăр пуль эпир ку Ивансене! Шуйттанла çирĕп халăх!..— терĕ вăл.— Эрех юлнă-и пирĕн?

— Пур пăртак...

— Пар кунта, тӳсме çук пуç ыратать...

Тăлмача тепĕр пӳлĕмрен мăн хырăмлă кĕленче илсе килсе лартрĕ. Иккĕшĕ те пĕрер бокал ярса ĕçрĕç.

— Виселицине туса пĕтерчĕç-и унта? — ыйтрĕ Клебер.

— Халех пулать, терĕç.

— Пĕтĕм халăха хăваласа пухас, ватти, вĕтти — пурте курччăр эпир мĕн тума пултарнине!

— Юрать.

Клебер кĕленчери юлашки эрехе ĕçрĕ. Çав вăхăтра

пӳлёме икӗ салтак Грушӑна ик енчен ҫавӑтса кӗртрӗҫ. Грушӑн пичӗ-куҫӗ талккишпех кӑвакарса, хуралса ҫӗрсе ларнӑ, ҫӑварӗ тавра юн типсе хытнӑ. Ирхине кӑна, ҫак пӳлёме пӗрремӗш хут кӗнӗ чух, вӑл ҫутӑ сӑнлӑ, ҫавракапитлӗ, ҫав тери илемлӗ хӗрччӗ, халь вара ӑна ҫывӑх тусӗсем те тӑруках палласа илеймен пулӗччӗҫ,— фашист тискерӗсем Грушӑна калама та ҫук хӗнесе, амантса тӑкнӑ. Анчах унӑн сӑнне ҫеҫ пӑсма пултарнӑ ҫав вӗсем! Темле хӗнесен те, темле асаплантарсан та унӑн чӗринчи ҫулӑма сӳнтереймен, унӑн кӑмӑлне хуҫайман, хуҫма та пултарайман. Халь, иккӗмӗш допроса илсе пырсан, обер-лейтенантпа тӑлмачӑ ӑна каллех темӗн тӗрлӗ те асаплантарса пӑхрӗҫ — усси пулмарӗ...

Юлашкинчен, тӑлмач Грушӑна чӳрече патне сӗтӗрсе пырса урамалла кӑтартрӗ:

— Куратӑн-и — виселицӑ? Ҫакатпӑр сана халех!— терӗ вӑл, кӑпӑкланнӑ тутисене чӑмласа.— Санӑн пӗтӗм пурнӑҫу та пилӗк минут ҫеҫ юлчӗ! Ӑнлан ҫавна! Анчах партизансем ҫинчен пӗлнине ним пытармасӑр каласа парсан — хӑтӑлма пултаратӑн-ха эс...

Халран кайнӑ Груша пӗр хушӑ чӳрече янахӗ ҫумне тайӑнса урамалла пӑхса тӑчӗ те, хуллен кӑна:

— Часрах ҫакӑр,— терӗ...

Кун пек ответ нимӗҫсене ӑнран кӑларсах ячӗ. Вӗсем ҫак тыткӑна лекнӗ вырӑс хӗрӗ, виселицӑна курнӑ хыҫҫӑн, тӑруках чӗркуҫленсе ларса каҫару ыйтасса, партизансем ҫинчен пӗтӗмпех каласа парасса кӗтнӗччӗ,— анчах ун вырӑнне хӗрӗн чӗри тата ытларах ҫирӗпленнине ҫеҫ курчӗҫ.

— Ҫитет! — кӑшкӑрса ячӗ обер-лейтенант, хӑйне вӗри шывпа сапнӑ пек сиксе тӑрса.— Ҫитет! Урӑх пӗр ыйту та ан пар ӑна! Халӑха пухас та — ҫакас! Халех ҫакас!..

Сасартӑк алӑк уҫӑлчӗ. Пӳлёме Журавлихӑри полицейски Мишка Булдыгин кӗрсе тӑчӗ.

— Господин обер-лейтенант,— терĕ вăл, салтак пекех чеç парса.— Эсир хушнă тăрăх Журавлихăрь партизан арăмне тытса килтĕмĕр...

— Кам вăл?

— Лена... Елена Бобкова, учительница, комсомолкă. Упăшки — партизанра çÿрет, хăй Германи влаçĕсене пăхăнмасть, налог илме пырсан мана, сирĕн представителе, питрен сурчĕ... Ун çинчен эпĕ сире ĕнерех рапорт çырса патăм...

— Илсе кĕртĕр! — куçĕсене ялкăштарса илчĕ Клебер.

Булдыгин, каллех чеç парса, пÿлĕмрен тухрĕ, тăлмачă Клебер умне чупса пырса тăчĕ.

— Ман шутпа, герр обер-лейтенант, полицай калани чăнах пулсан, иккĕшне пĕрле çаксан хитререх пулать... Халăхшăн ĕнентерÿллĕрех. Тен, пирĕнтен ытларах хăракан пулĕç.

— Кама — иккĕшне?

— Ку партизанкине тата халь илсе килнине...

— Эпир çакмастпăр вĕсене...— Клебер пукан çине ларчĕ те пушă бутылкăна тытса пăхрĕ.— Эпир вĕсене вут çинче çунтаратпăр! Пĕтĕм халăх умĕнче чĕррĕн ăшалатпăр. Ун пек опыт туса курман-ха эп, тен, ахаль çакнинчен авантарах пулĕ... Пар-ха кунта тепĕр бутылкă коньяк!

— Халех, герр обер-лейтенант... Кăвайт çинче çунтарас пирки эсир чăнах та лайăх шухăшлана!

Тăлмачă эрех патне тухрĕ, Мишка Булдыгинпа икĕ нимĕç салтакĕ Ленăна илсе кĕртрĕç.

— Ак çакă ĕнтĕ вăл, партизан арăмĕ. Германи влаçĕсене пăхăнманскер, ман çине сураканскер! — пĕлтерчĕ Булдыгин обер-лейтенанта.

Клеберпа Ленăн куçĕсем тĕл пулсанах, нимĕç ку хĕрарăмпа калаçни ăна нимĕнле усă та парас çуккине ăнланчĕ. Çав тери хаяр, нихçан сÿнес çук курайманлăхпа пăхрĕ ун çине Лена...

* * *

Мурата партизансен отрядне пулӑшу ыйтма ӑсатса янӑ хыҫҫӑн Сергей Малинин летчик пӗр самант та лӑпкӑн ларма пултараймарӗ. Ҫӗр тӗслӗ те шухӑшласа пӑхрӗ вӑл. Фашистсем Грушӑна каҫарас ҫуккине, вӗсем ӑна ҫакассине е персе пӑрахассине пӗлсех тӑчӗ... Ял Совечӗ тӗлӗнче нимӗҫсем виселица тума тытӑнни ҫинчен пӗлсен, Малинин пушшех пӑлханса кайрӗ.

«Эппин, паянах ҫакаҫҫӗ... Партизансем килсе ӗлкӗреймеҫҫӗ ӗнтӗ... Кантӑрла вӗт, каҫ мар, ӑҫтан килме пултарччӑр вӗсем? Хамӑр вайпах мӗн те пулин тӑвас пулать...»

Вӑл хушнипе, Митька Иван Степанча чӗнсе пычӗ.

— Ну, старик, пирӗн ӗҫе тытӑнмалли вӑхӑт ҫитрӗ,— терӗ ӑна летчик.— Нимӗҫсем мӗн тума хатӗрленнине пӗлетӗн-и эс?

— Пӗлетӗп,— терӗ Иван Степанч пусӑраннӑ сасӑпа.— Хам куҫпах кайса куртӑм вӗсем мӗн шут тытнине... Такама пӑвасшӑн, ӑна пӗлместӗп...

Малинин ӑна Грушӑпа мӗн пулнине кӗскен кӑна каласа пачӗ.

— Ав епле канитель...— терӗ Иван Степанч, летчикӑн сӑмахне итлесе пӗтерсен.— Мӗн шутлатӑн-ха вара эс?

— Хӑвна итлеме пултаракан ҫынсене пухас пулать, старик.

— Вара мӗн?

— Хӗҫ-пӑшаллантарас та виселицӑ таврашӗнчи пӳртсен маччисем ҫине вырнаҫтарас... Вӑхӑчӗ ҫитиччен ларччӑр, кайран мӗн тумаллине курӑпӑр. Ӑнлантӑн-и?

— Ӑнлантӑм.

— Питӗ хӑрушӑ утӑм ӗнтӗ ку, анчах урӑх ним тума та май килмест, Иван Степанч. Вӗсен гарнизонӗ пысӑках мар курӑнать, тен, хамӑр ҫынсене хӑтарса

вăрманалла пытанма ёлкĕрĕпĕр. Эп паçăрах партизансем патне чуптартăм, тен, вĕсем те килсе тухĕç. Вара пирĕн ĕç питех те çăмăлланатчĕ...

— Эс ху ăçта пулас тетĕн?

— Мана валли эс е хамăрăн ручной пулемета, е нимĕçсен автоматне туп. Патронсем ытларах пулччăр. Вара эпĕ те виселица çывăхнерех куçатăп. Пĕр çирĕмвăтăр нимĕçе леш тĕнчене ăсатмасăр парăнмăп, тесе шутлатăп...

Иван Степанч çакăн хыççăн нумай лармарĕ, летчик аллине хытă чăмăртарĕ те, Митькăсем патĕнчен васкасах тухса кайрĕ.

Летчик йĕп çинче ларнă пек ларса юлчĕ: мĕн пулĕ-ши?..

• • •

Кăнтăрла иртсен икĕ сехетре пур урамсенче те халăха хăвалама тытăнчĕç:

— Халех пурин те ял варрине, площаде пухăнмалла!

— Кам та кам çирĕм минутран унта пымасть — хăйне валли аллă розгă туянать...

— Пыни-пыманнисене список тăрах тĕрĕслеççĕ!

Хăраса ӳкнĕ çынсем ирĕксĕрех ял Совечĕ тĕлĕнчи площаделле туртăна пуçларĕç. Ваттисем—туясем çине таянса, хĕрарăмсем — чĕчĕ ачисене çĕклесе, кăшт пысăкрах ачисем амăшĕсен кĕпе аркисенчен тытса утрĕç. Хăйсене мĕн пирки кун пекех васкавлăн пухнине малтанах никам та пĕлмерĕ, анчах та хушнă çĕре çитсен, урамра çӳллĕ те тĕреклĕ виселицă тăнине, унăн урлă каштинчен çĕрелле вĕçĕсене ункăланă вĕренсем усăнса тăнине курсан, кашниех ăнланчĕ.

— Такама çакаççĕ...

— Пире çавна пăхса тăма хăваласа пухнă...

— Эх, çынçиенсем, хураюнсем!

— Пĕрерĕн-пĕрерĕнех пĕтереççĕ пуль ĕнтĕ вĕсем пире...

— Чим-ха, тен, хăçан та пулин шалчи тулĕ!
— Асту, хуллен калаç, такам илтсен...
— Хăвна та халех туртса çакĕç!
Çынсем çав тери пăлханнă пулин те, пĕр-пĕринпе пăшăлтатса çеç калаçрĕç. Халăха йĕри-тавра хĕç-пăшаллă нимĕç салтакĕсем хуралласа тăчĕç...

* * *

Çак вăхăтрах Игнат Дубовăн отрячĕ пытаннă вăрмантан нимĕçле тумланнă кавалеристсен эскадронĕ сиктерсе тухрĕ те Журавлихă еннелле каякан çулпа вĕçтерчĕ. Эскадрон хыççăн «Максим» пулеметлă виçĕ тачанкă тата икĕ çамăл тупă кисренсе пычĕç.
Эскадрон командирĕ пит те васкарĕ, ахаль те çил пекех ыткăнса пыракан хура лашине пĕрмай хăваларĕ, вăхăтран вăхăта, каялла çаврăнса пăхса, хыттăн кăшкăрчĕ:
— Ан юлăр! Хăвăртрах!..
Анчах та вăл нимĕçле мар, вырăсла кăшкăрчĕ. Урăхла пулма та пултарайман: эскадрона Игнат Дубов ертсе пынă. Мурат ун патне çитсе нимĕçсем кĕçĕр Грушăна тытни çинчен, ăна çакса вĕлерме урамра виселицă тума тытăнни çинчен каласа парсанах вăл хăйĕн чи маттур партизанĕсене, аллă-утмăл çынна, нимĕçле тумлантарнă та лашасем çине утлантарса Грушăна тăшман аллинчен хăтарма васканă.
Кун пек чухне пĕр минут та теме тăрать... Нимĕçсем Грушăна кашни самантрах çакма е персе пăрахма пултарнă, çавăнпа та партизансем питĕ васканă. Вĕсен лашисем пурте нумай пулмасть пĕр çапăçура нимĕçсенчен туртса илнĕскерсем пулнă, халь вĕсем партизансене нимĕçсен гарнизонĕ çине сасартăк тапăнса аркатса тăкма илсе кайнă...
Игнатпа юнашар, илемлĕ кăвак лаша çинче, командиртан пĕр утăм та юлмасăр, ыттисем пекех нимĕç тумне тăхăннă Мурат вĕçтерсе пычĕ.

* * *

Виçĕ сехетре урамра виселица патĕнче тăракан халăх сасартăк пăлханса, хумханса, малтан шăппăн, унтан вăйлăрах, хытăрах шавлама тапратрĕ.

— Çакмалли çынсене илсе килеççĕ!..

— Ăçта, ăçта?

— Авă вĕсем, авă... Иккĕн, иккĕшĕ те хĕрарăм.

— Камсем-ши вара вĕсем?

— Ютран килнĕскерсем пулмалла.

— Пĕрне паллатăп эпĕ, Журавлихăри учительницă...

— Эх, мĕскĕнсем...

— Чăнах çакаççĕ-ши вара?

— Ахальтен туман ĕнтĕ ку виселицине!

— Хайсенеччĕ... Хайсене çакасчĕ çирĕпрех йывăçран!

— Ш-шш, кунталла пăранчĕç...

— Çул парăр, сирĕлĕр!

Вунă салтакпа икĕ унтер-офицер, халăха ик еннелле сирсе, виселица умне Грушăпа Ленăна илсе пырса тăратрĕç. Ял çыннисем, вĕсене курсан, шăпах пулчĕç. Кашниех шăлĕсене çыртса лартрĕ, кашниннех чĕри кӳтсе килчĕ. Çамрăк хĕрарăмсен кăвакарса, çĕрсе, юнланса пĕтнĕ сăн-питне, урлă-пирлĕ çурса пĕтернĕ сарапанĕсене курсан — нимĕçсем вĕсене çакăнта çакма илсе киличчен малтан мĕн тери асаплантарнине пурте пит лайăх чухласа илчĕç.

Самантранах виселица юпи çумне пырса лартнă сĕтелсем çине обер-лейтенант Клебер, тăлмачă тата вĕсем хыççăн Мишка Булдыгинпа икĕ салтак улăхса тăчĕç. Клебер аялти салтаксене темскер хушрĕ. Лешсем йăпăр-япăр таçтан икĕ каска пукан тупса пычĕç те, Грушăпа Ленăн майĕсене вĕрен майкăчсем тăхăнтарса, вĕсене çав пукансем çине хăпартрĕç.

Пăхса тăракан ял çыннисен кăкрисенчен çак са-

мантра сывлăш тухма та пăрахрĕ... Халех, çак минутрах вĕсен куçĕ умĕнчех калама та çук тискер те хăрушă ĕç пулмалла, икĕ совет çыннине çакса вĕлермелле пулнă-çке...

Мĕншĕн? Мĕн айăпшăн? Тискер тăшмана парăнманшăн, хайсен ирĕкне хӳтĕленĕшĕн, чура пулма килĕшменшĕн, этемле пурăнма ĕмĕтленнĕшĕн, Тăван çĕршывпа тăван халăхшăн кĕрешнĕшĕн!..

Халăх хушшинче, унта та кунта, хĕрарăмсем макăрни илтĕнчĕ...

* * *

...Партизансен эскадронĕ, çул тăрăх куç-пуç курăнми тусан мăкăрлантарса, вĕт вăрманлă çырма пуçне çитрĕ те — тăпах чарăнчĕ. Игнат Дубов лашасене йывăççем хӳттине кӳртсе пурне те çапăçăва хатĕрленсе тăма хушрĕ.

Унтан тӳрех Мурата ăнлантарма тытăнчĕ:

— Халех яла чуп, пĕтĕмпех пĕлсе кил... Мĕн пулса иртет унта? Нимрен ытла вĕсен салтакĕсен йышне пĕлме тăрăш. Май пулсан, хăвăн летчик тусна курса тух, эпир килни çинчен пĕлтер...

— Юрать.

— Чуп. Анчах асту, ан лек, часрах таврăн!

Мурат нимĕç тумне хывса пăрахрĕ те вĕт вăрман витĕр тӳрĕрен тӳрĕ, тĕмескесемпе лупашкасем урлă Митькăсен ялнелле ыткăнчĕ. Яла çитсе, виселица патне халăх пухăнса тăнине курсанах, вăл нимĕçсем Грушăна вĕлерме ĕлкĕрейменнине ăнланчĕ, анчах тĕрĕссипе пĕлме пĕр ватăрах хĕрарăмран хуллен кăна ыйтрĕ:

— Такама çакаççĕ-им, инке?

— Çапла, тет çав, çакаççĕ, тет,— тарăннăн сывласа ячĕ лешĕ.

— Кама-ши?

— Пĕлместĕп ăна... Тем пек курас мар тесен те — куратпăрах ĕнтĕ, юри хăваласах илсе килчĕç ав. Хăра-

нипе халех чĕтреме ертĕм... Хамăн та чун тухса каять пуль...

— А эс куçусене хупса тăр,— терĕ Мурат.— Пăхмасан — çăмăлтарах пулĕ!

Урăх унпала калаçса тăмарĕ вăл. Тата мĕн те пулин пĕлейменĕп-ши тесе, халăх хушшипе унăн-кунăн çÿрекелерĕ, салтаксем йышли-йышлă маррине пăхкаларĕ. Вара Митькăсем патне чупса анчĕ. Анчах килте никам та çук иккен, Митькăн кĕçĕн йăмăкĕ çеç юлнă.

— Пиччу ăçта? — ыйтрĕ Мурат.

— Мить-ка-и? — ун çине куçĕсене хĕссе, шанман пек пăхрĕ пĕчĕк хĕрача.— Калама юрамасть çав.

— Нимĕçсене калама юрамасть вăл, мана — юрать! — ĕнентерме тăрăшрĕ ăна Мурат.— Эпĕ унăн тусĕ вĕт. Астумастăн-и-мĕн, кашни кун килеттĕм...

— Çавах каламастăп. Хушман.

Мурат ним тума аптрарĕ. Унăн летчик ăçтине пĕлес килчĕ, Митькăсăр пуçне ăна никам та калама пултараймасть.

— Тархасшăн кала, каламастăн пулсан — чĕнсе кил, мана питĕ кирлĕ вăл... Эп сана уншăн сахăр парăп.

— Ав, хăех килчĕ,— кулса ячĕ ăна хирĕç хĕрача.

Чăнах та, урамран Митька хашкаса кĕчĕ.

— Ăçта Сережа пичче? — ун патнелле чупса пычĕ Мурат.— Кала часрах...— Анчах юлташĕ ăна хирĕç куçне хĕссе илчĕ çеç:

— Асту, хуллен...

Вĕсем пÿрте кĕчĕç те питĕ шăппăн калаçрĕç. Унтан Мурат васкасах тухса кайрĕ. Виселицă патне çитсен, вăл нимĕçсем Грушăпа Ленăна çакма хатĕрленсе çитнине курчĕ...

Юпа пек хытса тăчĕ Мурат, ăна хайне пуçран сасартăк темле йывăр япалапа çапнăн туйăнчĕ. Анчах хайĕн кăмăлне хытарчĕ те отряд эскадронĕ таракан вĕт вăрман еннелле чупрĕ.



* * *

Грушăпа Лена виселицăн урлă кашти айĕнче тăчĕç. Вĕсен майĕсенчен çаклатнă вĕренсем, çил вĕрнĕ май, хуллен кăна каллĕ-маллĕ сулăнкаларĕç.

Халь тин вĕсем хăйсем çăлăнасси çинчен шутлама та пултарайман ĕнтĕ. Пĕр минутран-и, иккĕрен-и е унтан кăшт ытларах вăхăт иртсен— пурĕпĕр вилмелле пулнă вĕсен...

Анчах вӗсем вилӗм ҫинчен те шухӑшласшӑн пулмарӗҫ, вӗсенчен кашниех хайне лӑпкӑн, ҫирӗппӗн тытма тӑрӑшрӗ. Кӑн-кӑвак уяр тӳпере мамӑк пек шурӑ пӗлӗт таткисем шуса иртрӗҫ, куҫа курӑнман кайӑксем чӗвӗлтетрӗҫ, таврари хирсем, ял хыҫӗнчи хурӑн рашчи яланхи пек те мар илемлӗн курӑнчӗҫ ҫак самантра.

Груша каллех ватӑ амӑшне, йӑмӑкне, юлташӗсене аса илчӗ. Вӗсем ҫакӑнтах, ун умӗнчи халӑх хушшинчех тӑнӑ пек туйӑнчӗ ӑна. Пурте ун ҫине пӑхаҫҫӗ... Вӗсем Груша епле вилнине пӑхма мар, унпа вӑхӑтлӑха уйрӑлас умӗн ӑсатма килнӗ пек. Паллах, ҫапла... Мӗншӗн-ха вилмелле? Ҫук, ҫук... Пирӗн вилмелле мар, пирӗн пурӑнмалла-ха, питӗ нумай пурӑнмалла, хамӑрӑн телее каялла таврӑса питӗ илемлӗ, чечеклӗ пурнӑҫра ыр курмалла! Телей каллех пулать. Ҫухалман вӑл. Тупӑнать.

— Кунталла ҫаврӑнӑр! — кӑшкӑрчӗ сасартӑк тахӑшӗ юнашарах.— Германи влаҫӗсен представителӗ обер-лейтенант Эрих Клебер сӑмах калать!

— Слюшай менья, русски люди! Взе слюшай! — пуҫне унталла та кунталла ҫаваркаласа, хаяррӑн пуҫларӗ Клебер хӑй сӑмахне.— Ми, германцы, выводиль вас на новый порьядок! Ви это не любить, ви стреляйт, ви ходить партизан... А ми вас за то вешайт! Во! — Клебер юнпа тулнӑ куҫӗсене тискеррӗн ҫаврӑса виселица ҫине кӑтартрӗ.— Понимайт?

Нимӗҫ вырӑсла пит начар калаҫать пулин те, ял ҫыннисем ӑна пурте ӑнланчӗҫ. Ҫапах та тӑлмача унӑн сӑмахӗсене тепӗр хут каласа пачӗ:

— Эпир, нимӗҫсем, сире ҫӗнӗ йӗрке туса патӑмӑр, а эсир ҫавна юратмастӑр! Пире хирӗҫ тӑратӑр, партизана каятӑр. Анчах кунтан усси пулмасть! Ун пеккисене эпир пурне те тыта-тыта ҫакатпӑр... Акӑ, пӑхӑр ҫаксене...— Тӑлмача Грушӑпа Лена ҫине кӑтартрӗ.— Вӗсем — партизансем. Ҫавӑншӑн эпир халь вӗсене ҫакса вӗлеретпӗр. Астӑвӑр: кам та кам партизансемпе

çыхланать, вĕсене пулăшать е вĕсем çинчен пĕлтерместь, çавăн кайран виселица çинче сулланса тăмалла пулать. Анланатăр-и çавна?

Халăх ним те чĕнмерĕ...

Çав самантра сасартăк ту енчен лаша ури сассисем илтĕнчĕç. Сĕтел çинче тăракан Клеберпа тăлмача та, салтаксем те, виселица таврашĕнчи пĕтĕм халăх та тăвалла çавранса пăхрĕç.

Урам тăрăх чылай пысăк юланутлă отряд килетмĕн.

Çур минутран юланутсем виселица патне сиктерсе çитрĕç. Обер-лейтенант Клебер кавалеристсем çине питĕ тĕлĕнсе пăхса тăчĕ. Ун патне çавăн пек отряд килесси çинчен ăна никам та пĕлтермен, çавăнпа та кавалеристсем уншăн пачах та кĕтмен хăнасем пулнă. Отряд командирĕ, гауптман (капитан) формине тăхăннăскер, питĕ илемлĕ, кăвак куçлă çын, хăйĕн шап-шур кăпăк пулнă хура ăйăрĕ çинчен вăштах сиксе анчĕ те тӳрех сĕтел çине сиксе хăпарчĕ. Вăл çар званийĕ енĕпе аслăрах пулнă пирки Клебер ун умĕнче йăрстах тăсăлса тăрса чеç пачĕ...

...Таврари пӳртсен маччисем çине хĕç-пăшалпа хăпарса вырнаçнă çынсем — Сергей Малининпа Митька та, Иван Степанч та, вĕсемпе пĕр каварлă пулнă ытти ял çыннисем те — çаксене пĕтĕмпех курчĕç.

Вĕсем виселица патĕнчи нимĕçсене пĕр харăс тапăнма майлă самант çеç кĕтрĕç. Чăн малтан Малининăн пемелле, унтан вара — ыттисен те...

Малининăн пӳрнисем темиçе хутчен те спусковой крючок çине пусма тăчĕç. Обер-лейтенант Клебер сăмах калама сĕтел çине хăпарсанах, Малинин ăна çамкинчен тĕллерĕ. Анчах та — майлă вăхăт çитмен пек туйăнчĕ ăна.

— Çакма пуçласанах перетпĕр,— терĕ вăл хăйпе юнашар автомат тытса выртакан Митькăна.— Малтан çӳлте тăракансене, кайран ыттисене...

Тапӑнмалли вӑхӑт ҫывхарсах килчӗ. Ака, Клебер каласа пӗтерчӗ, тӑлмачӑ калама пуҫларӗ. Унӑн сӑмахӗсем Малининпа Митькӑна аванах илтӗнчӗҫ.

— «Эпир халь вӗсене ҫакса вӗлеретпӗр...» — терӗ вӑл.

Малинин ручной пулеметӑн ложине хулпуҫҫи ҫумне тата хытӑрах тытса Клебера тӗллерӗ... анчах перейменрӗ.

Виселицӑ патне сасартӑк юланутлӑ отряд пырса тухрӗ. Отряд командирӗ сӗтел ҫине сиксе хӑпарчӗ...

— Пулмарӗ пирӗн нимӗн те! — пӑчӑртанса тухрӗ Малинин пырӗнчен.— Кун чухлӗ салтаксене эпир ҫӗнтерес ҫук...

Вӑл ҫапла калама ӗлкӗрчӗ ҫеҫ — вӗсен куҫӗ умӗнчех ҫав тери тӗлӗнмелле ӗҫ пулса иртрӗ. Кавалеристсен командирӗ сӗтел ҫине хӑпарса хайне чеҫ парса тӑракан обер-лейтенант Клебера пистолетпа шӑп чӗринчен тӗллесе кӗрс! тутарчӗ. Клебер хӑрах аллипе кӑкринчен тытрӗ те ҫӗрелле тӗшӗрӗлсе анчӗ...

Кӗр-р... кӗрлесе кайрӗ виселицӑ умӗнче тӑракан халӑх.

* * *

Клебера вӗлерекенни — Игнат Дубов пулнӑ.

Нимӗҫсен аслине персе пӑрахсанах, ыттисем мӗн те пулин тавҫӑрса илме ӗлкӗриччен, вӑл тӑлмача та, тарма тӑнӑ Мишка Булдыгина та печӗ. Унтан халӑха хуралласа тӑракан салтаксем еннелле хыттӑн кӑшкӑрчӗ:

— Германский солдат, руки вверх! Хенде хох!

Унӑн партизанӗсем ҫав вӑхӑтра нимӗҫсене пур енчен те автомачӗсемпе тӗлленӗччӗ ӗнтӗ.

— Вырӑссем! Совет ҫыннисем! Пурте сылтӑмалла тухӑр! — командӑ пачӗ Игнат.— Эпир — партизансем, сире хӑтарма килтӗмӗр. Часрах, часрах пӑрӑнса тухӑр!..

Халăх калама çук саванăçлăн шавлама тапратрĕ. Пиллĕкĕн-улттăн часрах Грушăпа Ленăна майкăчсенчен вĕçертме тытăнчĕç.

— Ну, телей! Пулать те телей!..

— Юрать, вăхăтра килсе çитме ĕлкĕрчĕç!

— Мĕн каламалли!

— Кăшт кая юлнă пулсанах...

— Пĕтетчĕç çав!

— Маттур йĕкĕтсем, ах, маттур!

— Эп малтан вĕсене чăнах нимĕçсем тесе...

Игнат сĕтел çинчен сиксе анса Грушăна хирĕç чупса пычĕ. Вĕсем, пĕр-пĕрине ыталаса, темиçе хутчен хыттăн чуптурĕç.

— Çăлтăмăр вĕт, э? Шанманччĕ...— саванăçлăн сывласа ячĕ Игнат, Грушăна çаплах ыталаса.

— Камран пĕлтĕр вара эсир?

— Камран пултăр... Мурат чупса пычĕ!

— Ылтăн ача вăл, тупата...

— Ылтăнран та хаклă!

— Ăçта вăл халь?

— Кунтахчĕ...— Игнат унталла-кунталла пăхса илчĕ.

— Мурат!

— Эпĕ! — илтĕнчĕ Мурат сасси çынсем хыçĕнчен.

— Кил-ха кунта.

— Çиччас!

Мурат ун патне Ленăна çавăтса пырса тăчĕ.

— Ак çак ĕнтĕ вăл... Лена, эп суранлансан мана анне пек пăхса усрани.

— Тавтапуç сире,— ун аллине тытса чăмăртарĕ Игнат.— Тем пекех тав!

— Мана мар, сире хăвăра спаççипă! — шывланнă куçĕсемпе кăмăллăн та йăвашшăн пăхрĕ ун çине Лена.— Иккĕмĕш хут вилĕмрен хăтартăр!

— Ну, ун çинчен кайран калаçăпăр,— çемçен кулса илчĕ Игнат.— Ĕçсене йĕркене кӳртер-ха...

* * *

Темиçе самантранах вӗсем патне Сергей Малининпа Митька, унтан маччасем çинче засадăра ларнă ытти ял çыннисем те чупса çитрӗç. Хӗç-пăшаллă колхозниксене курсан, партизансен командирӗ тата ытларах хаваслanса, вӗсен аллисене чăмăртама тытăнчӗ:

— Пире пулăшакансем пур иккен-ха! Тав сире.

— Пулмасăр, ăçта кайччăр вӗсем? — терӗ Иван Степанч, хайӗн юлташӗсем çине кăтартса.— Пăхăр, епле ăмăрткайăксем! Партизансене çакаççӗ, хăтарас пулать, тесенех алла пăшалсем тытрӗç вӗт...

— Питӗ аван, мучи, пит аван! Çакăн пек пурӗ пӗр пулса тăрсан, фашистсене сывлама та памастпăр ака эпир. Вӗри çатма çинчи пулăсем пекех сиккелеме пуçлӗç. Хӗрлӗ Çар та кунталла çывхарса килет ӗнтӗ. Капут вара вӗсене!

— Капут, епле пулсан та капут!

Игнат умне унăн взвод командирӗсенчен пӗри чупса пырса тăчӗ:

— Командир юлташ! Нимӗç салтакӗсене пурне те сарайне илсе кайса хупрăмăр. Ав çавăнта...

— Миçен вӗсем?

— Вăтăр ултта, командир юлташ. Мӗн тумалла вӗсене?

Игнат хăйӗн тусӗсем çине, летчикпа Иван Степанч пухнă çынсем çине пăхрӗ те кăштах шухăша кайса тăчӗ.

— Мӗн тумалла, тетӗн-и? Эпир ăна... халăхран ыйтăпăр!

— Вот, ку тӗрӗс! — сухалне шăлкаласа илчӗ Иван Степанч!

— Атьăр...

Игнат, Груша, летчик, Иван Степанч, вӗсемпе пӗрлех Муратпа Митька та паçăр нимӗçсем тăпăртатса тăнă сӗтелсем çине хăпарчӗç. Хаваслăн калаçакан халăх шăпланчӗ. Пурте партизансен командирӗ мӗн ка-

ласса кӗтрӗҫ. Вӗсемшӗн халь ку ҫын никамран та хакла пулнӑ-ҫке, мӗншӗн тесен вӑл килсе хӑтарчӗ фашистсем ҫакма хатӗрленнӗ икӗ хӗрарӑма!

— Тӑвансем! — терӗ Игнат, сылтӑм аллине ҫӳлелле ҫӗклесе.— Чӑн малтанах, сире хамӑран партизансенчен, Гитлерӑн урнӑ йыттисене кунӗн-ҫӗрӗн пӗтерсе пыракан паттӑрсенчен хӗрӳллӗ салам!

Темиҫе уйӑх вӗҫӗмсӗр хӑраса, сӑмах та калама шикленсе, савӑнма-кулма пачах манса кайса пурӑннӑ ҫынсем сасартӑк ҫӗнӗрен ҫуралнӑ пекех пулса тӑчӗҫ. Пӗр харӑс, такам командӑ панӑ пекех, чӗререн хавасланса ал ҫупса ячӗҫ вӗсем.

— Хӑвӑра салам сире!

— Темрен те пысӑк тав!

— Ҫӑлтӑр вӗт ҫынсене, пӗтетчӗҫ!

Шав кӑштах лӑплансан, Игнат татах кала пуҫларӗ.

— Эпир сирӗнтен пӗр сӑмах ыйтасшӑн. Ав ҫавӑнта, пушӑ сарайӗнче, халь ҫеҫ тытнӑ гитлеровецсем лараҫҫӗ. Вӑтӑр ултӑ бандит унта, вӑтӑр ултӑ кашкӑр. Мӗн тӑвас вӗсене пирӗн? Калӑр!

Кун пек ыйту ҫынсене тӗлӗнтерсех ячӗ. Мӗн ыйтса тӑмалли пур вара унта? Пемелле те пӑрахмалла, пӗтӗм ӗҫӗ те ҫав ҫеҫ. Ҫавӑнпа та тӑруках никам та ответ памарӗ. Анчах Игнат тата тепӗр хут, ҫине тӑрсах: «Калӑр ӗнтӗ, мӗн тӑвас пирӗн вӗсене?» —тесе ыйтсан, пурӗ пӗр харӑс кӑшкӑрчӗҫ ӑна хирӗҫ:

— Персе пӑрахас!..

Ку сӑмахсем халӑхӑн вӗри курайманлӑхпа тулнӑ чӗринчен тухрӗҫ. Ку вӑл совет ҫыннисен тавӑру приговорӗ пулчӗ...

* * *

...Отряд ку ялтан тепӗр ирхине тухса кайрӗ. Летчик Сергей Малинин та, Иван Степанч та, Лена та, тата ыттисем те нумайӑшӗ ҫак кунтан пуҫласа партизансем пулса тӑчӗҫ.

Муратăн тусĕ Митька та унпа пĕрле питĕ пырасшăнччĕ, анчах амăшĕ чирлĕ пирки унăн килтех юлмалла пулчĕ. Куççуль тухиччен хурланчĕ вара вăл.

— Ан ман эппин мана, Мурат,— терĕ вăл тусне.— Май килсен кĕрсе тух, тен, ун чухне эпĕ те пырăп!

Сергей Малинин ăна ыталаса чуптурĕ:

— Ан пăшăрхан, шăллăм, ирĕке кăларатпăрах ака сире!

Ик эрнерех Игнат Дубовăн отрячĕ тепĕр отрядпа пĕрлешсе тата пысăк вăй пулса тăчĕ. Кайранхи кунсенче вăл гитлеровецсене унччен пек те мар хытă пыра-пыра çапрĕ. Çунтарса янă вырăс ялĕсемшĕн, совет çыннисене çаратнăшăн, асаплантарнăшăн, айăпсăр такăннă тăван юншăн куллен-кун хăватлăран хăватлă тавăрса пычĕ. Нимĕçсем ку отряда темиçе хут та хупăрласа илсе аркатма тăрăшрĕç, анчах ним тума та пултараймарĕç...

Ялсем тăрăх вĕсем: «Игнат Дубов пуçĕшĕн вунă пин тенкĕ паратпăр»,— тесе пĕлтерÿсем салатрĕç. Ним усси те пулмарĕ. Игнат Дубовăн отрячĕ ÿснĕçемĕн ÿсрĕ, тăшманшăн тата хăрушăрах вăй пулса тăчĕ.

...Пĕрре, йывăç çулçисене ылтăн тĕс çапа пуçланă вăхăтра, сĕм çĕрле, отряд вырнаçнă вăрман çийĕнче самолет явăнма тытăнчĕ, унтан вăл кăвайтсем чĕртсе янă пысăк уçланкăна анса ларчĕ.

— Хăнасем килчĕç!—тесе, партизансем ăна хирĕç чупса тухрĕç.

Çак самолет килесси çинчен Игнат Дубовпа унăн тусĕсем малтанах, радио тăрăхах пĕлнĕ-мĕн. Самолет Мускавран вĕçсе килнĕ. Экипаж командирĕ самолетран тухсанах Игнат Дубовăн ятне асăнчĕ.

— Эпĕ вăл,— терĕ Игнат, чеç парса.

— Партизансен тĕп штабĕ хушнă тăрăх, эпĕ сире валли наградăсем илсе килтĕм. Совет правительстви

сирĕн паттăр ĕçсене тивĕçлипе хакласа, нумайăшне орденсемпе медальсем памалла тунă...

— Питĕ пысăк тав! — терĕ Игнат хавассăн.— Малашне эпир тата хастарлăрах пулăпăр, хамăр çĕр çинче пĕр фашист юлмиччен çапăçăпăр.

Ирхине вунсакăр партизанăн кăкри çинче чаплă орденсемпе медальсем ялтăртатма тытăнчĕç. Наградă илнĕ вунсаккăрмĕш партизан пирĕн тус, çамрăк разведчик Мурат пулчĕ.

1941—1943,
Çапаçури Çар.



# КĂСĂЯ

*Повеç*





— Ăр-ха, лейтенант, ăр...— тенине илтрĕм ыйхă витĕр.

Эп вăрантăм, анчах ниепле те куç уçас килмерĕ. Ĕнер маншăн йывăр кун пулнă — кăнтăрла иртиччен малти линире çӳренĕ, траншейăсемпе блиндажсенче боецсемпе, командирсемпе тĕл пулса калаçнă, каçалапа, редакцине таврăнсан, очерк çырнă, унтан Совинформбюро сводкине йышăннă, хаçат калăпланă, корректурă вуланă. Тул çутăласпа тин, пичетлесе пĕтернĕ хаçата «хирти почтăна» леçсе килсен, хывăнмасăртумасăрах кăмака çумĕнчи ансăр сак çине выртнă та вилнĕ пек çывăрса кайнă. Унтанпа вăхăт нумай та иртмен пулмалла-ха, шăм-шак çав тери йывăр...

— Ăр тетĕп, лейтенант! Илтместĕн-им?

Ку — пирĕн редактор, Лукомский майор сасси. Ăна эпĕ питĕ лайăх илтетĕп, анчах куçсем çаплах уçăлмаççĕ-ха. Çапах та, тин çеç çывăрса кайнă çынна майор ыт ахальтен, ним сăлтавсăр вăратас çуккине ăнланса, выртнă çĕртенех ыйтатăп:

— Мĕн пулнă, майор юлташ?

— Политотделтан шăнкăравларĕç,— терĕ вăл.— Бурцев хăй калаçрĕ...

— Мĕн пирки?— Ку хушамата илтсен эпĕ тӳрех тăрса лартăм. Бурцев — пирĕн дивизи политотделĕн начальникĕ, полковник, ватă салтак, граждан вăрçи вăхăтĕнчех Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕскер. Вăл сахал калаçакан çын, анчах унăн кашни сăмахĕ — пуртăпа каснă пек. Пĕрре каларĕ пулсан, ăна тепĕр хут каламасть. Эпир, политработниксем, пурте унран хăрарах тăратпăр, анчах хăранинчен ытларах — хисеплетпĕр, çавăнпа та вăл хушнисене яланах хăвăрт та тĕплĕ туса пыма тăрăшатпăр.

— Мĕн терĕ вара вăл? — ыйтрăм майортан, васкасах пирус тивертсе ярса.

— Кĕçĕр Митаишвили разведчикĕсем «чĕлхе» сĕтĕрсе килнĕ...

— Чăнах-и?! Во, ку питĕ ырă хыпар вара! — алсене хире-хирĕç çапсах илтĕм эпĕ.— Маттур вăл Митаишвили каччисем! Леш уйăхра та вĕсемех тытса килнĕччĕ-ха...

— Шăп та çав маттурсем çинчен каласа кăтартмалла та ĕнтĕ санăн. Полковник вĕсем çинчен уйрăм листовкă кăларма хушрĕ. Ыран ирхине вăл листовкă пур подразделенисенче те пултăр, терĕ. Çырма сана хушрĕ. Эсĕ пĕркун артиллеристсем çинчен çырни килĕшнĕ куранать ăна.

— Юрать! Халех каятăп! — Ман ыйхă темпе персе хăратнă кайăк пекех вĕçсе кайрĕ. Эп сак çинчен тăтăм та лутăрканнă-тусанланнă тумтире йĕркене кĕртме тытăнтăм.

— Разведчикĕсем ăçта-ши вĕсем халь? Пĕр эрне каялла эп вĕсене Курова ялĕнче курсаттăм. Ну, полк штабĕнче каласа парĕç-ха ăна...

— Вĕсене курма санăн полка мар, медсанбата * каяс пулать,— терĕ майор, ман патарах пырса тăрса.

* Медсанбат — медицинăпа санитари батальонĕ.

— Мĕншĕн... медсанбата? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Каялла таврăннă чух, хамăрăн траншейăсем патне çитеспе, нимĕçсем вĕсене минăсемпе хупласа хунă. Иккĕшне амантнă, вĕсенчен пĕри — взвод командирĕ...

— Телегин-и?! Каллех аманнă-и?

— Телегин çав. «Чĕлхи» те аманнă, тет...

— Вилнисемех пулман пуль те?

— Çук, хăй каларĕш — тур хăтарнă. Суранĕсем те ытла йывăрах мар, тет. Вакрах осколоксем çеç лекнĕ. Анчах пĕрер-икшер эрне выртмаллах пулать пулмалла. Кайсан куратăн унта. Тĕплĕрех ыйтса пĕл. Чи хакли пирĕншĕн халь — опыт, опыт... 102-мĕшпе 113-мĕш полк разведчикĕсем виçшер уйăх пĕр «чĕлхе» те тытаймаççĕ ав... Мĕншĕн? Вĕренччĕр!

...Ун чух апрель уйăхĕн вĕçĕччĕ, çур кая юлса килнипе шыв-шур та иртсе кайманччĕ-ха, çырмасемпе шырлансенче шарласа шыв юхатчĕ, уй-хирсем улачăлаччĕ, пĕр вырăнта хуп-хура çĕр, лапра, тепĕр çĕрте шыв кÿлленчĕкĕ, лапамрах вырăнсенче лаптăкăн-лаптăкăн кăвакрах юр выртать. Ни урапа, ни çуна вăхăчĕ ĕнтĕ.

Васкасах пит-куçа сив шывпа йĕпетсе илтĕм те пĕр кружкă çăра чей ĕçнĕ хыççăн тумланма тытăнтăм: кĕрĕк-жилет, шинель, çĕлĕк тăхăнтăм, нумай хура-шур курнă кивĕ полевой сумкăпа нимĕçсен парабеллумне хулпуççи урлă хĕреслесе çакрăм. Унтан, картишне тухса, хамăн лутака та мăнтăркка «Футбола» йĕнерлерĕм,— лайăхрах çисен хырăмĕ пичке пекех пулса кайнăшăн, шÿтлесе, типографири салтаксем ман лашана çавăн пек ят панăччĕ.

Çĕрле самаях шăнтнă-мĕн, çавăнпа та çул çинчи пылчăк хытнă, лакăм-тĕкĕмсенчи шыв кÿлленчĕкĕсем çÿхе кăна шурă пăрпа витĕннĕ. Лаша урисем айĕнче вĕсем шатăрах çĕмрĕлеççĕ, анчах çапах та пылчăк ĕнерхи пекех сирпĕнмест, кайма тирпейлĕрех. Çанта-

лӑкӗ тӗтреллӗ, сивӗрех, тўпене талккишӗпех карса илнӗ сӑнсӑр пӗлётсем аяллӑн шӑваççӗ, кӑштах тӗтре те пур, çавӑнпа та сывлӑшра пӗр мотор сасси те илтӗн-мест — паян нимӗçсем те, пирӗннисем те вӗçеймеççӗ. Малти позицисем енчен кӑна хушшӑн-хушшӑн мӑн йышши тупӑсем йывӑррӑн ухлатни илтӗнкелет те пу-леметсем ыт ахальтен тенӗ пек тӑкӑртатса илеççӗ.

Эпир ёнтӗ уйӑх ытла «Курск хысакӗн» вӗçӗнче обо-ронӑра тӑратпӑр. Малтан пире пӗр эрне хушши ним куç-пуç курӑнми çил-тӑман çавӑрттарни кансӗрлерӗ, çул çуккипе пирӗн пӗтӗм тыл татӑлса юлчӗ, боепри-пассем çителӗклӗ турттарса килме те май пулмарӗ, пӗр вӑхӑт, артиллеристсен кашни тупӑ пуçне икшер-виç-шер снаряд çеç юлсан, вӗсене те «пахчаçăсемпе» çеç турттаратчӗç (фронтра хуть те ӑçта та анса ларма пул-таракан «У-2» самолетсене çапла калатчӗç, нимӗçсем вара вӗсене «русс-фанер» тетчӗç), апат-çимӗç пирки те кансӗр пулчӗ, çавӑнпа наступлени чарӑнса ларчӗ те пирӗн. Унтан шыв-шур тапранчӗ...

Анчах вӑрçӑ вӑл — вӑрçах, аякран пӑхсан лӑпкӑ пек курӑнать пулсан та, фронтра кашни кунах мӗн те пулин пулса иртет. Артиллеристсем, тӑшман енче тӗл-сем тупса, aкӑш-макӑш вӑйлӑ налетсем тӑваççӗ; само-летсем малти лини çине те, тылри коммуникацисем çине те бомбӑсем пыра-пыра тӑкаççӗ; темле вичкӗн куç та асӑрхамалла мар пытаннӑ снайперсем тӑшман салтакӗсем окопран е траншейӑран пуç кӑларасса çеç кӗтсе выртаççӗ, кӑшт курӑнсанах вара ӑна вӗри пуля пырса тивет; разведчиксем «чӗлхесем» тытма çўреççӗ. Кашни кунах кам та пулин вилет, кам та пулин ама-нать...

Акӑ, кӗçӗр те ав 117-мӗш полкри разведчиксем «чӗлхе» тытса килнӗ иккен, вӗсенчен иккӗшӗ аманнӑ. Эппин, çак асаплӑ, бомбӑ-снарядсемпе, минӑсемпе шӑ-тарса, амантса пӗтернӗ хура тӑпра çине каллех пирӗн çынсен таса юнӗ сӑрхӑннӑ. Разведчиксен взводӗн

командирĕ Телегин хăй те аманнă... Миçемĕш суран пулчĕ-ши ĕнтĕ унăн ку?

Ăна эпĕ питĕ лайăх пĕлетĕп. Миша Телегин — çирĕм икĕ çулхи питĕ патвар, çивĕч, çав тери вашават, кăн-кăвак куçлă та сап-сарă çӳçлĕ каччă. Чăн-чăн вырăс каччи ĕнтĕ. Хăй вăл Магнитогорскри рабочи ывăлĕ, вăрçă пуçланнă çул ФЗОран вĕренсе тухнă та хурçă шăратакан заводра темиçе уйăх çеç ĕçленĕ. Вăрçă пуçлансан металлургсене çара илмен, вĕсем лере, тылра питĕ кирлĕ пулнă,— вăрçă валли, фронт валли хĕçпăшал тума хурçă ытларах памалла! Анчах Телегин комсомолец хăйсен цехĕнчи темиçе юлташĕпе пĕрле çар комиссариатне кайнă та: «Саккун йĕркипе илместĕр пулсан, эпир фронта сирĕнсĕрех питĕ лайăх тухса каятпăр!» — тенĕ.

Малтан Миша Атал хĕрринчи пĕр хулара çĕнĕрен йĕркеленекен дивизие лекнĕ. Унăн часрах фронта каяс, тăшманпа çапăçас килнĕ, анчах кун хыççăн кун, эрне хыççăн эрне иртнĕ — дивизи çав-çавах вырăнтан хускалман-ха.

— Йăлăхса çитрĕмĕр пăрусемпе сурăхсем çӳрекен улăхсемпе çырмасем тăрăх хырăмпа шуса, улăмран тунă «фашист» кĕлеткисене штыкпа тирсе, тӳсме çук! — каласа пачĕ вăл мана пĕррехинче.— Хамăн юлташсемпе пĕрле каллех калаçса таталтăмăр та полк командирне рапортсем çырса патăмăр, ярăр пире фронта, терĕмĕр. Анчах вăл пире хăтăрса тăкрĕ кăна. Аслисенчен ăсларах пулма ан тăрăшăр, пустуй тусан ан вĕçтерĕр, черет çитсен пире те илсе кайĕç, халлĕхе лайăхрах çапăçма вĕренес пулать, терĕ. Эпир ăна хирĕç калама тăрсан, вăл кăшкăрсах тăкрĕ: кун çинчен тепре çăвар уçсанах пурсăра та дисциплинăна пăснăшăн пĕрер эрнелĕхе гаупвахтăна хупса лартатăп!..

Фронта дивизи 1941 çулхи декабрь пуçламăшĕнче кайнă. Шăпах нимĕçсене Мускав патĕнче аркатма тытăннă кунсенче. Питĕ хăватлă çапăçусем пуçланнă

унта! Паян-ыран тенĕ пек Мускава ҫитсе кĕме ĕмĕтленнĕ каппайчăк фашистсен каялла чакма тивнĕ, пирĕннисем ял хыҫҫăн ял, хула хыҫҫăн хула ирĕке кăларса пынă. Миша Телегин малтанхи ҫапăҫусенчех хăйĕн паттăрлăхне лайăх кăтартнă...

...Самаях ҫӳллĕ сăртра ларакан чиркӳллĕ пĕр ялшăн ҫапăҫнă чух тăшманăн икĕ пулемечĕ пирĕн салтаксене малалла кайма мар, пуҫ ҫĕклеме те паман. Хăйсем куранман вĕсем — дзотран персе тăнă. Питĕ тарăхмалла пулса тухнă пирĕннисемшĕн: ялĕ патне ҫитме пурĕ те виҫҫĕр метр пек кăна юлнă ĕнтĕ, анчах ҫав ылханлă пулеметсем кашни ҫĕкленекен ҫыннах ҫапса ӳкернĕ. Каҫченех хускалмасăр выртнă пирĕн салтаксем... Вара, тĕттĕмлене пуҫласан, ротă командирĕ Миша Телегин патне упаленсе пынă та приказ панă:

— Ҫав пулеметсене епле пулсан та шарлами тăвăр!

— Есть...— пăшăлтатса илнĕ Миша.

Вăл хăйпе пĕрле пилĕк ҫын илнĕ те командир хушнине тума кайнă. Каҫ пулнă пулин те, йĕри-тавра ним майсăр пульăсем шăхăрнă, унта та кунта минăсем ҫурăлнă, тăшман позицийĕсем енчен ҫине-ҫине ракетăсем вĕҫсе хăпарса тавралăха кăнтăрлахи пекех ҫутатса янă, анчах Мишăпа унăн тусĕсем, тарăн юр ăшне ытларах путма тăрăшса, малаллах пынă. Метр хыҫҫăн метр, метр хыҫҫăн метр... Пĕлĕтелле ракетă чашкăрса хăпарсан, вăл ҫунса пĕтсе ҫĕре ӳкиччenех, пуҫĕсене юр ăшне чиксе, вилнĕ пек выртнă. Юлашкинчен вĕсем ҫапах та пулеметсем вут сапса тăракан дзотран аяккарахран пăранса иртсе, тăшман траншейи патне ҫитнĕ те, Телегин шăппăн панă командă тăрăх пĕр харăс сиксе тăрса, автоматсенчен ҫунтарма, гранатăсем ывăтма тытăннă. Темиҫе самант хушши ним те уйăрса илме май килмен... Кĕҫех Телегинпа тусĕсем, тăшман траншейине сиксе анса, фашистсемпе алла-аллăн тытăҫса ӳкнĕ. Хăшне тӳрех какăртан тĕллесе пенĕ, хăшне

прикладпа çапса ӳкернӗ... Кӗске вăхăтрах вӗсем икӗ пулемет расчетне те пӗтерсе хунă. Вара пирӗн пехота валли çул уçăлнă. Пулеметсем шарлами пулсанах сарлака уйра, тӗттӗмре, хăватлăн «урра» кăшкăрни янраса кайнă...

Çакăншăн Телегинпа пӗрремӗш награда — «За отвагу» медаль панă. Анчах траншейăри тытăçура ăна хăйне те амантнă, тахăш фашисчӗ хулпуççирен штыкпа чикме ӗлкӗрнӗ. Хирти госпитальрен хăйне тыла ăсатма хатӗрленнине пӗлсен, вăл, никама систермесӗр тухса тарса, тăван полка таврăннă.

— Юлташсене çухатас килмест,— тенӗ вăл,— çавăнпа тухса шăвăнтăм! Тылри госпиталь хыççăн таçта лекетӗн-ха? Кунта эпӗ тăван килти пекех...

Медсанбатра пӗр-ик эрне пек вырткаласа сывалнă хыççăн вăл хăйне разведкăна яма ыйтнă. Çавăнтан вара унăн ячӗ пирӗн хаçатра час-часах тухă пуçланă...

Пуринчен ытла Телегин пӗлтӗр çулла, эпир Ржев тăрахӗнче çапăçнă чух, чапа тухрӗ. Эпӗ ун чухне ку дивизири хаçатра ӗçлеме тытăннăччӗ ӗнтӗ, çавăнпа та кун çинчен лайăх пӗлетӗп. Вăл тăр-кăнтăрла, янкăр уяр кун, разведчиксен пысăках мар ушкăнӗпе ыраш ăшшӗн тăшман траншейисем патнех упаленсе тухса, сасартăк сиксе тăнă та пирӗн еннелле хушшăн-хушшăн лăкăр! лăкăр! персе ларакан «дежурнăй» пулеметчика пуçран çапса тăнсăр тунă, унтан ăна пулемечӗ-мӗнӗпех сӗтӗрсе килнӗччӗ. Нимӗçсем çакна Телегин ушкăнӗ хамăрăн траншейă тӗпне сиксен тин сиссе акăш-макăш пеме тытăннă...

Çак ытла та хăюллă ӗç çинчен эпӗ дивизи хаçатӗнче çеç мар, арми хаçатӗнче те çырса кăлартăм. Çавăн чух питӗ çывăх паллашрăмăр та эпир унпа. Асăнмалăх вăл мана нимӗç сехечӗпе парабеллумне парнелерӗ.

— Хăвна кирлӗ мар-им? — ыйтрăм эпӗ унран, кун пек хакла парнене тăруках илме именсе.

— Э, ан калаç-ха ун çинчен,— ал сулчӗ вăл,—

кирлӗ пулсан, хам валли эпӗ ун пекки вунна та тупатӑп!

Савӑнсах илтӗм вара, чунтанах тав турӑм. Ун хыҫҫӑн та эпир унпа нумай хут тӗл пулнӑ. Хайӗн ҫуралнӑ ҫӗршывӗнче тухакан хаҫата та пысӑк очерк ҫырса ятӑм ун ҫинчен, хамӑр патра та пӗрре мар ҫырмалла пулчӗ. Акӑ, паян татах ҫырас пулать. Хаҫата мар, уйрӑм листовкӑ валли. Анчах та питӗ шел — каллех аманнӑ вӑл. Ытла хытах лекмен пулсан татахчӗ хуть. Питӗ шел вӗт ҫавӑн пек паттӑрсем стройран тухсан!

* * *

Медсанбат ҫурри таран йӑлт ҫунса кайнӑ ялта вырнаҫнӑ.

Тарӑн ҫырма яла икке уйӑрса тӑрать, ҫырма тӗпӗпе пӗчӗк кӑна шыв юхса выртать, ун урлӑ ик-виҫ ҫӗрте кӗпер хывнӑ. Ҫырман пӗр енче нимӗн те юлман, ҫунӑк кӑмака кӗлеткисем ҫеҫ вилнӗ ҫын шӑммисем пек тискеррӗн курӑнса тӑраҫҫӗ, вӗсем тавра — кӗл те хӑрӑм, кукӑрӑлса пӗтнӗ тимӗр койкӑ юлашкисем, ваннӑ чӳлмек-куршак, кил таврашӗнчи ытти ӑпӑр-тапӑр. Хуҫисем ҫавӑнтах ҫӗрпӳртсем алтнӑ та тахҫан авал пещерӑсенче пурӑннӑ ҫынсем пек пурӑнаҫҫӗ. Апат-ҫимӗҫне ҫав кӑмакасенчех пӗҫереҫҫӗ — ӗлӗк урам пулнӑ вырӑнпа пынӑ чух темиҫе кӑмака умӗнче ҫӗтӗк-ҫатӑк тумланнӑ хӗрарӑмсем ухватсемпе тӑрмашнине куртӑм. Тӗрӗссипе, кун пеккисене эпир икӗ ҫул хушшинче сахал мар курнӑ та, вӑл мана питех тӗлӗнтермест. Вӗсем ҫине пӑхсан, чӗре ыратса илет ҫеҫ: мӗн тери асап халь ҫак ҫынсене пурӑнма! Хӑҫан ҫӗнӗрен ҫурт-йӗр туса, вӑрҫӑччен хи пек тап-тап йӑва ҫавӑрса пурӑнас вӗсен! Мӗнле ответ тытӑн-ши эс ҫакӑншӑн, фашист!..

Ҫырман тепӗр енчи пӳртсем вара пурте тенӗ пекех упранса юлнӑ. Гитлеровецсем кунтан тухса тарнӑ чух ҫырман хӗвеланӑҫ енчи ҫуртсене ҫеҫ тивертсе яма ӗлкӗрнӗ иккен, хӗвелтухӑҫ енне каҫайман, мӗншӗн тесен

унта пирӗн салтаксем пырса тухнӑ та пулеметсене сӑрт хӗррине лартса ку еннелле пеме тытӑннӑ, «факельщиксен» — ҫуртсем ҫине бензин сапса вут тӗксе ҫӳрекен фашист салтакӗсен — часрах тухса тармалли ҫеҫ юлнӑ. Икӗ кунтан, тӑшмана хӗвеланӑҫ еннелле тата улт-ҫич километр хӑваласа кайсан, кунти пӳртсене медсанбат йышӑннӑ.

Сӑртра, самаях сарлака уҫӑ вырӑнта, чылай пысӑк хӗрлӗ чул ҫурт ларать. Унӑн пур еннелле те пӑхакан чӳречисем ҫӳллӗ, сарлака, анчах вӗсен чылай куҫӗсене фанерпа, хӑма таткисемпе ҫапса лартнӑ — ҫак ялшӑн ҫапӑҫнӑ чух кантӑкӗсем ванса пӗтнӗ ӗнтӗ. Пӑхсанах курӑнать — вӑрҫӑччен кунта шкул пулнӑ. Ҫуртне йӗри-тавра кирпӗч юпаллӑ карта тытнӑ-мӗн, шалта улма-ҫырла йывӑҫҫисем те пулнӑ пулмалла, анчах халь нимӗн те юлман унта: решеткисене ватса тӑкнӑ, йывӑҫҫисене каса-каса пӗтернӗ. Ахӑртнех, хутма ним ҫуккипе пулӗ ҫав. Сахал сад-пахча пӗтрӗ-им вӑрҫӑ пулнӑ вырӑнсенче!..

Ҫырма тӗпӗнчи пӗчӗк кӗпер урлӑ каҫсанах эпӗ сылтӑм енче, пысӑк лупашкара, темӗн чухлӗ минӑ сапаланса выртнине асӑрхарӑм. Сахалтан та икҫӗр-виҫҫӗр штук пуль. Е унтан та ытларах. Ҫӗр айне чавса хумаллисем мар, минометран пемеллисем. Пӑхма питӗ илемлӗ хӑйсем — шӗвӗр пуҫӗсем пӗр тӗслӗ, тунисем тепӗр тӗслӗ, тӗпӗ тата урӑх тӗслӗ. Хӗрлӗ, кӑвак, симӗс. Ачасем вылямалли теттесем пекех. Анчах вӗсем — ҫынсене вӗлерме тунӑскерсем. Шӑп ҫак тӗлтен сӑрт урлӑ ыватса тӑнӑ та ӗнтӗ вӑл «штуксене» пирӗн салтаксем ҫинелле, анчах ыватса пӗтереймен. Питӗ хӑвӑрт тухса тарма тивнӗ пирки юлашкисене пуҫтарса та каяйман...

Ҫырмаран хӑпарсан, эпӗ шкул ҫурчӗ умӗнче хӗрлӗ хӗреслӗ санитарнӑй машинӑсем, двуколкӑсем, туртисене хуҫӑлнӑ ҫунатсем пек ик еннелле сарса пӑрахнӑ ҫунасем тӑнине куртӑм. Картиш хапхин пӗр юпи ҫине

химически кӑранташпа «Сортировочная», «Операционная», «Эвако» тесе ҫырнӑ фанер таткисем ҫапса хунӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче аманнисене чӑн малтан кунта илсе килеҫҫӗ, кирлӗ пулсан операци тӑваҫҫӗ, йывӑртарах аманнисене малтанхи пулӑшу панӑ хыҫҫӑнах тыла ӑсатаҫҫӗ. Ҫӑмӑлтарах аманнисене вара е ялти пӳртсене, е брезент палаткӑсене вырнаҫтарса кунтах эмелleме тытӑнаҫҫӗ. Йӗрки ҫапла.

Эпӗ хамӑн «Футбола» пӗр чул юпа ҫумне кӑкартӑм та шала кӗтӗм. Манӑн ӗнтӗ чӑн малтан, медсанбатри аслӑраххисенчен хӑшне те пулин курса, кӗҫӗр илсе килнӗ разведчиксене ӑҫта вырнаҫтарни, вӗсемпе калаҫма май пурри-ҫукки ҫинчен ыйтса пӗлмеллеччӗ. Ман телее, эп тӗттӗмрех вӑрӑм коридор тӑрӑх темиҫе утӑм тусанах пӗр пӳлӗмрен медсанбат командирӗ хӑй — медицинӑ службин майорӗ, Басов тухтӑр — ҫӳллӗ, сарлака хулпуҫҫиллӗ, грузин сӑнлӑрах ҫын тухрӗ те коридорӑн леш вӗҫнелле утрӗ.

Борис Владимирович Басова дивизире чи лайӑх хирург тесе хисеплеҫҫӗ,— вӑрҫӑри калама ҫук кансӗр условисенчех вӑл ҫав тери кӑткӑс операцисем нумай тунӑ. Хӑй вӑл Горький ҫынниччӗ, институт пӗтерсен ӑна пӗр паллӑ профессор клиникинче ӗҫлеме хӑварнӑ, вӑрҫӑ умӗн вӑл наукӑ кандидачӗ пулма диссертаци ҫырса пӗтернӗ, анчах хӳтӗлеме ӗлкӗреймен. Институтра унпа пӗрле ман юлташӑн — пӗр чӑваш журналисчӗн арӑмӗ вӗреннӗ-мӗн те, эпӗ чӑваш иккенне пӗлнӗ хыҫҫӑн вӑл мана яланах хапӑл туса йышӑнатчӗ. Хӑй ҫуралнӑ кун хӑнана та чӗннӗччӗ.

Басов тин ҫеҫ операци туса пӗтернӗ курӑнать, ҫӑварӗ ҫинчен марлӗрен тунӑ маскӑна та илсе пӑрахман, аллинчи резинӑ перчеткине те хывман. Хӑй питӗ ӗшеннӗ пулмалла, пуҫне ҫӗклемесӗр, ҫӗрелле пӑхса утать.

— Майор юлташ! Борис Владимирович! — чӗнтӗм эпӗ.

Вăл тӳрех чаранса тăрса каялла çавранса пăхрĕ.

— А-а, писатель... Салам! — Майор сылтăм перчеткине хывса мана ал пачĕ.— Мĕнле ирех çитнĕ вара эсĕ?

— Начальства ячĕ, Борис Владимирович,— терĕм эпĕ.— Сирĕн пата кĕçĕр 117-мĕш полкран икĕ разведчике илсе килнĕ...

— Çапла. Пĕрине халь кăна операци туса пĕтертĕм. Йывăр операци пулчĕ — тем пысăкăш осколок таз шăммине çĕмĕрсе кĕрсе ларнă. Тепĕр сантиметр шаларах кĕнĕ пулсанах çын пĕтет-мĕн. Аран кăлартăм шуйттана! Халь пурăнать ĕнтĕ.

— Хăшне-ши вăл? Взвод командирне мар-и?

— Çук, Телегинăн аллисем çеç аманнă. Вак осколоксемпе. Тыла та ямастпăр ăна, кунтах сывалать. Тата вăл хăй те: ниçта та каймастăп, тет.

— Эппин, ăна курса калаçма юрать? Бурцев пире халех листовкă кăларма хушнă та...

— Юрамасăр! Тăхта, эп акă аласене çуса пĕр стакан чей ĕçетĕп те — кайăпăр. Кĕçĕр çыварман та-ха, çапах хамăн «подшефнăйсене» пăхса çавранас пулать.

Эпир коридор вĕçĕнчи ансăртарах пӳлĕме кĕтĕмĕр. Вăрçăччен кунта шкул директорĕн кабинечĕ пулнă. Халь пĕр пĕчĕк сĕтел, виç пукан (кашниех расна, унтан-кунтан тупкаласа килнĕ пулмалла), икĕ койка ларать. Пĕрин çинче хĕрарăм çыварать. Ку вăл — майор аппăшĕ, Софья Владимировна, ун пекех врач, анчах хирург мар, терапевт. Унăн упăшки летчик, эскадрилйĕ командирĕ пулнă та вăрçăн малтанхи çулĕнчех Смоленск тăрахĕнчи йывăр çапăçура вилнĕ. Çавăн хыççăн Софья Владимировна хăй ирĕкĕпех фронта кайма шут тытнă. Шăллĕ, Борис Владимирович, ун шухăшĕпе килĕшсе, арми командованийĕ урлă ăна тылри госпитальрен хăйсен дивизине чĕнсе илтернĕ.

Çак хĕрĕхелле çывхарнă хĕрарăм çинчен дивизире

ырăпа çеç асăнаççĕ. Аманнисемшĕн, чирлисемшĕн пĕтĕм чунне парса тăрăшать иккен вăл. Йывăр чирлесе выртакансем патĕнче час-часах çĕрĕпе пĕр уйрăлмасăр ларать. Çав вăхăтрах тин çеç ирĕке кăларнă ялсенчи çынсене те нумай пулăшать. Фашистсен пусмăрĕнче асапланса пуранна ялсенче чирлисем яланах нумай пулнă вĕт-ха, таса мар тата выçăлла-тутăлла пурăннипе вĕсем хушшинче тиф та, вар-хырăмпа ӳт-тир чирĕсем те, тĕрлĕрен кĕсен-çăпан та, тем те сарăлнă. Пуринчен ытла ачасем хĕн курнă. Софья Владимировна вĕсене килтен киле пăхса çӳренĕ, мĕн май килнĕ таран эмелленĕ, сывалма пулăшнă...

Ку çеç те мар: пĕлтĕр, пирĕн дивизи Калинин облаçĕнче çапăçнă чух, Софья Владимировна пĕр хĕрачана вилĕмрен çăлса хăй усрама илнĕ. Çав хĕрача паян кун та дивизирех, медсанбатпа пĕрле çӳрет тенине илтнĕччĕ эпĕ.

Майор термосран пĕр кружкă чей ярса ĕçнĕ хыççăн шинель тăхăнма тытăнсан, хĕрарăм вăранчĕ.

— Операци пĕтрĕ-и? — ыйтрĕ вăл, утиялне пуçĕ çинчен сирсе.— Хăрамалли çук-и?

— Чиперех-ха,— терĕ майор.

— Халь ăçта каятăн тата? Выртса илесчĕ сан кăштах. Хăв пирки пĕртте шутламастăн.

— Ĕнер операци тунисене çеç пăхса килетĕп, вара çывăратăп.

— Пĕл-ха унта, юн илсе килнĕ-и? Манăн паян виçĕ çынна юн ямалла, анчах юнĕ пĕр кубик та çук.

— Юрĕ, пĕлĕп.

— Илсе килмен пулсан — начсанарм * патне шăнкăравлас пулать. Мĕн шутлаççĕ вĕсем унта? Аманнисене юн выранне çырмари шыва ярса сыватмалла-и?

— Ан пăшăрхан, Соня, пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать. Самолетпа та пулин илсе килеççех.

* Начсанарм — армири санитари службин начальникĕ.

Эпир урама тухсан, Борис Владимирович кулнă пек-мĕн пек каларĕ:

— Ман аппа çыварнă чух та аманнисене çеç курать, вĕсем çинчен кăна шухăшлать пулмалла...

— Пăшăрханать, çынсене часрах сыватса строя тăратасшăн,— терĕм эпĕ.

— Тепĕр чух эпир ют çынсем пекех хирĕçсе каятпăр. Анчах унпа тавлашнинчен усси çук. Пурĕпĕрех хай шухăшланă пек тутарать.

— Вайлă характер эппин.

— Ан та кала!

— Вăрçăра çаван пек пулмалла та пуль...

Машинă, урапа кустăрмисемпе çăрăлса пĕтнĕ лапраллă урампа тăвалла чылай кайсан, эпир ултă кĕтеслĕ лутрарах пÿрте кĕтĕмĕр. Сăмсана тÿрех эмел шăрши пырса çапрĕ. Малти пÿлĕмре, саваламан хăмасенчен тунă сарлака нар çинче, аманнисем выртаççĕ. Кăмака çумĕнче çеç пĕр чалăш-тĕлĕш тимĕр койкă ларать. Ăна нумай та пулмасть тултан кĕртнĕ пулмалла — ăшă çĕрте йĕп-йĕпе тарланă вăл, шыв тумламĕсем шăрçасем пекех çакăнса тăраççĕ. Ун çинче хайхи эп шыраса килнĕ Телегин разведчик ларать, çурăмĕ хыçне çитар хурса койкă пуçĕ çине тайăннă, марлĕпе чĕркесе тукмаксем пекех тунă аллисене утиял çине кăларса хунă. Ун çумĕнче, хыççăр лутра пукан хĕрринче, шурă халатлă, çамки тĕлне пĕчĕк çеç хĕрлĕ хĕрес тĕрлесе хунă шур тутăр çыхнă, çинçешке, ансăр хулпуççиллĕ, тăрăхларах шуранка питлĕ, тĕксĕмрех кăвак куçлă хĕрача ларать. Вăл пĕр аллипе шуç чашăк тытнă, тепĕр аллипе чашăкри хуратул пăттине кашăкпа ăса-ăса Телегина хыптарать.

— Сывлăх пултăр! — аллине çĕклесе саламларĕ пÿртри çынсене майор. Унпа пĕрлех эпĕ те сывлăх сунтăм.

— Хăвăра та сывлăх пултăр! — терĕç аманнисем.

— Пурнăç еплерех пырать, ăмăрткайăксем?

— Тавтапуç, военврач юлташ, аптрамастпăр-ха, аванах пуранатпăр! — терĕç ăна хирĕç темиçен пĕр харăс.

— Вăрçă пĕтессе кĕтсе выртатпăр, мĕн тăвас пирĕн урăх? — шӳтлесе илчĕ тата тахăшĕ сылтăм кĕтесрен.

— Ан хăрăр, вăрçи халех пĕтмĕ-ха, сире валли те юлĕ, Берлина çитесси инçе,— аллипе сулчĕ майор.— Каман мĕн пирки те пулин ӳпкелешмеллисем пур-и? Апат-çимĕç çитет-и? Жалобăсем çук-и?

— Жалобăсем çук, анчах апат умĕн нарком порцине * парсан хирĕç пулмăттăмăр... ы-ых! — юриех йынăшнă пек туса илчĕ лешĕ, вăрçă пĕтессе кĕтекенни.

— Ну, ăна ĕнтĕ ротăна таврăнсан старшинаран ыйтас пулать,— кăмăллăн кулса илчĕ майор. Унтан вăл сулахаялла пăрăнчĕ те тӳрех Телегин патне пычĕ. Ăна выран пама чашăкпа кашăк тытса ларакан хĕрача пукан çинчен тăчĕ, анчах майор, аллипе сулса, каялла ларма хушрĕ.

— Гитлер салтакĕсене вăрлакансем мĕнле пурăнаççĕ тата? — ыйтрĕ майор.

— Вайлă! — терĕ Телегин, куçĕ çинелле усăнса аннă çӳç пайăркине каялла ывăтма пуçĕпе ухса.— Ача садĕнчи пекех! Куратăр — йăмăк мана кашăкранах çитерет. Çăтса кăна вырт. Ма пурăнас мар кун пек? Ырлăх!

— Ним тума та çук, аслă сержант, вăрçăра ун пекки те пулать çав. Юрать-ха, шăлу-çăвару пур...

— Уншăн та турра тав тăватăп çав.— Телегин çав самантрах салхуланнă пек пулчĕ.— Военврач юлташ, манăн тусăм Абикей мĕнле унта? Рамазанов, манпа пĕрле разведкăра пулни?..

— Операци ăнаçлă иртрĕ, ан пăшăрхан.

— Текех разведкăна çӳрекен пулать-ши вăл?

---

* «Нарком порцийĕ» тесе салтаксем хĕллехи çапăçусем вăхăтĕнче паракан çĕр грамм эрехе калатчĕç.

— Пулать те пуль, халех мар-ха. Пĕр виçĕ уйăхран...

— Шел! Ачи ытла та маттурччĕ. Разведкăра кушак пек — ним сассăр шăвать. Тăшман патне çитсен— чăн-чăн тигр. Аллисем тимĕр, пĕр çавăрса тытсан — шуйттан та вĕçернеймест. Казах ĕнтĕ, çеçенхир ăмăрткайăкĕ! Тыла ăсатиччен курасчĕ ман ăна.

— Акă, йăмăкупа кайса килетĕр,— пуçĕпе хĕрача еннелле сулса илчĕ майор.— Кăнтăрласем иртсен «эвакона» илсе кай эс ăна, Касăя.

Хĕрача пукан çинчен тăчĕ.

— Юрать, Борис Владимирович...— Унтан вăл Телегин çине пăхса: — Чей илсе килсе ĕçтерес мар-и сана? — терĕ.

— Çук-ха, ĕçес килмест,— пуçне пăркаларĕ аслă сержант.

— Ну, варарахпа эппин...

— Тавтапуç, Касăя.

Хĕрача ун çине тата тепĕр хут йăвашшăн, çав тери ăшшăн пăхса илчĕ те çинçешке урисемпе вĕттĕн-вĕттĕн пусса тухса кайрĕ. Эпĕ ун хыçĕнчен тĕлĕнсе пăхса юлтăм. «Кун пекех çамрăкскер, фронтри медсанбата мĕнле лекнĕ-ши? Тем тесен те вунтăват-вунпилĕк çултан иртмен-ха хăй. Кĕлеткипе те ача кăна, çитменнине хавшакрах сывлăхлă пулмалла»,— шухăшларăм хам ăшра.

— Сан патна эпĕ хаçат çыннине илсе килтĕм, Телегин юлташ,— терĕ çав вăхăтра майор.— Санпа калаçасшăн вăл. Паллашăр, лейтенант Атнаров...

— Эпир пĕрне-пĕри тахçанах паллатпăр,— терĕм эпĕ.

— Анчах чылайранпа тĕл пулман,— хушса хучĕ те разведчик, кăшт çӳлерех çĕкленсе ларчĕ.

— Апла пулсан тата авантарах. Калаçăр. Эп каям-ха, манăн ытти пӳртсене çитсе пăхас пулать тата. А эсĕ, писатель юлташ, кайран ман пата кĕр...

— Юрӗ.

Телегинпа вара эпир чылай калаҫса лартӑмӑр — пӗр икӗ сехет те пулӗ. Вӑл мана хӑйсем кӗҫӗрхи операцие хатӗрленнӗ май виҫ-тӑватӑ кун хушши траншейӑсенчен чылай маларах тухса сӑнаса выртни, нимӗҫсен пулемечӗсем ӑҫтарах тӑнине, хӑш вырӑнтан кайма меллӗрех пулнине пӗлме тӑрӑшни, унтан тӑшмана епле тӑрук тапӑнни, каялла мӗнле килни ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ. Ӑна итлеме питӗ интереслӗ пулчӗ. Чее те, паттӑр та, харсӑр та пулнӑ вӗсем. Паллах, унсӑрӑн «чӗлхе» те пулман пулӗччӗ ҫав...

— Шел, Абикея хытӑ амантрӗҫ,— тусӗшӗн хуйхӑрса ассӑн сывласа илчӗ вӑл юлашкинчен.— Ҫав тери шанчӑклӑ юлташчӗ! Ун пеккисене часах шыраса тупаймастӑн...

— Сывалать пуль-ха, таврӑнать пуль,— ӑна лӑплантарма пикентӗм эпӗ.

— Хӑҫан ҫитет-ха вӑл вӑхӑт! — тарӑхнӑ пек аллипе сулчӗ вӑл.— Тухтӑр, ав, виҫӗ уйӑхран тет... Анчах виҫӗ уйӑх хушшинче пирӗн тӑшман патӗнче миҫе хут пулмалла? Ҫӗр-шыв типсенех наступлени пуҫланать акӑ. Ун чух пирӗн ӗҫ татах йывӑрланать. Пирӗн яланах малта пымалла вӗт, эпир — куҫ, эпир — хӑлха. Питӗ ҫивӗч качча́сем кирлӗ...

Телегинпа иксӗмӗр калаҫса пӗтереспе пӳлӗме каллех леш ҫинҫешке хӗрача пырса кӗчӗ.

— Миша пичче, чей парам-и халь? — ыйтрӗ вӑл хуллен.

— Тавтапуҫ, Кӑсӑя, ӗҫес килмест-ха манӑн,— терӗ Телегин.— Кайран мӗн пулӗ, халь лейтенантпа калаҫатпӑр...

Хӗрача тек ним каламасӑрах тухса кайрӗ. Телегинпа иксӗмӗр пируссем чӗртсе ятӑмӑр та, эпӗ унран хуллен кӑна, ыт ахальтен пек ыйтрӑм:

— Итле-ха, Михаил Иванч, мӗнле хӗрача ку? Санитаркӑ-и, сестра шутланать-и? Ытла та ҫамрӑк-ҫке?

Ача вӗт! Мирлӗ вӑхӑтра ун пеккисем пуканелле выляççӗ темелле, ку пур — вӑрçӑра, аманнӑ салтаксене пӑхать... Тата мӗншӗн вӑл сана «пичче» тесе чӗнет? Мӗнле ӑнланмалла куна?

Телегин, пируса мӑннӑн ӗмсе илсе, тӗтӗмне çавар туллин кӑларса ячӗ те, мана куçран пӑхса, самантлӑха шухӑша кайнӑ пек пулчӗ.

— Хӑш-пӗр çӗрте «полк ывӑлӗсем» пулаççӗ, ун çинчен эсир пӗлетӗр ӗнтӗ,— терӗ вӑл унтан.— Нумай пулмасть хамӑрӑн фронт хаçатӗнче те çырнӑччӗ-ха пӗрин пирки. Вуламан-и?

— Ӑна вуламан, анчах «полк ывӑлӗсем» çинчен пит лайӑх пӗлетӗп. Хамӑрӑн артполкӑн иккӗмӗш дивизионӗнче те пур ун пекки. Шутсӑр çивӗч ача, ларатӑра та пӗлмест. Ӳссен çӗнӗ йышши тупӑсем шухӑшласа кӑларма ӗмӗтленет.

— Çак Кӑсӑя та çавӑн пекки. «Полк хӗрӗ»...

— Кӑсӑя? Ячӗ çапла-и унӑн?

— Ячӗ мар, хушамачӗ çавӑн пек — Синичкина. Ячӗ — Наташа, анчах ӑна никам та ятпа чӗнмест, нумайӑшӗ унӑн чӑн ятне те пӗлмеççӗ пулмалла. Пурте Синичка, Кӑсӑя теççӗ. Вӑл хӑй те хӑнӑхса çитнӗ ӗнтӗ ӑна, Кӑсӑя тенине аякран илтсенех сас парать...

— Кунта мӗнле лекнӗ вара вӑл?

— Ӑна пӗлтӗр çулла эп тупса килсе патӑм.

— Эсӗ? Мӗнле майпа? Ӑçтан?

— Астӑватӑр-и, Вязьмӑпа Ржев хушшипе наступлени туса кӗрсе кайсан, Погорелое Городище тавраш̆ӗнче питӗ вӑйлӑ çапӑçусем пулчӗç? Çавӑн чух эпир пӗр ялти гарнизона тылран пырса çапас тесе ыраш ӑшшӗн пытӑмӑр... Ялне çитесси нумай та юлманччӗ ӗнтӗ, сасартӑк ыраш хушшинче çак хӗрача выртнине курах кайрӑм. Тӗрӗссипе, вӑл ним пӗлми выртнӑ тӗле пырса тухрӑм. Çӳçӗ-пуçӗ арпашса кайнӑ, кӗске кӑна кӑвак кӗпи унтан та кунтан çурӑлнӑ, хӑй çара уран. Пичӗ-куçӗ чӗп-чӗр юн... Малтан эпӗ вӑл вилнӗ пуль

тесеттём, анчах чёри тапать иккен-ха. Хайне кăшт хускатсанах йынăшса ячĕ. Вара эпĕ ун пуçне (осколок ăна пуçĕнчен лекнĕ) хамăн индивидуальнăй пакетпа çыхрăм та взводри пĕр боеца питĕ çирĕп приказ паттăм: хуть те мĕнле пулсан та çак хĕрачана санитарсем патне çитер, терĕм. Вăл çавăнтах ăна çĕклерĕ те ыраш хушшине кĕрсе çухалчĕ. Эпир малалла кайма пикентĕмĕр, анчах фрицсем пире асăрхаса вут-çулăм айне турĕç. Çĕр çумне пăталасах лартрĕç. Унтан танксем ячĕç... Пирĕн енчен танксем мар, сорокопяткăсем * те пулин çукчĕ. Ирĕксĕрех каялла чакма тиврĕ. Нимĕçсем кĕç-вĕç хуса çитсе ура кĕли çине пусас пекех пычĕç... Ыраш пуссинчен тухрăмăр кăна — эпĕ пĕр лакăмра икĕ кĕлетке выртнине асăрхарăм. Пĕри хайхи хамăн взводри салтак, тепри — кăвак кĕпеллĕ хĕрача. Чĕре яштах турĕ манăн — эппин, иккĕшĕ те пĕтнĕ! — терĕм. Чупса пытăм часрах, кукленсе лартăм вĕсем патне... Салтакĕ вилнĕ, анчах хĕрачи сывлать-ха. Хальхинче ăна нимĕн те тивмен пулмалла, малтанхи суранне пулах тăна кĕреймен вăл...

Телегин пирусне сÿнтерчĕ те малалла каларĕ:

— Мĕн тумаллаччĕ-ха ĕнтĕ манăн? Паллах, эп ăна пăрахса хăварма пултарайман. Ик алăпа меллĕрех çавăрса тытрăм та хамăраннисем хыççăн чупрăм. Хыçалтан переççĕ — ним майĕ çук! Пуç тăрринче çине-çинех брезантнăй снарядсем çуралаççĕ,—фашист пире шрапнельпе вĕтме тытăнчĕ. Чорт пĕлет-и тен, темле лекмерĕ пире! Хамăрăн малтанхи траншейăсем патне мĕнле çитнине те астусах каймастăп халь... Анчах çитнĕ, çав паха! Хĕрача телейне, пирĕн рота санинструкторĕ Даша Столярова çывăхрах пулнă. Вăл ача суранне тепĕр хут çыхрĕ. Каштах вăхăт иртсен вара ку тăна кĕчĕ. Паллах, малтан нимĕн те ăнланаймарĕ

---

* Сорокопятка — танксене хирĕç кĕрешмелли 45 миллиметрлă тупă.

вӑл — ӑҫта, кам патне лекнӗ? Куҫне уҫсанах макăрса ячӗ. Анчах Даша ăна часах лăплантарчӗ: эсӗ хамăр ҫынсем патӗнче, сана эпир сывататпăр, ан хăра, терӗ... Ҫапла кăшт лăплансан, пăртак сахăрпа ҫăкăр ҫитерсен (ал айӗнче пирӗн урăх нимӗн те ҫукчӗ), вăл кӗскен кăна хăй ҫинчен каласа пачӗ. Унăн ашшӗпе амăшне те, партизансемпе ҫыхăннă тесе, нимӗҫсем пӗлтӗрех ҫакса вӗлернӗ, вăл вăтă кукамăшӗпе ҫеҫ пурăнкаланă. Питӗ асаплă пурăннă, выҫса вилес патнех ҫитнӗ. Хамăрăннисем кунталла ҫывхарса килме тытăнсан, нимӗҫсем пур ҫамрăксене те, вунтăват-вунпилӗк ҫулсенчен пуҫласах, Германие хăваласа кайма тытăннă, килтен киле ҫӳресех пухнă вӗсене. Ҫакна сиссен, кукамăшӗ Наташăна пахчари мунча урайӗ айне шăтăк алтса пытарса пурăннă. Пӗр эрне ытла ларнă вăл унта... Паян ирпе мунчана снаряд лексе ывтăнтарса янă. Вара Наташа шăтăкран аран-аран чаваланкаласа тухнă та, хăйсен килне вут хыпса илнине курса, уяллa, ыраш ăшнелле тарнă. Ним тӗлне пӗлмесӗрех чупнă вăл, ялтан аяккарах каяс тесе ҫеҫ тăрăшнă. Унтан сасартăк инҫетре те мар темскер кӗрслетнӗ, шартлатнă... Ҫавăнтан вара вăл урăх нимӗн те астуман...

Нимӗҫсен контратакине пирӗн артиллери путарса лартрӗ, каҫалапа ҫапăҫу кӗрлевӗ шăпланчӗ. Ҫӗр ҫине ерипен каҫхи ӗнтрӗк шуса аннă вăхăтра эпир санинструкторпа иксӗмӗр Наташăна наҫилкка ҫине хутăмăр та БПМа * леҫрӗмӗр. Вăл вилнӗ ҫын пекех ним хускалмасăр выртса пычӗ, вăхăтран вăхăта йынăшкаласа илчӗ ҫеҫ. Вăрҫăра эпӗ ҫынсем вилнине те, хăрушла аманса асапланнине те нумай курнă, вӗсене хӗрхеннӗ те, нумайăшӗ пирки хуйхăрнă та, анчах ҫак тăлăх хӗрачана темле уйрăмах хытă хӗрхентӗм пулмалла. Мӗнле пурăнӗ-ши ӗнтӗ вăл малашне, мӗскӗн? Тӗнчере унăн халь никам та, пӗр никам та ҫук, вăл пӗр-пӗччен.

---

* БПМ — батальон медпункчӗ.

çитменнине тата йыврă аманнă... Кам пăхса ÿстерĕ ăна, кам ăшă сăмах калĕ, кам пурнăç çулĕ çине тăрса çын пулма пулăшĕ?.. Манăн сасартăк ăна хамăн тăван йăмăк вырăнне шутлассăм килсе кайрĕ... БПМа çитсен, полевой сумкăри тетрадьрен пĕр листине çурса илтĕм те хăвăрт кăна çырса хутăм:

«Наташа, эсĕ хуть те ăçта пулсан та, санăн тăçта пурăнма тивсен те, фронтра хăвăн тăван пиччу пур, тесе шутла. Эп сана вут-çулăм ăшĕнчен илсе тухрăм, вилĕмрен çăлтăм, халь вара малашне те сана ырă сунас, май пулсан пулăшас, тетĕп. Сана кунтан инçете илсе кайĕç, анчах эс ман патăма çырсах тăр. Ака манăн адрес...» Унтан комсомол билечĕ ăшĕнче ахалех выртакан пĕчĕк кăна фотокарточкăна илсе çав çыру ăшне вырнаçтартăм та, Наташа кĕпин кĕсйине чиксе, булавкăпах тирсе хутăм...

— Хăй сисрĕ-и ăна? — Телегина пÿлсех ыйтрăм эпĕ.

— Çук, ун чух сисмерĕ. Анчах ман хут татки çухалман, ăна вăл хăй кăшт çăмăлланма пуçласан тупса вуланă та ман пата çыру çырса ячĕ.

— Ăçтан çырса ячĕ?

— Кунтанах... Ăна тыла ăсатман, вăл пирĕн медсанбатрах юлнă. «Полк хĕрĕ» пулса тăнă...

— Мĕнле майпа?

— Басов военврач аппăшĕ Софья Владимировна тăрăшнипе. Эп ку хĕрачана ниçта та ямастăп, ăна хам усрама илетĕп, тенĕ вăл. Ун пек тума юрасах кайман та-ха... Леш хĕрарăмĕ шутсăр çирĕп кăмăлласкер мар-и, никама та итлесе тăман, тет...

Эпĕ тÿрех аса илтĕм: медсанбатри аслă терапевт темле хĕрача усрать, тетчĕç. Çак «Кăсăя» пирки пулнă эппин вăл сăмах!

— Çыруне илсен эсĕ тÿрех ответ патăн пуль?

— Çук, ответ çырмарăм.

— Мĕншĕн?

— Эп ун патне хам кайрӑм. Ҫыруне хамӑран политрука кӑтартрӑм та, вӑл мана пӗр сӑмахсӑрах медсанбата кайса килме ирӗк пачӗ.

— Вара?

— Наташа сывалма пуҫланаччӗ ӗнтӗ, ерипен ҫӳрекен пулначчӗ. Софья Владимировна ӑна хайпе пӗрлех усранӑ. Мана тав туса ҫыру яма та вӑлах ӑс панӑ ӑна. Эп пынӑшӑн иккӗшӗ те ҫав тери савӑнчӗҫ. Наташи, чӑнах та, именчӗ, анчах эп ӑна хулпуҫҫинчен тытса лӑпкасан, хама та ҫатӑрах ыталаса илчӗ. Тавтапуҫ сана, Миша пичче, тавтапуҫ ман пурнӑҫа ҫӑлнӑшӑн, ӗмӗрне те манас ҫук эп сана куншӑн, тет... Хай куҫҫулӗпех макӑрать. Аран лӑплантартӑм. Эп ӑна пӗр вуниккӗсенче ҫеҫ пуль, тенӗччӗ, шӑрпӑк пекех ҫӑмӑлччӗ те-ха, анчах вӑл вунпиллӗкре иккен. ҫав ҫулхине унӑн саккӑрмӗш класра вӗренмелле пулнӑ... Чылай калаҫса лартӑмӑр эпир ун чух. Чей ӗҫрӗмӗр. Софья Владимировнӑн ман валли кӑштах спирт та тупӑнчӗ. Тусла пурӑнапӑр, терӗмӗр, мана вӗсем хайсем патне час-часрах пыма чӗнчӗҫ.

— Эсир ӗнтӗ пиччӗшӗпе йӑмӑкӗ пекех пулатӑр, сирӗн пур чухне те пӗр-пӗриншӗн тӑрӑшас пулать,— терӗ Софья Владимировна. Куншӑн эпӗ савӑнтӑм ҫеҫ. Манӑн хамӑн пӗр тӑван йӑмӑк та пулман, пирӗн анне умлӑн-хыҫлӑн тӑватӑ ывӑл ҫуратнӑ, халь вара кӗтмен-туман ҫӗртенех хам валли йӑмӑк тупрӑм...

Пирӗн калаҫу ҫакӑнпа татӑлчӗ, мӗншӗн тесен манӑн ӗнтӗ редакцине васкамаллаччӗ, эпӗ ахаль те, Телегин калавне вӗҫне ҫитиччченех итлес килнипе, нумай лартӑм. Борис Владимирович канать пулӗ-ха тесе, ун патне те кӗрсе тӑмарӑм, хамӑн «Футбол» ҫине утлантӑм та редакци вырнаҫнӑ ялалла юрттартӑм. Ҫул ҫинче те эпӗ Телегин калавне аса илсе пытӑм...

Мӗн тери ӑшшӑн, кӑмӑллӑн каласа пачӗ вӑл хай ҫалнӑ тӑлӑх хӗрача историне! Ҫӗр хут та вилӗмпе хире-хирӗҫ тӑрса ун куҫӗнчен тӳррӗн пӑхнӑ, вуншар

хут хаяр тытăçусенче пулнă, çав тытăçусенче тăшман салтакĕсене хăй аллипех вĕлернĕ çирĕм икĕ çулхи каччă чĕринче ăшă кăмăл, юрату, чăн-чăн этемлĕх çав тери вайлă иккен... Тăтăшах çапăçусенче пулнă, вилĕм нумай курнă çынсен чĕрисем хытаççĕ, туйăмĕсем мăкалаççĕ, тенине илтме пулать тепĕр чух. Çук, тĕрĕс мар вăл! Совет салтакĕн чĕринче нихçан иксĕлми хăватлă туйăм — Тăван çĕршыва, тăван халăха юратни вĕресе тăрать, çав юрату ăна малалла илсе пырать, тăшмана çĕнтерме вăй парать...

* * *

Анчах Телегин çаван чух мана Наташа-Кăсăя çинчен пĕтĕмпех каласа парайман. Ун çинчен эпĕ каярахпа Софья Владимировнăран тата ытларах пĕлтĕм. Ак мĕнле пулчĕ вăл...

Хĕрĕх виççĕмĕш çулхи июнь пуçламăшĕнче, çурхи сĕткенпе çĕр çинчи пĕтĕм ўсен-тăран вăй илсе сарăлса çитнĕ вăхăтра, ем-ешĕл вăрманти пысăк уçланкăра пирĕн дивизири нумай салтаксемпе офицерсене орденсемпе медальсем пачĕç. Мана ун çинчен çырма хушрĕç. Шăп çаванта эпĕ Софья Владимировнăна тĕл пултăм. Вăл та наградă илме пынăччĕ унта.

— Эсир пĕчченех-и? — ыйтрăм эп унтан, алă парса сывлăх суннă хыççăн. — Борис Владимирович килмен-и? Унăн та Хĕрлĕ Ялав илмеллеччĕ-çке паян?

— Ăна темшĕн васкасах начсанарм чĕнтернĕ-ха, çаванпа килеймерĕ вăл, — терĕ Софья Владимировна. — Анчах эпĕ пĕччен мар, манпа пĕрле медсанбатран тăватă хĕр килчĕç. Пĕри «За отвагу» илет, виççĕшĕ «За боевые заслуги»...

— О, питĕ аван! Пысăк савăнăç ку!

— Халь те савăнатпăр-ха. Пирĕн ĕçе те хисеплеççĕ...

— Епле хисеплеместĕн-ха! Мĕн чухлĕ çын пурнăç-

не ҫӑлатӑр пулать те эсир, мӗн чухлӗ аманнисене сыватса строя тӑрататӑр та!




Ҫав вӑхӑтрах наградӑсем илме килнисене йӗркеленсе тӑма хушакан командӑсем илтӗнчӗҫ те, эпир уйӑрлтӑмӑр.

Питӗ хавасла пулса иртрӗ награ-дӑсем парасси,— вӑрманта музыкӑ кӗрлерӗ, кашни ҫын орден е медаль илнӗ хыҫҫӑнах шӑпӑр-шӑпӑр алӑ ҫупрӗҫ... Наградӑ илнисем строя ҫав тери саванаҫлӑн пӑлханса тавранчӗҫ. Акӑ, черет медсанбатрисене те ҫитрӗ. Малтан дивизи командирӗ медицинӑ службин капитанне Софья Владимировна Басовӑна Хӗрлӗ Ҫалтӑр тыттарчӗ, унтан аслӑ сержант Салиха Нургалиева «За отвагу» медаль илчӗ, унтан...

Унтан наградӑланисене список тӑрӑх чӗнсе каларакан подполковник:

— Медаль «За боевые заслуги» награждается... санитарка Синичкина Наталья Федоровна!—тесе пӗлтерчӗ.

Ҫав самантрах стройран пилоткине ҫамки ҫине пусарах лартнӑ, шалпартарах гимнастеркӑ тӑхӑннӑ, питӗ ҫинҫешке, ансӑр хулпуҫҫиллӗ ҫамрӑк кӑна хӗр уйӑрлса тухрӗ те, ыттисем пекех пат, пат! утса, генерал-майор умне пырса «смирно» тӑчӗ.

Эп ӑна тӳрех палласа илтӗм те ҫӑвара карсах пӑрахрӑм...

Ку хӗрача — леш Кӑсая, Телегин разведчик вилӗмрен ҫӑлнӑ, халӗ Софья Владимировна хӑй ачи вырӑнне усракан пысӑк кӑвак куҫлӑ Наташа иккен! Ак тӗлӗнтермӗш! Мӗншӗн тивӗҫлӗ пулнӑ-ха вӑл ҫакӑн пек наградӑ илме? Мӗнле паттӑр ӗҫ тума пултарнӑ?..

Генерал-майор, хӑй тин ҫеҫ орденсемпе медальсем панисене командовани ячӗпе хӗрӳллӗн саламласа,

тăшмана хирĕç тата хастарлăрах, ăстарах çапăçма чĕнсе калана хыççăнах эпĕ Софья Владимировна патне чупрăм.

— Эсир халь тӳрех хăвăр пата тавранатăр-и?

— Ăçта каяс ĕнтĕ тата? Награда илнĕ ятпа сирĕнпе пĕрле ресторана кĕрсе ларсан аванччĕ те, шел, çукçке кунта ун пек хаваслă учреждени! — кулса илчĕ вăл.

— Сире ăсатса яма юрать-и? Ман сирĕнпе пĕр сăмах пур...

— Тархасшăн! Анчах ман хĕрсем военторг автолавкине çитсе ăна-кăна илесшĕн-ха. Çавăн хыççăн кайăпăр вара.

— Питĕ аван. Манăн та пирус илес-ха унта...

Медсестрасем военторгра одеколон, шăл тасатмалли хатĕр-хĕтĕр, пĕрер-икшер мăшăр чăлха, канверт-хут, кăранташсем туянчĕç. Хайсем пĕр çĕре пуханнă чакаксем пекех йăслаççĕ, шӳт тăваççĕ, тавлашкаласа илеççĕ.

— Мĕншĕн пурçăн чăлхасем çук санăн? Мĕншĕн хитререх косынкăсем туянтармастăн пире? — тапăнать пĕри автолавкăри пысăк куçлăхлă ватăрах сержанта.

— Тута сăрламаллисем ма пĕрре те илсе килместĕн, кукша пуç? Пудра мĕншĕн çук? — тет тепри.— Эсĕ мĕн, фронтри хĕрсен те хитре пулас килмест тетĕн-и-мĕн?

— А эсир ахаль те хитре, — шӳтлесе хуравлать сержант,— эп сире сăрланмасăр та вилес пекех юрататăп.

— Анчах эпир сăрлансан — вилсех каяттăн!

— Апла пулсан вуçех те илсе килместĕп: вилме юрамасть манăн, килте виçĕ ача, кам пăхса ӳстерĕ вĕсене?

— Э-э, вилесрен çапах та хăратăн эппин!..

Хĕрсем пĕр харăсах ахăлтатса кулса яраççĕ.

Ыттисем ҫавӑн пек шавлакаласа ӑна-кӑна илнӗ хушӑра Кӑсӑя кӑшт аяккарахра, ним чӗнмесӗр тӑчӗ. Пӗр-икӗ хутчен вӑл хайӗн кӑкри ҫинчи йӑлтӑркка медаль ҫине кӑмӑллӑн пӑхса илнине ҫеҫ асӑрхарӑм эпӗ.

«Кунӑн укҫи ҫук пулӗ ӗнтӗ...— шухӑшларӑм хам ӑшӑмра,— ҫавӑнпа лавкка патне те пымасть вӑл...»

Манӑн ӑна мӗн те пулин илсе парас килчӗ. Автолавкӑ умӗнче халӗ те-ха шавлакан хӗрсем хушшине кӗтӗм те, хам валли темиҫе пачкӑ «Беломор» туянни-сӗр пуҫне пӗр кӗленче хитре кӑна одеколон илсе Кӑсӑя патне пытӑм...

— Наташа, асӑнмалӑх манран ҫак япалана йышӑн-ха,— терӗм ӑна, одеколона тыттарма пикенсе. Анчах хӗрача тӳрех аллисене ҫурӑм хыҫнелле пытарчӗ те темрен хӑранӑ пек пуҫне пӑркаласа илчӗ.

— Ҫук, ҫук... Мӗншӗн? Кирлӗ мар мана нимӗн те...— пӑшӑлтатнӑ пекех каларӗ вӑл.

— Эс наградӑ илнӗ ятпа, Наташа... йышӑн ӗнтӗ!

— Ҫук, илместӗп...

Ҫакна хӗрсем те, Софья Владимировна та курчӗҫ. Кӑсӑя ман парнене йышӑнман пирки пурте ӑна ӳкӗтлеме тытӑнчӗҫ:

— Илсем тата, Кӑсӑя, мӗн кутӑнланса тӑратӑн? Ил, теҫҫӗ! Лейтенант сана ыр сунса парать вӗт! Парнене нихҫан та хирӗҫ пулас пулмасть, айван хӗрача!

Наташа, ҫав тери именнипе тӑруках хӑмач пек хӗрелсе кайса, Софья Владимировна ҫине пӑхрӗ. «Илме юрать-ши?»— тесе ыйтнӑ пек пулчӗ ку. Лешӗ: «Ан вӑтан, Кӑсӑя, хаюллӑрах пул, ил мӗн панине!»— тесен тин вара аллине ман паталла тӑсрӗ.

— Тавтапуҫ, лейтенант юлташ...— терӗ вӑл, ман ҫине ҫав тери хаюсӑррӑн пӑхса.

«Ача ӗнтӗ... Тап-таса чунлӑ ача!»— шухӑшларӑм эпӗ.

Кӗҫех эпир вӑрмантан тухса медсанбат вырнаҫнӑ

ял еннелле çул тытрăмăр. Хĕрсем хăйсем хушшинче тем çинчен шавлăн калаçса, хушăран лăхăл-лăхăл кулса малта утрĕç, эпир Софья Владимировнăпа иксĕмĕр вĕсенчен чылай кайра пытăмăр.

— Сирĕн «полк хĕрĕн», Наташа-Касăян медалĕ пирки пĕлес килет манăн,— калаçăва тӳрех пуçласа ятăм эпĕ.—Мĕншĕн пана ăна? Мĕн туна вăл ун пекех?

— Тĕлĕнтерет-им пăртак?— йăл кулса илчĕ Софья Владимировна, ман çине хулпуççи урлă чеерехкĕн пек пăхса илсе.

— Тӳррипех калас-тăк — тĕлĕнтерет.

— Эсир манран çакăн çинчен ыйтса пĕлесшĕн пулнине эпĕ малтанах сисрĕм...

— Мĕнпе систертĕм-ши вара эп ăна?

— Сирĕн куçăрсем систерчĕç. Автолавка патĕнче эсир Наташăна ытла та хыта сăнаса пăхрăр. Унтан тата çав парне... Ну, писатель хăйне валли «объект» тупрĕ пулас, терĕм вара.

— Тунмастăп, тĕрĕс шутлана эсир. Каласа парăрха эппин, йывăр мар пулсан...

— Мĕн йывăрри пултăр? Вăрçăри ансат истори кăна вăл. Анчах каласа памалăх пур.

— Тархасшăн, Софья Владимировна...

— Эсир Наташа пирĕн пата мĕнле лекнине пĕлетĕр вĕт-ха? ППМран * ăна ним пĕлмиех илсе пычĕç темелле. Пĕр вăхăтлăха тăна кĕнĕ пек пулать те каллех аташма тытăнать. Температура — çав тери пысăк. Борис Владимирович унăн суранне пăхса тепĕр хут тасатнă хыççăнах ăна тыла ăсатасшăнччĕ, анчах эпĕ хирĕç пултăм. Эп ăна çул çинче тата япăхрах пуласран хăрарăм. Аманнисем ун чухне питĕ нумайччĕ, малти линирен пĕр вĕçĕм илсе пыратчĕç, эпир те тыла кунне вунă-вунпилĕкшер грузовик тиесе ярăттăмăр, çавăн пек пата ăшĕнче ача тылра та тӳрех лайăх ус-

---

* ППМ — полкри медпункт, санчаç.

ловине лекме пултараймасть ĕнтĕ... Унта-кунта илсе çӳренĕ хушăра сепсис * пуçланас хăрушлăх та пур. Вăхăтра асăрхаман сепсис — вилĕм. Эп вара ăна халлĕхе тыла ăсатас мар терĕм. Борис Владимировичпа кун пирки хирĕçсе те илмелле пулчĕ. «Ахаль çынсем валли мар, салтаксем валли те выран çитмест, эпир медсанбатра гражданскисене усранине пĕлсен, пире уншăн пуçранах ачашламĕç!»,— терĕ вăл. «Анчах вилесле аманнă тăлăх хĕрача пурнăçне çăлнăшан та сана трибунал ** умне тăратас çук»,— терĕм ăна хирĕç. Вара вăл аллине сулчĕ: «Эп ку ĕçе хутшăнмастăп, кайран ответне ху тытатăн»,— терĕ.

...Наташăна эп хамăр пата куçартăм — эпир икĕ сестрапа пĕрле колхоз клубĕн сцени хыçĕнче, пĕр арлан шăтăкĕ пек пӳлĕмре пурăнаттăмăр. Чирлĕ хĕрачана черетлĕн пăхрăмăр, кам ерçет, кам дежурствăра мар — вăл уншăн ответ тытать. Майĕпе унăн температури виçене ларчĕ, суранне те ӳт иле пуçларĕ. Унтан питĕ хăвăрт тӳрленме тытăнчĕ — çамрăк организм вĕт! Пĕр вунă кунтан çӳрекен те пулчĕ, пире пулăшма та тытăнчĕ — урай шăлать, выртсене пуçтарать, кухньăна апат илме кайса килет, ăпăр-тапăрсене çăвать. Юрлама та пуçларĕ пирĕн ача! Хамăр умра сас кăлармасть, анчах эпир çук чух чунтанах юрлать иккен...

Пĕр ирхине, дежурствăра пĕрре куç хупмасăр çĕр каçнă хыççăн, эпĕ питĕ салху таврăнтăм. Çав каçхине 117-мĕш полкри виççĕмĕш батальон командирĕ, Совет Союзĕн Геройĕ ятне пама палăртнă Удалов капитан вилсе кайрĕ. Бомбă осколокĕ ăна айăкĕнчен пырса çапса, çумĕнчи пистолетне хырăмĕ ăшне кĕртсе янăччĕ. Ăшчиккинче пĕтĕм пыршăсем таталса пĕтнĕ. Виçĕ талăк тăна кĕреймесĕр выртрĕ, калама çук асапланчĕ.

---

* Сепсис — заражение крови, юна сиенлĕ бактерисем лекни.

** Трибунал — çарти суд.

Ҫалаймарамăр... Хамăр пӳлĕм алăкĕ патне пытăм та шалта ҫинҫе кăна сасăпа юрланине илтех кайрăм:

— Во поле березонька стояла,
Во поле кудрявая стояла,
Люли, люли стояла...

Пĕр-икĕ минут итлесе тăтăм хĕрача юррине. Ҫав тери хитре, чĕре патне пымалла юрлать. Манăн тăванса ҫитнĕ кăмăл уҫăлсах кайрĕ. Шутласа пăхăр-ха эсир, мĕнешкел контраст: пирĕнтен темиҫе километрта ҫĕрĕн-кунĕн вăрҫă пырать, юн юхать, ҫынсем вилеҫҫĕ. Паян ир те ака нимĕҫ самолечĕсем юнашар ял ҫине темĕн чухлĕ бомбăсем тăкса ҫунтарса ячĕҫ. Удалов капитан, кадровăй офицер, ҫĕршыври чи хисеплĕ ята илме тивĕҫлĕ ҫын, вилсе кайрĕ. Инҫетри тылра, таҫта Ташкентра е Алма-Атара, унăн амăшĕ, арăмĕ, ачисем... Мĕн чухлĕ куҫҫуль тăкаҫҫĕ ак вĕсем, хăйсен чи хаклă ҫынни куҫне ĕмĕрлĕхе хупни ҫинчен пĕлсен! Анчах кунта ака ҫамрăк кăна хĕрача, хăй те ăнсăртран ҫеҫ чĕрĕ юлнăскер, кăтра шурă хурăн ҫинчен юрлать!..

Эпĕ пӳлĕме шăппăн кĕтĕм, анчах утюгпа кĕпе якатса тăракан Наташа мана тӳрех асăрхарĕ те юрлама пăтах чарăнчĕ.

— Юрла, юрла, Касăя, юрăпа туслă ҫын пурнăҫра нихҫан та аптрамасть, теҫҫĕ. Юрăпа пурăнма хаваслă...

— Эп халь хавасланса мар, хурланса юрларăм ҫав, Софья Владимировна,— терĕ Наташа мана хирĕҫ.

Эпĕ ун ҫине пăхрăм та куҫĕсем шывланнине асăрхарăм.

— Ку мĕне пĕлтерет тата?—ыйтрăм унран.— Кам та пулин кӳрентермерĕ пулĕ-ҫке сана?

— Ҫук, кӳрентермен...

— Мĕн-ха эппин? Аҫу-аннӳне аса илтĕн-и? Вĕсене халь тин тем чухлĕ макăрсан та тавăрас ҫук ĕнтĕ, ҫавăнпа та чуна ыраттарма та кирлĕ мар, хĕрĕм.

— Ҫук, эпуншăн мар...

— Апла пулсан сăлтавне ху каласа пар, тен, пулăшма пултаратăп сана?

Вăл аллинчи утюга хăвăрт кăна тимĕр çаврашка çине лартрĕ, унтан тăрук ман паталла ыткăнса майран ыталаса илчĕ те, пуçне ман кăкăр çине хурса, сасăпах макăрса ячĕ.

— Кала ĕнтĕ тата, мĕн пулчĕ?

— Мана эсир... эсир хăвăртан уйăрса яратăр...— куççулĕпе чыхăнса аран хуравларĕ вăл.

— Кам каларĕ сана ку сăмаха? Мĕн кирлĕ мара шухăшласа кăлартăн эс?—ача куçĕнчен тӳррĕн пăхса ыйтрăм та эпĕ, хам та унпа пĕрле пăлхана пуçларăм.

— Ĕнер каç Риммăпа Оля хăйсем хушшинче калаçнине ăнсăртран илтрĕм... (Риммăпа Оля — пирĕнпе пурăнакан медсестрасемччĕ, вĕсем иккĕшĕ те пĕлтĕр бомбежка вăхăтĕнче йывăр аманса тыла кайрĕç.)

— Мĕн терĕç вара вĕсем?

— Борис Владимирович каланă вĕсене: Наташа сывалса çитрĕ, ăна ĕнтĕ тыла ăсатма та вăхăт, тенĕ...

— Мана нимĕн те каламан-çке вăл?

— Тен, сире каламасăрах кăларса ярать пуль, вăл кунта чăн асли вĕт...— çаплах нăшăкларĕ Наташа.— Анчах манăн ниçта та каяс килмест, Софья Владимировна, манăн сирĕнпе пĕрле пулас килет! Ан ярăр мана ниçта та! Эп пĕчĕк ача мар вĕт, тем те ĕçлеме пултаратăп, хушăр çеç! Тархасшăн Борис Владимировичпа хăйпе калаçса пăхăр, ӳкĕтлĕр ăна, хĕрхентĕр вăл мана! Тархасшăн!

Борис чăнах та пĕррехинче мана ун çинчен кăштах систернĕччĕ.

— Кĕçех малалла каятпăр, санăн леш хĕрача пирки шухăшласа пăхас пулать, ăна пĕрмай хăвпа пĕрле илсе çӳрейместĕн пуль,— тенĕччĕ.

Эп ун чухне ăна нимех те калаймарăм, анчах халĕ калаçмаллах пулчĕ. Вăл çине тăрсах Наташăна тыла ăсатма сĕнчĕ.

— Эс ӑна юрататтӑнах пулсан — унӑн малашнехи пурнӑçӗ çинчен шухӑшла,— терӗ Борис,— ачан вӗренмелле, тылра халь ун пек тӑлӑхсем валли ача çурчӗсем, шкулсем нумай уçӑççӗ. Патшалӑх тӑрантарать, тумлантарать, ӗçе вӗрентет. Анчах пирӗнпе çӳренинчен мӗн усси? Шухӑшла-ха! Ӑна мӗн тери хӑвӑртрах ӑсататтӑр — уншӑн çав тери лайӑхрах пулать!

Вӑл тӗрӗс те каларӗ ӗнтӗ, анчах эп унпа килӗшмерӗм. Тавлашсах кайрӑмӑр. Вӑл хӑйӗнне калать, эп — хамӑнне. Ним пытармасӑр калас-тӑк, манӑн хамӑн та уйрӑлас килмерӗ Наташӑран, ытла та хӑнӑхса çитрӗм эп ӑна, маншӑн вӑл хамӑн тӑван ача пекех хаклӑ пулчӗ.

— Ан хӑра, батальонра ытлашши çӑвар пулмасть вӑл,— терӗм Бориса,—эп ӑна аманнисемпе чирлисене пӑхма хӑнӑхтараттӑп та, вӑл çӳçӗсене кӑтралатса кашни минутрах тӗкӗр çине пӑхса илекен хӑш-пӗр сестрасенчен нумай лайӑхрах ӗçлекен пулать акӑ. Курӑн! Анчах манпа килӗшместӗнех пулсан — эпӗ комдив патне каятӑп!

Эпир çавӑн пек тавлашнӑ çӗре шӑпах начподив*, Бурцев, пырса кӗчӗ. Унӑн хӗлле Мускав патӗнче аманнӑ ури çӗнӗрен ыратма тытӑннӑ-мӗн.

— Кунта темле дискусси пырать пулас?— ыйтрӗ вӑл пӳлӗме кӗнӗ-кӗмен.— Урамранах илтӗнет. Мӗнле проблемӑсем сӳтсе яватӑр?

Эп, хӗрсе кайнӑскер, ӑна пукан лартса парсанах хамӑр мӗн пирки тавлашнине каларӑм.

— Илтнӗччӗ, илтнӗччӗ эсир темле ача усранине,— терӗ вӑл, икӗ ури хушшине вырнаçтарнӑ туйи çине тайӑнса.— Паллах, медсанбатран ача ясли тума юрамасть...

— Ача мар вӑл, кӗçех вунпиллӗк тултарать!— пӳлтӗм эп ӑна.

---

* Начподив — дивизи политотделӗн начальникӗ.



— Анчах ун пек уйрăм фактсем пулма пултараççĕ. Енчен те пирĕн хисеплĕ Софья Владимировна çав хĕрачашăн хăй ответ тытать пулсассăн — килĕшме те юрать пулĕ. Пурăнтăр, анчах ĕçе хăнăхтăр, салтак çăкрине ахаль ан çитĕр.

— Ĕçлеттеретĕп эп ăна, ачи питĕ ўрĕк!

— Апла пулсан дискусси вĕçленчĕ тесе шутлăпăр.

Мана çакă çеç кирлĕ пулнă. Кайран-малтан Борис Владимирович Наташа пирки пĕрре те сăмах хускатмарĕ. Анчах кун çинчен Наташа хăй пĕлсен мĕн тери савăнса кайнине каласа пама та пĕлес çук.

Ĕçĕ ун валли часах тупăнчĕ.

Ку вырăнсенчен хăвăрт тухса тармалла пулнипе, нимĕçсем хăйсемпе пĕрле хăваласа кайма тăнă ĕне кĕтўне пăрахса хăварнă. Ытти чухне вĕсем вырăнсенчен выльăхсене персе вĕлерсе хăвараканнччĕ, хальхинче ун пек тума та ĕлкĕреймен. Пирĕн малта пыракан подразделенисен аллине 50—60 ĕне лекнĕ. Аякранах хуса килнĕ пулмалла вĕсене, ку тăрăхри ялсенче ĕне хуçисем

тупӑнман. Комдив хушнипе ҫав выльӑхсен пӗр пайне кунти ӗнесӗр колхозниксене валеҫсе панӑ, пӗр ҫирӗм-вӑтӑрӑшне медсанбат ҫумӗнче хӑварчӗҫ.

— Оборонӑра тӑнӑ вӑхӑтра аманнисемпе чирлисем сӗт ҫиччӗр, хӑвартрах вӑй илчӗр,— терӗ комдив.

Ҫав ӗнесене пӑхма эпир медсанбатра пӗр икӗ эрне выртнӑ Дулькин хушаматлӑ салтака хушрӑмӑр. Унӑн сулахай алли ҫӑмӑл ҫеҫ аманнӑччӗ. Суранӗ хӑварт тӳрленсе пычӗ, анчах хӑй текех: «Шалтан туртса ыратать»,— тетчӗ. Тӗрӗссипе, салтак майӗ те ҫукчӗ вӑл — ҫав тери тирпейсӗр, сухалне ӳстерсе янӑ, малти шӑлӗсем ҫук, куҫӗсем пӳрленеҫҫӗ, пиҫиххине шинель хлястикӗнчен те аяларахран ҫыхать, пряжки таҫта айӑк ҫинче, обмоткине лӑпӑр-лапӑр чӗркекеленӗ, пушмакӗ уяр ҫанталӑкра та тӑр-лапра. Хуть кала ӑна, хуть ан кала — пурӗпӗр усси ҫук. Тата каланине те илтмен пек тӑватчӗ — манӑн хӑрах хӑлха пӗчӗк чух лаша тапнӑранпах илтмест, тетчӗ.

Анчах ҫынни шутсӑр калаҫма юратаканскерччӗ. Тем те курнӑ, тем те пӗлет. Хӑй халап ҫапнӑ май ыттисенчен те ыйтса пӗлме юрататчӗ. Хӑш полкран, мӗнле аманнӑ, командирсем камсем, тем те пӗр. «Ходячий» — утма пултаракан — пулнипе, шав ял тӑрӑх ҫӳретчӗ. Пӗр ҫӗре пырать, тепӗр ҫӗре, кухня патӗнче шӑршласа тӑрать, малти линирен аманнисене илсе килсен, ӗмӗрне аманнӑ ҫын курман пек пӑхать. Пӗр сӑмахпа каласан — килсӗр йытӑ пек. Анчах аслисем умӗнче вара шутсӑр йӑпӑлтиччӗ, йӗрӗнмелле йӑпӑлти!

Сывалсан та ҫавна малти линие ямарӗҫ. Мӗн усси ун пек салтакран? Темле хӗрӳ ҫапӑҫу пулсан та, выртать вӑл пӗр-пӗр тӗмӗ хыҫӗнче пуҫне пӗрре ҫӗклеме-сӗр... Хуть те ҫара аллӑн пырса тыт ӑна! Ездовой турӗҫ. Апат-ҫимӗҫ, кӗпе-тумтир турттармаллаччӗ унӑн. Анчах тылри складсене ик-виҫ хут кайса килнӗ хыҫҫӑнах пӗррехинче вӗр-ҫӗнӗ кӗпе-йӗмсен, простыньсен ҫыххисене тӑп-тӑр лапра туса илсе пычӗ вӑл. Вӗ-

сене йалт ҫӗнӗрен ҫумалла пулчӗ. Дулькинӗ хӑй те йӗп-йӗпехчӗ, хуть те тытса пӑр.

— Ҫырмана аннӑ чух лашасем тӑрук тем мурӗнчен хӑраса ӗрӗхсе кайрӗҫ те, нимӗнле те тытса чараймарӑм,— тӳрре тухма тӑрӑшрӗ вӑл.— Кӗпер патне ҫитсен, урапа юпана пырса ҫапӑнчӗ те тӳрех тӳнсе кайрӗ, пӗтӗм тавар шывалла вӑркӑнчӗ. Ҫыххисене ҫӑлма хамӑн та вӗсем хыҫҫӑн чӑммалла пулчӗ. Куратӑр — йӗпе чӑх чӗппи пекех эпӗ...

— Ҫыххисене пурне те туртса кӑлартӑн-и хуть?

— Пӗлместӗп... Куҫа курӑннисене пурне те кӑлартӑм пек те...

Накладной тӑрӑх тӗрӗслесен, ултӑ ҫыхӑ ҫитменни паллӑ пулчӗ. Кайран пӗлтӗмӗр, ҫакна вӑл юри, пире сиен кӳрес тесе тунӑ. Анчах Борис Владимирович, ку ӗҫе Дулькин айӑпӗпе пулманнине ӗненсе, ӑна нимӗн те тумарӗ, ездовойран кӑларчӗ ҫеҫ.

Сӑмах майӗн каласан, ҫакӑн хыҫҫӑн ик-виҫӗ кунтанах пысӑк инкек пулчӗ: астӑватӑр пулӗ, пирӗн дивизин вӑрманти склачӗсене нимӗҫ самолечӗсем вӗҫсе пырса ним юлми аркатрӗҫ.

— Кам та пулин юри тӗллеттермесӗр пулман ку япала,— терӗҫ кун пирки.— Ирсӗр тӑшман алли тунӑ ку ӗҫе!

Анчах та — кам? Ӑна ӑҫтан пӗлетӗн?..

Дулькина ҫакӑн хыҫҫӑн медсанбат ӗнисене пӑхма хушрӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсене малтан пӑхса пурӑннӑ салтак, ватӑрах пулин те, хӑйне малти линие яма ыйтнӑ.

— Фронта эпӗ ӗне пӑхса пурӑнма мар, ҫапӑҫма килнӗ! — тенӗ вӑл, Борис Владимирович патне пырса.— Киле таврӑнсан, ял-йышсене мӗн калас манӑн? Ачасем хам мӗнле ҫапӑҫни ҫинчен ыйтсан, мӗн каласа парас? Ӗне пӑхса пурӑнтӑм, тес-и? Ҫук, хӑтарӑр мана ку киревсӗр должноҫран...

Ҫав кунах ун вырӑнне Дулькин йышӑннӑ.

Ӗнисене сума пирӗн кунне виççӗ каятчӗç. Ку ӗçе вăрçăччен ялта пурăннă сестрасене хушсаттăмăр. Пӗррехинче çав «дояркăсенчен» пӗри чирленӗччӗ те, ун выранне Наташа кайрӗ. Кун пирки вăл ытти сестрасемпе хăех калаçса таталнă иккен, манран ирӗк ыйтса илчӗ çеç.

— Ӗнине сума пӗлетӗн-и-ха эсӗ? Чӗччинчен туртас выранне хӳринчен туртман-и?— юри кулса ыйтрăм эпӗ.

— Ой, мӗн калаçатăр эсир, Софья Владимировна! Ман анне пӗрмай колхоз ферминче ӗçлетчӗ те, эп ăна пӗр вӗçӗм пулăшнă вӗт!— ӗнентерчӗ мана Наташа.

— Каях эппин, кай...

Каçхине вăл мана питӗ кăмăлсăр каласа пачӗ:

— Ӗнисене картаран та кăлармасть пулмалла вăл Дулькин, пурте выçă, чарисем путса ларнă, макăрса кăна тăраççӗ. Эпир пынă чух хăй çукчӗ, тахçантан тин пычӗ. Таçта çӳренӗ-çке, аттисем тăр-лапра, хăй тата самаях ӳсӗр...

— Ӳсӗр?— тӗлӗнтӗм эпӗ.— Аçтан тупнă-ха вăл ӗçмелли?

— Эп аçтан пӗлем? Пӗр-пӗр яла çитсе килнӗ пуль. Ӗнисене хуннă та — яра панă, ăна мӗн? Карланки тултăр...

Тепӗр кунне те Касăя çаван майлах каларӗ.

— Таврара куракӗ пилӗк таран, хам пулсан ӗнесене хырăмӗсем пичке пек пуличчен çитермелле. Выçă ӗне сӗт парать-и-мӗн? Начарланса каяççӗ те акă, кайран аш тума та юрăхсăр пулаççӗ,— мăн çын пекех ӳпкелешсе калаçрӗ Касăя.

— Эппин, сана хăвна хушас мар-и ку ӗçе?—терӗм ăна хирӗç.

— Пӗччене йывăр пулать пуль çав,— терӗ вăл, кăшт шухăшласа тăрсан.

— Ара, Дулькин та пултăр. Эс ăна ӗнесене тапăра хупса усрама памастăн çеç. Каçхине вăл унтах



юлать, эсӗ ытти хӗрсемпе каçхи сăватăн та медсанбата таврăнатăн.

— Ун пек пулсан — юрать...

Пирӗн шухăшпа Борис Владимирович та килӗшрӗ те, Касăя тепӗр куннех ӗнесем патӗнче çӳре пуçларӗ.

Эпӗ васкасах арми штабне тухса кайрăм, унта начсанарм пур дивизисенчи терапевтсене те пухса канашлу ирттерчӗ. Тӗрӗссипе вăл канашлу та мар, наукăлла конференци пекки пулчӗ — пӗр-пӗрне хамăрăн ӗçре пухăннă опыт çинчен каласа патăмăр. Манăн та чылай пысăк сăмах тухса калама тиврӗ — ирӗке кăларнă ялсенче тӗрлӗ эпидемилле чирсемпе епле кӗрешни, граждански халăха мӗнле пулăшни çинчен. Ку тӗлӗшпе пирӗн чылай лайăх опыт пухăннăччӗ.

Медсанбата эпӗ пилӗк кунтан каç пулсан тин таврăнтăм. Касăя мана çав тери хавассăн кӗтсе илчӗ.

— Мӗнле пурăнкаларăр кунта мансăр, ачам? —

ыталаса çурăмĕнчен лăпкаса илтĕм ăна.— Йĕркеллех пуль?

— Лайăхах пурăнтăмăр-ха, анчах сан пирки тунсăхларăм, курас килекен пулчĕ,— терĕ вăл, ман çума кушак çури пекех йăпшăнса.

— Борис Владимирович дежурствăра-и?

— Вăл ĕнертенпех тавранман.

— Мĕншĕн апла тата? Аманнисене нумай илсе килнĕ-им?

— Çук, хамăрăннисемех куранмарĕç. Нимĕçсене илсе килнĕ.

— Мĕнле нимĕçсене?

— Ĕнер каçалапа кунта, пирĕн тĕлте, сывлăшра питĕ вăйлă çапăçу пулчĕ. Нимĕç бомбардировщикĕсем йышлăн вĕçсе килнине курсан, вĕсене пирĕн виçĕ «хурчка» тапăнчĕç. Эп хам та пăхсах тăтăм ăна... Лешсен йĕрки тӳрех пăсăлса кайрĕ, вĕсем унталла та кунталла пăрăнма пикенчĕç. «Хурчкасем» икĕ бомбардировщикне çапса антарчĕç. Пĕрин çинчи летчикĕсем парашютсемпе сикрĕç, анчах хăйсем çапăçу вăхăтĕнче аманса пĕтнĕ те, вĕсене тӳрех пирĕн пата тиесе килнĕ. Сыватасшăн пуль ĕнтĕ...— Касăя ман çине пăхрĕ те тăрук ыйтрĕ: — Софья Владимировна, фашистсене мĕн тума сыватмалла вĕсене? Эп хам пулсан...

— Мĕн вара, эсĕ ху пулсан?— асăрханарах ыйтрăм эпĕ.

— Фашистсене пĕртте хĕрхенмелле мар. Вĕсем пире хĕрхенмеççĕ, курнă ĕнтĕ эпĕ... Пĕлтĕр кĕркунне тыткăна лекнĕ хĕрлĕармеецсене пирĕн ял хыçĕнче çĕр çын та ытла персе пăрахрĕç пулĕ. Шăтăкне малтан хăйсенех алттарчĕç. Унтан автоматсемпе... Ой, мĕн тери хăрушă пулчĕ вăл! Персе пăрахнă çĕре пире вăйпах хуса тухрĕç вĕт, эпир пĕтĕмпех куртăмăр... Çапçамрăккисем, сухалĕсем те шăтман йĕкĕтсем нумаййчĕ персе вĕлернисем хушшинче. Ĕмĕрне те манас çук вĕсем мĕнле кăшкăрнине!.. Анчах Борис Владимиро-

вич халь вӗсен летчикӗсене сыватма тӑрӑшать унта. Мӗн тума?

— Эпир фашистсем мар, Наташа. Эпир — ҫынсем, совет ҫыннисем,— терӗм эпӗ. Анчах ман сӑмахӑм ун шухӑшне ним чухлӗ те улӑштараймарӗ курӑнать. Паллах ӗнтӗ, фашистсен хӑрушла тискер ӗҫӗсене хӑй куҫӗпе курнӑ, вӗсене пула тӑлӑха тӑрса юлнӑ, унтан тем чухлӗ асап тӳснӗ ача ҫав фашистсене сыватма тӑрӑшнипениепле те килӗшме пултарайман.

Эпӗ юриех вара сӑмаха урӑх еннелле ҫаврӑнса яма пикентӗм.

— Ну, сан ӗнесем мӗнле унта? Пахма ҫӳретӗн-и? Йалӑхтармарӗ-и-ха?— тесе ыйтрӑм.

— Ҫӳретӗп те... Питӗ ыванатӑп ҫав,— терӗ вӑл кӑмӑлсӑртараххӑн.—Выльӑхсене манӑн пӗчченех пахма тивет те...

— Мӗншӗн пӗччен? Дулькин мӗн тӑвать тата? Сан ҫине шанса пӗр вӗҫӗм ҫывӑрать пуль-ха?

— Ҫук, ҫывӑрмасть вӑл! Ун патне темле инке ҫӳрет. Икӗ хут пырса кайрӗ ӗнтӗ. Вӑл пырсанах Дулькин мана ӗнесемпе ҫӳреме хӑваласа ярать те хӑй унпа пӗрле вӑрмана кӗрсе каять.

— Ав епле иккен! Ӑна эрех ӗҫтерсе ӳсӗртекенни ҫав инке пулӗ-ха эппин!— терӗм эпӗ, кунта темле ырӑ мар япала пуррине туйма пуҫласа.

— Ҫавӑ, ҫавӑ!— терӗ Касая.— Паян куртӑм эпӗ...

— Мӗн куртӑн?

— Вӗсем вӑрмана хӑш тӗлтен кӗрсе кайнине юри асӑрхаса юлтӑм та, ӗнисене пӑрахсах уҫланкӑ тавра, йывӑҫсем хыҫӗпе пытанса кайрӑм. Паллах, питӗ шӑппӑн... Кӗҫех вӗсем хуллен кӑна мӑкӑртатса калаҫнине илтрӗм. Эпӗ ҫывӑхрах пытӑм. Пӗр йывӑҫ айне хаҫат сарса хунӑ, ун ҫинче эрех кӗленчи ларать, ҫимеллисем хунӑ. Хӗрарӑмӗ хӑй ӗҫмест, тек Дулькина тултара-тултара парать. Дулькин ӗҫет те ҫиет, ӗҫет те ҫиет, хӑй ҫав вӑхӑтрах темскер калаҫать...

— Мĕн калаçнине илтмерĕн-и?

— Сăмахĕсене уйăраймарăм çав, хуллен калаçрĕç вĕсем...

— Нумай ларчĕç-и?

— Чылай. Унтан Дулькин çак хĕрарăма пилотки ăшĕнчен темле хут кăларса пачĕ те, лешĕ, хăвăрт кăна тăрса, вăрман ăшĕнче çухалчĕ...

— Вăл кайран ăçталла кайнине сăнамарăн-и?

— Çук, эп ĕнесем патне таврăнтăм... Кĕçех Дулькин хăй те пычĕ ман хыççăн. Вар ыратнипе аптратăп, чут вилсе каяттăм, тет. Эп тӳсеймерĕм, ыйтрăм: сан патна килнĕ хĕрарăм кам вăл?— терĕм. Дулькин ман çине куçĕсене тата ытларах хĕссе пăхрĕ те: манăн пулас арăм, терĕ. Анчах çавăнтах ман паталла пырса тимĕр пек хытă аллипе янахран пăчăртаса тытрĕ те сăмахĕсене шăл витĕр сăрхăнтарса калама тытăнчĕ: «Асту эсĕ, ман пата çав хĕрарăм килни çинчен никама та ан каланă пултăр! Вăл ĕнтĕ юлашки хут, манпа сывпуллашма çеç килчĕ, ыран тăванĕсем патне, кунтан питĕ инçете каять. Ăнлантăн-и? Çăвар та ан уç ун çинчен! Атту-тăк эп сана... никам тупайми алтса пытаратăп!»—терĕ. Питĕ хăрамалла къларĕ... «Мана мĕн ĕç, ма лĕпĕртетес-ха пустуй»,— тесен тин янаха аллинчен вĕçертрĕ.

— Кайран мĕн пулчĕ? Тек хускатмарĕ ун çинчен?

— Кайран вăл кунĕпех манпа çав тери кăмăллă пулчĕ — пĕр вĕçĕм калаçрĕ, мана култарма тăрăшрĕ, унтан-кунтан мăйăр тупкаласа çитерчĕ... Сисрĕм, мана хăй майлă çавăрасшăн тăрăшать. Анчах эпĕ каç пуласса çеç кĕтрĕм, киле таврăнсанах кун çинчен Борис Владимировича каласа парас, тесе пурăнтăм, мĕншĕн тесен леш хĕрарăм ахальтен çӳремест пуль-ха Дулькин патне, ыр çын мар вăл, чун сисет манăн! Халь акă эсир таврăнтăр та сире каласа кăтартрăм...

— Тĕрĕс туран, маттур!— терĕм эпĕ, хам та çав тери пăлханса кайса.— Кун пек япаласем çинчен пĕр

миңут та шарламасӑр тӑма юрамасть. Атя халех Борис Владимирович патне, никамран малтан ӑна пӗлтерӗпӗр...

Эпир ӗнтӗ тухса каймах тӑнӑччӗ, анчах, вӑл пире кирлӗ пулнине пӗлнӗ пекех, ҫав вӑхӑтра Борис хӑй пырса кӗчӗ пирӗн пата. Кӑсӑя паян мӗн пулнине кӗскен каласа парсанах, вӑл ӑна тӳрех особӑй отдел начальникӗ патне илсе кайрӗ. Кунта та Кӑсӑяна хӑй мӗн курни ҫинчен тепӗр хут тӗплӗн калаттарнӑ. Уйрӑмах Дулькин патне пынӑ хӗрарӑм ҫинчен ыйтнӑ: миҫе ҫулта пек вӑл, сӑнӗ мӗнлерех унӑн — хура-и, сарӑ-и, мӗнлерех тумланнӑ — ахаль ҫын пек-и, салтакла-и... Хӑй мӗн асӑрхаса юлнине Кӑсӑя пӗтӗмпех каласа кӑтартнӑ.

— Дулькинне халех арестлес пулать эппин!— сӗннӗ пирӗн Борис Владимирович.

— Ай, айван та иккен эсӗ, тухтӑр!— тенӗ ӑна хирӗҫ особист *,—Дулькина халех хупсан вара эпир леш кайӑкне тытма мар, унӑн хӳрине те курса юлаймастпӑр вӗт! Хупма мар — ӑна халь пӗр нимӗн те систерес пулмасть, халиччен мӗнле ҫӳренӗ — ҫавӑн пекех ҫӳретӗр. Леш хӗрарӑмӗ ниҫта та кайман-ха, вӑл юлашки хут килчӗ тесе Дулькин юри, улталаса каланӑ, ун патне татах пырать-ха вӑл. Кӗтсех тӑрас пулать ӑна. Ҫавӑнпа та Дулькина хӑйне пӗр самантлӑха та куҫран вӗҫертме юрамасть...— Унтан вӑл пирӗн Кӑсӑяна вӗрентме тытӑннӑ: — Эс унпа кӑмӑллӑ пул, ху ӑна шанманнине ан систер, анчах питӗ хытӑ сӑна... Тен, ун патне леш хӗрарӑм вырӑнне урӑх ҫын пырӗ. Ҫавна та асӑрха. Мӗн курни-асӑрханине Борис Владимировича пӗлтерсех тӑр. Анчах урӑх никама та пӗр сӑмах та ан кала.

— Софья Владимировнӑна та-и?— ыйтнӑ Кӑсӑя.

---

* Особист — особӑй (уйрӑм, вӑрттӑн) отделта ӗҫлекен.

— Ну, вӑл хавӑр çын, унран пытарма кирлӗ мар... Эсир пӗр кил-йыш вӗт!

— Юрать, пӗтӗмпех эсир хушнӑ пек тӑвӑп,— тенӗ Кӑсӑя.— Анчах Дулькин патне кам та пулин пырас пулсан, манӑн тўрех чупса килес-и?

— Çук, ун пек тума кирлӗ мар,—тенӗ особист.

Çакӑн хыççăн тӑватӑ кун иртрӗ. Кашни каçах, ӗнесем патӗнчен таврансан, эпир унран тўрех Дулькин çинчен ыйтса пӗлтӗмӗр. Мӗнле кун каçрӗ вӑл? Ун патне кам та пулин пыман-и?

— Çук, никам та пыман, вӑл хӑй те манпа пӗрлех пулчӗ, пӗр икӗ хут çывӑрса илчӗ кӑна,— терӗ Кӑсӑя кашнинчех.

Анчах пиллӗкмӗш кунӗнче вара акӑ мӗн пулса иртрӗ. Малтан ним сас-хура та пулман, унтан, медсестрасем ӗнесене кӑнтӑрлахи суса кайнӑ хыççăн пӗрер сехетрен, инçетре те мар куккук авӑтма тытӑннӑ. Авӑтать-авӑтать те — чарӑнать, унтан татах авӑтать... Кӑсӑя вӑл авӑтнине шутласа та пынӑ,— пӗлетӗр вӗт, çавӑн пек йӑла пур-çке: куккук, куккук, эп миçе çул пурӑнассине шўтласа пар, теççӗ.

Ӗнесем çав вӑхӑтра вӑрманти çырма тӑрӑх сапаланса кайнӑ. Унччен çемçе курӑк çинче тӗлӗрнӗ пек выртнӑ Дулькин сасартӑк сиксе тӑнӑ та аяккарахра кӗнеке вуласа ларакан Кӑсӑяна хыттӑн кӑшкӑрнӑ:

— Эй, хӗрипраç, эс ӗнесене пӗр çӗрелле хӑваласа пух-ха, эпӗ йӑпӑрт вӑрмана кӗретӗп, мана старшина мунча валли хурӑн милӗксем янтӑлама хушнӑччӗ!

Кӑсӑя тӑрса утнӑ, анчах çав самантрах хӑйӗн Дулькина куçран вӗçертме юраманнине аса илнӗ те тӑпах чарӑннӑ.

— Чим-ха, улталамасть-и ку мана?— шухӑшланӑ вӑл.

Вара, Дулькин вӑрманалла, куккук сасси илтӗннӗ çӗрелле кӗрсе кайсанах, Кӑсӑя ун йӗрӗпе чупнӑ. Дулькина вӑл йывӑçсем хушшинче часах асӑрханӑ та ун

хыççăн йăпшăнса пынă. Нумаях та кайман — юнашарах куккук сасси илтĕннĕ... Нимĕнле куккук сасси те пулман ку, ăна леш хĕрарăм «аватнă». Вăл Дулькина пĕр лăпсăркка шĕшкĕ тĕми айĕнче кĕтсе тăнă. Анчах халь вăл урăх тумпа пулнă: салтаксен кивĕрех симĕс фуфайкине тăхăннă, пуçне те симĕс тутăр çыхнă. Йывăççем хушшинче ним палăрми пулма ĕнтĕ.

Хĕрарăмпа Дулькин пĕр-пĕрне алă панă та тĕмĕ айне ларнă. Хĕрарăм каллех ĕçмелли-çимеллисем кăларнă. Хальхинче вĕсенчен тăват-пилĕк метрта кăна пулнипе, Касăя вĕсем мĕн калаçнине те илтме пултарнă. Хăйне палăртас мар тесе, вăл çăварне тутăр вĕçĕпе хуплана — сывлани те ан илтĕнтĕр, хăй сиссесĕрех сулахай аллине кăкăрĕ тĕлне тытнă — ытла та пăлханнипе чĕри хытă тапни те аякка илтĕнессĕн туйăннă ăна...

— Леш хĕрачи эс кунта килнине курмарĕ-и?— ыйтнă хĕрарăм.

— Ан пăшăрхан, эп ăна çырмана хăваласа ятăм,— тенĕ Дулькин.

— Ну, санăн çĕнни мĕн пур? Хăвăртрах кала!

— Мĕн каламалли, ак кунта пĕтĕмпех çырнă...— Дулькин пĕркунхи пекех пилоткине хывнă та унăн подкладки айĕнчен темиçе хуçлатнă хут кăларса тыттарнă.— Наступлени хатĕрлеççĕ... Пĕрмай артиллери килет, çĕрĕн-кунĕн снарядсем турттараççĕ. Танксем пухăнаççĕ. Ĕнер икĕ батальон таран çĕнĕ пополнени килчĕ. Çаксем пурте ăçтарах вырнаçнине хут çинче ӳкерсе панă...

Касăя ни чĕрĕ, ни вилĕ тăнă. Унăн чĕри кĕç-вĕç кăкăртан сиксе тухас пек тапнă. Çав ирсĕр Дулькин ун умĕнчех тăшман агентне хамăрăн секретсене, никама калама юраман япаласене пĕлтерсе ларнă вĕт-ха! Путсĕр предатель, сутăнчăк, вăл пирĕннисем пуçламалли наступление путарса лартасшăн, пире калама та çук пысăк сиен кӳресшĕн!..

Ниçта кайса кĕме пĕлмесĕр таракан хĕрача пырĕ патне темле çатса ямалла мар чамаркка капланса хапарна. Унтан вал, хай те сиссе юлаймасар, тарук чыханна пек пулса икĕ хут ӳсĕрсе илнĕ. Çаварне тутар вĕçĕпе хуплана пулин те, ӳсĕрнĕ саса чылаях аякка илтĕннĕ...

Дулькинпа леш хĕрарам хайсене çил вĕрсе хапартна пекех сиксе тана.

— Кам унта?— кашкарса ыйтна та Дулькин, аяккалла тарма тана Касая йываç тураттисене çатар-çатар хускатса сирнине илтсе, ун еннелле ыткана. Темиçе сиксех вал хĕрачана хуса çитнĕ те çĕре çапса ӳкернĕ, унтан тӳрех павма тапратна.

— А-а, йыта çури!.. Шпион пулас терĕн-и, йĕксĕк? Эп сана ак халех...— Вал Касаяна сывлайми туса парахна, анчах çав самантрах тахашĕ хыттан, çав тери хаярран кашкарни илтĕннĕ:

— Руки вверх!

Ун çине икĕ салтак автоматсемпе тĕллесе тана. Дулькин Касая майне аллинчен вĕçертнĕ те чĕркуççи çинче тана çĕртех аллисене çĕкленĕ. Çав вахатрах тепĕр офицер тĕмĕсем хыçĕнчен леш хĕрарама çурамĕнчен пистолетпа тĕллесе илсе тухна.

Мĕнле майпа çакан пекех анаçла тытна пуль вĕсене, тетĕр-и? Пирĕн Касая Дулькин патне темле хĕрарам пыра-пыра кайни çинчен каласа парсанах, ана особистсем хайсем те санасах тана иккен, тавата талак сыхлана вĕсем Дулькин çинчен куç илмесĕр. Тытна вара. Дулькинĕ пĕр çапаçу вахатĕнче пашалне парахса нимĕçсем патне хай ирĕкĕпех каçнаскер пулна, унтан каялла килсе вĕсене шпионла сведенисем парса тама килĕшнĕ. Шанчакларах пултар тесе, нимĕçсем ана юри çамаллан амантса яна. Хĕрарамĕ те фашистсен агенчĕ пулна, Дулькин пухна сведенисене ташман енне радиопа пĕлтерсе тана. Пирĕн дивизин тылри склачĕсене те вĕсемех аркаттарна иккен,



Кӗскен каласан, Касӑя питӗ хӑруша шпионсене тытма пулӑшрӗ ун чух!

— Паянхи медале ҫавӑншӑн пачӗҫ-и вара ӑна? — ыйтрӑм эпӗ.

— Пӗр ҫавӑншӑн кӑна мар пуль, — терӗ Софья Владимировна. — Кайран медсанбатра питӗ лайӑх ӗҫлекен пулчӗ вӑл. Те хӑй ача пек кӑна курӑннӑ пирки, те аманнисемпе уйрӑмах ҫепӗҫ калаҫма пӗлнӗшӗн, ачаш пулнӑшӑн — ӑна пурте ҫав тери юратаҫҫӗ. Палатӑсенчен тухма та пӗлмест ӗнтӗ хӑй. Тӑрса ларайманнисене, аллисем аманнисене апат ҫитерет, чей ӗҫтерет, килӗсене яма ҫырусем ҫырса парать. Совинформбюро сводкисене палатӑсем тӑрӑх вуласа ҫӳресси вара — яланах ун ӗҫӗ. Пушӑрах вӑхӑт килсе тухсан, аманнисене кӗнекесем те вуласа парать...

— Эсир ӑна хӑвӑр патра хӑварса йӑнӑш туман эппин?

— Çук, çук, йанăшман!— терĕ Софья Владимировна хавассăн.— Маттур хĕрача! Ахаль пăхма хăюсăр пек курăнать вăл, çынпа калаçма та именнĕ пек, анчах хăюлăхĕ те çителĕклĕ хăйĕн. Кăçал, март пуçламăшĕнче, эпир çак фронта куçса килнĕ чух, Ливно хули çывăхĕнчи пĕр пысăк ялта чарăнса тăрсан, унти халăх хушшинче шатралла тиф питĕ вăйла сарăлнине пĕлтĕмĕр. Уйрăмах ачасем нумай чирленĕ, кашни кун вуншарăн вилнĕ. Эпир ял çыннисене мĕн вăй çитнĕ таран пулăшас терĕмĕр, ял хĕрринчи йывăç чиркӳрен туна клуб ăшчиккине тасаттарса, дезинфекци туса, чирлисене йăлт çавăнта куçартăмăр. Хайне майлă изолятор пулчĕ ĕнтĕ ку. Чирлисене хамăрăннах пăхма тиврĕ, мĕншĕн тесен тин çеç ирĕке кăларнă районта нимĕнле медперсонал та пулман-ха...

Пĕр тăват-пилĕк кунтан сасартăк çав яла нимĕç бомбардировщикĕсем пырса тапăнчĕç. Бомбăсем тăкăççĕ, пулеметсенчен сапаççĕ — ниçта кайса кĕмелле мар. Пĕр харăсах темиçе çĕрте пушар пуçланчĕ. Чирлисене вырнаçтарнă клуба та вут тивсе илчĕ... Пĕлместĕп, темле майпа-çке, çав вăхăтра пирĕн Кăсăя та ялăн ту вĕçĕнче пулнă, вăл, ытти çынсемпе пĕрле, çав çунакан клубра выртакан ачасене çăлма кĕрсе кайнă. Темиçе хут та кĕнĕ вăл унта, аллине, пит-куçне пĕçертсе янă, çапах та ултă ачана вут ăшĕнчен йатса тухнă... Тĕлĕнмелле вĕт?

— Чăнах та тĕлĕнмелле!— килĕшрĕм эп унпа.— Пăхсан, вăл ĕмĕрне те çавăн пек паттăр пулма пултарать тесе шутлас çук.

— Ăна награда памалла тунă чух çавна та шута илнĕ пулмалла ĕнтĕ...

— Кун пеккишĕн медаль мар, орден парас пулать!— терĕм эпĕ.— Çап-çамрăк хĕрача çавăн пек хăюллă пулнине тепри ĕненес те çук!

Пĕр хушă эпир шăп пултăмăр. Унтан сăмаха каллех Софья Владимировна пуçласа ячĕ. Хăй юратнă

хĕрача çинчен унăн тата ытларах каласа парас килчĕ куранать.

— Вăл аманнисемпе чирлисене мĕн тери тăрăшса пăхни çинчен калаçмалли те çук. Пĕррехинче, Димитриев-Льговский тăрăхĕнче, пирĕн пата пĕр çамрăк кăна сержанта илсе пычĕç. Контузи хыççăн вăл пач калаçми пулнă. Çăварне уçать, калама тăрать, анчах хайĕн пырĕнчен ниме пĕлтермен сасă çеç тухать. Касăя çавна курнă та ман пата пырса куççулĕпех макăрма тытăнчĕ. «Неушлĕ вара ĕмĕрлĕхех чĕлхесĕр пулса юлать вăл йĕкĕт? Мĕнле пурăнас вара унăн? Вăл çамрăк вĕт-ха...» — тет. Эп ăна çине тăрсах лăплантарма тытăнтăм: сывалать пулĕ-ха, ун пекки майĕпе иртсе каяканччĕ, анчах та ăна пĕрмай калаçма хăнăхтарас пулать, пĕчĕк ачана вĕрентнĕ пек, терĕм. Çавăн хыççăн Касăя унран уйрăлма та пĕлмерĕ. Пĕрмай калаçтарма тăрăшрĕ ăна. Пĕр-пĕр япала кăтартать те ун ятне калать, унтан çав сăмаха сержанта калаттарать. Пĕр вунă-вун икĕ кунтан сержант, тытăнчăклăрах пулин те, майĕпе калаçа пуçларĕ, Касăя вара уншăн ниçта кайса кĕрейми хĕпĕртерĕ!

— Хайĕн ĕмĕчĕ тулнипе саваннă ĕнтĕ вăл,—терĕм эпĕ.

— Çапла пуль çав,— килĕшрĕ Софья Владимировна.

...Малта, ешĕл айлăмра, медсанбат вырнаçнă ял куранса кайрĕ. Эпĕ тухтăра Касăя çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе каласа кăтартнăшăн тав турăм та, унпа сывпуллашса, каялла çавранса утрăм.

* * *

Июль пуçламăшĕнче «Курск хысакĕнче» калама та çук хаяр çапăçусем тапранса кайрĕç. Нимĕçсене Орелпа Белгород патĕнче аркатнă хыççăн эпир пĕр вĕçĕм хĕвеланăçнелле кайрăмăр. Десна, Сож, Днепр шывĕ-

сем пирӗн хыҫа юлчӗҫ. Пӗрмай малалла куҫса пынӑ вӑхӑтра эпӗ Миша Телегина та, Наташа-Касӑяпа Софья Владимировнӑна та нумай хушӑ курмарӑм. Тӗл килмерӗ.

Хура кӗркунне, эпир Днепр урлӑ каҫса Белорусси-ри Полесье вӑрманӗсене чылай шала кӗрсе кайсан тин, пӗррехинче политотделта Телегина тӗл пултӑм. Вӑл унта парти билечӗ илме пынӑ-мӗн. Хӑй ҫак хушӑра тата ытларах маттурланнӑ, тӗрекленнӗ пек туйӑнчӗ мана. Унӑн кӑкри ҫинче тата икӗ наградӑ хушӑннӑ-ччӗ, вӗсенчен пӗри — Ленин орденӗ.

— Ку — Днепршӑн пуль?— ыйтрӑм Мишӑран, кӑкри ҫинчи ҫулпуҫ сӑнӗ ҫине кӑтартса.

— Ҫавӑншӑн пачӗҫ,— терӗ вӑл.

— Питӗ аван, чунтанах саламлатӑп! Пурнӑҫсем йӗркеллех пыраҫҫӗ эппин?

— Аптрамастпӑр-ха, малашне тата лайӑхрах пу-рӑнасса ӗмӗтленетпӗр. Берлин ҫулӗ кӗскелсех пырать авӑ... Ҫитсе курасчӗ-ха ҫавӑнта, ташласчӗ пӗрре рейх-стаг умӗнче ура хуҫса. Эсир мӗнле шутлатӑр, ташла-ма пулӗ-ши?

— Ташлатпӑр, Миша. Нумаях та юлмарӗ ӗнтӗ... Ҫавӑнтах эпӗ Касӑя ҫинчен аса илтӗм.

— Хӑван йӑмӑкна куркалатӑн-и?

— Эсир Касӑя ҫинчен ыйтатӑр пуль? Куркалатӑп сайра хутра,— терӗ разведчик кӑмӑллӑн.— Ӳссе кай-рӗ халь вӑл — палламалла та мар! Вӑрҫӑ пӗтнӗ тӗлел-ле качча памалли хӗр пулса ҫитет пуль-ха.

— Тепре курсан, манран салам кала ӑна.

— Тавтапуҫ, калӑп.

Эпир унпа иксӗмӗр аласене хытӑ чӑмӑртаса уйрӑл-тӑмӑр. Анчах ҫакӑ пирӗн юлашки курнӑҫу пулчӗ. Те-пӗр эрнеренех эпӗ Телегин питӗ йывӑр аманни, ӑна самолетпах тыла ӑсатни ҫинчен пӗлтӗм. Питӗ шел пулчӗ — мӗнешкел чаплӑ разведчик ҫухалчӗ пирӗн! Ун ҫинчен шухӑшланӑ май, мана каллех Касӑя аса

килчӗ. Епле хуйхӑрчӗ пуль вӑл куншӑн, мӑнтарӑн! Пурте пӗлетчӗҫ вӗт-ха — Миша Телегин уншӑн чи ҫывӑх, тӑван пиччӗшӗ пекех хаклӑ ҫынччӗ. Курайӗҫши вӗсем пӗрне-пӗри хӑҫан та пулин?

Темшӗн-ҫке, манӑн вӗсене ҫав тери тӗл пултарас килчӗ...

Хутран-ситрен, пӗр-пӗр ӗҫпе медсанбата пырса лекме тивсен е ӑҫта та пулин тӗл пулма тӳр килсен, эпӗ Софья Владимировнӑран яланах Кӑсӑя ҫинчен ыйтса пӗлеттӗм.

— Лайӑх пурӑнать, аван ӗҫлет,— тетчӗ вӑл мана кашнинчех.

Пӗррехинче, Телегин аманса тыла ӑсаннӑ хыҫҫӑн пӗр виҫ-тӑват уйӑхран пулас, Кӑсӑяна хӑйне те тӗл пултӑм. Вӑл халӗ чӑнах та палламалла мар улшӑнса, ӳссе кайнӑ, имшерккерех хӗрачаран чӑн-чӑн хӗр пулса ҫите пуҫланӑччӗ.

— Пиччу мӗнле, ҫырать-и? Сывалса ҫитнӗ-и? Ӑҫта вӑл халь? Фронта час таврӑнать-и?— тӗпчеме тытӑнтӑм эп ӑна курнӑ-курманах.

— Ҫырать. Сывалнӑ,— терӗ те Кӑсӑя, хӑй ҫавӑнтах ассӑн сывласа илчӗ.— Анчах фронта тек таврӑнаймасть ӗнтӗ, унӑн сулахай аллине хулпуҫҫи таранах татнӑ. Халь хӑйсем патӗнче, Магнитогорскра, военкоматра ӗҫлет.

— Эх, шел каччӑна!

— Шел те, мӗн тӑвас тетӗн? Вӑрҫӑ!

— Ҫапах та вӑрҫӑ хыҫҫӑн эсир тӗл пулатӑрах пулӗ-ха унпа. Фронтри туслӑх — ӗмӗрлӗх, теҫҫӗ.

— Ун ҫинчен вӑл хӑй те ҫырать-ха. Эс таҫта пулсан та, эп сана шыраса тупатӑпах, тет. Кашни ҫырурах хӑйӗнчен кӑна мар, тӑванӗсенчен те саламсем ярать. Амӑшӗнчен посылкӑ илтӗм — ҫӑм чӑлха, алсиш, типӗтнӗ панулми хунӑ. Хӑйне питӗ хытӑ ятларӑм-ха уншӑн, тем ухмахланаҫҫӗ?— Кӑсӑя именчӗклӗн кулса илчӗ те мӑкӑнь пек хӗрелсе кайрӗ.— Аван

мар-ҫке ун пек, эпĕ вĕсемшĕн никам та мар вĕт, ҫичĕ ют кăна...

— Хисеплеҫҫĕ ĕнтĕ, ҫавăнпа ыр тăвасшăн,— терĕм эпĕ.

— Темле-ҫке...— Вăл тата ытларах хĕрелчĕ. Хĕр темĕн!

...Вăхăт шурĕ, сивĕ хĕл хыҫҫăн Полесье вăрманĕсем каллех илемлĕ ем-ешĕл тумпа витĕнчĕҫ. Ҫуркунне — ҫулталăкри чи ырă та савăнăҫлă вăхăт ĕнтĕ, анчах пирĕн савăнмалли вăхăтсем ҫитменччĕ-ха. Малта нумай-нумай ҫапăҫусем кĕтнĕ пире, эпир ҫине тăрсах ҫав ҫапăҫусене хатĕрлентĕмĕр. Пирĕн вăйсем куллен пухăнса пычĕҫ — ҫынсен хисепĕ тĕлĕшпе те, хĕҫ-пăшал енĕпе те. Ҫу варринче вара каллех хăватлă та хĕрӳ тытăҫусем пуҫланчĕҫ. Тăшман, пире хирĕҫ темле хытă тăрсан та, хавшасах пычĕ ĕнтĕ, каялла чакрĕ. Кĕр енне эпир Балти тинĕсĕ тăрахĕнчи республикăсене — Эстоние, Латвие, Литвана ирĕке кăлартăмăр, унтан, хамăрăн государствă чикки урлă каҫса, Хĕвелтухăҫ Пруссине — тăшман ҫĕрĕ ҫине! — пырса кĕтĕмĕр. Ҫапăҫусем кунта тата вăйларах пулчĕҫ. Гитлеровецсем кашни хулана ҫеҫ мар, кашни яла, кашни уйрăм ҫурта ҫирĕплетсе крепоҫ пекех тунăччĕ ҫав, ҫапăҫмасăр, юн тăкмасăр пĕр метр та малалла каяймастăн.

Хайсен салтакĕсене пире хирĕҫ юлашки юн тумламĕччен ҫапăҫтарма, пĕтĕм халăха пире хирĕҫ тăратма, пур ҫурт стенисемпе хӳмесем ҫине те темĕн пысăкăш саспаллисемпе ҫырса тултарнă: «Вырăссем Аслă Германи ҫĕрне нихҫан та таптамалла мар!», «Паттăрлăх, тата тепĕр хут паттăрлăх!», «Ҫĕнтерӳ е Ҫĕпĕр!»

Анчах эпир таптарăмăр. Фашистсен пуҫлăхĕсем хăйсен салтакĕсене нихҫанхинчен те паттăртарах пулма чĕнни пулăшмарĕ. Совет Ҫарĕ ҫĕнтерес пулсан нимĕҫсене пурне те Ҫĕпĕре ярассипе хăратни те тытса чараймарĕ вĕсене — пурĕпĕрех чакрĕҫ. Эпир Германи



çӗрӗ тăрăх утрăмăр, шалтан шала кӗрсе пытăмăр. Ку ӗнтӗ 1945 çул пуçламăшӗнче пулчӗ. Ун чух эпир гитлерла Германие кӗçех çӗнтерессине пӗтӗм тӗнче курса тăчӗ...

Пӗррехинче, Кенигсберг еннелле пынă чух, çӗрле пулса ларнипе, пирӗн редакци нимӗçсен пысăках мар ялӗнче чарăнса тăчӗ. Хайсем чакса кайнă чух гитлеровецсем ку яла пӗтӗмпех аркатнă, çапах та ял вӗçӗнче çӳллӗ те шӗвӗр тăраллă вунă-вуникӗ çурт упранса юлнă-мӗн-ха. Эпир çав çуртсенчен пӗринче вырнаçрăмăр,— ирччен пирӗн хаçат кăлармаллаччӗ.

Çурçӗр иртсен ик сехетре, кӗтмен çӗртен, çав çуфта плащ-палаткăпа пӗркеннӗ Софья Владимировна пырса кӗчӗ. Унпа пӗрле икӗ автоматчик пурччӗ.

— Мӗн çамăлпа кун пек çӗр хута асапланса çӳретӗр, савнă тухтăр? — тӗлӗнсе ыйтрӗ унран пирӗн редактор.

— Комдив пире çак ялта чарăнса медсанбат вырнаçтарма хушнă-ха, çуртсем шыратпăр,— терӗ вăл.

— Мӗншӗн ку ӗçпе хăвăр çӳретӗр-ха? Ма Борис Владимирович е кам та пулин урăххи мар?

— Борис Владимирович çук ĕнтĕ пирĕн,— ассăн сывласа, пукан çине йываррăн ларчĕ тухтăр.

— Ăçта вара вăл?

— Виçĕмкун, Борис Владимирович операци туса тăнă чух, нимĕçсем эпир вырнаçнă хутор çине калама çук вăйлă артналет пуçласа ячĕç. Операци сĕтелĕ патĕнчен пăрăнма юраман — ун çинче аманнă офицер выртнă, Борис шăпах унăн хырăмне каснă пулнă. Ниме пăхмасăрах, вăл операцие малалла тунă. Сасартăк снаряд çав çурт умнех ўксе çурăлнă та осколоксем чўречесем витĕр шалалла вăркăнса кĕнĕ. Хирурги сестри çав самантрах вилĕ ўкнĕ — ăна пуçĕнчен тивнĕ, Бориса йĕтес шăмминчен пырса çапнă... Вăл та тўрех тĕшĕрĕлсе аннă, анчах çавăнтах сиксе тăрса хăйĕн суранне тепĕр сестрана çыхтарнă та хăй пуçланă операцие туса пĕтерме пикеннĕ. Анчах вăй çитереймен...

— Унтан вара?

— Мĕн пултăр унтан? Тўрех арми госпитальне ăсатрăмăр. Ун ĕçне туса пыма вăхăтлăха мана хушрĕç. Акă, халь медсанбата çакăнта вырнаçтармалла, терĕç. Те май килет...

— Атьăр, эп сире юрăхлăрах çуртсем тупма пулăшам,— терĕ те редактор, çавăнтах тумланма тытăнчĕ.

— Тавтапуç, майор...

Каялла вĕсем тепĕр сехет те çурăран таврăнса пычĕç. Ыванса çитнĕ Софья Владимировнăна эпир вĕри чей ĕçтертĕмĕр те хамăр патрах вырттартăмăр. Анчах юнашар пўлĕмре пичетлекен машинă хăлтăртатнипе вăл час çывăрса каяймарĕ, вăрахчен калаçса выртрĕ. Унтан, майĕпе тăрса ларса, тепĕр стакан вĕри чей ыйтрĕ.

— Темскер, шăнатăп-ха эп паян...

Сăмах майĕн, эпĕ çавăн чух каллех хăйĕн усрав хĕрĕ Наташа-Кăсăя çинчен ыйтрăм.

— Вăл тахçанах тылра, госпитальре,—терĕ Софья Борисовна, ассăн сывласа.

— Госпитальре? Мĕн пирки? — тĕлĕнсех кайрăм эпĕ.

— Госпитале мĕншĕн лекнине пĕлместĕр-и-мĕн? — кăмăлсăртараххăн каласа хучĕ мана хирĕç тухтăр.— Амантрĕç хĕрачана. Хĕвелтухăç Пруссине килсе кĕрсен пĕр эрнеренех лектерчĕç.

— Ак тата, ăнман япала!

— Чăн та ăнман япала çав. Питĕ тарăхмалла пулчĕ, калама та çук. Дойтш-Айлау хулине пырса кĕрсеттĕмĕр çеç, хĕвел енчен икĕ «Фокке-вульф» — леш «рамăсем» — сиксе тухрĕç те тупăсенчен, пулеметсенчен пере-пере каллĕ-маллĕ ыткăна пуçларĕç. Зениткăсем çук та, аялтанах вĕçеççĕ. Эпир часрах ăçта май килнĕ унта пытантăмăр. Наташа манпа пĕрлеччĕ, эпир унпа пĕр пысăк чул çурт подъездĕнче тăтăмăр. Чылай вăхăт иртрĕ, хăйсене никам та кансĕрлеменнине кура нимĕç летчикĕсем боеприпассем пĕтиччене ашкăнас терĕç пулмалла çав... Сасартăк Наташа мана хулпуççирен çатăр-р! ярса тытрĕ те тепĕр аллипе малалла тĕллесе шариех кăшкăрса ячĕ: «Пăхăр-ха, Софья Владимировна, пăхăр! Ача, ача! Пĕчĕк ача! Пĕтет вĕт, пĕтет, халех вĕлереççĕ ăна!» Эп вăл кăтартнă çĕрелле пăхрăм та чул сарнă урам варринче пĕр виç-тăват çулхи ача утса пынине куртăм. Аллисене çŭлелле çĕкленĕ, такама шыранă пек унăн-кунăн пăхкалать, хăй кăшкăрсах макăрать пулмалла, анчах самолет моторĕсем урнă пек кĕрленипе, снарядсем çурăлнипе, пулеметсем шăтăртатнипе унăн сасси илтĕнмест, вăл çăварне карни çеç курăнать... Çав вăхăтра урама тăрăх пульăсем сапса иртнĕ самолетсем каялла çаврăнчĕç пулас, пулеметсенчен пени каллех çывхара пуçларĕ. Ак ĕнтĕ, вĕсем халех, кĕçех урамри нимĕç ачи тĕлне çитеççĕ те ăна вĕлерсе иртсе каяççĕ! Çакна мана хулран пăчăртаса тăракан Кăсăя та пит лайăх ăнланнă курăнать. Вара эпĕ сиссе те юлаймарăм, вăл пĕррех ман çумран уйрăлчĕ те урам варринелле, ача патнелле, вилĕме хирĕç

ыткăнчĕ. Манăн куçсем хуралса килчĕç, эпĕ ăнран тухса каяс пекех: «Таврăн! Вĕлереççĕ!» — тесе кăшкăрса ятăм, анчах вăл ман сасса илтмерĕ те пуль, илтсен те кунталла вăркăнса килекен самолетсенчен тарса ӳкес çукчĕ ĕнтĕ...

Самантранах пульăсем урамри чул çине шултра пăрçа пек тăкăнчĕç, вĕсем пырса çапнă тĕлсенче вуншар пĕчĕк фонтансем пек тусан çĕкленчĕ. Наташа малаллах чупрĕ, эпĕ вилнĕ çын пек тăтăм... Акă вăл урам варринчи ача патне çитсе ăна хăвăрт кăна ыталаса йăтрĕ те, мĕн май килнĕ таран пĕшкĕнсе, каялла, ман паталла ыткăнчĕ. Анчах виç-тăват утăм та тăваймарĕ пулас, аллинчи ачи-мĕнĕпех урамри яка чул çине тăсăлса ӳкрĕ. «Вилчĕ!» — çиçĕм пек шухăш пырса çапрĕ пуçа, вара манăн куçсем те курми пулчĕç, сывлăш та пӳлĕнсе ларчĕ. Вăрçа килнĕренпе çĕршер вилĕм курнă эпĕ, анчах кун пек тăна çухатни пĕрре те пулманччĕ-ха манăн... Çапах та нумая пымарĕ ку. Тепре куç уçсанах эпĕ урам варринче ним хускалмасăр выртакан Наташа патне хамăрăн икĕ сестра чупнине куртăм. Вĕсем урамăн тепĕр енче пытанса тăнă пулнă та çакна пĕтĕмпех курнă-мĕн... Кĕçех вĕсем Наташăна та, нимĕç ачине те эп тăракан подъезда çĕклесе пычĕç. Эпĕ часрах хамăн шинеле хывса çĕре сарса пăрахрăм та Наташăна ун çине хурсанах тĕрĕслеме тытăнтăм — чĕрĕ-ши ман хĕр, вилсех кайнă-ши?.. Чĕрĕ иккен-ха!. Сывлать! Мана хама та тинех чун кĕнĕ пек пулчĕ... Наташăн урисем иккĕшĕ те аманнă тата тепĕр пуля сылтăм айăкне шăтарса тухнă. Вилмест!

— Нимĕç ачи тата? Вăл аманман-и? — ыйтрăм эпĕ, тухтăр каласа панине итленĕ май чĕтремех ернĕскер.

— Ăна нимĕн те пулман. Наташа ăна хăйĕн кĕлеткипе хупласа çăлнă,— терĕ Софья Владимировна.— «Фокке-вульфсем» вĕçсе кайсанах вăл ачан амăшĕ ту-

пăнчĕ. Вĕсем хăйсем те подвала пытаннă-мĕн, анчах ачи темле майпа урама тухса кайнă.

— Тав тума пĕлчĕ-и хуть хăйĕн ачине çăлнăшăн? — кăмăлсăр, çиллессĕн ыйтрĕ пирĕн редактор.

— Шутсăр тав турĕ! Хăй хăрать пирĕнтен,— тăшмансем-çке эпир! — анчах макăра-макăрах тав тăвать. Ун ачине вилĕмрен хăтарма тăрăшса пирĕн пĕр хĕр йывăр аманни çинчен каласа парсан, вăл каçару ыйтма тытăнчĕ. Эп айăплă, маншăн пулчĕ, каçарăр тархасшăн, тет... Кайран эпир çав фрау Хельгерт патĕнче тăвата кун пурăнтăмăр. Питĕ лайăх пăхрĕ вăл пире, чунне кăларса памах хатĕр пулчĕ... Унăн упăшки чугун çул çинчи рабочи пулнă, чугун çул çинче ĕçлекенсене фронта ямалла мар, анчах та ку антифашист шутланнă, çавăншăн чут çеç концлагере лекмен, ун вырăнне ăна Африкăна, Роммель çарне янă та вăл унтах пĕтнĕ, шăллĕ Хĕвелтухăç фронтĕнче ним хыпарсăр çухалнă. Гитлера фрау Хельгерт чи хаяр сăмахсемпе ылханатчĕ, пирĕн пĕтĕм пурнăç çав урнă йытта пула арканчĕ, вырăссем ăна часрах тытса çакчĕрех, тетчĕ...

— Кăсăяпа мĕн турăр? — ыйтрăм эпĕ, ун çинчен пĕтĕмпех пĕлес килнипе.

— Ăна çав кунах тыла ăсатрăмăр,— ассăн сывласа илчĕ Софья Владимировна.— Паллах, вăл хăй каясшăн пулмарĕ, куççулĕпех макăрчĕ, кунтах сывалатăп эпĕ, тет, анчах йывăр аманнă пирки медсанбатра хăварма май çукчĕ ăна. Пĕр-пĕрин патне çырусем çырма, вăрçă хыççăн епле пулсан та пĕр-пĕрине шыраса тупма калаçса таталтăмăр. Анчах халлĕхе пĕр çыру та килмерĕ-ха, кĕтетĕп...

— Çырать пуль-ха, эсир уншăн тăван амăшĕ пекех вĕт,— терĕм эпĕ.

— Хам та ăна тăван ача вырăннех шутлатăп ĕнтĕ, манăн урăх ача çук,— терĕ те тухтăр ыйхăланă сасăпа, çывăрма выртрĕ.

Ирхине эпир малалла, хĕвеланăçнелле тухса кайрăмăр. Пирĕн çул Берлин еннеллеччĕ. Вăл кунран кун кĕскелсе пычĕ...

* * *

Кăçал, май уйăхĕн пуçламăшĕнче, кĕтмен-туман çĕртенех эпĕ машинкăпа пичетленĕ сенкер канверт илтĕм. Мĕнле çыру ку? Ăçтан, камран? Çапла шухăшласа, тӳрех почта штемпельне пăхрăм. Çыру Н. хулинчен килнĕ иккен.

Канверта уçрăм, çыруне кăларса илтĕм. Ăна та машинкăпах пичетленĕччĕ.

«Хаклă Атнаров юлташ, пирĕн фронтри ырмиканми хаçатçă! Эпир, 354-мĕш стрелковăй дивизи ветеранĕсем, майăн 9-мĕшĕнче, Аслă Çĕнтерӳ кунĕнче пурĕ пĕрле пуханса, гитлерла Германие çĕнтернĕренпе çирĕм çул çитнине чаплăн уявлас тетпĕр. Пирĕн хулапа облаçра хамăр дивизи ветеранĕсем икçĕр çын таран шутланаççĕ. (Эсир пĕлетĕр вĕт-ха, вăрçă пуçлансан дивизи пирĕн патра йĕркеленнĕ.) Эпир сире çак уява килсе хутшăнма чунран ыйтатпăр... Уяв комиссин председателĕ — *М. Телегин*».

Эпĕ калама та çук пăлханса кайрăм. Манăн алăсем те чĕтреме тытăнчĕç... Телегин! Миша Телегин! Пирĕн дивизири чи чаплă разведчик алă пуснă ку çыру çине. Çирĕм çултан аса илнĕ мана хамăн фронтри тус-юлташсем. Мĕн тери пысăк савăнăç ку!

Анчах çав канверт ăшĕнчех тата тепĕр хут татки пур иккен, тепĕр пĕчĕк кăна çыру. Ăна хитре, çапçаврака саспаллисемпе çырнă:

«Лейтенант юлташ! Каçарăр, сирĕн хальхи званине пĕлместĕп (эсир, тен, полковнике те çитнĕ пуль), савăнпа та эпĕ сире паллана чухнехи пекех чĕнетĕп... Епле пулсан та килме тăрăшăр-ха, эсир пирĕн чи хаклă хăнасенчен пĕри пулатăр. Сирĕн пата çыру çырма пире Софья Владимировна хушрĕ,— вăл тухтăра аста-

ватăр пуль? Эпир унпа пĕрле ĕçлетпĕр, халь эпĕ хам та врач. Питĕ хытă кĕтетпĕр! Салампа — *Н. Телегина (Касăя)»*.

Ку çыру мана тата ытларах савăнтарчĕ. Касăя, вăрçăра тĕлĕнмелле хăюллă пулнă пĕчĕк санитаркă Касăя... Халĕ вăл Миша Телегин разведчикпа пĕр хушаматлă иккен... Софья Владимировна та вĕсемпе пĕрлех. Хайсен сăмахне çирĕп тытнă эппин вĕсем, вăрçă хыççăн пурте пĕр-пĕрине шыраса тупнă. Телейлĕ вĕсем! Мĕн тери лайăх ку, мĕн тери савăнмалла! Çынсен ĕмĕчĕсем тулса пынинчен аванни мĕн пултăр çĕр çинче?

...Питĕ шел, килти тĕрлĕ сăлтавсене пула эпĕ уява каяймарăм, туссене ырă сунса Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе саламлă телеграммă çеç яма тиврĕ. Анчах çав кунсенче эпĕ вĕсене пурне те ăшă кăмăлпа асăнса пурăнтăм та çак калава çырас терĕм...

Август, 1965.
Шупашкар.



**Индекс 7—6—3**

ТУПМАЛЛИ

Партизан Мурат . . . 5
Кăсая . . . . . . 179

◆

**Агаков Леонид Яковлевич**

**ПАРТИЗАН МУРАТ**

*(Приключенческая повесть)*

**СИНИЧКА**

*(Повесть)*

На чувашском языке

Художник А. Т. Скворцов.

Редактор А. А. Галкин
Худ. редактор М. А. Ильин
Тех. редактор В И. Павлова
Корректор Ю. Т. Миронова

НТ 03046. Сдано в набор 16-X-1965 г.
Подписано к печати 5-II-1966 г. Изд. 93а/65.
Формат 84×108 1/32. Физический печ. л. 7,375.
Условный печ. л. 12,39. Учетно-изд. л. 10,17.
Заказ № 4799. Тираж 5000 экз. Цена 45 коп.

Чувашкнигоиздат, Чебоксары, К. Маркса, 36.

Типография № 1 Управления по печати
при Совете Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 45 коп.

